Чăваш кӗнеке издательстви

В.И. Игнатьева
Н.Н. Чернова
Л.В. Николаева

# Чăваш чӗлхи вӗрентмелли меслет кăтартăвӗсем

## 4 класс

ISBN 978-5-7670-2652-4

В.И. Игнатьева
Н.Н. Чернова
Л.В. Николаева

# Чӑваш чӗлхи вӗрентмелли меслет кӑтартӑвӗсем

**4 класс**

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2017

УДК 37.091.3
ББК 74.268.19=635.1
И 26

ISBN 978-5-7670-2652-4

© Игнатьева В.И., Чернова Н.Н., Николаева Л.В., 2017
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2017

# КӲРТӖМ

«Чӑваш чӗлхи вӗрентмелли меслет кӑтартӑвӗсем. 4 класс» кӗнеке пуҫламӑш классенче чӑваш чӗлхине В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева туса хатӗрленӗ программӑпа вӗрентмелли вӗренӳ комплектне кӗрет. Унӑн тӗллевӗ — вӗрентӳҫе ачасене чӑваш чӗлхине ҫӗнӗ стандартсемпе килӗшӳллӗн вӗрентме, «Чӑваш чӗлхи» (4 класс) вӗренӳ пособийӗпе ӗҫлеме пулӑшасси. Меслет кӑтартӑвӗсенче ҫӳлерех асӑннӑ программӑпа 4-мӗш класра ачасене чӑваш чӗлхине вӗрентес ӗҫӗн тӗллевӗсемпе задачисене уҫса панӑ, вӗренӳ кӗнекипе тата ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлеме пулӑшакан сӗнӳсене панӑ. Паллах, класри ачасен пултарулӑхне, вӗсен чӗлхе пӗлӗвӗн шайне кура вӗрентӳҫӗ панӑ материала ансатлатма та, кӗскетме те, улӑштарма та пултарать. Анчах яланах ҫакна асра тытмалла: 4-мӗш класс ачисене чӑваш чӗлхи вӗрентнин тӗп тӗллевӗ, ытти классенчи пекех, — ачасене кулленхи пурнӑҫра чӑвашла хутшӑнма вӗрентесси. Кашни урокрах ачасене чӑвашла пуплеве ӑнланма, чӑвашла калаҫма, вулама-ҫырма вӗрентмелле, урӑхла каласан, вӗсен чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантармалла.

Чӑвашла пуплеве аталантарасси калаҫу темисем тавра пулса пырать. Калаҫу темисем, пӗтӗмӗшле илсен, 4-мӗш класра та 1—3-мӗш классенчи евӗрлех, анчах кӑштах анлӑрах. Вӗренӳ программине ҫапла йӗркелени малтан вӗреннине тӑтӑшах аса илсе ҫирӗплетме, мӗн пӗлни ҫумне ҫӗннине хушса пырса чӑвашла ирӗклӗн калаҫас, вулас тата ҫырас хӑнӑхусене лайӑхрах аталантарма май парать.

Чӑвашла ирӗклӗ калаҫас тесен ачасен чӑваш сӑмахӗсене ҫителӗклӗ пӗлмелле, сӑмахсене тӗрлӗ формӑра лартса предложенисем, унтан текстсем калӑплама пултармалла. 4-мӗш класра ҫак ӗҫ — чӑваш чӗлхин морфологийӗпе синтаксисӗн мелӗсене вӗрентесси — тӑтӑшах пулса пырать. Чӑваш чӗлхин морфологийӗпе синтаксисӗн мелӗсене вӗрентессине эпир ачасем тӑван (вырӑс) чӗлхене пӗлни ҫине таянса йӗркелеме сӗнетпӗр. Вӗренӳ кӗне-

кинче те, меслетлĕх кăтартăвĕсенче те ку ĕçе çак шухăша тĕпе хурса йĕркелеме материал çителĕклĕ панă.

Программăра палăртнă тăрăх, 4-мĕш класра чăваш чĕлхине вĕрентнĕ май ачасене çак результатсем патне илсе çитермелле:

**Харкамлăх результачĕсем:**

— ĕçе пуçăниччен лайăх шухăшламаллине ăнланни;
— шкулта вĕренни пĕлӳ пухма, аталанма, харпăр хăй пурнăçне кăсăклăрах, усăллăрах тума кирлине ăша хуни;
— ачан кăмăл-сипечĕ çирĕпленсе пыни: ваттисене хисеплемеллине, çынпа ырă пулмаллине, çынсем хушшинче харпăр хăйне мĕнле тытмаллине, чĕр чунсене юратмаллине ăнланса илни;
— шухăшлав ăслайĕсем туптанни;
— гигиена правилисене пĕлни: парта хушшинче тĕрĕс ларни, ручка-кăранташ тĕрĕс тытма, тетраде тĕрĕс вырнаçтарма пултарни;
— шкулта, урамра, килте харпăр хăйне мĕнле тытмаллине пĕлни, пурнăçлани.

## Пур предмета та вĕреннĕ чух кирлĕ результатсем

**Пĕлӳ туянма пулăшакан результатсем:**

— ачан астăвăмĕпе асăмĕ, тимлĕхĕпе тимлевĕ аталанни;
— ачан тавракурăмĕ анлăланни: çут çанталăкри пулăмсем, çулталăк вăхăчĕсем, çемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлни;
— ачан тĕнчекурăмĕ йĕркеленсе пыни;
— туйăм культури çивĕчленни: кирлĕ вăхăтра пĕр-пĕрне пулăшмаллине, мĕн тумаллине, мĕнле тумаллине тавçăрма пуçлани;
— танлаштару, пĕрлештерӳ, уйăру, çыхăнтару механизмĕсем çивĕчленни;
— вĕренӳ хатĕрĕсенче кирлĕ материала шыраса тупма пĕлни;
— вĕренӳ хатĕрĕсенче панă символсене, модельсене, схемăсене, паллăсене ăнланни, вĕсемпе усă курма пултарни;
— текстăн тĕп шухăшне ăнланма пултарни;
— пулăмсене сăлтавлас пултарулăх çивĕчленни: вĕсем мĕншĕн апла е капла пулнине ăнланма, ăнлантарма пултарни;
— логикăллă шухăшлав аталанни, ăнлавсене ăнкарни.

**Йĕркелӳ-хаклав результачĕсем:**

— йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
— ыйтăва ăнланни, кирлĕ хурав пани;

— палăртнă ыйтăва тĕрлĕрен татса пама май пуррине ăнланни;
— ĕç йĕркине, мĕн хыççăн мĕн тумаллине, мĕншĕн ун пек тумаллине тавçăрни;
— кашни ĕç тĕллевлĕ, вырăнлă пулмаллине ăнланни;
— ĕçĕн тапхăрĕсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе хак пама пултарни;
— харпăр хăй ĕçне планлама пĕлни.

**Хутшăну результачĕсем:**

— шухăша тĕрĕс те уçăмлă, çыхăнуллă каласа пама тăрăшни;
— ачан пуплевĕпе пĕрле пуплев культури те аталанни: пĕр-пĕр япала, пулăм, ĕç çинчен, кирлĕ сăмахсемпе усă курса çыхăнуллă каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мĕн çинчен тата мĕнле сăмахсемпе усă курса калаçмаллине ăнкарни, мĕнле сăмахсемпе (сывлăх сунни, тав туни, сывпуллашни) усă курмаллине тавçăрни;
— ушкăнпа шăкăл-шăкăл калаçса ĕçлеме пĕлни;
— çынсем тĕрлĕрен шухăшлама пултарнине ăнланни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

— текстпа ĕçлеме пĕлни, вулани çинчен çыхăнуллă тата уçăмлă каласа пама тăрăшни;
— текст ячĕ тăрăх унăн содержанине тавçăрни;
— текста пайсем çине уйăрма, план тума пĕлни;
— текст мĕн çинчен пулнине калама пултарни;
— текст содержанийĕ тăрăх ӳкерсе те, сăмахпа каласа та ӳкерчĕксем тума пултарни;
— текста малалла тăсма пултарни;
— хатĕр планпа усă курса текст содержанине калама пĕлни;
— алăпа çырнă тата пичетленĕ сăмахсене, предложенисене, текстсене пăхса çырса илме, çырнине текстпа танлаштарса тĕрĕслеме пултарни;
— сăмаха, предложение е текста вĕрентекенпе пĕрле тишкерме, ун хыççăн вĕрентекен вуланă тăрăх çырма пултарни, çырнине пăхса тĕрĕслени;
— пăтраштарса панă сас паллисенчен сăмахсем, сăмахсенчен предложенисем, предложенисенчен текстсем туса çырни;
— пăнчăсем вырăнне сăмахра кирлĕ сас паллисем, предложенисенче кирлĕ сăмахсем лартса çырни;
— ыйтусене хуравласа çырни;
— тĕрĕс пăхса çырни;
— пăхмасăр çырма пĕлни;
— çывăх, хирĕçле, пĕр пĕлтерĕшлĕ, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕсрех, тарăнрах ăнланни, вĕсен ретĕнчен кирлине суйласа илме пултарни;

— сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшне ăнланни;
— чăваш чĕлхинчи предложенисенче сăмахсен çирĕп йĕрки пуррине ăнланни;
— каласа парассин тĕрлĕ тĕсĕсене (калав, сăнлав, уйлав) алла илни;
— калав темине, тĕп шухăшне палăртни;
— диалогăн тытăмне, диалогри предложенисен хăй евĕрлĕхне (ытларах тулли мар предложенисем) пĕлни. Диалог пĕр темăна, пĕр тĕп шухăша пăхăнса тăнине ăнланни;
— тĕрлĕ пуплев ситуацийĕсенче диалог йĕркелеме пултарни;
— сăмах йышĕ пуянланни;
— çыхăнуллă пуплев механизмĕсем çивĕчленни.
4-мĕш класс пĕтернĕ тĕле вĕренекенсен çак ăслайсем, хăнăхусем пулмалла:
— мĕн хушнине, сĕннине, ыйтнине ăнланса ĕçне тума пултармалла;
— пĕлмен сăмахсем кăштах пур хайлава итлесе ăнланма пултармалла;
— çут çанталăка, çынсене сăнласа пама пĕлмелле;
— тус-юлташ, çемье, кун йĕрки, кулленхи ĕç-хĕл, тĕрлĕ вăйă, пĕлекен пĕр-пĕр япала е пулăм çинчен сахалтан та 6—7 предложени йĕркелесе çыхăнуллă каласа пама, пĕр-пĕринпе калаçма пултармалла;
— пĕлекен сăмахсенчен тăракан текста минутра сахалтан та 45—55 сăмаха яхăн тĕрĕс те ăнланса вулама пултармалла;
— вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе (сасăпа, çурма сасăпа, ăшра, ушкăнпа, илемлĕ, суйласа илсе вулани т. ыт. те) усă курма пултармалла;
— текстра кирлĕ сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене, предложенисене, сыпăксене шыраса тупма пĕлмелле;
— текст содержанине учитель ыйтăвĕсем е хатĕр план тăрăх, улăштарса (вăхăтне, хисепне, сăпатне), текста çывăх, кĕскен каласа пама пĕлмелле;
— вырăс тата чăваш çырăвĕн уйрăмлăхĕсене курма пултармалла;
— хатĕр планпа усă курса текст çырма пултармалла.
4-мĕш класс пĕтерекен ачасен пĕлĕвĕсем, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсем 1—4-мĕш классенче чăваш чĕлхи вĕрентмелли минимума тивĕçлĕ пулмалла, минимумра кăтартнинчен пĕчĕкрех пулмалла мар. Минимум вăл — чи пĕчĕк пĕлӳ, хăнăху, ăслай, виçи. Уйрăм ачан пĕлӳ шайĕ минимумран ытларах та пулма пултарать. Пĕтĕмĕшле илсен, ачан пĕлӳ, хăнăху, ăслай шайĕ минимумра панă кăтартусене тивĕçтермелле.
**Минимум икĕ пайран тăрать:**

— пуплевĕн тĕп мехелĕсемпе усă курма пултарни;
— пуплеве аталантарма кирлĕ чĕлхе пĕлĕвĕ.

Чăвашла калаçас-хутшăнас тесен шкул ачин сăмах йышĕ çителĕклĕ пулмалла, тĕрлĕ грамматика формисене пĕлмелле, сăмах майлашăвĕсемпе предложенисем тума пултармалла.

## Пуплевĕн тĕп мехелĕсемпе усă курма пултарни

**1. Тăнласси-ăнланасси (аудировани).**

Чăвашла калаçнине уйăрса илни. Сăмахсенче **ă, ĕ, ÿ, ç** сасăсене илтни, уйăрса илни.

Вĕреннĕ темăсемпе хушнине, сĕннине, ыйтнине ăнланса кирлĕ ĕçе туни.

Пĕлекен сăмахсенчен тăракан хайлава итлесе ăнланни.

**2. Калаçу-хутшăну.**

Урокра, килти хутшăнура чăвашла калаçни.

Юлташ, çемье, кун йĕрки, кулленхи ĕç-хĕл, вăйă, пĕр-пĕр япала, çут çанталăк çинчен сахалтан та 4—5 предложенипе усă курса çыхăнуллă каласа пани, пĕр-пĕринпе калаçни, ыйтусем пама, хуравлама пултарни.

Вĕрентекен хыççăн сăмаха, предложение, сăвва калама пултарни.

Пĕчĕк калавсене пĕр пысăк калава пĕрлештерме, пуçланă калава вĕçлеме пултарни.

Вĕреннĕ темăпа пĕр-пĕр ансат хайлава итленĕ, экскурсире пулнă хыççăн е ÿкерчĕк тăрăх ыйту пама, калаçу йĕркелеме, çыхăнуллă каласа пама пултарни.

Тĕслĕхпе усă курса калав, диалог йĕркелеме пултарни.

**3. Вулав.**

Пĕлекен сăмахсенчен тăракан текста тĕрĕс, ăнланса, минутра сахалтан та 45 сăмах каласа вулама пултарни.

Вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе (сасăпа, çурма сасăпа, ăшра) усă курма пултарни.

Текстпа ĕçлеме пĕлни.

Текстра кирлĕ сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене, предложенисене, сыпăксене шыраса тупма пĕлни.

Текста, текст сыпăкĕсене ят пама пултарни.

Текст содержанине вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравласа е хатĕр план тăрăх, улăштарса (вăхăтне, хисепне, сăпатне), текста çывăх, кĕскен каласа пама пултарни.

Тупмалли юмахсене, ваттисен сăмахĕсене, ача-пăча сăввисене пăхмасăр калама пултарни.

**4. Çыру.**

**Ăă, Ĕĕ, Ӳӳ, Çç** сас паллисене тĕрĕс çырма пултарни.

Ал çырăвне тата пичетленĕ текста çырса илме пултарни.

Сăмахсенчен сăмах майлашăвĕ, предложени, предложенисенчен текст туса; кирлĕ сас паллисене, сăмахсене лартса, хушса; сăмаха, предложение, калава вĕçлесе; ыйтусене хуравласа çырма пĕлни.

Саламлă çыру çырма пĕлни.

## Пуплеве аталантарма кирлĕ чĕлхе пĕлĕвĕ

**1. Фонетика. Графика. Орфоэпи.**

Сасăсемпе сас паллисем, вĕсен шайлашăвĕ. Уçă тата хупă сасăсем. Сингармонизм законĕ. Хупă сасăсен янравлăхĕпе янравсăрлăхĕ тата вăрăмлăхĕпе кĕскелĕхĕ вĕсен сăмахри вырăнĕнчен килни. Алфавит.

Интонаци.

**2. Лексика.**

Сăмах — пуплевĕн тĕп единици. Хирĕçле тата пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. Сăмах тытăмĕ. Пĕр тымарлă сăмахсем. ***-Çă(-çĕ), -у(-ӳ), -лă(-лĕ), -лăх(-лĕх)*** аффикссем хушăнса пулнă сăмахсем. «Шкул», «Класс», «Вĕренӳ хатĕрĕсем», «Килçурт», «Çемье», «Сад, пахча, пахча çимĕç, улма-çырла», «Апатçимĕç», «Савăт-сапа», «Хула тата ял, урам», «Ӳт-пӳ пайĕсем», «Тумтир, атă-пушмак», «Кун йĕрки», «Ача-пăча вăййисем», «Çынсен ĕçĕ-хĕлĕ», «Çут çанталăк вăхăчĕсем», «Вăрман, ӳсен-тăран», «Килти тата тискер чĕр чунсем, вĕçен кайăксем», «Сăпайлăх сăмахĕсем» темăсемпе çирĕп пĕлекен, куллен усă куракан сăмахсен йышĕ 500—700-тен кая пулмалла мар.

**3. Грамматика.**

*Япала ячĕ.* Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Пайăр тата пайăр мар япала ячĕсем. Япала ячĕсем хисеп тăрăх улшăнни. Япала ячĕсен улшăнăвĕ, камăнлăх форми.

*Глагол.* Глаголăн пуçламăш форми, пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Глаголăн пурлă тата çуклă формисем. Глагол вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх улшăнни. Глаголăн сăпатсăр формисем ***-ма(-ме)*** аффикслă инфинитив, ***-нă(-нĕ)*** аффикслă причасти, ***-са(-се)*** аффикслă деепричасти (терминĕсене каламасăр).

*Паллă ячĕ.* Паллă ячĕн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Çывăх тата хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем. Паллă ячĕ улшăнманни. Паллă ячĕпе япала ячĕн килĕшĕвĕ. Паллă ячĕсемпе сказуемăй вырăнĕнче усă курни.

*Хисеп ячĕ.* Хисеп ячĕн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Шут тата йĕрке хисеп ячĕсем (100 таран), хисеп ячĕсемпе япала ячĕсен килĕшĕвĕ.

*Местоимени.* Сăпат, кăтарту, ыйту местоименийĕсем.

*Союз.* Та, тата, мĕншĕн тесен, анчах.

*Татăк.* Чи, -и, мар, ан.

*Хыççăмах.* Пек, валли, хыççăн.

*Предложени.* Калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ, каланине кура кăшкăруллă предложенисем. Предложенири сăмахсен йĕрки. Хутсăр предложенисене анлăлатни. Пĕр йышши членлă предложенисем. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем.

**4. Орфографи. Пунктуаци.**

**[Ă], [ӳ], [ĕ], [ç]** сасăллă тата вăрăммăн, янăраса илтĕнекен хупă сасăллă, çемçе тата хутăш сăмахсене çырма пĕлни. Предложени пуçламăшне, çын, чĕр чун, хула, ял, урам, юхан шыв, кӳлĕ ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма пĕлни. Предложени вĕçне кирлĕ паллă лартма пултарни. Предложенире пĕр йышши членсене уйăрма пултарни.

Ачасен пĕлĕвĕн, хăнăхăвĕсемпе ăслайĕсен шайне тĕрĕслесе-хакласа пырасси — вĕрентĕвĕн тепĕр енĕ. 4-мĕш класра вĕренекенсен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсен шайне тĕрĕслесе-хакласа пыма çак материал пулăшма пултарать.

## 4-мĕш класра вĕренекенсен чăваш чĕлхине пĕлнин, чĕлхемĕрпе усă курма пултарнин шайне тĕрĕслемелли ĕç тĕсĕсем, хакламалли виçесем

4-мĕш классенче чăвашла вĕренекенсен пĕлĕвĕпе хăнăхăвне тĕрĕслемелли ĕç тĕсĕсене тата хакламалли виçесене пуçламăш классен программисене тивĕçтерсе йĕркеленĕ. Виçесем ачасем чăвашла пуплеве мĕнле ăнланнине, чăвашла калаçма пĕлнине, вулавĕпе çырăвне пур шкулта та пĕр пек тĕрĕслеме тата хаклама, вĕрентĕвĕн пахалăхне пĕлме май параççĕ. Класра кашни вĕренекенĕн пĕлĕвĕпе хăнăхăвне учителĕн тĕрлĕ меслетпе усă курса кунсерен е вăхăтран вăхăта тĕрĕслесе хакламалла. Çапла тĕрĕслесе тăни ачасен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕнчи çитменлĕхсене çийĕнчех асăрхама, вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе тĕрĕс ĕçлеме пулăшать. Ачасен пĕлĕвне тĕрĕс, вăхăтра, виçесене пăхăнса хакламалла.

Вĕренекенсен пĕлĕвне сăмах вĕççĕн калаттарса, вулаттарса тата çыртарса тĕрĕслемелле. Тĕрĕслев ĕçĕсене пĕр-пĕр темăна вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, чĕрĕк, вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче ирттермелле.

## Ăнланса итленине хакламалли виçесем

Вĕренекен ача программăра кăтартнă темăсемпе 0,3—0,5 минут хушши каласа е вуласа панине итлесе туллин ăнлансан, хушни-сĕннине пурнăçлать пулсан «5» паллă лартмалла.

Вĕренекен ача программăра кăтартнă темăсемпе каласа е вуласа панине пĕтĕмĕшле ăнлансан, хушни-сĕннине тусан, анчах хăш-пĕрне ăнланмасть, тăваймасть пулсан «4» паллă лартмалла.

Ача программăри темăсемпе каласа е вуласа панин шухăшне ăнланать, анчах хăш-пĕр хушу-сĕнĕве çеç тăвать пулсан «3» паллă лартмалла.

Вĕренекен ача программăри темăсемпе каласа е вуласа панин шухăшне ăнланмасть е йăнăш ăнланать пулсан, хушни-сĕннине тăваймасть е йăнăш тусан «2» паллă лартмалла.

Вĕренекен ача программăри темăсемпе каласа е вуласа панине, хушни-сĕннине нимĕн чухлĕ те ăнланмасть пулсан «1» паллă лартмалла.

## Ăнланса калаçнине хакламалли виçесем

Сăмахпа каласа хуравлаттарни пуçламăш классенчи ачасен пĕлĕвне, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене хакламалли чи кирлĕ меслетсенчен пĕри шутланать.

Сăмахпа каласа хуравланин çак енĕсене хакламалла:

а) туллин, тĕрĕс, йĕркипе, çыхăнуллă, пуплев нормисене пăхăнса каласа панине;

ă) ыйтусене ăнланса хуравланине;

б) пĕр-пĕринпе калаçма пĕлнине.

Вĕренекен ача программăри материалпа усă курса чăвашла ăнланса, тĕрĕс калаçма, хутшăнма, пĕр-пĕр япала, курни-илтни çинчен хăй шухăшне туллин каласа пама пултарсан, пуплев йăнăшĕсем пачах е пĕр-ик йăнăшран ытла тумасть пулсан «5» паллă лартмалла.

Ача ăнланса калаçма, хутшăнма, пĕр-пĕр япала, курни-илтни çинчен хăй шухăшне калама пултарсан, анчах каласа панă чух 3—5 пуплев йăнăшĕ тăвать пулсан «4» лартмалла.

Вĕренекенĕн хуравĕ тулли те çыхăнуллă пулмасан, ача учитель пулăшнипе çеç каласа пама пултарать, калаçура 6 е ытларах пуплев йăнăшĕ тăвать пулсан «3» паллă лартмалла.

Ача калаçура, каласа панă чухне йăнăш нумай тусан, вĕсене учитель пулăшнипе те тӳрлетеймест пулсан «2» паллă лартмалла.

Вĕренекен чăвашла калаçма, юлташĕсемпе хутшăнма пултараймасан, вăл мĕн каланине, унăн шухăшне ăнланма май пулмасан «1» паллă лартмалла.

## Вулав хӑнӑхӑвне тӗрӗслемелли
## тата хакламалли виҫесем

Вулав хӑнӑхӑвне хакламалли виҫесем программӑра каланине тивӗҫтермелле.

Вӗренекен мӗн вуланине лайӑх ӑнлансан; пӗрремӗш ҫур ҫулта тулли сӑмахӑн (пӗрремӗш хут тӗл пулнӑ сӑмахсене сыпӑкӑн-сыпӑкӑн), йӑнӑшмасӑр, минутра сахалтан 45 сӑмах, иккӗмӗш ҫур ҫулта сахалтан та 55 сӑмах, уйрӑм сӑмахсене шухӑша тивӗҫӳллӗ пусӑмсемпе, кирлӗ чарӑнусемпе илемлӗ вуласан; вуланӑ текстӑн содержанине туллин тата суйласа илсе каласа пама пӗлсен; пысӑках мар текста хӑй тӗллӗн пайлама тата вӗсене ят пама, содержанине ансӑр план тӑрӑх каласа пама, панӑ ыйтӑва хуравлама, текстри вырӑна тупса вуласа пама пӗлсен; пӑхмасӑр калама вӗренмелли сӑвва ҫирӗп пӗлсен, ӑна тӗрӗс те илемлӗ каласа парать пулсан «5» паллӑ лартмалла.

Вӗренекен ача текстӑн содержанине тӗрӗс ӑнланать пулсан, тулли сӑмахӑн (хӑш-пӗр йывӑр сӑмахсене сыпӑкӑн-сыпӑкӑн), минутра пӗрремӗш ҫур ҫулта сахалтан та 40 сӑмах, иккӗмӗш ҫур ҫулта сахалтан та 50 сӑмах вуласан, 1—3 йӑнӑш тусан; текста тӗрӗс пайласан, анчах каласа панӑ чухне 1—3 йӑнӑш тусан, хӑех тӳрлетет пулсан, сӑвва илемлӗн, сасса кирлӗ пек улӑштарса пӑхмасӑр калама пӗлсен, анчах пысӑках мар 1—3 йӑнӑш (пӗр сӑмахах темиҫе хут калани, пӑтраштарни т. ыт. те) тӑвать пулсан «4» паллӑ лартмалла.

Вӗренекен вуланӑ текстӑн шухӑшне учитель пулӑшнипе ҫеҫ ӑнлансан, текста туллин (йывӑр сӑмахсене — сыпӑкӑн), пӗр пек сасӑпа, минутра пӗрремӗш ҫур ҫулта сахалтан та 35 сӑмах, иккӗмӗш ҫур ҫулта сахалтан та 45 сӑмах, сӑмахсене, сыпӑксемпе сасӑсене 4—6 ҫӗрте пӑтраштарса, сиктерсе хӑварса, вӗсене вырӑнӗпе ылмаштарса, сӑмахсенчи пусӑмсене пӑсса вуласан, пӑхмасӑр каламалли сӑвва ҫирӗпех пӗлмест пулсан «3» паллӑ лартмалла.

Ача пӗрремӗш ҫур ҫулта пӗр пек сасӑпа, сыпӑкӑн-сыпӑкӑн, минутра сахалтан 30 сӑмах, иккӗмӗш ҫур ҫулта сыпӑкӑн-сыпӑкӑн (пӗлекен сӑмахсене туллин), минутра 40 сӑмах вуласан, вуланӑ чухне 6 йӑнӑш ытла тусан; мӗн вуланине пӑтраштарса, ҫыхӑнусӑр каласа парать пулсан, учитель ыйтӑвӗсене хуравлаймасть пулсан, текста пайлама пӗлмест пулсан, сӑвӑ текстӗн пысӑк пайне пӑхмасӑр калама пӗлмест пулсан «2» паллӑ лартмалла.

Вӗренекен текста сыпӑкӑн-сыпӑкӑн вуласан, мӗн вуланине ӑнланмасан, каласа параймасан, сӑвва пӑхмасӑр калаймасть пулсан «1» паллӑ лартмалла.

### Çыру ĕçĕсене хакламалли виçесем

4-мĕш класра куллен тата пĕтĕмĕшле ирттермелли тĕрĕслев çыру ĕçĕсем шутне çырса илни, тĕрлĕ диктант, ыйтусене хуравласа çырни кĕреççĕ.

Çырса илмелли текстăн тата диктантăн калăпăшĕ çакăн пек пулмалла:

| Класс | Чĕрĕксем | | | |
|---|---|---|---|---|
| | I | II | III | IV |
| IV | 35—40 | 40—45 | 45—50 | 50—55 |

Тĕрĕслев ĕçĕсене темăна вĕренсе пĕтерсен ирттермелле, кун валли урокра 30—35 минут уйăрмалла. Пĕтĕмĕшле тĕрĕслев ĕçĕсене ытларах вĕренӳ чĕрĕкĕ, çур çулĕ вĕçĕнче ирттермелле, анчах юлашки кунсене хăвармалла мар.

### Текста çырса илнине хакламалли виçесем

| Паллăсем | 4 класс |
|---|---|
| «5» | йăнăш çук е 1 йăнăш |
| «4» | 2 йăнăш, 1—2 тӳрлетни |
| «3» | 3—5 йăнăш, 1—3 тӳрлетни |
| «2» | 6—8 йăнăш, 1—4 тӳрлетни |
| «1» | йăнăшсен тата тӳрлетнисен шучĕ «2» паллă лартмаллинчен нумайрах пулсан |

Текста хакланă чухне вĕреннĕ орфографипе пунктуаци йăнăшĕсене пĕрле илсе шутлаççĕ.

### Словарь диктантне хакламалли виçесем

Словарь диктантне сăмахсене тĕрĕс çырма вĕрентес тĕллевпе куллен ирттермелле. Словарь диктанчĕн калăпăшĕ 4-мĕш класра — 8—9 сăмах.

**Словарь диктантне çак виçепе хакламалла:**

«5» паллăпа — диктантра пĕр йăнăш та пулмасан е 1 пысăках мар йăнăш пулсан;

«4» паллăпа — диктантра 2 йăнăш, 1—2 тӳрлетӳ пулсан;

«3» паллăпа — диктантра 3—5 йăнăш, 1—3 тӳрлетӳ пулсан;

«2» паллăпа — диктантра 6—8 йăнăш, 1—4 тӳрлетӳ пулсан;

«1» паллăпа — диктантра йăнăш 8-тан ытла тунă пусан.

Асăрхаттарни: ĕçсене хакланă чухне сăмах пĕлтерĕшне пĕлнине, таса та илемлĕ çырнине шута илмелле.

**4-мĕш класра ытти диктантсене çак виçесемпе усă курса хакламалла:**

Ача вĕреннĕ правилăпа орфографи тата пунктуаци йăнăшĕсем пачах туман е пĕр-ик пысăках мар йăнăш тунă, орфограммăсене тӳрлетмен пулсан, диктанта каллиграфи виçисене (сас паллисен ĕлкисене уçăмлă, пĕр пек чалăштарса т. ыт. те) пăхăнса çырнă, анчах 1—2 çĕрте хăш-пĕр çитменлĕхсем (сиктерсе хăварнă сас паллине лартни, сас палли ĕлкине тӳрлетни, *ă, ĕ, ӳ* тăррисене лартманни, *ç* хӳрине çырманни т. ыт. те) пур пулсан «5» паллă лартмалла.

Ача вĕреннĕ правилăпа орфографи тата пунктуаци йăнăшĕ 2—4 тунă, ĕçе тирпейлĕ çырнă, анчах темиçе çĕрте каллиграфи виçисене тивĕçтермен, тĕрлĕ орфограммăсене 1—3 çĕрте тӳрлетнĕ пулсан «4» паллă лартмалла.

Ача диктантра вĕреннĕ правилăпа орфографи тата пунктуаци йăнăшĕ 5—8 тунă, тирпейсĕр, каллиграфи виçисене пăхăнса çырман, тĕрлĕ орфограммăсене 5 таран тӳрлетнĕ пулсан «3» паллă лартмалла.

Ача вĕреннĕ правилăсемпе орфографи тата пунктуаци йăнăшĕ 8 е ытларах тунă, тирпейсĕр, каллиграфи виçисене пăхăнмасăр çырнă пулсан «2» паллă лартмалла.

Вĕренекен ача диктантра орфографипе пунктуаци йăнăшĕсем 12-рен ытла тунă пулсан «1» паллă лартмалла.

**Диктантра çаксене йăнăш тесе шутламалла:**

а) сăмаха вĕреннĕ орфографи правилисене пăхăнмасăр çырни, сас паллисене е сăмах сыпăкĕсене ылмаштарса лартни, пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа улăштарни;

ă) вĕреннĕ правилăсене пĕлмесĕр чарăну палли лартманни е йăнăш лартни.

**Диктантра çаксем йăнăш шутланмаççĕ:**

а) ку таранччен вĕренмен орфографи тата пунктуаци правилисемпе çыхăннă йăнăшсем (кун пек сăмахсене доска çине çырса кăтартмалла);

ă) предложени вĕçĕнче пĕр хутчен пăнчă лартмасăр хăварнă, анчах тепĕр предложени пуçламăшĕнче пысăк сас палли çырнă пулсан;

б) текст шухăшне улăштармасăр пĕр сăмах вырăнне тепĕр сăмах çырнă пĕр тĕслĕх кăна пулсан.

**Çаксене пĕр йăнăш вырăнне шутламалла:**

а) йăнăш çырнă сăмах икĕ е темиçе хутчен тĕл пулсан, çав правилăпа çыхăннă йăнăша тепĕр сăмахра та тунă пулсан;

ă) пысăках мар 2 йăнăша;

б) *ă, ĕ, ӳ* тăррисене, ç хӳрине сиктерсе хăварнине.

**Çаксем пысăках мар йăнăш шутланаççĕ:**

а) сăмахра пĕр сас паллинех асăрхамасăр икĕ хут çырни *(пая-ян, ыраан)*;

ă) сăмаха çырса пĕтерейменни *(кăранта., кĕнек.)*;

б) пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухне сăмахăн пĕр пайне асăрхамасăр сиктерсе хăварни;

в) предложенире пĕр сăмаха икĕ хут çырни.

# УРОКСЕМ

## 1-мĕш урок

## Тема: Шкула

***Урок тĕллевĕ:*** ачасене чăваш чĕлхине вĕренме хавхалантарасси; çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ĕçлеме тĕллевсем палăртасси; ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) пĕлӳ кунĕ, шкул ачин кулленхи кун йĕркийĕ çинчен каласа пама хăнăхтарасси; 2) кĕнеке пĕлтерĕшĕ çинчен калакан ваттисен сăмахĕсемпе паллаштарасси; 3) ударени лартмалли правилăсене аса илесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Вĕреннине аса илни, чăваш чĕлхипе ку таранччен мĕн вĕреннине, мĕн пĕлнине палăртни.**

Вĕрентӳçĕпе ачасем пĕр-пĕрне сывлăх сунаççĕ:

— Сывлăх сунатăп, ачасем. (Ырă кун пултăр, ачасем.)

— *Сывлăх сунатпăр.* (Ырă кун пултăр.)

Малалла, ачасем ăнланмасан, вырăсла калама юрать.

— Эпир сирĕнпе виçĕ çул хушши чăваш чĕлхи вĕрентĕмĕр, чылай пĕлӳ пуçтартăмăр, хăнăху туянтăмăр. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче чĕлхе вăрттăнлăхĕсемпе малалла паллашăпăр. Çĕнĕ пĕлӳ пухас шухăшлă кирек хăш çыннăн та хăй çак вăхăтра мĕн пĕлнине лайăх ăнланмалла, пĕлмелле. Чăваш чĕлхипе мĕн пĕлетпĕр, мĕн тума пултаратпăр-ха эпир?

Ачасем хуравлаççĕ.

Т ĕ с л ĕ х р е н:

*— тĕрлĕ темăпа калаçма пултаратпăр;*

*— глаголсем мĕнле сăпатланнине пĕлетпĕр, вĕсен формисемпе усă курса калаçма пултаратпăр;*

*— ударени лартмалли правилăсене пĕлетпĕр, вĕсемпе усă курма пултаратпăр;*

*— сăмахсене ыйтăвне кура улăштарма пĕлетпĕр, предложенисенче пĕр-пĕринпе çыхăнтарма пултаратпăр;*

*— чăвашла вулама пĕлетпĕр:*

*а) сас паллисене паллатпăр;*

*ă) икĕ уçă сасă е ялан янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинчи шавлă хупă сасăсен паллийĕсене янратса вуламалли çинчен пĕлетпĕр;*

*б) икĕ пĕр пек сас паллине янăратмасăр е вăрăммăн вуламалли çинчен пĕлетпĕр;*

*— чăвашла çырмалли вăрттăнлăхсене пĕлетпĕр.*

Ачасем вищĕ çул хушшинче мĕн вĕреннине кĕскен çапла аса илеççĕ. Вĕрентӳçĕ ачасем мĕн каланине доска çине схемăсемпе çырса пырать. Сăмахран:

| Ачасем калаççĕ | Вĕрентӳçĕ доска çине çырать |
|---|---|
| чăвашла вулама пĕлетпĕр: |  |
| а) сас паллисене паллатпăр; | ă, ĕ, ӳ, ç; |
| ă) икĕ уçă сасă е ялан янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче шавлă хупă сасăсен сас паллийĕсене янăратса вуламалли çинчен пĕлетпĕр; |  спткхшч |
| б) икĕ пĕр пек сас паллине кирек мĕнле вырăнта та янăратмасăр вăрăммăн вуламалли çинчен пĕлетпĕр т. ыт. те. |  т т |

Çапла ĕçленĕ хыççăн вĕрентӳçĕ ĕçе пĕтĕмлетет:

— Курăр-ха, эпир чăваш чĕлхипе мĕнле нумай пĕлетпĕр. Тата ытларах пĕлес килет-и сирĕн чăваш чĕлхине? Тен, чăвашла тата лайăхрах калаçма вĕренес килет? (Ачасем хуравлаççĕ.) Çак ĕçре пире мĕн пулăшма пултарать-ши?

— *Вĕренӳ кĕнеки, ĕç тетрачĕ, словарьсем. Чăвашла пĕлекен çынсем те пулăшма пултараççĕ.*

**2. Кĕнекепе, çыру тетрачĕпе паллашни, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли тĕллевсем палăртни.**

Вĕрентӳçĕ калаçăва малалла тăсать:

— Апла пулсан кĕнекепе паллашар-ха. (Ачасем кĕнекисене уçса сăнаççĕ.) Мĕн каланă пулăттăр эсир ку кĕнеке çинчен? Тен, халиччен курнă япаласене асăрхарăр эсир унта?

— *Кĕнекере йышăннă паллăсем виççĕмĕш класс кĕнекинчи пекех. Кĕнекери геройсем те çавсемех: Анюк, Ванюк тата Сергей Сергеевич. Кĕнекере текстсем пур. Вĕсем патне тĕрлĕ ĕçсем панă. ...*

— Мĕн çинчен калаçăпăр-ши эпир кăçал? Текст ячĕсене, вĕсем патне панă ӳкерчĕксене пăхса çак ыйтăва хуравлама пулать-и?

— Çулла мĕнле канни çинчен калаçăпăр. Чăваш çĕршывĕ çинчен калакан текстсем нумай кĕнекере. Апла пулсан Чăваш ен çинчен вĕренĕпĕр. Чăвашсен паллă çыннисем çинчен калакан текстсем те тĕл пулаççĕ. Кĕнекере проект майлă панă уроксем чылай.

— Тăваттăмĕш класра çĕнĕ сăмахсем вĕренĕпĕр-ши?

— Кашни урокрах çĕнĕ сăмахсем пур. Вĕсене кĕрен тĕспе уйăрса панă.

— Кăçал эпир çĕнĕ грамматика материалĕпе паллашăпăр-ши?

— Грамматика материалне сарă тĕспе уйăрса вырнаçтарнă. Чăваш чĕлхин грамматикипе пире Сергей Сергеевич паллаштарать.

Çавăн пекех ачасем çыру тетрачĕпе паллашаççĕ.

Мĕн каланине пĕтĕмлетсе вĕрентӳçĕ тăваттăмĕш класра тумалли ĕçсене доска çине кĕскен çырса пырать.

— Пăхăр-ха, мĕн чухлĕ ĕç тумалла пирĕн кăçал! Тăхтаса тăмасăр ĕçе пикенер.

**3. Пĕлӳ кунĕ, çуллахи каникул çинчен калаçни.**

1) 1-мĕш хăнăхтарупа ĕçлени.

Ачасем Уйăп Мишшин тата Юрий Петровăн сăввисене вулаççĕ. Вĕсен темисен пĕрпеклĕхне палăртаççĕ. Илемлĕ вулама вĕренеççĕ.

— Калăр-ха, ачасем, авăн уйăхĕн пĕрремĕшĕ мĕнле уяв? Çак куна пирĕн çĕршывра мĕнле уявлаççĕ?

— Авăн уйăхĕн пĕрремĕшĕ — Пĕлӳ кунĕ. Çак кун ачасем шкула каяççĕ. Шкулсенче линейкăсем, уяв урокĕсем пулаççĕ. Ачасем пĕр-пĕрне, вĕрентӳçĕсене уяв ячĕпе саламлаççĕ. Çуллахи каникулта мĕнле канни çинчен калаçаççĕ.

2) 2-мĕш хăнăхтарупа ĕçлени.

Вĕрентӳçĕ хăнăхтарура панă ыйтусене вулать. Ачасем вĕсене хуравлаççĕ.

3) 3-мĕш хăнăхтарупа ĕçлени.

Хăнăхтарупа çакăн пек ĕçлеме пулать: пĕрремĕш хутĕнче вĕрентӳçĕ пĕрремĕш геройăн сăмахĕсене вулать, ачасем иккĕмĕш геройăн сăмахĕсене вулаççĕ. Иккĕмĕш хутĕнче икĕ ача рольсемпе вулаççĕ. Унтан ачасем панă диалогпа усă курса икшерĕн калаçу хатĕрлеççĕ, ытти ачасене вуласа параççĕ. Итлекенсем кашни мăшăр туса хатĕрленĕ калаçăва хак параççĕ.

**4. Кĕнеке пĕлтерĕшĕ çинчен калаçни.**

1) 5-мĕш хăнăхтарупа ĕçлени.

Ачасене текста ăнланма пулăшма тивет пулсан çак йĕркепе ĕçлеме пулать:

— Переведите название текста на русский язык.

— Найдите в тексте предложения, которые переводятся так:

«Я с моим другом беседую каждый день».

«Друг мне всегда помогает».

«Он меня обучает, водит меня по разным местам».

«У меня есть хороший друг. Сам маленький, но очень много знает».

— Мĕн-ши вăл? Халĕ, тархасшăн, ĕç тетрачĕсене уçăр, пĕрремĕш ĕçе тупăр. Унта панă кроссворда тĕрĕс шутласан паллă тунă юпара çак тупмалли юмахăн тупсăмне вулама пулать.

Ачасем икшерĕн е пĕчĕк ушкăнсемпе кроссворда шутлаççĕ.

— Çапла вара, паллă тунă юпара мĕнле сăмах пытаннă?

— *Кĕнеке.*

2) 6-мĕшпе 7-мĕш хăнăхтарусемпе ĕçлени. (Ушкăнпа тумалли ĕç.)

— 7-мĕш хăнăхтарăва пăхăр, тархасшăн. Текст мĕнле сăмахсемпе пуçланать?

— *Хаклă тусăм!*

— Кама çакăн пек чĕнеççĕ-ши авторсем?

— *Паллах, вĕренекенсене. Пире.*

— Текстри сăмахсенче пусăм лартман. Ăна тĕрĕс вулас тесен сăмахсенче пусăмсен вырăнĕсене палăртмалла. Ушкăнсенче чăваш чĕлхинчи пусăм лартмалли правилăсене аса илĕр, ĕç тетрадĕнче панă 2-мĕш хăнăхтарăва тăвăр. Ун хыççăн 7-мĕш хăнăхтарура панă текста тĕрĕс вулăр. Çырса ĕçлеме ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш хăнăхтарупа усă курма пултаратăр.

Ачасем ушкăнсенче 5—7 минут хушши ĕçлеççĕ. Тунă ĕçĕсемпе юлташĕсене паллаштараççĕ.

3) 8-мĕш хăнăхтарупа ĕçлени. Киле ĕç пани.

Ачасем вĕрентӳçĕпе пĕрле ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ. Вĕсене мĕнле ăнланни çинчен калаçаççĕ. Çырнă чухне тухса тăма пултаракан йывăрлăхсене (ошибкоопасные места) палăртаççĕ.

— Тепĕр урок валли çак ваттисен сăмахĕсене пăхмасăр çырма вĕренсе килмелле. «Манăн тус» текстпа усă курса кĕнеке çинчен тупмалли юмах йĕркелемелле.

**5. Урока пĕтĕмлетни.**

Кашни ача хăйĕн ĕçне ĕç тетрадĕнче 4-мĕш хăнăхтарура панă таблица тăрăх хаклать. Учитель темиçе ачана чĕнсе илсе вĕсен ĕçне хăй хаклать.

## 2-мĕш урок

## Тема: Шкулта

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; вĕсене хăйсен шкулти ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чăваш алфавитне аса илесси, сăмахсене

алфавит йӗркипе вырнаҫтарма вӗренесси; 2) сӑмахсене мӗнле пуплев пайӗ пулнине кура ушкӑнлама вӗренесси; 3) киле панӑ ӗҫсене мӗнле туни ҫинчен каласа пама хӑнӑхасси; 4) шкул пурнӑҫне сӑнлакан ӳкерчӗк тӑрӑх ыйтусем парса калаҫма вӗренесси.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Урок темине палӑртни**

— Сывлӑх сунатӑп, ачасем.

— *Сывлӑх сунатпӑр.*

— Кӗнекесене уҫӑр-ха. Пӗрремӗш хӑнӑхтарӑва тупӑр. Петӗр Ялкир ҫырнӑ тупмалли юмаха пурте пӗрле вулӑпӑр. Мӗн ҫинчен сӑмах пырать-ши унта?

Сӑвва пурте пӗрле вулаҫҫӗ. Тупсӑмне тупаҫҫӗ. Тӗрлӗрен хуравсем пур пулсан пурне те итлемелле. Ача хӑй мӗншӗн ҫавӑн пек шутланине ӑнлантарса пама пултартӑр.

Тупсӑмне пӗлнӗ хыҫҫӑн сӑвва пурте пӗрле тепӗр хут вулаҫҫӗ. Вӗрентӳҫӗ урок темине, тӗллевне палӑртать:

— Паян эпир урокра чӑваш алфавитне аса илӗпӗр. Шкулти кулленхи ӗҫсем ҫинчен калаҫӑпӑр.

**2. Чӑваш алфавитне аса илни.**

— Кам чӑваш алфавитне астӑвать?

Ачасем чӑваш алфавитне каласа параҫҫӗ.

— Малалла кӗнекере панӑ иккӗмӗш ӗҫри пек выльӑпӑр: а — автан, ӑ — ӑман, б — бамбук, в — ... .

Ку ӗҫе ачасем икшерӗн пурнӑҫлама пултараҫҫӗ. Пӗр-пӗринпе улшӑнса алфавитри пӗтӗм сас паллипе сӑмахсем каласа тухаҫҫӗ, е класри кашни ача пӗрин хыҫҫӑн тепри алфавит йӗркипе пӗрер сӑмах калать.

**3. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.**

— Килте сирӗн кӗнеке ҫинчен тупмалли юмах хатӗрлемелле пулнӑ. Кам хӑйӗн ӗҫӗпе пире паллаштарасшӑн?

Темиҫе ача хӑйӗн тупмалли юмахне каласа парать.

— Унсӑр пуҫне сире кӗнеке ҫинчен ваттисен сӑмахӗсем вӗренме хушнӑччӗ. Ӗҫ тетрачӗсене 2-мӗш страницӑна уҫӑпӑр, вӗреннӗ тупмалли юмахсене кашни хӑй тӗллӗн ҫырӑпӑр.

Ачасем астуса юлнӑ тӑрӑх ваттисен сӑмахӗсене ҫыру тетрачӗсене ҫыраҫҫӗ. Юнашар ларакан юлташӗсемпе тетрадьсемпе улшӑнса ҫырнӑ ваттисен сӑмахӗсене кӗнекесене уҫса тӗрӗслеҫҫӗ.

**4. Ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашни.**

Учитель вулать, ачасем ун хыҫҫӑн калаҫҫӗ. Сӑмахсене йӑнӑш калакансем пур пулсан йӑнӑшсене тӳрлетеҫҫӗ. Мӗншӗн йӑнӑшнине тӗпчеҫҫӗ. Сӑмахсене вырӑсла куҫараҫҫӗ, астуса юлма тӑрӑ-

шаççĕ. Çакăн пек ĕçленĕ хыççăн учитель сăмахсене вырăсла калать, ачасем чăвашла куçараççĕ.

— Халĕ мăшăрăн-мăшăрăн пĕрлешсе шарадăпа ĕçлер (кĕнекери 4-мĕш ĕç). Кам тупсăмне тупать — алă çĕклет.

Ачасем 4-мĕш хăнăхтарăва пурнăçлаççĕ. Пĕрремĕш алă çĕклекен мăшăр шарадăна вуласа тупсăмне калать. Ыттисем е килĕшеççĕ, е хирĕçлеççĕ. (Тĕрĕс хурав: рак — лак.)

— Çак шарадăра мĕнле çĕнĕ сăмах тĕл пулчĕ?

— *«Ылмаштарсан» сăмах тĕл пулчĕ.*

— Шарадăри сăмахсенче мĕнсене ылмаштараççĕ?

— *Сас паллисене ылмаштараççĕ.*

Доска çинче предложенисем. Вĕрентӳçĕ вулать:

— Эпĕ паян пилĕк сехетре çывăрса тăтăм. Эсĕ миçе сехетре çывăрса тăтăн?

— *Эпĕ паянултă сехетре çывăрса тăтăм. Эпĕ паян çичĕ сехетре çывăрса тăтăм...*

— Предложенисенче мĕнсене ылмаштартăмăр?

— *Сăмахсене ылмаштартăмăр.*

**5. Шкул пурнăçĕ çинчен каласа пама вĕренни.**

1) 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем сăмахсене виçĕ ушкăна уйăрма май пуррине палăртаççĕ: япала ячĕсем, паллă ячĕсем, глаголсем. Класри ачасене виçĕ ушкăна уйăрсан аван. Пĕрремĕш ушкăнри ачасем япала ячĕсене, иккĕмĕш ушкăнрисем паллă ячĕсене, виççĕмĕш ушкăнрисем глаголсене алфавит йĕркипе çыраççĕ. Ĕçе тĕрĕслеме ансат пултăр тесе кашни ушкăнран пĕр ачи доска çинче ĕçлеме пултарать. Сăмахсене алфавит йĕркипе çырса пĕтернĕ хыççăн доска çинчи ĕççемпе пĕрле кашни ача хăйĕн ĕçне тĕрĕслет.

2) Чăваш чĕлхипе киле панă ĕçе мĕнле пурнăçлани çинчен диалог туни.

Кĕнекери 6-мĕш ĕçре панă таблицăна пурте пĕрле ĕçлесе тултараççĕ. Доска çине çырса пурнăçласан аван. Таблицăри сăмахсемпе усă курса 7-мĕш ĕçе мăшăрăн-мăшăрăн уйрăлса пурнăçлаççĕ. Туса хатĕрленĕ диалогсене класри ачасене вуласа параççĕ. Ачасем кашни мăшăрăн ĕçне хак параççĕ.

3) 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Математика урокĕнче мĕн туни çинчен пурте пĕрле калав йĕркелеççĕ. Кашни ача пĕрер предложени калать. Ĕçе пуçăниччен ачасем глаголсене мĕнле формăра (хăш вăхăтра) лартмаллине тишкереççĕ.

— Так как действия совершались вчера нами, значит, глаголы должны быть в форме прошедшего времени, т. е. мы должны работать, отвечая на вопрос «Эпир мĕн турăмăр?»

— Если нам придется рассказать о действиях одного человека, то какой вопрос мы ставим?

— *Вăл мĕн турĕ?*

— Так как мы вместе будем составлять один текст, очень важно знать, о чем говорилось в предыдущих предложениях. Иначе связного текста не будет. Значит, обязательное условие успешной работы — свое предложение связать по смыслу уже со сказанными твоими одноклассниками мыслями.

Тĕслĕхрен:

*Ĕнер пирĕн математика урокĕ пулчĕ. Унта эпир икĕ задача шутларăмăр. Маша юманпа хурăн çинчен задача шутларĕ. Настя вик-çĕмĕш класра вĕренекен ачасем çинчен задача шутларĕ. Эпир математика урокĕнче тата примерсем шутларăмăр. Пĕр йăнăш та тумарăмăр. Унтан пилĕк уравнени шутларăмăр. Уравненисенче те йăнăшсем пулмарĕç. Киле валли пире икĕ пример тата тăватă уравнени шутлама парса ячĕç.*

4) 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Задачăсене вулаççĕ. Тӳрех пурте ăнланмаççĕ пулсан вырăсла куçараççĕ. Хуравĕсене чăвашла калаççĕ:

— *Пĕрремĕш задачăн хуравĕ — йывăç çинче çичĕ кайăк юлнă.*

— *Иккĕмĕш задача тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен хурăн çинче пан улми ӳсмест.*

**6. Киле ĕç пани.**

1. «Ылмаштар» сăмаха вăхăт тата сăпат тăрăх улăштарса икĕ предложени тумалла.

2. Киле панă ĕçсене мĕнле пурнăçлани çинчен каласа пама пĕлмелле.

Хушса калани: иккĕмĕш ĕç çăмăллăн ĕлкĕрсе пыракан классем е уйрăм ачасем валли.

## 3-мĕш урок

### Тема: Пирĕн вĕрентӳçĕ

***Урок тĕллевĕ:*** шкулта куллен пулса иртекен ĕçсем çинчен чăвашла каласа пама вĕрентесси; пуплеве тĕрлĕ енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) вĕрентӳçĕ çинчен кĕскен каласа пама вĕрентесси; 2) панă сăмахсене тĕрĕс вырнаçтарса лартса предложенисем, предложенисенчен текст тума хăнăхтарасси; 3) урокра пулса иртекен ĕçсем çинчен ыйтусене хурав пама, ӳкерчĕк тăрăх ыйтусем тума вĕрентесси; 4) ваттисен сăмахĕсене астуса юласси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Урок темине палăртни.**

— Ырă кун пултăр, ачасем.

— *Ырă кун пултăр.*

— 10-мĕш ĕçе пурнăçлăпăр. Икшерĕн ĕçлĕпĕр.

***Инструкци.*** Тупмалли юмахсене вулăр. Тупсăмĕ кам е мĕн пулма пултарнине тишкерĕр. Калаçса татăлнă хыççăн алă çĕклĕр. Камсем пĕрремĕш пулĕç, çавсем доска умне тухĕç. Вĕсен тупмалли юмаха иккĕн пĕрле вуласа памалла пулать. Тупсăмне каламалла. Ытти ачасем вĕсемпе е килĕшĕç, е вĕсене хирĕçлĕç.

Тупмалли юмахсен тупсăмне калаççĕ: вĕрентӳçĕ.

— Тата мĕнле сăмахсемпе калама пулать вĕрентӳçĕ çинчен?

— *Вĕрентекен, учитель.*

— Сирĕн шутпа, паян урокра мĕнле темăпа калаçăпăр-ши?

— *Ман шутпа, эпир вĕрентӳçĕ çинчен калаçăпăр.*

Вĕрентӳçĕ доска çине урок темине çырса хурать: «Пирĕн вĕрентӳçĕ».

**2. Вĕрентӳçĕ çинчен калаçни.**

1) 11-мĕш ĕçе пурнăçлани;

2) 12-мĕш ĕçе пурнăçлани;

3) ӳкерчĕк тăрăх ыйтусем хатĕрлени.

Ачасем икшерĕн е ушкăнпа пуçтарăнса 3—4 минут хушши ӳкерчĕк тăрăх класри ытти ачасем валли ыйтусем хатĕрлеççĕ. Ĕç валли уйăрнă вăхăт иртсен пĕр-пĕрне ыйтусем парса калаçаççĕ.

Ыйтусен тĕслĕхĕсем:

— Ӳкерчĕк çинче камсем пур?

— Вĕрентӳçĕ мĕн тăвать?

— Ачасем мĕн тăваççĕ? Вĕсем хăйсен учительне мĕнле итлеççĕ?

— Ачасем мĕншĕн учителе тимлĕ итлеççĕ-ши?

**3. Çын вĕренме тăрăшни паха пулни çинчен калаçни.**

1) 14-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Сăвăсен содержанине ăнланнă хыççăн П. Хусанкайăн сăввине çырса илеççĕ. Йăнăш тума хăрушлăх пур вырăнсене туртса палăртаççĕ:

Ан ӳркенĕр, ăслă пулăр,
Пĕлмелли питех нумай.
Шырăр, тупăр, çырăр, вулăр,
Çивĕчленĕр тĕрлĕ май.

2) Киле панă ĕçе тĕрĕслени.

— Лайăх вĕренес тесен ачан хăй тĕллĕн вĕренме пĕлмелле, киле панă ĕçе тăрăшса тумалла. Кам хăй киле панă ĕçе мĕнле пурнăçлани çинчен каласа парасшăн?

Ачасем килте хатĕрленĕ калавсене каласа параççĕ.

Тĕслĕхрен:

*Эпĕ икĕ сехетре шкултан киле таврăнатăп. Апат çиетĕп. Кăштах усăлса çӳретĕп. Ултă сехетре киле панă ĕçсене тума пуçлатăп. Эпĕ малтан математикăпа задачăсем, примерсем шутлатăп. Унтан вырăс чĕлхипе вулатăп, çыратăп, ыйтусене хуравлатăп. Унтан чăваш чĕлхипе çĕнĕ сăмахсене вĕренетĕп, панă хăнăхтарăва пурнăçлатăп. Уроксене туса пĕтерсен аннене мĕн тунине каласа паратăп. Вара кĕнеке вулатăп е телевизор пăхатăп.*

3) 15-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Вырăссен ваттисен сăмахĕ: *Птица красна перьями, а человек умом.*

*Тĕкĕ, ăсĕ* сăмахсем *унăн* сăмахпа çыхăнаççĕ: *унăн (кайăкăн) тĕкĕ, унăн (этемĕн) ăсĕ.*

Предложенире *тĕкĕ, ăсĕ* сăмахсем çумне *-пе* аффикс хушнă:

*Вăл (кайăк) илемлĕ тĕк-ĕ-пе. Вăл (этем) илемлĕ ăс-ĕ-пе.*

Ачасем вĕрентӳçĕпе пĕрле çак предложенире *тĕк, ăс* сăмахсен *тĕкĕпе, ăсĕпе* формисем кирлине тишкереççĕ.

4) 16-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Класри ачасем ваттисен сăмахне çак урокрах астуса юлма пултараççĕ пулсан ăна тӳрех çырма юрать. Çук пулсан — ваттисен сăмахне килте вĕренсе килме калама юрать. Çырса тĕрĕслесси вара тепĕр урока юлать.

**4. Киле ĕç пани.**

1) 12-мĕш ĕçре панă ыйтусемпе усă курса каласа пама вĕренмелле;

2) ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

Унсăр пуçне 16-мĕш ĕçе урокра çырса пурнăçламан пулсан ваттисен сăмахне вĕренме парса ямалла.

**5. Урока пĕтĕмлетни.**

— Паян урокра эпир вĕрентӳçĕсем çинчен тата вĕренни этеме илем кӳни çинчен калаçрăмăр. Халĕ хамăр ĕçе хак парар-ха.

Ĕç тетрадĕнче панă таблица тăрăх ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ. Учитель кашни ачан çырса тунă ĕçĕсене (14-мĕш, 16-мĕш ĕçсене) хаклать.

## 4-мĕш урок

### Тема: Çуллахи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** çуллахи кану çинчен каласа пама хăнăхтарасси; пуплеве пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çĕнĕ сăмахсемпе паллаштарасси; 2) ачасем çулла ăçта канни çинчен калакан текста вуласа ăнланасси; 3) текст содержанийĕ тăрăх ачасем ăçта канни çинчен каласа пама вĕрентесси; 4) Сочи хули çинчен каласа пама вĕрентесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Урок темине палăртни.**

— Ырă кун пултăр, ачасем.

— *Ырă кун пултăр.*

— Кĕнекесене тăххăрмĕш страницăна уçăр. Ӳкерчĕк çинче камсене куратăр?

— *Ӳкерчĕк çинче ачасем пур.*

— Вĕсем ăçта килнĕ?

— *Ачасем тинĕс хĕррине килнĕ. Вĕсем лагере канма килнĕ.*

— Эпĕ пĕрремĕш ĕçре панă сăвва вулăп. Эсир тимлĕ итлĕр. Сăвăра мĕн çинчен каланине ăнланма тăрăшăр.

Вĕрентӳçĕ сăвва вулать. Ачасем мĕн ăнланнине каласа параççĕ:

— *Çуллахи каникулта ачасем тинĕс хĕррине канма килнĕ, хĕвел çинче хĕртĕнме хатĕрленеççĕ. Экскурсие кайма ĕмĕтленеççĕ. Çу кунĕсене тав тăваççĕ.*

— Сирĕн шутпа, эпир паян урокра мĕн çинчен калаçăпăр-ши?

— *Паян çуллахи каникулта мĕнле канни çинчен калаçăпăр.*

Вĕрентӳçĕ доска çине урок темине çырса хурать: ***Çуллахи каникулта.***

**2. Çĕнĕ сăмахсемпе паллашни.**

— Ку темăпа пирĕн виçĕ урок пулĕ. Çак уроксенче кирлĕ пулакан сăмахсемпе паллашар. Çĕнĕ сăмахсем ку темăра чылай, çавăнпа вĕсене мăшăрăн-мăшăрăн ĕçлесе астуса юлма меллĕ пулĕ тетĕп. Сăмахсене астуса юлма пилĕк минут уйăратпăр.

Ачасем икшерĕн пĕрлешсе çĕнĕ сăмахсене вĕренеççĕ. Пĕрпĕрне тĕрĕслесе хаклаççĕ.

Т ĕ р ĕ с л е н и. Вĕрентӳçĕ сăмахсене вырăсла калать, ачасем чăвашла куçараççĕ.

**3. Çулла ăçта канни çинчен калаçни.**

— Виççĕмĕш ĕçре панă текста вулăпăр.

Е класри пĕр ача, е черетпе 3—4 ача текста саспа вулаççĕ.

— Пĕрремĕш абзаца вырăсла куçарăр.

— *После летних каникул Аня и Ваня встретились со своими одноклассниками. Дети расспрашивали друг друга о том, где отдыхали во время каникул.*

Унтан вĕрентӳçĕ çакăн йышши ыйтусем парать.

— Илемпи çуллахи каникулта ăçта каннă?

— Таня каникулта ăçта пулса курнă?

— Саша çулла ăçта пурăннă?

— Миша ăçта кайса курнă?

— Катя каникулта ăçта каннă?

— Катьăпа Вова ăçта кайса курнă?

— Анюкпа Ванюк каникула мĕнле ирттернĕ?

Ачасем ыйтусен хуравĕсене текстра тупса хуравлаççĕ.

— Текстри юлашки предложение вулăр, тархасшăн.

Ачасем предложение пурте пĕрле саспа вулаççĕ.

— *Курни-илтни* сăмаха эсир мĕнле ăнланатăр?

Ачасем сăмах тĕпĕсене палăртса вĕсен пĕлтерĕшне тишкереççĕ: ***курни*** *— кур — видеть;* ***илтни*** *— илт — слышать, т. е. то, что видели, что слышали, о чем узнали.*

— Катя çуллахи каникулта ăçта каннине аса илĕр-ха.

*— Катя çуллахи каникулта Хура тинĕс хĕрринче каннă.*

— Хура тинĕс хĕрринче мĕнле пысăк хула вырнаçнă?

*— Сочи хули.*

— Катя Сочи хулинче мĕнле канни çинчен каласа кăтартнине тăваттăмĕш ĕçре вуласа пĕлĕр.

Текста кашни хăй тĕллĕн пĕр хут вуласа тухать.

— Катя Сочи хулине кам патне кайнă?

*— Унта унăн асламăшĕ пурăнать.*

— Çакăн çинчен калакан абзаца вуласа парăр.

Пĕрремĕш абзаца пĕр ача саспа вуласа парать.

— Икĕ пин те вун тăваттăмĕш çулта Сочи хулинче мĕн пулса иртнĕ?

*— Унта Хĕллехи Олимп вăййисем иртнĕ.*

— Çакăн çинчен калакан абзаца тупса вулăр.

Юлашки абзаца пĕр ача саспа вуласа парать.

— Хура тинĕс хĕрринчи климат çинчен калакан абзаца вуласа парăр.

Пĕр ача иккĕмĕш абзаца саспа вуласа парать.

— Сочи хулинче мĕн-мĕн курма пулать? Ун çинчен хăш абзацра каласа панă?

Ачасем çак ыйтăвăн хуравне виççĕмĕш абзацра тупаççĕ.

**4. Текста 3-мĕш сăпатран каласа пани.**

— Виççĕмĕш сăпатран каласа пама текста мĕнле улăштармалли пирки ушкăнсенче сӳтсе явăр. Хăвăрăн шухăшăрсемпе ыттисене паллаштарăр.

Ачасем ушкăнсенче сӳтсе яваççĕ, кашни ушкăнăн шухăшĕсене итлесе пĕтĕмлетӳ тăваççĕ.

*— Текстра пĕрремĕш абзаца çеç улăштарма тивет, мĕншĕн тесен Катя хăй ятĕнчен çак абзацра çеç калать.*

Улăштармалли вырăнсем: 1) *эпĕ* сăмаха *Катя* е *вăл* сăмахсемпе; 2) глаголсен аффиксĕсене; 3) *манăн* сăмаха *унăн* е *Катьăн* сăмахсемпе; 4) *асанне — асламăшĕ*; *асаннене — асламăшне.*

Ачасем пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн текста виççĕмĕш сăпатран вуласа параççĕ, кайран каласа пăхаççĕ.

**5. Киле ĕç пани.**

1) Çĕнĕ сăмахсене астуса юлмалла, словарь диктанчĕ çырма хатĕрленмелле;

2) «Сочире» текст содержанине 3-мĕш сăпатран каласа пама вĕренмелле.

**6. Урока пĕтĕмлетни.**

— Урок темине аса илер-ха.

— *Çуллахи каникулта.*

— Анюкпа Ванюкăн класĕнче вĕренекен ачасем çулла ăçта каннă?

— *Ачасем ялта, Сочире, Египетра, Турцире каннă. Мускавра, Санкт-Петербургра, Европăра пулса курнă.*

— Сочи хули çинчен эсир çак урокра мĕн пĕлтĕр?

— *Сочи Хура тинĕс хĕрринче вырнаçнă. Çут çанталăк унта питĕ илемлĕ. Садсенче тĕрлĕ çимĕç ӳсет. Тусем çинче шыв сиккисем курма пулать. Нумай пулмасть унта Олимп вăййисем иртнĕ.*

— Кашни хăйĕн урокри ĕçне ĕç тетрадĕнчи çиччĕмĕш страницăра панă таблицăри 1—2-мĕш пунктсем тăрăх хак парать.

Кашни ача хăйĕн ĕçне хаклать. Кăмăл пулсан сăмахпа каласа парать.

— Сывă пулăр.

— *Сывă пулăр.*

## 5-мĕш урок

### Тема: Çуллахи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; çуллахи кану çинчен каласа пама хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çĕнĕ сăмахсене калаçура çирĕплетесси; 2) ачасем çулла ăçта канни çинчен калакан текст содержанийĕ тăрăх калаçасси; 3) ачасем Египетра канни çинчен калакан текста вуласа ăнланасси; 4) «Европăра» текст содержанийĕ тăрăх ĕçлесси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Урок темине палăртни.**

Доска е экран çинче — ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш страницăри 1-мĕш ĕç.

— Калаçу татăкĕсене мĕнле йĕркепе вырнаçтарсан вĕçленнĕ диалог пулать?

Кашни вĕренекен хăй тĕллĕн ĕçлет, панă вариантсенчен пĕрне суйласа илет. Ачасем хăйсен шухăшне ăнлантарса параççĕ. Пĕрпĕрин шухăшĕпе е килĕшеççĕ, е хирĕçлесе урăх шухăша çирĕп-

летеççĕ. Тĕрĕс варианта суйласа илнĕ хыççăн диалога вулаççĕ, унăн содержанийĕ тăрăх ĕçлеççĕ.

— Калаçăва хутшăнакан ачасем çулла ăçта каннă?

— *Малтан кукамăшĕ патĕнче пурăннă, унтан Мускавра пулнă. Кайран вара пĕри лагерьте, тепри Çĕмĕрлере каннă.*

— Ялта ачасем мĕн тунă?

— *Ялта вĕсем пахчара ĕçленĕ, шыва кĕнĕ, хĕвел çинче хĕртĕннĕ, вăрмана çӳренĕ.*

— Мускавра ачасем мĕн курнă?

— *Унта вĕсем Кремле кайса курнă, зоопаркра пулнă, цирк пăхнă.*

— Паян эпир çулла ачасем ăçта канни çинчен малалла калаçăпăр.

Вĕрентӳçĕ доска çине «Çуллахи каникулта» тесе çырса хурать.

**2. Словарь диктанчĕ.**

— Урок пуçламăшĕнче иртнĕ урокра вĕреннĕ сăмахсене аса илер, словарь диктанчĕ çырар. Эпир сирĕнпе 5 сăмах çырăпăр, çавăнпа хут листисем çине пĕрререн пуçласа пиллĕк таран 5 число çырса хурăр.

Ачасем хут листи çине пĕрререн пуçласа пиллĕк таран номерсем çырса хураççĕ. Вĕрентӳçĕ сăмахсене вырăсла калать, ачасем вĕсене чăвашла куçарса кирлĕ номер тĕлне çыраççĕ:

1) арабский язык; 2) морское дно; 3) любуется; 4) пустыня; 5) путешествует.

Сăмахсене çырса пĕтернĕ хыççăн ачасем хут листисемпе улшăнса тĕрĕс хуравсен тĕслĕхĕпе пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслеççĕ.

**3. Çулла ăçта канни çинчен калаçни.**

— Ванюкпа Анюкăн пĕр класра вĕренекен юлташĕсем çулла ăçта каннă?

— *Катя Сочире пулнă. Илемпи кукамăшĕ патĕнче ялта каннă. Таня Мускавра пулнă. Саша Санкт-Петербургра пурăннă. Миша Турцире, Катьăпа Вова Египетра, Анюкпа Ванюк Европăра пулнă.*

— Катя каласа панинчен Сочи хули çинчен эсир мĕн пĕлтĕр?

— *Сочи Хура тинĕс хĕрринче вырнаçнă. Унта çут çанталăк илемлĕ, климат çемçе, тинĕс ăшă, сиплĕ çăлсем нумай. Икĕ пин те вун тăваттăмĕш çулта Сочи хулинче Хĕллехи Олимп вăййисем иртнĕ. Унта тĕрлĕ çĕршыври спортсменсем хĕллехи спорт вăййисенче вăй виçнĕ. Сочи Олимпиади пысăк спорт уявĕ пулса тăнă.*

**4. «Египетра» текстпа ĕçлени.**

— Катьăпа Вова çулла ăçта каннă?

— *Вĕсем Египетра каннă.*

— Ун çинчен тĕплĕнрех «Египетра» ятлă текста вуласа пĕлĕпĕр. Малтан текстпа кашни харпăр хăй тĕллĕн паллашăр.

Ачасем кашни хăй тĕллĕн текста пĕр хутчен вуласа тухаççĕ.

Ун хыççăн икĕ-виçĕ ача черетпе пĕрер абзац саспа вулаççĕ. Унтан текста ăнланас тĕллевпе ĕçлеççĕ:

— Катьăпа Вова Египетра мĕншĕн пĕрле каннă?

— *Мĕншĕн тесен вĕсен çемйисем туслă. Час-часах вĕсем пĕрле канаççĕ.*

— Вĕсем хăш уйăхра Египетра пулнă?

— *Вĕсем утă уйăхĕн çурринче Египетра пулнă.*

— Египет çинчен калакан абзаца тупса вулăр.

Ачасем текстри иккĕмĕш абзаца вуласа параççĕ.

— Текстра çак предложенисен чăвашла куçарăвĕсене тупса вуласа парăр:

- Катя и Вова в Египте купались в Красном море.
- Дети побывали и в пустыне, любовались Египетскими пирамидами.
- Познакомились с подводным миром.
- В реке Нил видели крокодилов.
- Любовались Коралловыми рифами.

Ачасем кашни предложенин чăвашла куçарăвне тупса вулаççĕ.

— Çапла вара, Катьăпа Вова çулла ăçта каннă?

— *Катьăпа Вова çулла Египетра каннă.*

— Текста вуласа эсир Египет çинчен мĕн пĕлтĕр?

Ачасем хуравлаççĕ.

— Ачасем Египетра мĕн тунă?

— *Унта вĕсем Хĕрлĕ тинĕсре шыва кĕнĕ, ... .*

**5. «Европăра» текстпа ĕçлени.**

— Аса илер-ха, Анюкпа Ванюк çуллахи каникула мĕнле ирттернĕ?

— *Вĕсем Европăри çĕршывсем тăрăх çул çӳренĕ.*

— Европăра мĕнле çĕршывсем вырнаçнă?

— *Великобритани, Итали, Франци, Греци...*

— Ванюкпа Анюк хăш çĕршывсенче пулнă-ши? «Европăра» текста вуласа ун çинчен пĕлĕпĕр.

Темиçе ача черетпе текста вуласа парать.

— Çапла вара, Анюкпа Ванюк Европăри хăш çĕршывсенче пулса курнă?

— *Анюкпа Ванюк Францире тата Великобританире пулнă.*

— Çак çĕршывсен тĕп хулисем хăш хуласем?

— *Великобританин тĕп хули — Лондон. Францин тĕп хули — Париж.*

— Çак çĕршывсенче çынсем мĕнле чĕлхесемпе калаçаççĕ?

— *Францире француз чĕлхипе, Великобританире акăлчан чĕлхипе калаçаççĕ.*

— Ачасем Францире мĕн-мĕн курни çинчен вуласа парăр.

Ачасем иккӗмӗш абзаца вуласа параҫҫӗ.

— Ачасем Великобританире мӗн курни ҫинчен вуласа парӑр.

Ачасем юлашки икӗ абзаца вуласа параҫҫӗ.

**6. Урока пӗтӗмлетни. Текстсем патне panӑ фотоӳкерчӗксемпе ӗҫлени.**

— Эпир сирӗнпе икӗ урок хушши ачасем ҫулла мӗнле вырӑнсенче пулса курни ҫинчен калаҫрӑмӑр. Тӗрлӗ ҫӗршывпа, хулапа паллашрӑмӑр. Вун виҫҫӗмӗш страницӑри фотоӳкерчӗксенчи вырӑнсене ӑҫта курма пулать?

— *Эйфель башни Францин тӗп хулинче Парижра вырнаҫнӑ, Биг-Бен башни — Лондонта. Букингем керменӗнче Англи королеви пурӑнать. Кермен Великобританире вырнаҫнӑ. «Айсберг» спорт керменӗ — Сочире. Ӑна 2014 ҫулта иртнӗ Олимп вӑййисем валли тунӑ. Пирамидӑсене Египетри пуш хирсенче курма пулать.*

**7. Киле ӗҫ пани.**

Класра вуланӑ текстсене тепӗр хут вуласа тухмалла, 8-мӗш ӗҫре панӑ ыйтусене хуравламалла, текстсем тӑрӑх 2—3 ыйту туса хатӗрлемелле.

## 6-мӗш урок

### Тема: Ҫуллахи каникулта

***Урок тӗллевӗ:*** ҫуллахи кану ҫинчен каласа пама хӑнӑхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ҫӗнӗ сӑмахсене калаҫура ҫирӗплетесси; 2) малтанхи икӗ урокра вуланӑ текстсен содержанийӗ тӑрӑх ӗҫлесси; 3) харпӑр хӑй ҫулла мӗнле канни ҫинчен каласа пама хӑнӑхасси.

***Урок юхӑмӗ***

**1. Урок темине палӑртни.**

Вӗрентӳҫӗ 9-мӗш страницӑри сӑвва тепӗр хут вулама сӗнет.

Пурте пӗрле саспа вулаҫҫӗ.

— Иккӗмӗш ярӑма тепӗр хут вулӑр. Глаголсене тупӑр.

Ачасем тепӗр хут пурте пӗрле вулаҫҫӗ, унтан глаголсене тупса калаҫҫӗ: пулӗ, пӗлес килет, канӑп, вулӑп.

Вӗрентӳҫӗ глаголсене доска ҫине ҫырса хурать.

— *Пулӗ, канӑп, вулӑп* глаголсем мӗнле вӑхӑтра?

— *Пулас вӑхӑтра.*

— Автор глаголсене мӗншӗн пулас вӑхӑтра лартнӑ?

— *Мӗншӗн тесен ачасем ӗмӗтленеҫҫӗ, ҫулла мӗн тӑвасси ҫинчен шутлаҫҫӗ: экскурсие кайӑпӑр, вулӑпӑр, канӑпӑр.*

— Ҫапла, ҫулла ачасем канаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах нумай ҫӗнни пӗлеҫҫӗ. Каннӑ вӑхӑтра экскурсисене каяҫҫӗ, тӗрлӗ паллӑ вырӑнсемпе паллашаҫҫӗ.

**2. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени. Иртнӗ урокра вуланӑ текстсен содержанийӗпе калаҫни.**

— Пирӗн кӗнеке геройӗсем те ҫулла нумай ҫӗнӗ пӗлӳ пухнӑ. Вӗсем тӗрлӗ хулара, тӗрлӗ ҫӗршывра пулса унти паллӑ вырӑнсемпе паллашнӑ. Вӗсем каласа кӑтартнисене вуласа эпир те нумай ҫӗнни пӗлтӗмӗр. Калӑр-ха, мӗнле ҫӗршывсенче акӑлчан чӗлхипе калаҫаҫҫӗ?

— *Великобританире акӑлчан чӗлхипе калаҫаҫҫӗ.*

— Тата хӑш ҫӗршывсенче акӑлчанла калаҫаҫҫӗ? Кам пӗлет?

— *Америкӑра, Канадӑра, Австралире.*

— Францире мӗнле чӗлхепе калаҫаҫҫӗ?

— *Францире француз чӗлхипе калаҫаҫҫӗ.*

Ҫакӑн пек ӗҫлесе 8-мӗш ӗҫре панӑ ыйтусене хуравласа тухаҫҫӗ.

— Кам вуланӑ текстсем тӑрӑх урӑх ыйтусем хатӗрленӗ?

Ачасем пӗр-пӗрне килте хатӗрленӗ ыйтусене параҫҫӗ, калаҫаҫҫӗ.

**3. Харпӑр хӑй ҫулла ӑҫта канни ҫинчен каласа пама хӑнӑхни.**

— Костя, эсӗ ҫуллахи каникулта ӑҫта пултӑн? Эсӗ унта мӗн турӑн?

— *Эпӗ ҫуллахи каникулта Грецире пултӑм. Эпӗ унта шыва кӗтӗм. Экскурсире пултӑм. Каналсем тӑрӑх кимӗпе ярӑнтӑм. Маша, эсӗ ҫуллахи каникулта ӑҫта пултӑн?*

— *Эпӗ ҫуллахи каникулта Мускавра пултӑм. Эпӗ унта цирк куртӑм. Кремльте пултӑм. Пысӑк чан, пысӑк пушка куртӑм. Илемлӗ урамсемпе (чиркӳсемпе) килентӗм. Ваня, эсӗ ҫуллахи каникулта ӑҫта пултӑн?*

Малалла Ваня хуравлать, унтан тепӗр ачана ыйту парать. Ҫавӑн пек класри кашни ача хӑй ӑҫта пулни ҫинчен каласа парать. Учитель ачасене пулӑшу кирлӗ пулсан пулӑшать.

**4. Харпӑр хӑй ҫулла ӑҫта канни ҫинчен ҫырса пани.**

— Ӗҫ тетрачӗсене 6-мӗш страницӑна уҫӑр. Унта калав тума план панӑ. Унсӑр пуҫне унта калавӑн пуҫламӑшӗ пур. Сирӗн ҫав калава малалла тӑсса ҫулла мӗнле канни ҫинчен ҫырмалла.

**5. Киле ӗҫ пани.**

Килте ӗҫ тетрадӗнчи 3-мӗш ӗҫе тумалла. Ҫуллахи каникулта мӗнле канни ҫинчен ӳкерчӗк тумалла. Ӳкерчӗк тӑрӑх каласа пама пӗлмелле.

**6. Темӑна мӗнле ӑнланнине хаклани.**

Ачасем 4-мӗш ӗҫре панӑ таблица тӑрӑх хӑйсем юлашки виҫӗ урокра мӗнле ӗҫленине хаклаҫҫӗ.

Вӗрентӳҫӗ ачасен тетрачӗсене пуҫтарса вӗсен ҫырса тунӑ ӗҫӗсене хаклать е хӑш-пӗр ачан урокри хуравӗсене шута илсе таблицӑри виҫҫӗмӗш юпара хӑйӗн хак паллине лартма пултарать.

## 7-мĕш урок-проект

### Тема: Каникулта Мускавра. Каникулта Санкт-Петербургра

***Урок тĕллевĕ:*** çуллахи кану çинчен проект туса каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) проект мĕнле пулмаллипе паллаштарасси; 2) проекта хакламалли виçесем туса хатĕрлесси; 3) ушкăнсем çине пайланса кашни ачан тепĕр урок валли мĕнле ĕç тумалли çинчен калаçса татăласси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Урок темине палăртни. Ачасен умне тĕллев лартни.**

— Вуннăмĕш страницăри виççĕмĕш ĕçе тепĕр хут вулар-ха. Таньăпа Саша çулла ăçта пулнă?

Ачасем текста вуласа лартнă ыйтăва хуравлаççĕ.

— *Саша пĕр уйăх хушши Санкт-Петербургра пурăннă. Таня Мускавра пулнă.*

— Эпир паян сирĕнпе Катя Сочире, Вовăпа Лена Египетра, Анюкпа Ванюк Франципе тата Великобританире мĕн курни çинчен вуласа пĕлтĕмĕр. Сашăпа Таня вара çулла Мускав тата Санкт-Петербург хулисенче пулнă. Унта вĕсем мĕн курма пултарнă-ши?

Ачасем Сашăпа Таня Мускавра тата Санкт-Петербургра мĕн курма пултарни çинчен хăйсен шухăшĕсене калаççĕ.

— Эпĕ сире çакăн пек сĕнӳ парасшăн. Атьăр çак хуласенчи историпе культура вырăнĕсемпе паллашар. Çак вырăнсене сăнлакан фотоӳкерчĕксем тупар. Вара вĕсем тăрăх Таньăпа Саша мĕн курма пултарни çинчен каласа парар.

Ачасем вĕрентӳçĕн сĕнĕвĕпе килĕшеççĕ.

— Çакăн пек ĕçе «проект» теççĕ. Ку ĕçе эпир виçĕ урок хушши тăвăпăр. Паян пирĕн проект мĕнле пулмалли çинчен калаçса татăлмалла. Килте вара эсир проект темипе тĕрлĕ литературăран, Интернетран, аслисенчен ыйтса юрăхлă материал пуçтарăр.

Иккĕмĕш урокра пухнă материалпа ĕçлĕпĕр. Ушкăнсенче проект темипе каласа пама хатĕрленĕпĕр.

Виççĕмĕш урокра вара кашни ушкăн хăйĕн проекчĕпе класри ытти ачасене паллаштарĕ. Кашни ушкăнăн ĕçне пĕрле хак парăпăр.

Вĕрентӳçĕ çакăн пек калаçнă май доска çине урок темине, кашни урокра мĕн тумаллине çырса хурать.

## Проект. КАНИКУЛТА МУСКАВРА. КАНИКУЛТА САНКТ-ПЕТЕРБУРГРА

1-мӗш урок. Проект мӗнле пулать?

2-мӗш урок. Проект темипе каласа пама хатӗрленни.

3-мӗш урок. Проектсене хаклани.

**2. Проект йӗркине палăртни.**

— Çапла вара, паян пирӗн проект мӗнле пулмалли çинчен калаçса татăлмалла. Чи малтан калăр-ха мана, тархасшăн, пурте пӗрле пӗр проект тăвайăпăр-ши эпир?

Ачасем тӗрлӗ шухăшсем калаççӗ.

— Пурне те пӗрле ӗçлеме йывăр пулать, мӗншӗн тесен эпир нумаййăн. Пирӗн пӗчӗкрех ушкăнсене пайланма лекет. Унсăр пуçне пирӗн икӗ хула çинчен проект хатӗрлемелле. Ушкăнсене пайлансан пӗрисем Мускав çинчен, теприсем Санкт-Петербург çинчен проект хатӗрлеме пултараççӗ. Апла пулсан кашнин умӗнче икӗ ыйту:

1. Эпӗ мӗнле темăпа ӗçлес тетӗп?

2. Эпӗ кампа пӗрле ӗçлес тетӗп?

Ачасем кăштах шутласа пăхаççӗ, унтан вӗрентӳçӗ вӗсенчен ыйтать:

— Кам Мускав çинчен каласа пама хатӗрленес тет?

Ачасем алă çӗклеççӗ. Вӗрентӳçӗ алă çӗкленӗ ачасенчен иккӗшне [M] çырнă карточка парать. Çак ачасене доска умне тухма ыйтать.

— Мускав çинчен каласа парас текенсен хăйсен икӗ ушкăна уйăрăлмалла пулать. Карточка тытса тăракан ачасенчен хăшӗнпе ӗçлеме хапăл тăватăр, çавăн патне доска умне тухса тăрăр.

Ачасем, хăйсен кăмăлне кура, икӗ ушкăна уйăлаççӗ.

— Çапла вара, Мускав çинчен каласа пама хатӗрленекен ушкăнсем хатӗр.

Çавăн евӗрлех Санкт-Петербург çинчен каласа пама кăмăл тунă ачасене 2 ушкăна уйăрмалла. Ун валли çакăн пек карточка хатӗрлеме пулать: [С-П]

— Ушкăнсем пур. Кам мӗнле темăпа ӗçлесси паллă. Малалла мӗн тăвăпăр-ха?

— Ӗçе тӗрӗс йӗркелес тесен ӗçлекенсен унăн результатне питтӗ лайăх курмалла. Мӗн тăвасшăн эпир? Мӗнпе вӗçленмелле пирӗн ӗç?

— *Эпир Мускавра е Санкт-Петербургра мӗн курма пулни çинчен каласа парасшăн. Хамăрăн калава фотоӳкерчӗксемпе çирӗплетесшӗн. Апла пулсан проекта альбом е электронлă презентаци евӗр хатӗрлеме пулать.*

— Ачасем, проект хатӗрлеме пирӗн мӗнле ӗҫсем пурнӑҫламалла-ха?

Вӗренекенсен хуравӗсем:

*1. Хуласем ҫинчен материал пухмалла.*

*2. Пухнӑ материалтан чи юрӑхлине суйласа илмелле.*

*3. Суйласа илнӗ материала илемлӗ вырнаҫтармалла, альбом е слайдсен пуххи хатӗрлемелле.*

*4. Хамӑр пӗлекен сӑмахсемпе усӑ курса пит пысӑках мар интереслӗ текст ҫырмалла.*

*5. Илемлӗ каласа пама вӗренмелле.*

— Проект валли материал ӑҫтан шыраса тупма пулать-ши?

*— Интернетра, тӗрлӗ кӗнекесенче шырама пулать, аслисенчен ыйтса пӗлме пулать...*

**3. Проекта хакламалли виҫесем туса хатӗрлени.**

— Пирӗн хамӑрӑн проектсене хамӑрӑнах хаклама тивет, апла пулсан хакламалли виҫесем кирлӗ. Ҫак виҫесем ӗҫе тӗрӗс йӗркелеме пулӑшӗҫ.

Ачасем виҫесем пирки хӑйсен шухӑшӗсене каланӑ хыҫҫӑн вӗсене йӗркелесе ҫырса хурсан аван.

Тӗслӗхрен, проекта хакламалли виҫесем ҫапла пулма пултараҫҫӗ:

1) проект темӑна тивӗҫтерни;
2) ӗҫе пуҫӑниччен план туса хатӗрлени;
3) плана пӑхӑнса ӗҫлени;
4) проект тӑвас ӗҫе ушкӑнри кашни ача хутшӑнни;
5) ӑнланмалла, интереслӗ каласа пани;
6) калава вырӑнлӑ ӳкерчӗксемпе ҫирӗплетни;
7) проекта тӗрӗс, тирпейлӗ, илемлӗ калӑплани.

**4. Ушкӑнсемпе проект тӑвас ӗҫе пуҫӑнни.**

— Халӗ урокра проект ҫинчен мӗн каланине шута илсе, ӑна хакламалли виҫесене пӑхӑнса ушкӑнсенче ӗҫе пуҫӑнатпӑр. Чи малтанах сирӗн ӗҫ йӗркине планламалла, унтан ушкӑнри кашни ачан ҫитес урок валли мӗн тумалли ҫинчен калаҫса татӑлмалла. Килте вара кашнин хушнӑ ӗҫе пурнӑҫламалла.

Кашни ушкӑнри ачасем пӗрле канашласа палӑртнӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ. Вӗрентӳҫӗ ушкӑнсем мӗнле ӗҫленине сӑнать, кирлӗ сӗнӳсем парать.

**5. Урока пӗтӗмлетни.**

— Мӗн туса ӗлкӗрчӗ кашни ушкӑн?

Ачасем тунӑ ӗҫ ҫинчен каласа параҫҫӗ.

Тӗслӗхрен:

*— Пирӗн проект теми: «Каникулта Мускавра». Чи малтанах эпир проектпа ӗҫлес йӗркене палӑртрӑмӑр. Пирӗн ӗҫ планӗ:*

*1) Тĕллев лартни.*

*2) Тумалли ĕçсене палăртни.*

*3) Кашнине ĕç уйăрса пани.*

*4) Тупнă материалтан юрăхлине суйласа илни.*

*5) Хатĕр материала йĕркелесе вырнаçтарни.*

*6) Презентаци хатĕрлени.*

*7) Кашни слайд валли текст çырни.*

*8) Проект тăрăх каласа пама хатĕрленни.*

*9) Хак памалли критерисем тăрăх хатĕр ĕçе ыттисене каласа париччен тĕрĕслесе пăхни.*

*10) Проекта хӳтĕлени.*

*Ун хыççăн эпир ĕç тĕллевне тепĕр хут çирĕплетрĕмĕр. Унтан проект тăвас ĕç мĕнле пĕчĕк ĕçсенчен тănине палăртрăмăр. Çак ĕçсене ушкăнри ачасем хушшинче уйăртăмăр. Тепĕр урок валли Машăпа Ваня фотоӳкерчĕксем тупса хатĕрлеççĕ. Костьăпа Злата çак фотоӳкерчĕксем патне текстсем çыраççĕ. Эпир хамăр ĕçе ватман çине çыпăçтарса хатĕрлесшĕн, çавăнпа Витьăпа Артем «Мускав тăрăх» тесе çырма сас паллисем касса кăлараççĕ. Каласа паракан — Таня.*

Класри ытти ачасем вĕрентӳçĕпе пĕрле çак ушкăнăн ĕçне хак параççĕ.

Тепĕр ушкăнри ачасемпе те çаплах ĕçлемелле.

— Тепĕр урок валли кашнийĕнех ĕç пур. Паянлăха урок вĕçленет. Сывă пулăр.

## 8-мĕш урок-проект

### Тема: Каникулта Мускавра. Каникулта Санкт-Петербургра

***Урок тĕллевĕ:*** çуллахи кану çинчен проект туса хатĕрлесси.

***Урок задачисем:*** 1) пухнă материалпа усă курса проект йĕркелесси; 2) проекта хӳтĕлессин формисене палăртасси; 3) проект çинчен чăвашла каласа пама хатĕрленесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, проектпа ĕçлени.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Ушкăнри кашни ача хăй килте мĕн тунипе паллаштарать. Ачасем пĕрле канашласа презентаци материалне йĕркелеççĕ. Унтан кашни слайд патне чăвашла текстсем хатĕрлеççĕ, çырса хураççĕ. Вĕрентӳçĕ ачасене редактор пек пулăшать.

**2. Киле ĕç пани.**

Проекта вĕçне çити якатса çитермелле.

## 9-мĕш урок-проект

### Тема: Каникулта Мускавра. Каникулта Санкт-Петербургра

***Урок тĕллевĕ:*** çуллахи кану çинчен проект хӳтĕлесси.

***Урок задачисем:*** 1) хатĕрленĕ проекта хӳтĕлесси; 2) ачасене ушкăнпа пурнăçланă ĕçе палăртнă виçесемпе усă курса хаклама вĕрентесси; 3) компьютер техникипе усă курма хăнăхтарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Килте ĕçленипе усă курса проекта тепĕр хут пăхса тухни, çĕнĕлĕхсем хушни.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Ушкăнри кашни ача хăй килте мĕн тунипе паллаштарать. Ачасем пĕрле канашласа презентаци материалне кăштах çĕнетме пултараççĕ.

**2. Проектсене хӳтĕлени.**

Ачасем проектсене хӳтĕлеççĕ, унтан пурте пĕрле палăртнă хаклав виçисемпе усă курса вĕсене хаклаççĕ.

## 10-мĕш урок

### Тема: Çуллахи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** çуллахи кану çинчен каласа пама хăнăхтарасси, ачасен пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) вуланине ăнланма, словарьпе ĕçлеме хăнăхтарасси; 2) глаголсемпе тĕрлĕ вăхăтра усă курма хăнăхтарасси; 3) чĕлхен ытарлăхне туйма вĕрентесси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Урок темине палăртни.**

Ачасем вĕрентӳçĕ хушнипе 15-мĕш страницăри сăвăпа малтан кашни хăй тĕллĕн вуласа паллашаççĕ. Ун хыççăн ăна лайăх вулама пултаракан ача саспа вуласа парать. Çакăн хыççăн сăвăра ăнланман сăмахсене кăранташпа туртса палăртаççĕ, вĕсен пĕлтерĕшне словарьте тупаççĕ. Кĕнекере куçарса панă сăмахсемсĕр пуçне ăнланман сăмахсем татах та пур пулсан ачасем словарь кĕнекипе усă кураççĕ е сăмахри кашни морфемăн пĕлтерĕшне палăртса унăн пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшне ăнланаççĕ.

— *Каялла, малалла* сăмахсем вырăсла мĕнле куçаççĕ?

— *Назад, вперед.*

— Çак сăмахсем мĕнле морфемăсенчен тăраççĕ? Кашни морфемăн пĕлтерĕшĕ мĕнле?

*каялла* → *кай* - *алла* *кай* «задняя часть»
*малалла* → *мал* - *алла* *мал* «перед, передняя часть»

*-алла* (аффикс) — движение в каком-либо направлении

— Сӑвӑра ҫакӑн пек мелпе пулнӑ сӑмахсем татах пур. Тупӑрха вӗсене.

— Ҫапла, *ҫӳлелле, аялалла* сӑмахсем.

*Ҫӳл* «верх, верхняя часть» — *ҫӳлелле* «вверх».

*Аял* «низ, нижняя часть» — *аялалла* «вниз».

— Сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене ӑнлантӑмӑр. Кам сӑвӑ мӗн ҫинчен пулнине вырӑсла каласа пама пултарать?

*— Здесь герой стихотворения катается на качелях. Он раскачивается вверх-вниз, вперед-назад. Летает как птица. Ему совсем не страшно. Он раскачивается так сильно, что ему кажется, что он долетит до космоса.*

Ачасем сӑвва пурте пӗрле тепӗр хут вулаҫҫӗ.

— Ӳкерчӗк ҫине пӑхӑр-ха, унта ҫулталӑкӑн хӑш вӑхӑчӗ?

— *Ҫулла.*

— Ачасем вӑл вӑхӑтра вӗренеҫҫӗ-и?

— *Ҫук, ачасен ҫулла каникул.*

— Сӑвӑ геройӗ каникулта ӑҫта каннӑ-ши?

— *Вӑл ялта каннӑ.*

— Ӑҫтан пӗлетӗр?

— *Ӳкерчӗк ҫинче ял ӳкерсе кӑтартнӑ. Ялта ҫакӑн йышши ҫуртсем курма пулать.*

— Сирӗнтен кам ҫуллахи каникулта ялта пулчӗ?

Ачасем алӑ ҫӗклеҫҫӗ.

— Ваня, унта эсӗ мӗн турӑн?

— *Эпӗ унта асаттепе асаннене пулӑшрӑм, пӗвере шыва кӗтӗм, хӗвел ҫинче хӗртӗнтӗм, вӑрманта кӑмпа-ҫырла пуҫтартӑм, туссемпе вылярӑм.*

— Илемпи те ҫулла кукашшӗпе кукамӑшӗ патӗнче каннӑ. Эпир паян хӗр ача унта утӑ ҫинче мӗнле ӗҫлени ҫинчен вуласа пӗлӗпӗр. *Утӑ ҫинче* тенине мӗнле ӑнланатӑр?

— *На сенокосе.*

— Апла пулсан паянхи урок теми — «Ҫуллахи каникулта».

**2. «Хӗвел ури пусрӗ» текста ӑнланас тӗлӗшпе ӗҫлени.**

— Миша, пиллӗкмӗш ӗҫре панӑ текстӑн ятне вуласа пар-ха.

— *Хӗвел ури пусрӗ.*

— Кашни сӑмахне вырӑсла куҫарар.

— *Хӗвел — солнце, ура — нога, пусрӗ — наступил.*

— Нимӗн те ӑнланмастӑп. Хӗвелӗн ури пур-ши вара? Хӗвел

урипе мĕнле пусма пултарать? Тен, ку сăмахсен урăх пĕлтерĕшсем пур? Словарьте пăхар-ха!

Ачасем виçĕ ушкăна пайланса *хĕвел, ура, пус* сăмахсен пĕлтерĕшĕсене словарьте шыраççĕ. Кашни ушкăн пĕр сăмахăн пĕлтерĕшĕсемпе ыттисене паллаштарать.

*— **пус** в нашем тексте глагол, поэтому из словарной статьи возьмем только глаголы: 1. давить; 2. ступать; 3. разрастаться, заглушать; 4. колоть, резать.*

*— **хĕвел** — солнце. Других значений нет.*

*— **ура** — 1. нога; 2. скирда.*

— Словарь пире «Хĕвел ури пусрĕ» сăмах майлашăвне ăнланма пулăшрĕ-и?

*— Çук. Ăнланмалла мар.*

— Тен, текста вуласа пăхсан çак сăмах майлашăвĕ мĕне пĕлтернине ăнланма пулать?

Текста е вĕрентӳçĕ, е лайăх вулама пултаракан ача саспа вулать. Ыттисем кĕнекепе йĕрлесе пыраççĕ.

— «Хĕвел ури пусрĕ» тени мĕне пĕлтернине кам ăнланчĕ?

*— Ĕçлесе ывăннине пĕлтерет.*

— Калавра кам ывăннă?

*— Илемпи ывăннă. Вăл утă çулнă çĕрте ĕçленĕ.*

— Илемпи утă çулнă çĕре мĕнле лекнĕ?

*— Илемпи Шупашкарта пурăнать. Çуллахи каникулта вăл ялта пурăннă. Унта пурте утă çине кайнă. Илемпи те утă çулма тухнă.*

— Текстра эпĕ калакан шухăшсене тупса вуласа парăр: Взрослые косят. Илемпи раскидывает покосы.

*— Аслисем çулаççĕ. Илемпи пакуссене салатать.*

— Илемпи ĕçленипе çеç ывăннă-ши? Тата мĕн пирки питĕ хытă ывăннă-ха вăл?

*— Хĕвел питĕ хытă хĕртнĕ.*

— Кукашшĕ Илемпи ывăннă пирки мĕн каланă?

*— Хĕвел ури вăрăмланнă-ха паян. Илемпи çине те пусма пуçларĕ авă. Ларса кан, мăнукăм.*

— Илемпи кукашшĕне мĕншĕн ăнланман?

*— «Хĕвел ури пусрĕ» — ытарлă калани (образное выражение, не прямое значение).*

Текста ăнланнă хыççăн ăна вулама вĕренес тĕлĕшпе ĕçлемелле. Кашни ача пĕрер предложени вуласа е калава абзацсем çине пайласа вулама пуçлать.

Кукашшĕн сăмахĕсене, Илемпи шухăшĕсене уйăрса кирлĕ интонаципе вулаттарсан аван. Юлашкинчен калава тепĕр хут саспа вуламалла.

**3. Ачасен пуплевне монолог шайĕнче аталантарассипе ĕçлени (6-мĕш ĕçе пурнăçлани).**

Ку ĕçе ачасем ушкăнсем çине уйрăлса тума пултараççĕ, мĕншĕн тесен класра чăвашла калаçма пултарайман ачасем яланах тĕл пулаççĕ. Кун пек ачасене ушкăнсенче ĕçлеме çăмăлтарах.

6-мĕш ĕçре виçĕ ыйту, çавăнпа класа виçĕ ушкăна пайласа вĕсенчен кашнине пĕрер ыйту уйăрса пама пулать. 5—6 минут хушши ачасем кашни хăйĕн ыйтăвĕпе пĕчĕк калав хатĕрлеççĕ. Хăйсем тунă текста ушкăнри кашни ачана каласа пама вĕрентеççĕ. Ун хыççăн кашни ушкăн хăйĕн калавне пурне те каласа кăтартать.

Ыттисем тимлĕ итлеççĕ, калавсенче йăнăшсем тĕл пулаççĕ пулсан вĕсене тӳрлетеççĕ, кашни ушкăнăн ĕçне хак параççĕ.

**4. Кашни харпăр хăй ĕçне хаклани.**

Ачасем ĕç тетрачĕсене 10-мĕш страницăна уçаççĕ. Икĕ критерипе хăйсен ĕçне, мĕнле пултарнине таблицăра хаклаççĕ (+, −).

Критерисем:

1. Ушкăнпа ĕçленĕ чух пурне те ăнланатăп, ĕçе пуçаруллă хутшăнатăп.
2. Лартнă ыйтупа каласа пама пултаратăп.

**5. Глаголăн тĕрлĕ вăхăчĕсемпе ĕçлени.**

— «Хĕвел ури пусрĕ» текстăн пĕрремĕш абзацĕнчи глаголсене тупăр. Вĕсене пуçламăш формăра çырса хурăр. Тĕслĕхре панă пек улăштарăр.

Ку ĕçе доска çине çырса пурте пĕрле тума пулать.

| | | | |
|---|---|---|---|
| курать | кур | куратăп<br>курмастăп | куртăм<br>курмарăм |
| пурăнать | пурăн | пурăнатăп<br>пурăнмастăп | пурăнтăм<br>пурăнмарăм |
| килет | кил | килетĕп<br>килместĕп | килтĕм<br>килмерĕм |
| пулăшать | пулăш | пулăшатăп<br>пулăшмастăп | пулăшрăм<br>пулăшмарăм |

— Пĕрремĕш юпари глаголсем патне мĕнле ыйту лартма пулать.

— *Мĕн ту?*

— Ку мĕнле форма?

— *Глаголăн пуçламăш форми.*

— Иккĕмĕш юпари глаголсем патне ыйтусем лартăр. Унта глаголăн мĕнле формисем?

— *Мĕн тăватăп? Пĕрремĕш сăпат, пĕрреллĕ хисеп (эпĕ), хальхи вăхăт. Мĕн тумастăп? Çуклăх форми.*

— Виççĕмĕш юпари глаголсем çинчен мĕн калама пултаратăр?

— *Мĕн турăм? Пĕрремĕш сăпат, пĕрреллĕ хисеп (эпĕ), курса иртнĕ вăхăт. Мĕн тумарăм? Çуклăх форми.*

— Тăваттăмĕш ĕçе ушкăнсенче тăвăр.

Ачасем панă глаголсемпе кăтартнă пек улăштарса çыраççĕ. Глаголăн хăш форминче мĕнле аффикс пулнине кăтартаççĕ. Ку глаголсемпе ялти е дачăри çуллахи ĕçсем çинчен каласа пама пулнине палăртаççĕ. Предложенисем тăваççĕ.

**6. Урок темине пĕтĕмлетни.**

— Çуллахи каникулта кам ялта каннă?

— *Эпĕ çуллахи каникулта ялта кантăм.*

— Çуллахи каникулта ачасем ялта мĕн тăваççĕ?

— *Çулла ачасем ялта шыва кĕреççĕ; хĕвел çинче хĕртĕнеççĕ; футболла, волейболла выляççĕ. Ачасем аслисене пулăшаççĕ. Йăрансене çумлаççĕ, çимĕçсене шăвараççĕ.*

— Камăн ялта килти выльăх пур?

— *Пирĕн кукамайăн ĕне, сурăх, сысна, пăру, путексем, автанпа чăхсем пур.*

— Эсĕ çуллахи каникулта вĕсене пăхрăн-и?

— *Эпĕ пăрăва çаран çине курăк çиме илсе кайрăм. Чăхсене тырă патăм.*

— Кам çулла вăрмана кайнă?

— *Эпĕ çулла вăрмана кайрăм. Унта хурăн çырли пуçтартăм.*

— *Эпĕ вăрманта кăмпа татрăм.*

— Сирĕнтен кам çулла ялта канма юратать? Мĕншĕн?

— *Эпĕ çулла ялта канма юрататăп, мĕншĕн тесен ялта вылячма ирĕк, манăн унта юлташсем нумай.*

**7. Харпăр хăй ĕçне хаклани.**

— Кам паянхи урок темипе чăвашла калаçма пултарать?

Ачасем алă çĕклеççĕ.

— Халĕ ĕç тетрачĕсене уçса таблицăна виççĕмĕш критери çырса хурăр: «Каникулта ялта» темăпа калаçма пултаратăп.

Ачасем хăйсен пĕлĕвне виçĕ тĕрлĕ паллă лартса хаклаççĕ: +, + –, –.

Кăмăлĕсем пулсан хăйсен шухăшне ыттисене каласа пама пултараççĕ.

**8. Киле ĕç пани.**

Килте ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе çырса тумалла.

Киле панă ĕçе урок вĕçлениччен сăмахпа каласа туса пăхсан аван.

# 11-мĕш урок

## Тема: Çуллахи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** çуллахи кану çинчен каласа пама хăнăхтарасси; ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çĕнĕ сăмахсене пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) «Çуллахи каникулта» текста вуласа ăнланасси; 3) урока панă ваттисен сăмахĕсене астуса юласси, вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлени.**

Вĕрентÿçĕ 11-мĕш ĕçре панă ваттисен сăмахне вулать.

— Килте ларакан тăмана пулнă, тухса çÿрекен хурчка пулнă. Что я прочитала?

— *Это пословица.*

— Чăвашла ваттисен сăмахĕ. *Тăмана, хурчка* сăмахсем çак ваттисен сăмахĕнчи тĕп сăмахсем. Вĕсене вырăсла куçарар-ха.

— *Тăмана — сова, хурчка — ястреб.*

— В чем особенность этих птиц?

— *Сова — ночная птица, малоподвижная, подслеповатая; ястреб — дневной хищник, быстрый, с острым зрением.*

***— Килте ларакан*** вырăсла мĕнле пулать?

— *Кил — дом, лар — сидеть; килте ларакан — тот, кто сидит дома.*

— Тухса çÿрекен?

— *Тух — выходить, çÿре — ходить, бродить; тухса çÿрекен — тот, кто не сидит дома, путешествует.*

— Кам ваттисен сăмахне вырăсла куçарать?

— *Тому, кто сидит дома, быть совой, а тому, кто выходит в люди — ястребом.*

— В чем же смысл этой пословицы?

— *Тот, кто остается дома, ничего не узнает, живет скучно, а тот, кто путешествует, многое увидит собственными глазами, многому научится, многого узнает.*

Ваттисен сăмахĕн тĕп шухăшне ăнланнă хыççăн ăна ачасем темиçе хут вулаççĕ, астуса юлаççĕ. Иккĕмĕш ваттисен сăмахĕпе те çавăн пекех ĕçлемелле.

**2. Урок темине палăртни.**

— Паян урокра эпир мĕн çинчен калаçăпăр-ши? Мĕншĕн çапла шутлатăр?

— *Мана çулçÿревсем çинчен калаçатпăр пек туйăнать, мĕншĕн тесен ваттисен сăмахĕсем — тухса çÿрени усăллă пулни çинчен.*

— Çапла, паян эпир Мишăпа пĕрле Турцине çитсе курăпăр.

Вĕрентӳçĕ доска çине урок темине çырса хурать: ***Çуллахи каникулта***.

**3. «Çуллахи каникулта» текстпа паллашни.**

Текстпа ачасем кашни хăй тĕллĕн пĕр хут ăсра вуласа паллашаççĕ. Ун хыççăн вĕрентӳçĕ е лайăх вулама пултаракан ача ăна тепĕр хут вуласа парать.

— Вуланă текст содержанине кам вырăсла каласа парасшăн?

Ачасем текст мĕн çинчен пулнине каласа параççĕ. Йывăрлăхсемпе тĕл пулаççĕ пулсан вĕрентӳçĕ хăш-пĕр предложенисене суйласа илсе вулать, ачасене вĕсене вырăсла куçарма ыйтать.

**4. Текст содержанийĕпе ĕçлени.**

— Миша çулла ăçта каннă?

— *Миша çуллахи каникулта çемйипе пĕрле Турцире пулнă.*

— Вăл Турци çинчен мĕн пĕлнĕ?

— *Турци тăватă тинĕс хĕрринче вырнаçнă. Унăн тĕп хули — Анкара.*

— Аланья хули çинчен текстра мĕн каланă?

Ачасем виççĕмĕш абзаца вуласа параççĕ.

— Мĕншĕн турккăпа чăваш чĕлхинче пĕр пек сăмахсем нумай?

— *Турккăпа чăваш чĕлхи пĕр çемьери чĕлхесем. Вĕсене тĕрĕк чĕлхисен çемйи теççĕ.*

**5. Кĕнекере панă текстпа усă курса Турци çинчен калав туни.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе ачасем харпăр хăй тĕллĕн пурнăçлаççĕ. Ачасен çакăн пек текст пулма пултарать:

— Турци тăватă тинĕс хĕрринче вырнаçнă. Унăн тĕп хули — Анкара. Турккăпа чăваш чĕлхисенче пĕр пек сăмахсем нумай, мĕншĕн тесен вĕсем тĕрĕк чĕлхисем.

**6. Урокра вĕреннĕ ваттисен сăмахне çырни.**

Ачасем 11-мĕш ĕçе тетрадьсене çырса пурнăçлаççĕ.

Вĕрентӳçĕ 1 (киле панă ĕç), 2, 4-мĕш ĕçсене ачасен тетрачĕсене пуçтарса илсе тĕрĕслет.

**7. Киле ĕç пани.**

— Эпир темиçе урок хушши ачасем çулла ăçта канни çинчен калаçатпăр. Эсир хăвăр ăçта каннă-ха?

— *Эпĕ...*

— *Эпĕ...*

— Киле ĕç: сирĕн кашнин хăй çулла ăçта канни çинчен калав хатĕрлемелле. Каласа панă чух каннă чухне тунă фотоӳкерчĕксемпе усă курма юрать.

Тепĕр урокра кам ăçта тата мĕнле канни çинчен, унта мĕнмĕн курни çинчен итлĕпĕр.

## 12-мĕш урок

### Тема: Çуллахи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** çуллахи каникул çинчен каласа пама хăнăхтарасси; ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) вĕреннĕ сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) вĕреннĕ глагол формисемпе тĕрĕс усă курма вĕрентесси; 3) предложенисене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса текст тума хăнăхтарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Иртнĕ урокра вĕреннине аса илсе диалогра усă курни.**

Ачасем 9-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ. Диалога çакăн пек тăсма пултараççĕ.

— *Эпĕ, Илемпи, Турцире пултăм.*
— *Турцин тĕп хули мĕн ятлă?*
— *Турцин тĕп хули — Анкара.*
— *Турцире тинĕссем пур-и?*
— *Турци тăвата тинĕс хĕрринче вырнаçнă.*
— *Турцире эсĕ мĕн турăн?*
— *Унта эпĕ тинĕсре шыва кĕтĕм, экскурсисене çӳрерĕм.*
— ...

**2. Кашни хăйĕн çуллахи каникулĕ çинчен хатĕрленĕ калавĕпе паллаштарни.**

Кашни ача хăй хатĕрленĕ калава каласа парать. Ыттисем тимлĕ итлеççĕ. Йăнăшсем пур пулсан тӳрлетеççĕ. Ыйтусем параççĕ. Кашнин ĕçне хаклаççĕ.

**3. Ĕçе пĕтĕмлетни, ачасен ĕçне хаклани.**

Малтан вĕрентӳçĕ ачасен ĕçне пĕтĕмĕшле хак парать. Ун хыççăн ачасем ĕç тетрадĕнчи таблицăпа усă курса харпăр хăй ĕçне хаклаççĕ, кайран кашни ачан ĕçне вĕрентӳçĕ хаклать.

**4. Урока вĕçлени, чăвашла сывпуллашни.**

## 13-мĕш урок

### Тема: Уроксем хыççăн

***Урок тĕллевĕ:*** уроксем хыççăн ачасем мĕн туни çинчен каласа пама хăнăхтарасси; ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарса çырма хăнăхтарасси; 2) чăваш чĕлхинчи ударени правилисене аса илесси; 3) тĕрлĕ словарьсемпе паллаштарасси, вĕсемпе усă

курма хӑнӑхтарасси; 4) 5-мӗш ӗҫре панӑ текста вуласа ӑнланасси, текстри хӑш-пӗр сӑмахсене улӑштарса текста урӑхлатасси; 5) ваттисен сӑмахӗсене астуса юласси, вӗсен пӗлтерӗшӗсене ӑнлантарасси.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Пуплев зарядки.**

Ачасем хӑйсем тӗллӗн 1—2 минут хушши «Куккук сехет» сӑвва пӑхмасӑр вӗренеҫҫӗ. Унтан 1—2 хут пӑхмасӑр хорпа калаҫҫӗ. Юлашкинчен 2—3 ача пӗчченшерӗн каласа паратъ.

**2. 2-мӗш ӗҫре панӑ глаголсемпе ӗҫлени, урок темине палӑртни.**

Ачасем хӑйсем тӗллӗн сӑмахсене алфавит йӗркипе ҫыраҫҫӗ. Вӗрентӳҫӗ хатӗрленӗ тӗслӗхпе тӗрӗслеҫҫӗ. Пурте пӗрле калаҫса сӑмахсенче пусӑмсем лартса тухаҫҫӗ. Ун хыҫҫӑн кашни ача черетпе пӗрер сӑмахра усӑ сасӑсен паллисене туртатъ.

Ҫак ӗҫ хыҫҫӑн вӗрентӳҫӗ урок темине калатъ.

— Паян эпир шкул ачи уроксем хыҫҫӑн мӗн туни ҫинчен калаҫӑпӑр.

Вӗрентӳҫӗ доска ҫине урок темине ҫырса хуратъ: ***Уроксем хыҫҫӑн.***

— Уроксем хыҫҫӑн мӗн туни ҫинчен каласа пама ҫырнӑ глаголсенчен хӑшӗсене суйласа илнӗ пулӑттӑр?

Суйласа илнӗ сӑмахсене доска ҫинче аялтан туртса паллӑ тӑваҫҫӗ.

— Уроксем хыҫҫӑн эсир мӗн тӑватӑр?

— *Уроксем хыҫҫӑн эпӗ киле каятӑп, апат ҫиетӗп, канатӑп, вылятӑп, урок тӑватӑп, кружока каятӑп, кружокран таврӑнатӑп, аннене пулӑшатӑп, телевизор пӑхатӑп, кӗнеке вулатӑп.*

**3. Кун йӗрки ҫинчен виҫҫӗмӗш сӑпатра каласа пани.**

Ачасем икшерӗн пӗрлешсе 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлаҫҫӗ. Пурте калав туса ҫитерсессӗн пӗр мӑшӑрӑн ӗҫне итлесе хак параҫҫӗ.

**4. Текстпа ӗҫлени.**

Ачасем текста пурте пӗрле вуласа ӑнланаҫҫӗ. Ыйтусене хуравлаҫҫӗ. Паллӑ тунӑ сӑмахсемлӗ предложенисене вырӑсла куҫараҫҫӗ. Паллӑ тунӑ сӑмахсене урӑх сӑмахсемпе улӑштараҫҫӗ. Предложенири сӑмахсене улӑштарни текстри ситуацине улӑштарма хистенине палӑртаҫҫӗ. Ситуацие улӑштарса текста вулаҫҫӗ.

**5. Тӗрлӗ словарьсемпе хӑҫан усӑ курма пулни ҫинчен калаҫни.**

7-мӗш ӗҫе пурнӑҫличчен ачасем кашнин килте мӗнле словарь пурри ҫинчен, тӗрлӗ ӗҫе пурнӑҫланӑ чух мӗнле словарьсемпе усӑ курни ҫинчен калаҫаҫҫӗ. Ун хыҫҫӑн 7-мӗш ӗҫе пурте пӗрле калаҫса ӑсра тӑваҫҫӗ. Кайран вара кашни хӑй тӗллӗн ӗҫ тетрадӗнче ҫырса пурнӑҫлатъ.

**6. Киле ĕç пани.**

8-мĕш хăнăхтарăва ăсра тумалла. Тепĕр урокра хăнăхтарура панă ыйтусене хуравлама пĕлмелле.

**7. Урока пĕтĕмлетни. Ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлени.**

— Паян эпир шкул ачин кулленхи пурнăçĕ çинчен калаçрăмăр. Эсир çак урокра мĕн çĕнни пĕлтĕр?

*— Тĕрлĕ словарьсен чăвашла ячĕсене астуса юлтăмăр. Вĕсемпе мĕнле усă курни çинчен каласа пама вĕрентĕмĕр.*

— Таблицăна икĕ критери çырса хурăр:

1) словарьсен ячĕсене пĕлетĕп;

2) словарьсем çинчен каласа пама пултаратăп.

Хăвăр пĕлĕве тата пултарулăха хак парăр.

— Çапла вара, урока пĕтĕмлетсе ваттисен сăмахĕсене вулар.

*— Аллупа ĕçле, пуçупа шутла.*

— Мĕнле ăнланатăр ку ваттисен сăмахне?

*— Чтобы хорошо выполнить работу, руки не достаточно. Нужно обдумать, взвесить, как эту работу сделать лучше.*

— Иккĕмĕш ваттисен сăмахĕ вырăсла час-часах тĕл пулать. Вулар-ха ăна.

*— Çиччĕ виç те пĕрре кас. Семь раз отмерь, один раз отрежь. Эта пословица также о том, что прежде чем начинать работу, следует хорошо обдумать, как лучше ее сделать.*

— Ваттисен сăмахĕсене пăхмасăр çырмалла пулать, çавăнпа йăнăш тума хăрушлăх пур вырăнсене тупса палăртар-ха.

*Аллупа ĕçле, пуçупа шутла. Çич хут виç те пĕрре кас.*

Пĕр-икĕ минут хушши ачасем ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, астуса юлаççĕ, ун хыççăн ĕç тетрадĕнче çыраççĕ. Вĕрентӳçĕ ачасен ĕçĕсене тетрадьсене пухса илсе хаклать.

## 14-мĕш урок

### Тема: Аптраман таврашсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Петĕр Хусанкайăн «Сăпка юрри» сăввинчи вĕрентсе каланисем çинчен калаçу йĕркелесси; 2) панă сăмахсем валли текстран синонимсем шыраса тупма вĕрентесси; 3) текстри глаголсен пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене сăнама вĕрентесси, вĕсене ушкăнлама хăнăхтарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Пуплев зарядки. «Хуравла та ыйт» вăйă.**

Ачасем карталанса тăраççĕ. Вăйă пуçлакан ача хăйпе юнашар

тăракан юлташне мĕнле те пулин ыйту парать. Юнашар тăраканни çак ыйтăва хуравлать те тепĕр енчи кӳршине урăх ыйту парать. Вăл вара çав ыйтăва хуравланă хыççăн тепĕр ачана ыйту парать. Вăйăа пуçлакан ача патне черет тепĕр хут çитиччен выляççĕ.

*— Эсĕ мĕн ятлă?*

*— Эпĕ Катя ятлă. Эсĕ миçемĕш класра вĕренетĕн?*

*— Эпĕ тăваттăмăш класра вĕренетĕп. Эсĕ ăçта пурăнатăн?*

*— Эпĕ Шупашкар хулинче пурăнатăп. Эпир мĕнле республикăра пурăнатпăр?*

*— Эпир Чăваш Республикинче пурăнатпăр. Пирĕн çĕршыв мĕн ятлă?*

*— Пирĕн çĕршыв Раççей ятлă. ...*

**2. «Сăпка юрри» сăвăпа ĕçлени.**

Вĕрентӳçĕ ачасене кĕнекене 22-мĕш страницăна уçма ыйтать. Сăвă ятне вулать. Ăна вырăсла куçарма хушать. Куçарма пултаракан тупăнмасть пулсан ачасем словарьпе усă кураççĕ.

— *Сăпка — колыбель, песня — юрă. Колыбельная песня.*

— Сăпка юррине кам çырнă?

— *Петĕр Хусанкай.*

— Петĕр Хусанкай — чăваш халăх поэчĕ. Çак ята астуса юлăр. Унăн произведенийĕсемпе эсир аслă классенче пĕр хут кăна мар тĕл пулăр.

Вĕрентӳçĕ сăпка юррине вулать. Ачасем хăйсен шухăшне калаççĕ.

— Сăвă чăнах та сăпка юрри пек лăпкăн юхать. Ăна итленĕ чух шăпланса ларас килет. Сăвăра [ш], [ç] сасăсем нумай тĕл пулаççĕ. Вĕсем сăвва итлекене лăплантараççĕ. Ахальтен мар аслисем пире шăпланма ыйтнă чух пӳрнене тута патне тытса ш-ш-ш теççĕ.

Çакăн пек калаçу хыççăн «Сăпка юрри» сăвă тăрăх хывнă юрра итлесен аван. Ачасем юрă мĕнле туйăмсем çуратни çинчен каласа пама пултараççĕ.

— Сăпка юрринче вĕрентсе каланисем нумай. Мĕнле сĕнӳсем парать-ха пире автор?

Кашни ярăма вуласа автор мĕн сĕнсе каланине вырăсла куçараççĕ. Словарьпе усă кураççĕ, вĕрентӳçĕрен пулăшу ыйтаççĕ. Сăвăри сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене куçарнă май 2-мĕш ĕçре панă сăмахсене астуса юлаççĕ.

— Автор ачасене мĕнле чĕнет?

*— Пĕчĕкçĕ чăваш — маленький чуваш; аптраман тавраш — представитель находчивых, не теряющихся в любой ситуации людей.*

Çакăн пек ĕçленĕ хыççăн сăвва пурте пĕрле вулаççĕ. Унтан темиçе ача пĕчченшерĕн вуласа парать.

**3. Синонимсемпе ĕçлени.**

Вĕрентӳçĕ 3-мĕш ĕçре панă сăмахсене урок пуçланиччен доска çине çырса хатĕрлет. Ачасем ку ĕçе тетрадьсенче çырса пурнăçлаççĕ. Çав вăхăтрах доска çине çыраççĕ. Хăйсен ĕçне доска çине çырнипе тĕрĕслесе пыраççĕ. Чи малтанах ачасем 3-мĕш хăнăхтарура хушнă ĕçе вулаççĕ, синонимсем çинчен аса илеççĕ. Кĕнекере панă сăмахсене словарьпе усă курса куçараççĕ. Сăвăра кашни сăмах валли синоним тупаççĕ.

**4. Сăвăри глаголсене ушкăнлани.**

4-мĕш ĕçе кашни ача хăй тĕллĕн пурнăçлать. Пĕр вĕренекене доска çине сăвăри пур глагола та ушкăнламасăр çырса илме ыйтсан аван. Е çак глаголсене вĕрентӳçĕ çырса хурать. Доска çине çырни тăрăх ачасем сăвăри пур глагола та тупнине тĕрĕслеççĕ. Ун хыççăн ачасем глаголсене мĕнле ушкăнланине каласа параççĕ.

**5. Урока пĕтĕмлетни.**

Ĕç тетрадĕнче панă таблицăри пĕрремĕшпе иккĕмĕш критерисем тăрăх кашни ача хăйĕн ĕçне хаклать.

**6. Киле ĕç пани.**

Вĕрентӳçĕ 9-мĕш ĕçре панă ваттисен сăмахне вулама ыйтать. Ăна мĕнле ăнланнине тĕрĕслет. Ваттисен сăмахне килте пăхмасăр вĕренме хушать. Кăмăл пур пулсан сăпка юррине пăхмасăр вĕренме юрать.

## 15-мĕш урок

### Тема: Аптраман таврашсем

***Урок тĕллевĕ:*** глаголăн вĕреннĕ формисен пулăвне аса илесси; ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) текстри глаголсен пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене сăнама вĕрентесси, вĕсене ушкăнлама хăнăхтарасси; 2) глаголăн пуçламăш формине уйăрма вĕрентесси; 3) глаголсене тĕрлĕ формăра лартма хăнăхтарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Пуплев зарядки.**

«Хуравла та ыйт» вăййă. (14-мĕш урокра вылянă пек вылямалла.)

**2. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем килте вĕреннĕ ваттисен сăмахне ĕç тетрадьне çыраççĕ. Кĕнекене уçса тĕрĕслеççĕ. Хăйсен ĕçне таблицăра хаклаççĕ. Сăвва пăхмасăр вĕреннĕ ачасем пур пулсан каласа параççĕ. Ыттисем вĕсем мĕнле вуланине вĕрентӳçĕпе пĕрле хаклаççĕ.

**3. Сăвăри глаголсен уйрăмлăхěсене тата пěрпеклěхěсене шырани.**

— Иртнě урокра эпир сăпка юрринчи глаголсене тупса ушкăнларăмăр.

Вěрентӳçě ачасен мěнле ушкăнсем пулни çинчен аса илтерет. Мěне кура ушкăнланине ăнлантарса пама ыйтать.

— Анюкпа Ванюк та çак ěçе пурнăçланă. Вěсен ěçне тишкерер-ха.

Ачасем Анюкпа Ванюк сăмахсене мěнле ушкăнлани çинчен каласа параççě.

*— Анюк пěрремěш юпана пěр сăмахран тăракан глаголсене çырса илнě, иккěмěш юпана* **ан** *сăмах хушса тунă глагол формисене çырнă.*

*— Ванюк пěрремěш юпана сăмах тымарěнчен çеç тăракан глаголсене çырнă, иккěмěш юпана тымартан тата аффикссенчен тăракан сăмахсене çырса илнě.*

— Кайран ачасем çак сăмахсенче пěрпеклěх тупнă. Мěнле пěрпеклěх пур-ши çак сăмахсенче?

Ачасем хăйсен шухăшне калаççě. Вěрентӳçěн ачасен пур шухăшне те итлеме тăрăшмалла. Вěренекенсен вара ыттисем каланине тимлě итлемелле. Шухăша ытти ачасем каларěç пулсан тепěр хут асăнма юрамасть. Çакă кашни урокра закон выранěнче пулмалла. Çапла ěçленě хыççăн Анюкпа Ванюк ěçне тишкермелле.

— Ку глаголсем пурте пěр ыйтура: ***эсě мěн ту?*** Унсăр пуçне вěсем сăмах тěпěнчен (основа) тăраççě. Мěншěн тесен ***-лаш, -аш*** аффикссем — сăмах тăвакан аффикссем. Сăмах формине улăштаракан аффикссем ку сăмахсенче çук. Çакăн пек форма чăваш чěлхинче глаголăн пуçламăш форми (начальная форма) пулать. Ун çинчен Сергей Сергеевич мěн каланине вуласа пăхар-ха.

Ачасем 6-мěш ěçре панă правилăна вуласа тишкереççě.

**4. Глаголсене сăпатлани.**

7-мěш ěçе ушкăнсемпе ěçлесе пурнăçлаççě. Кашни ушкăна таблицăн тěрлě пайне «касса парсан» аван. Ěçе те ун пек хăвăртрах тума пулать, тěрěсленě чух та пěр япалана темиçе хут итлемелле пулмасть. Кашни ушкăн хăйěн пайне каласа парать, ыттисем тимлě итлесе çак ушкăнпа килěшеççě, йăнăшсем пулсан вěсене тӳрлетеççě.

8-мěш ěçе ачасем пурте пěрле тăваççě. Ачасем хăйсен предложенийěсене калаççě, йăнăшсем пур пулсан пěр-пěрне тӳрлетеççě.

**5. Киле ěç пани.**

Килте çак глаголсемпе ěç тетрадьне виçě предложени çырса хумалла (3-мěш ěç).

**6. Урока пěтěмлетни.**

— Паян эпир урокра глаголсен сăпатланăвĕ çинчен аса илтĕмĕр. Кам глаголсене çăмăллăнах сăпатлать? Кама çак ĕçе тума хальлĕхе йывăр?

Ачасем е пĕрремĕш ыйту хыççăн, е иккĕмĕш ыйту хыççăн алă çĕклеççĕ.

— Таблицăри виççĕмĕш критерипе хăвăр пултарулăха хаклăр.

## 16-мĕш урок

### Тема: Чăваш вăрманĕ

***Урок тĕллевĕ:*** вăрман çинчен каласа пама вĕрентесси; ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) кăмпа-çырла ячĕсене аса илесси; 2) кĕнекери текстпа усă курса вăрман çинчен каласа пама вĕрентесси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Урок темине палăртни.**

Вĕрентӳçĕ пĕрремĕш ĕçре панă сăвăсене вулать. Вĕсенчен ӳкерчĕке юрăхлă сăвва суйласа илме ыйтать. Ачасем суйласа илнĕ сăвва пĕчченшерĕн тата хорпа икĕ-виçĕ хут вулаççĕ.

— Уплюнкка ăçта тухса ларнă?

— *Лаштра юман хӳттинче, шĕшкĕ тĕмĕ айĕнче.*

— Çак йĕркесенче тĕл пулакан йывăççен ячĕсене вуласа парăр, вырăсла куçарăр.

— *Юман — дуб, шĕшкĕ — лещина (орешник).*

— Где выросли опята?

— *В тени раскидистого дуба, под кустом лещины.*

Вĕрентӳçĕ ĕç тетрачĕсене 13-мĕш страницăна уçма ыйтать, кăмпа ятне кирлĕ вырăна çырса хума хушать. Ун хыççăн вĕрентӳçĕ ыйтнипе пĕр ача шурă кăмпа çинчен калакан сăвва вуласа парать.

— Шурă кăмпана сăвăра мĕнле сăмахсемпе сăнланă? Çав сăмахсене тупăр, вырăсла куçарăр.

— *Тĕксĕм хăмăр — темно-коричневый; çутăрах — светлее; пысăк — большой; пĕчĕк — маленький; самăр — толстый; хутран та шурăрах — белее бумаги; паха — ценный, благородный.*

— Шур кăмпа ăçта ӳсет?

— *Хурăнлăхра — в березняке; хырлăхра — в сосновом лесу.*

Ачасем сăвва пурте пĕрле пĕр хут вулаççĕ. Шур кăмпана экран çинче ытти кăмпасем хушшинче тупса кăтартаççĕ. Кăмпа ятне ĕç тетрадĕнче кирлĕ вырăна çырса хураççĕ.

— Ĕç тетрадĕнчи ĕçре урăх кăмпа ячĕсене те чăвашла куçарса

çырма хушнă. Кăмпа ятне вулăр, кăмпине экран çинче тупса кăтартăр, ятне чăвашла калăр, тетраде çырса хурăр, доска çине çырнипе тĕрĕслĕр.

— Экран çинчи хăш кăмпасене çиме юрамасть?

— *Шăна кăмпине çиме юрамасть.*

— Мĕншĕн?

— *Мĕншĕн тесен вăл наркăмăшлă.*

— Кăмпа-çырла, тĕрлĕрен йывăççем ăçта ӳсеççĕ?

— *Вăрманта ӳсеççĕ.*

— Паян эпир сирĕнпе вăрман çинчен вулăпăр, калаçăпăр.

**2. «Сăр вăрманĕ» текста вулани.**

— Чăваш çĕрĕ авалах вăрмансемпе пуян пулнă. Чăваш вăрманĕнчи юмансенчен Петĕр патша карапсем тутарнă. Хăй вăхăтĕнче чăваш юманĕнчен ăсталанă сĕтел-пукан Мускаври Патшалăх университечĕн залĕсене илемлетнĕ. Халĕ те пирĕн республикăра вăрмансем нумай. Мĕнпе пуян-ха вĕсем?

«Сăр вăрманĕ» текста вĕрентӳçĕ ыйтнипе лайăх вулама пултаракан ача вуласа парать.

— Текст ятне вырăсла куçарăр.

— *Сăр — Сура. Вăрман — лес. Сăр вăрманĕ — Присурский лес.*

— Хăш вырăнта вырнаçнă-ха çак вăрман?

Карта çинче Сăр шывне тупса кăтартаççĕ. Ун тăрăх ӳсекен вăрмансене тупаççĕ.

— Сăр вăрманĕ мĕнпе пуян?

— *Сăр вăрманĕ кăмпа-çырлапа пуян.*

— Çак вăрмансенче мĕнле çырласем ӳсни çинчен калакан абзаца вуласа парăр.

Ачасем пĕрремĕш абзаца вулаççĕ.

— Çырла ячĕсене тупса вырăсла куçарăр.

— *Хурăн çырли — земляника...*

— Чи малтан вăрманта хăш çырла пиçет?

— *Чи малтан вăрманта хурăн çырли пиçет.*

— Унтан мĕнле çырласем пиçеççĕ?

— *Унтан хура çырла, хăмла çырли, хурлăхан, палан пиçет.*

— Мĕнле çырла юр çăвичченех ларать?

— *Пилеш юр çăвичченех ларать.*

— Кам çак абзац содержанине каласа пама пултарать?

Пĕр-икĕ ача вăрманта мĕнле çырласем ӳснине каласа параççĕ.

— Çырласемсĕр пуçне вăрманта тата мĕн ӳсет?

— *Вăрманта тата кăмпа ӳсет.*

— Мĕнле кăмпасем ӳсни çинчен вуласа парăр.

Ачасем иккĕмĕш абзаца вуласа параççĕ. Унтан унăн содержанине калаççĕ.

— Калав геройĕ мĕнле кăмпа татма юрататъ?
— *Вăл пуринчен ытла шур кăмпа татма юрататъ.*
— Вăл çулла вăрмана кампа çӳренĕ?
— *Вăл çулла вăрмана Наçтаç кинемипе çӳренĕ.*
— Калав авторĕ кам?
— *Калав авторĕ Герасим Харлампьев.*

**3. Автор çинчен вуласа пĕлни.**

— Автор çинчен 31-мĕш страницăра статья пур.

Статьяна вĕрентӳçĕ вулать. Ачасем тимлĕ итлесе ăнланма тăрăшаççĕ.

— Герасим Дмитриевич Харлампьев ăçта çуралнă?
— *Герасим Дмитриевич Харлампьев Элĕк районĕнче çуралнă.*
— Унăн кĕнекисем мĕн çинчен?
— *Унăн кĕнекисем çут çанталăк çинчен.*
— Мĕншĕн-ши?
— *Мĕншĕн тесен вăл художник пулнă. Çут çанталăка ӳкернĕ, кайран çут çанталăка сăнласа калавсем çырма тытăннă.*
— Вăл мĕн ятлă кĕнекесем çырнă?
— *Вăл «Илемлĕ ир», «Тăрна ташши» ятлă кĕнекесем çырнă.*

Ыйтусемпе ĕçленĕ хыççăн ачасем статьяна тепĕр хут вулаççĕ.

**4. Урокра вĕреннине пĕтĕмлетни.**

— Пĕчĕкскер, хитрескер,
Çĕр мăкăртса тухнăскер.
Мĕн-ши вăл?
— *Кăмпа.*
— Эсĕ мĕнле кăмпасене пĕлетĕн?
— *Кăрăç, шур кăмпа, хыр кăмпи...*
— 26-мĕш страницăра ӳкерсе панă кăмпасене пĕлетĕн-и?
— *Ӳкерчĕк çинче — ăвăс кăмпи, шур кăмпа, яка кăмпа, шăна кăмпи, навус кăмпи.*
— Хăш кăмпасене çиме юрамасть?
— *Сылтăм енче ӳкернĕ кăмпасене çиме юрамасть.*
— Мĕншĕн?
— *Мĕншĕн тесен вĕсем наркăмăшлă.*
— Ĕç тетрадĕнче паянхи урок валли панă таблицăра пĕрремĕшпе иккĕмĕш критерисемпе хăвăр пĕлӳпе пултарулăха «+», «—» паллăсем лартса хаклăр.

**5. Киле ĕç пани.**

Вĕрентӳçĕ ĕç тетрадĕнче 2-мĕш ĕçе тупма хушать.

— Шурă кăмпана мĕнле сăмахсемпе сăнлама пулать? Çав сăмахсене ăçта тупма пулать?

Ачасем шур кăмпана сăнласа панă сăвва аса илеççĕ. Унтан кирлĕ сăмахсем тупса вуласа параççĕ.

— Шăна кăмпине сăнлама мĕнле сăмахсем юраççĕ?

— *Хĕрлĕ, илемлĕ, пысăк, пĕчĕк, хитре...*

— Çак ĕçе килте çырса тумалла пулать. Тепĕр урокра тетрадьсене пухса илсе кашнин ĕçне тĕрĕслесе хаклăп.

## 17-мĕш урок

### Тема: Чăваш вăрманĕ

***Урок тĕллевĕ:*** вăрмана кайни, унта мĕн туни çинчен каласа пама вĕрентесси; ачасен чăвашла пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) кĕнекери текстпа усă курса вăрман çинчен каласа пама вĕрентесси; 2) глаголăн улшăнман формипе — инфинитивпа паллаштарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Пуплев зарядки.**

— Урок теми «Чăваш вăрманĕ». Урока пуплев зарядкинчен пуçлăпăр. «Хуравла та ыйт» вăйă. Тема — «Вăрман».

— *Чăваш Республикинче вăрмансем пур-и?*

— *Чăваш Республикинче вăрмансем нумай. Эсĕ вăрмана çӳреме юрататăн-и?*

— *Эпĕ вăрмана çӳреме юрататăп. Эсĕ çулла вăрмана кайрăн-и?*

— *Эпĕ çулла вăрмана кайрăм. Вăрманта мĕнле çырласем ӳсеççĕ?*

— *Вăрманта...*

**2. Кăмпа ячĕсемпе усă курса предложенисем туни.**

Малтан 11-мĕш ĕçе пурте пĕрле тăваççĕ. Экран çинче кăмпасен ӳкерчĕкĕсем пулсан аван.

Унтан ачасем 12-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ. Тупмалли юмахсен тупсăмне тупнă хыççăн киле панă ĕçе тĕрĕслеççĕ.

— Килте сирĕн шур кăмпана тата шăна кăмпине сăнлама юрăхлă сăмахсем тупса çырмалла пулнă. Кам вĕсене вуласа парасшăн?

Ачасем хăйсем çырнă сăмахсене вулаççĕ. Пĕр-пĕрне тӳрлетеççĕ, хушса калаççĕ.

— Ытти кăмпасем çинчен тупмалли юмах туса пăхар-ха. Сăмахран, кăрăç çинчен.

— *Вăл шурă е хура симĕс тĕслĕ пулать.*

— *Ăна хурăнлăхра, хутăш вăрмансенче çулçăсем айĕнче шырамалла.*

— *Вăл çирĕп кăмпа.*

— *Ăна хĕлле валли тăварлаççĕ.*

Вăйлăрах класра ку ĕçе ушкăнсенче те тума пулать. Ачасем пĕр кăмпа суйласа илеççĕ те хăйсем тĕллĕн ăна сăнласа параççĕ. Ытти ушкăнри ачасем тупсăмне тупаççĕ.

**3. Глаголăн инфинитив формине сăнани.**

Ачасем «Сăр вăрманĕ» текста тепĕр хут вулаççĕ. Текстран глаголсене тупса çырса илеççĕ. Кам миçе глагол тупни çинчен, вĕсем мĕнле формăра пулни çинчен калаçаççĕ. Унтан хăйсен ĕçне Ванюкпа Анюк ĕçĕсемпе танлаштараççĕ. Ванюкпа е Анюкпа килĕшни çинчен хăйсен шухăшне калаççĕ. Вĕрентӳçĕн ачасене **татма юрататăп**, **татма çӳрерĕмĕр** сăмах майлашăвĕсене пĕрле пăхмалла текен шухăш патне илсе çитермелле.

— *Юрататăп* тесен мĕн тума юратни паллă мар. *Татма юрататăп* тесен — паллă (люблю собирать).

— Çак глагол майлашăвĕ сăпат тăрăх мĕнле улшăннине сăнар-ха.

Ачасем икшерĕн 8-мĕш ĕçе тăваççĕ. Хăйсен пĕтĕмлетĕвĕсемпе ыттисене паллаштараççĕ.

— *Татма* сăмах кирек хăш сăпатра та улшăнмасть. *Мĕн тума* юрататăп? *(Татма.) Мĕн тума* юратаççĕ? *(Татма.)*

— Вырăс чĕлхинче глаголăн улшăнман форми мĕн ятлă?

— *Неопределенная форма, инфинитив.*

— Чăваш чĕлхинче вăл мĕн ятлă-ши? Сергей Сергеевич ун çинчен мĕн калать? Вуласа пăхар-ха.

Ачасем правило вуласа ăна ăнланаççĕ, тĕслĕхсем илсе кăтартаççĕ.

**4. Инфинитив формипе пуплевре усă курма хăнăхни.**

1) 9-мĕш ĕçе пурте пĕрле калаçса тăваççĕ.

2) 10-мĕш ĕçе малтан пĕрле сӳтсе яваççĕ, ун хыççăн çырса пурнăçлаççĕ.

**5. Вăрманта кăмпа татни çинчен калав туни.**

Ачасем икшерĕн ĕçлесе 14-мĕш ĕçре панă сăмахсенчен кăмпа татни çинчен калав тума юрăхлă сăмахсене суйласа илеççĕ. Хăйсен ĕçне пурте пĕрле калаçса тĕрĕслеççĕ. Ун хыççăн предложенисем, текст тăваççĕ. Сăмахран, çакăн пек калаçу пулма пултарать:

— Пĕрремĕш предложени мĕн çинчен пулмалла-ши?

— *Вăрмана кайни çинчен.*

— *Мĕнле тĕллевпе кайни çинчен.*

— *Эпĕ вăрмана кăмпа татма кайрăм.*

— *Хăçан кайни çинчен калама юрать. Эпĕ вырсарни кун вăрмана кăмпа татма кайрăм.*

Усă курнă сăмахсене туртса пыма юрать. Юлнă сăмахсемпе усă курса ачасем урăх предложенисем тăваççĕ.

— Малалла мĕн ҫинчен калама пулать?

— *Мĕнле кăмпасем татни ҫинчен. Кăмпасем мĕнле пулни ҫинчен.*

— *Шурă кăмпа, кăрăҫ, уплюнкка пуҫтартăм. Кăмпасем ҫирĕп, хитре.*

— Тата мĕнле сăмахсем юлчĕҫ?

Ачасем юлнă сăмахсене вулаҫҫĕ.

— Ку сăмахсемпе мĕн ҫинчен калама пулать?

— *Киле таврăнни ҫинчен.*

— *Киле йывăр карҫинккапа таврăнтăм.*

Пулнă калава доска ҫине ҫырса хураҫҫĕ. Ĕҫ тетрачĕсене ҫырса илеҫҫĕ. Чăваш чĕлхипе лайăх ĕлкĕрсе пыракан классенче ку ĕҫе ăсра туса пăхнă хыҫҫăн ҫырса тума киле пама юрать.

**6. Урока пĕтĕмлетни.**

— Паян эпир глаголăн мĕнле форми ҫинчен пĕлтĕмĕр?

— *Инфинитив ҫинчен пĕлтĕмĕр. Вăл глаголăн улшăнман форми.*

Ачасем тепĕр хут правилăна вулаҫҫĕ. Тĕслĕхсем илсе параҫҫĕ. Ĕҫ тетрадĕнче пĕлĕве хакламалли таблицăра виҫҫĕмĕшпе тăваттăмĕш критерисем тĕлĕнче хăйсен пĕлĕвне «+», «–» паллăсем лартса хаклаҫҫĕ.

**7. Киле ĕҫ пани.**

13-мĕш ĕҫе класра тунă ĕҫсемпе усă курса пурнăҫламалла.

## 18-мĕш урок

### Тема: Чăваш вăрманĕ

***Урок тĕллевĕ:*** вăрманта кăмпа татни ҫинчен каласа пама вĕрентесси; ачасен чăвашла пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) кĕнекери текстпа усă курса вăрманта кăмпа татни ҫинчен каласа пама вĕрентесси; 2) пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсене иртнĕ причасти формипе улăштарма вĕрентесси; 3) пĕрре иртнĕ (курса иртнĕ) вăхăтра ҫырнă текстăн содержанине курмасăр иртнĕ вăхăтра каласа пама вĕрентесси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕҫе тĕрĕслени. Урок темине палăртни.**

— Пирĕн вăрмансенче мĕнле кăмпасем ӳсеҫҫĕ?

— *Пирĕн вăрмансенче яка кăмпа, хурăн кăмпи, ăвăс кăмпи, уплюнкка, шурă кăмпа, кăрăҫ ӳсеҫҫĕ.*

— Вĕсем мĕнле йывăҫсен ҫывăхĕнче ӳсеҫҫĕ?

— Хурăн кăмпи хурăнлăхра ӳсет. Ăвăс кăмпи ăвăслăхра ӳсет.

Хыр кăмпи хырлăхра, кăрăç хурăнлăхра та, ăвăслăхра та ӳсет. Шур кăмпа хурăнлăхра тата хырлăхра ӳсет.

— Паян эпир чăваш вăрманĕ çинчен пуçланă калаçăва малалла тăсăпăр. Чăваш вăрманĕ мĕнпе пуян?

— *Чăваш вăрманĕ кăмпа-çырлапа пуян.*

— Паян урокра эпир ачасем кăмпа мĕнле татма вĕренни çинчен вулăпăр, калаçăпăр.

**2. Текст содержанине ăнланас тĕлĕшпе ĕçлени.**

«Эпĕ кăмпа татма вĕренни» калава вĕрентӳçĕ вулать. Ачасем итлесе лараççĕ.

— Мĕн çинчен вуларăмăр?

— *Пиччĕшĕпе шăллĕ вăрманта кăмпа татни çинчен.*

— Эпĕ вырăсла предложенисем калăп. Эсир çавăн çинчен текстра чăвашла тупса вуласа парăр.

— На краю нашей деревни есть лес.

— ...

— Однажды нас с Сережей мама послала за грибами.

— ...

— В лесу очень много грибов.

— ...

— Я ищу красные, самые красивые грибы. Они очень уж нежные, ножки белые, на шляпе белые точки.

— ...

— Сергей тоже старательно собирает, но его грибы мелкие.

— ...

— Мы вернулись домой. Мама нас радостно встретила.

— ...

— Ах, какие хорошие грибы нашли, — похвалила она, увидев Сережины грибы.

— ...

— У меня еще лучше! — говорю я, открывая лукошко.

— ...

— Мухомор он, конечно, красивый, но ядовитый, его есть нельзя, — объяснила мама.

**3. Ыйтусене хуравлани.**

— Çеруш мĕнле кăмпасем татнă?

— *Çеруш лайăх кăмпасем татнă.*

— Унăн пиччĕшĕ мĕнле кăмпасем татнă?

— *Унăн пиччĕшĕ шăна кăмпи татнă. Ăна çиме юрамасть. Вăл наркăмăшлă.*

**4. Текста вулама вĕренес тĕллевпе ĕçлени.**

Ачасем текста пĕр хут харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ, ун хыççăн абзацăн-абзацăн черетпе сасăпа вуласа куçараççĕ. Виççĕмĕш

хутӗнче текста рольсемпе вулаççӗ. Кашни ачан вулавне вӗрентӳ-çӗпе пӗрле хаклаççӗ.

**5. Автор çинчен вуласа пӗлни.**

— Ку калава çыраканӗ кам?

— *Илпек Микулайӗ.*

— Ун çинчен вуласа пӗлер-ха.

Илпек Микулайӗ çинчен çырнӑ статьяна лайӑх вулакан ача е вӗрентӳçӗ вулать.

— Кам вӑл Илпек Микулайӗ?

— *Чӑвашсен паллӑ çыравçи.*

— Вӑл ӑçта çуралнӑ?

— *Вӑл Шӑмӑршӑ районӗнче çуралнӑ.*

Шӑмӑршӑ районне карттӑ çинче тупса кӑтартма, Шупашкартан хӑш енче, инçе е çывӑх вырнаçни çинчен каласма юрать.

— Илпек Микулайӗ çырнӑ кӗнекесем мӗнле чӗлхесемпе пичетленнӗ?

— *Илпек Микулайӗ çырнӑ кӗнекесем чӑвашла тата вырӑсла кӑна мар, ют çӗршыв чӗлхисемпе те пичетленнӗ.*

Ачасене Илпек Микулайӗ çырнӑ кӗнекесене кӑтартма юрать.

**6. Текстри глаголсемпе ӗçлени.**

Ачасем 17-мӗш ӗçе ушкӑнсенче тӑваççӗ. Хӑйсен ӗçне пӗр-пӗрин хушшинче танлаштарса тӗрӗслеççӗ.

— Пӗрремӗшпе иккӗмӗш юпари глаголсем мӗнпе уйрӑлса тӑраççӗ?

— Пӗрремӗш юпари глаголсемпе хамӑр тунӑ ӗçсем çинчен каласа пама пулать, иккӗмӗш юпари глаголсемпе вара эпир курман ӗç мӗнле пулни çинчен каласа пама пулать.

— Эпир калавра пулса иртнӗ ӗçсене хамӑр курнӑ-и?

— *Çук. Калав геройӗ каласа панӑ тӑрӑх çеç пӗлетпӗр.*

— Апла пулсан пирӗнтен кашни калавра мӗн пулса иртни çинчен каласа парас тет пулсан пӗрремӗш е иккӗмӗш юпари глаголсемпе усӑ курма пултарать?

— *Иккӗмӗш юпари глаголсемпе.*

**7. Текстри глаголсен формине улӑштарса вулани.**

Ку ӗçе чӑваш чӗлхине вӗренме йывӑртарах классенче тумасан та юрать.

Ачасем вӗрентӳçӗпе пӗрле текстри глаголсене пӗрре иртнӗ формӑран иртнӗ причасти формине лартса вулаççӗ. Кашни предложенире хӑш сӑмахне улӑштармаллине, мӗншӗн улӑштармаллине сӳтсе яваççӗ. Мӗншӗн хӑш-пӗр предложенисене улӑштармасӑр хӑвармаллине ӑнлантараççӗ.

**8. Урока пӗтӗмлетни.**

— Юлашки уроксенче эпир чӑвашсен çыравçисемпе, вӗсен

калавĕсемпе паллашрăмăр. Камсем вĕсем? (Герасим Харлампьевпа Илпек Микулайĕн портречĕсене кăтартма юрать.)

— *Илпек Микулайĕ тата Герасим Дмитриевич Харлампьев.*

— Çак çыравçăсем çинчен эсир мĕн пĕлетĕр?

— *Илпек Микулайĕ Шăмăршă районĕнче çуралнă. Вăл учитель-те ĕçленĕ. Унăн кĕнекисем чăвашла тата вырăсла çеç мар, ют çĕршыв чĕлхисемпе те пичетленсе тухнă.*

— *Герасим Дмитриевич Харлампьев Элĕк районĕнче çуралнă. Вăл художник пулнă. Унăн ӳкерчĕкĕсем те, калавĕсем те çут çанталăк çинчен.*

— Пĕлĕве хакламалли таблицăра 5-мĕш критерие вулăр. Хăвăр пултарулăха çак критерипе хак парăр.

**9. Ваттисен сăмахĕпе ĕçлени.**

Ваттисен сăмахне вулаççĕ, унăн пĕлтерĕшне ăнланаççĕ.

— Любой вещи, любому предмету найдется применение.

Астуса юлаççĕ, йăнăш çырма пултаракан вырăнсене палăртаççĕ.

*Кăмпи пултăр — кунтăкĕ тупăнать.*

Унтан ваттисен сăмахне пăхмасăр çыраççĕ. Кĕнекене уçса тĕрĕслеççĕ.

**10. Киле ĕç пани.**

Вуланă текстсемпе усă курса вăрман çинчен каласа пама хатĕрленмелле.

## 19-мĕш урок

### Тема: Яковлев мăнукĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** чăваш халăхĕн паллă çыннисемпе паллаштарасси; ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) виççĕмĕш класра паллашнă чăвашсен паллă çыннисене аса илесси, вĕсем çинчен калаçтарасси; 2) Н.И. Шелепипе паллаштарасси; 3) хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тупма хăнăхтарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Урок темине палăртни.**

Вĕрентӳçĕ кĕнекесене 32-мĕш страницăна уçма хушать.

— Камсене куратăр эсир кунта?

— *Хĕр ачапа арçын ача шкула каяççĕ. Хĕр ача чăваш тĕррилĕ кĕпе тăхăннă.*

— Ӳкерчĕк çумĕнче панă сăвă мĕн ятлă?

— *Яковлев мăнукĕсем.*

— Кам-ха вăл Яковлев?

— *Иван Яковлевич Яковлев чăвашсене çутта кăларакан çын.*

— Кама Яковлев мăнукĕсем тенĕ-ши кунта?

— *Чăваш ачисене. Пире.*

Вĕрентӳçĕ сăвва вулать. Ачасем вĕрентӳçĕпе пĕрле унăн содержанине ăнланаççĕ.

— Мĕншĕн ачасене сăвăра Яковлев мăнукĕсем тенĕ?

— *Мĕншĕн тесен сăвăри ачасем — чăваш ачисем. Яковлев чăвашсем вĕренччĕр, нумай пĕлччĕр тесе тăрăшнă, çавăнпа сăвăра ачасене «Яковлев мăнукĕсем» тенĕ.*

— Паянхи урок теми — «Яковлев мăнукĕсем». Мĕн çинчен пулĕ-ши паянхи урок?

— *Пирĕн хамăр çĕршыва юратмалли çинчен. Чăвашсен паллă çыннисем çинчен.*

**2. Çĕнĕ сăмахсемпе паллашни.**

— Паян пирĕн иккĕмĕш ĕçре панă çĕнĕ сăмахсене астуса юлмалла. Пĕрремĕш сăмах: чечекленет. Мĕнле сăмахран пулнă-ха вăл?

— *чечек-лен-ет*

*чечек — цветок*

*чечек-лен — цвести (глаголăн пуçламăш форми)*

*чечек-лен-ет — цветет (вăл мĕн тăвать? — 3-мĕш сăпат, пĕрреллĕ хисеп, хальхи вăхăт)*

— Мĕнле сăмахсем «Яковлев мăнукĕсем» сăвăра тĕл пулчĕç? Тупса вулăр.

Сăвăра тĕл пулакан сăмахсене тепĕр хут тупса вулаççĕ, сăмах майлашăвĕсене вырăсла куçараççĕ. Астуса юлаççĕ.

— Мĕнле сăмахсем юлчĕç?

— *Чăваш халăх поэчĕ.* Кунта пур сăмахне те ăнланатпăр: *чăваш* — чуваш, чувашский; *халăх* — народ; *поэчĕ* — поэт (чей-то). Значит, чувашский народный поэт.

— Тепĕр сăмах: *суккăр* — слепой. Слово встречается первый раз. Нужно запомнить.

**3. Виççĕмĕш класра вĕреннĕ паллă çынсем çинчен аса илни.**

— Эпир хамăра Яковлев мăнукĕсем тетпĕр пулсан пирĕн чăваш халăхĕн историне, унăн паллă çыннисене пĕлмелле-и?

— *Çапла. Пĕлмелле.*

— Виççĕмĕш ĕçре чăвашсен паллă çыннисем çинчен ыйтусем панă. Хамăра тĕрĕслесе пăхар-ха. Пĕлетпĕр-и эпир вĕсем çинчен?

Ачасем виççĕмĕш ĕçре панă ыйтусене хуравлаççĕ.

**4. Н.И. Шелепи çинчен вуласа пĕлни.**

— Чăвашсен тепĕр паллă çынни — Николай Иванович Шелепи. Унăн сăнӳкерчĕкне пирĕн кĕнекере панă. Акă вăл — хура сухаллă, çирĕп шăм-шаклă вăйпитти çын. Мĕнпе паллă-ши вăл?

Кам та пулин ыйтăва хуравлать, е тӳрех 5-мĕш ĕçе пуçăнаççĕ. Н.И. Шелепи çинчен вĕрентӳçĕ вулать.

— Николай Шелепи çинчен мĕн пĕлтĕр?

— *Николай Шелепи Тутар АССРĕнче çуралнă. Вăл чăваш халăх поэчĕ. Поэт ача-пăча валли сăвăсем çырнă. Чирленĕ хыççăн Шелепи суккăр пулса юлнă, анчах çырма пăрахман.*

**5. Николай Шелепин «Пыл хурчĕ» сăввине вулани.**

Вĕрентӳçĕ 8-мĕш ĕç патне панă ӳкерчĕке пăхма ыйтать.

— Ӳкерчĕк çинче мĕн куратăр?

— *Пыл хурчĕсем чечексем çинче пыл пуçтараççĕ.*

— Сăвă мĕн ятлă?

— *Пыл хурчĕ.*

— Апла пулсан сăвăра мĕн çинчен каланă-ши?

— *Эпĕ сăвăра пыл хурчĕсем пыл пуçтарни çинчен каланă пулĕ тетĕп.*

— Вуласа пăхар-ха.

Вĕрентӳçĕ е лайăх вулакан ача сăвва сасăпа вулать.

— Сăвăра мĕн çинчен каланă?

— *Сăвăра пыл хурчĕсем пыл пуçтарни çинчен каланă. Эпир тĕрĕс шутланă.*

— Сăвăра пыл хурчĕсем çинчен кам каласа парать?

— *Пыл хурчĕсем хăйсем çинчен хăйсемех каласа параççĕ.*

— Пыл хурчĕсем хăйсем çинчен хăйсемех каланине ăçтан пĕлтĕр?

— *Глаголсен аффиксĕсенчен:* (эпир) *пурăн-**атпăр***, (эпир) *çи-**етпĕр***, (эпир) *пĕл-**етпĕр***, (эпир) *ил-**етпĕр***.

— Мĕн каласа параççĕ-ха пыл хурчĕсем хăйсем çинчен?

— *Вĕсем савăнăçлă, килĕштерсе пурăнаççĕ. Хитре чечексем çинчен пыл сĕткенĕ илеççĕ.*

Сăвва хорпа, унтан пĕрерĕн темиçе хут сасăпа вулаççĕ.

**6. Антонимсемпе ĕçлени.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ.

**7. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

## 20-мĕш урок

### Тема: Яковлев мăнукĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** чăваш халăхĕн паллă çыннисемпе паллаштарасси; ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) П.П. Хусанкайпа паллаштарасси; 2) И.Я. Яковлев халалĕсемпе паллаштарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Урок темине палăртни.**

— Киле панă ĕçе тĕрĕслетпĕр.

Ачасем хăйсен ĕçĕсене вуласа параççĕ.

— Курăр-ха, мĕн чухлĕ пултаруллă çын ҫуратнă чăваш çĕрĕ. Паян эпир вĕсем çинчен малалла калаçăпăр. Кĕнекесене 33-мĕш страницăна уçăр. Николай Иванович Шелепипе юнашар кам портречĕ?

— *Петр Петрович Хусанкай портречĕ.*

— Кам-ши вăл?

— *Вăл чăвашсен паллă поэчĕ. Эпир унăн «Сăпка юрри» сăввине вуланăччĕ.*

— Кам астăвать çав сăвва?

Пăхмасăр пĕлекенсем пулсан каласа параççĕ. Ун пек ачасем çук пулсан кĕнекерен вулаççĕ.

**2. П.П. Хусанкай çинчен вулани.**

— Петр Петрович Хусанкай çинчен пирĕн кĕнекере статья пур. Çав статьяна вулатпăр.

Вĕрентӳçĕ е ача вулать.

— Петĕр Хусанкай ăçта çуралнă?

— *Петĕр Хусанкай Тутар АССРĕнчи Сиктĕрме ялĕнче çуралнă.*

— Петĕр Хусанкайăн ачалăхĕ çинчен калакан вырăна тупса вулăр.

— *Петĕр пиллĕкре-улттăра чухне шкула кайнă, анчах ăна пĕчĕк пулнипе илмен. Сакăр çулта вĕренме пуçланă. Сăвăсем çырма вун икĕ çултах пуçланă. Вунултă çула çитиччен вăл хула та, пăрахут та, пăравус та курман.*

— Петĕр Петрович Хусанкайăн ачалăхĕ çинчен ĕç тетрадьне çырса хурăр.

**3. П.П. Хусанкайăн сăввипе паллашни.**

— 7-мĕш ĕçе тупăр. Кунта пире сăвă панă. Ăна кам çырнă?

— *Петĕр Хусанкай.*

— Ӳкерчĕке пăхăр. Мĕн çинчен-ши çак сăвă?

Ачасем хăйсен шухăшĕсене калаççĕ. Унтан сăвва вулаççĕ. Сăвă содержанине хăйсем малтан ун çинчен мĕн шухăшланипе танлаштараççĕ. Ыйтусене хуравлаççĕ.

— Камăн çак сăвва вĕренес кăмăл пур, тепĕр урок валли пăхмасăр вĕренме пултарать.

**4. И.Я. Яковлевăн халалĕсемпе ĕçлени.**

10-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ. Халалсенчен иккĕшне килте пăхмасăр вĕренеççĕ.

# 21-мӗш урок

## Тема: Пирӗн ачалӑх

***Урок тӗллевӗ:*** чӑваш ача-пӑча сӑмахлӑхӗпе паллаштарасси; ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) И.Я. Яковлев халалӗсемпе малалла ӗҫлесси; 2) пӳрне вӑййипе паллаштарасси; 3) хисеп ячӗсемпе усӑ курма хӑнӑхтарасси.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Пуплев зарядки.**

«Хуравла та ыйт» вӑйӑ. Тема — «Хисеп ячӗ». (Миҫе? Миҫере? Миҫемӗш?)

**2. И.Я. Яковлев халалӗсемпе ӗҫлени.**

Ачасем халалсенчен килте пӑхмасӑр вӗреннисене ҫыраҫҫӗ. Ӗҫӗсене пӗр-пӗринпе улӑштарса тӗрӗслеҫҫӗ. Ун хыҫҫӑн кашни хӑй тӗллӗн ӗҫ тетрадӗнче панӑ 3-мӗш ӗҫе тӑвать. Пурте пӗрле калаҫса тӗрӗслеҫҫӗ.

**3. Пӳрне вӑййипе ӗҫлени.**

— Камӑн килте пӗчӗк йӑмӑкӗ е шӑллӗ пур? Вӗсемпе эсир мӗнле вылятӑр? Пӳрне вӑййисем вылятӑр-и?

Ачасем хуравлаҫҫӗ.

— Пирӗн кӗнекере пӳрне вӑййи вылямалли чӑвашла сӑвӑ панӑ. Малтан сӑвва хӑвӑр тӗллӗн вулӑр, унтан иккӗн рольпе вулама хатӗрленӗр.

Вӗрентӳҫӗ ыйтнипе ачасем сӑвва икшерӗн рольсемпе вулама хӑнӑхаҫҫӗ. Унтан темиҫе мӑшӑр сасӑпа вуласа парать. Хӑйсем пӗлекен вырӑсла пӳрне вӑййисене каласа параҫҫӗ.

Ун хыҫҫӑн 2-мӗш ӗҫе ӗҫ тетрачӗсенче тӑваҫҫӗ.

**4. Ваттисен сӑмахӗсемпе ӗҫлени.**

Ачасем ваттисен сӑмахӗсене вулаҫҫӗ, вырӑсла куҫараҫҫӗ.

*— На руке пять пальцев, и все разные. Пӗр ҫемьери ҫынсем те тӗрлӗрен пулаҫҫӗ.*

*— Одному мед есть, а вместе работать хорошо. Йышпа ӗҫе хӑвӑртрах, ывӑнмасӑр тума пулать.*

Пӑхмасӑр вӗренеҫҫӗ. Йӑнӑш ҫырма пултаракан вырӑнсене палӑртаҫҫӗ. Ӗҫ тетрадьне ҫыраҫҫӗ. Пӗр-пӗринпе тетрадьсемпе улшӑнса тунӑ ӗҫе кӗнеке тӑрӑх тӗрӗслеҫҫӗ. Илнӗ палла ӗҫе хакламалли таблицӑна лартаҫҫӗ.

**5. «Кам ҫук-ши?» сӑвӑпа ӗҫлени.**

Ачасем сӑвва вулаҫҫӗ. Унта лартнӑ ыйтӑва хуравлаҫҫӗ. (Ҫиччӗри Ҫерук ҫухалнӑ.)

— Мĕнле хисеп ячĕсем тĕл пулаççĕ çак сăвăра?

— ***Виççĕри, тăваттăри, пиллĕкри, улттăри, çиччĕри*** *хисеп ячĕсем тĕл пулаççĕ.*

— Вырăсла мĕнле куçаççĕ-ши вĕсем?

— *Трехлетний, четырехлетний, пятилетний, шестилетний, семилетний.*

**6. Хисеп ячĕсемпе предложенисем туни.**

Ачасем 5-мĕш ĕçре панă ыйтусемпе ĕçлеççĕ. Çын миçере пулни çинчен чăвашла икĕ тĕрлĕ ыйтма пулнине сăнаççĕ. (Миçере? Миçе çулта?) Икĕ тĕрлĕ хурав пама пулнине асăрхаççĕ. (Вуннăра. Вунă çулта.)

**7. Урока пĕтĕмлетни.**

Ĕç тетрадĕнчи таблицăра панă критерисемпе хăйсен пĕлĕвне хаклаççĕ.

**8. Киле ĕç пани.**

6-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

## 22-мĕш урок

### Тема: Чăвашсен паллă художникĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** чăвашсен паллă художникĕсемпе паллаштарасси; ачасен пуплевне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) çĕнĕ сăмахсемпе паллаштарасси, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) чăвашсен паллă художникĕсем çинчен кĕскен каласа пама вĕрентесси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Урок темине палăртни.**

— Ӳкерчĕк çинче кама куратăр?

— *Ӳкерчĕк çинче арçын ача.*

— Вăл мĕн тăвать?

— *Вăл пӳрт ӳкерет.*

— Сăвă ятне вырăсла куçарăр.

— *Ӳкеретĕп — рисую.*

— Паян урокра эпир чăвашсен паллă художникĕсемпе паллашăпăр, хамăр ӳкерме юратни çинчен каласа пама вĕренĕпĕр.

**2. Çĕнĕ сăмахсемпе ĕçлени.**

Ачасем «Ӳкеретĕп» сăвва вулаççĕ.

— Сăвă геройĕ мĕн ӳкерет?

— *Вăл хĕвел, çурт (пӳрт), улăх ӳкерет.*

— Словарьте панă хăш сăмахсем сăвăра тĕл пулаççĕ?

— *Эрешлĕп — украшу узорами.*

— Сăва геройĕ мĕне эрешлĕ?

— *Çурт алăкне эрешлĕ.*

— Сăвăра тĕл пулакан тепĕр сăмах — *чӳрече ани* — подоконник.

— Чӳрече ани çине ача мĕн ӳкерĕ? Ун çинчен сăвăра мĕн калать?

— *Ача чӳрече ани çине чечек ӳкерет. «Сарлака ани çинче хĕм чечек ӳкерĕп», — тенĕ сăвăра.*

— Сăвăра *пурлăх* сăмах тĕл пулать. Пурлăх — имущество. «Сăрăсем — ман пурлăх».

— Для героя краски — богатство. Сăрăсем уншăн — пурлăх, мĕншĕн тесен вăл художник — ӳнерçĕ. «Художник» сăмаха чăвашла *ӳнерçĕ* тесе куçарма юрать. Ӳнерçĕ — художник, ӳнер музейĕ — художественный музей.

Ачасем *ӳнерçĕ, эрешлет, чӳрече ани, пурлăх* сăмахсене темиçе хут каласа астуса юлаççĕ. Вĕсемпе предложенисем тăваççĕ.

— Словарьте панă ытти сăмахсем — ял ячĕсем. Вĕсем пире кăшт каярах кирлĕ пулаççĕ.

Ял ячĕсене куçарса панине вулаççĕ.

**3. Ӳнер урокĕсем çинчен, ӳкерме юратни çинчен калаçу йĕркелени.**

3-мĕш ĕçре панă ыйтусемпе усă курса вĕрентӳçĕ калаçу йĕркелет. Ун хыççăн ачасем ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ.

**4. Ӳнерçĕсемпе паллаштарни.**

Ӳнерçĕсен сăн ӳкерчĕкĕсене пăхаççĕ. «Паллă художниксем» статьяна вулаççĕ. Ыйтусене хуравлаççĕ.

**5. Киле ĕç пани.**

Вĕрентӳçĕ ачасене пĕр художника суйласа илсе ун çинчен проект туса каласа памалли çинчен пĕлтерет. Килте чăваш художникĕсем çинчен вуласа пĕлме хушать. Кам çинчен проект тăвас пирки шутласа пăхма ыйтать.

## 23-мĕш урок-проект

### Тема: Чăвашсен паллă художникĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** проект хатĕрлеме вĕрентесси; чăваш художникĕсемпе паллаштарасси; ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) проект мĕнле пулмалли çинчен калаçса татăласси; 2) проекта хакламалли виçесем туса хатĕрлесси; 3) ушкăнсене пайланса кашни ача проект валли мĕнле ĕç тумалли çинчен калаçса татăласси; 4) ушкăнсемпе уроксем хыççăн пуçтарăнса проект туса хатĕрлесси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Критерисем туса хатĕрлени.**

Ачасем вĕрентӳçĕпе пĕрле проектпа мĕнле ĕçлемелли çинчен вĕрентсе каланине вулаççĕ. Пурте пĕрле проекта хакламалли критерисем туса хатĕрлеççĕ.

Критерисем çакăн пек пулма пултараççĕ:

1) проект содержанийĕ:
— художник çинчен кĕскен калани;
— художникăн сăнӳкерчĕкĕ;
— художникăн картинисен репродукцийĕсем;
— художникăн картинисене ăçта курма пулни çинчен калани.

2) материала калăплани:
— куракана ăнланмалла;
— лайăх курăнмалла;
— илемлĕ, куçа илĕртмелле.

3) каласа пани:
— кĕскен;
— ăнланмалла, лайăх дикципе, хытă сасăпа;
— ӳкерчĕксемпе вырăнлă усă курса.

**2. Ушкăнсене пайланни.**

**3. Ушкăнсенче ĕçлени:**

1) материал ăçта тупма пулни çинчен калаçса татăлни;
2) ĕçĕн планне туса хатĕрлени;
3) ушкăнсенче пĕр-пĕрин хушшинче тумалли ĕçе уйăрса илни;
4) пуçтарнă материала мĕнле калăпламалли çинчен калаçса татăлни:
а) электронлă презентаци, альбом, стенд...;
ă) материала суйласа илни;
б) материала вырнаçтарни т. ыт. те.

**4. Калав туса хатĕрлени.**

**5. Каласа пама вĕренни.**

Проекта урокра çеç мар, класс тулашĕнче ĕçлесе те тума тивет. Ачасем кашни хăйне хушнă ĕçе туса çитернĕ хыççăн ушкăнсемпе пухăнса пĕрле тумалли ĕçе пурнăçлаççĕ. Проекта класс тулашĕнче ĕçлесе туса пĕтереççĕ.

## 24-мĕш урок-проект

### Тема: Чăвашсен паллă художникĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** проект туса ĕçлеме вĕрентесси, чăваш художникĕсемпе паллаштарасси; ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) художниксем ҫинчен каласа пама вӗрентесси; 2) проекта илемлӗ, итлекен-куракана ӑнланмалла калӑплама вӗрентесси; 3) кашни ачана туса хатӗрленӗ критерисем тӑрӑх хӑйӗн тата ыттисен ӗҫне хаклама вӗрентесси.

Ачасем хӑйсен проекчӗсене хӳтӗлеҫҫӗ. Кашни ушкӑнӑн ӗҫне туса хатӗрленӗ критерисене пӑхӑнса хаклаҫҫӗ. Вӗрентӳҫӗ кашни ачан ӗҫне хакласа пурне те тивӗҫлӗ паллӑ лартать.

## 25-мӗш урок

### Тема: Сад пахчинчи ҫимӗҫсем

***Урок тӗллевӗ:*** сад пахчинчи ҫимӗҫсем ҫинчен каласа пама вӗрентесси; ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ҫимӗҫӗн паллисене кура ҫимӗҫне тупма вӗрентесси; 2) текста вуласа ӑнланма, ӑна ят пама вӗрентесси; 3) виҫҫӗмӗш сӑпатра панӑ текста пӗрремӗш сӑпатран каласа пама вӗрентесси.

***Урок юхӑмӗ***

**1. Урок темине палӑртни.**

Пӗрремӗш ӗҫре тупмалли юмах евӗр панӑ сӑвва вулаҫҫӗ. Тупмалли юмахӑн тупсӑмне ӳкерчӗкре тупаҫҫӗ. Ытти ҫимӗҫсен ячӗсене калаҫҫӗ. Вӗрентӳҫӗ урок темине калать.

— Паянхи урок теми — «Сад пахчинчи ҫимӗҫсем».

**2. Ҫимӗҫсем ҫинчен пӗрремӗш тата виҫҫӗмӗш сӑпатран каласа пани.**

Сӑвва тепӗр хут вулаҫҫӗ. Унта ҫырла хӑй ҫинчен хӑй каласа панине палӑртаҫҫӗ. Ҫырла ҫинчен кам та пулин каласа парать пулсан мӗнле сӑмахсене тата мӗнле улӑштармаллине тишкереҫҫӗ. Ҫырла ҫинчен виҫҫӗмӗш сӑпатран каласа параҫҫӗ.

Ҫырла питӗ кӑмӑллать
Сар хӗвелӗн ӑшшине,
Ҫу ҫитсен шӑтса тухать
Ҫаран-улӑх таврашне.
Ҫумӑрпа вӑл исленет,
Хӗвелпе вӑл хӗрелет,
Ҫынсене те илӗртет
Тутлӑ, ырӑ пулнипе.

Иккӗмӗш ӗҫе пурнӑҫлаҫҫӗ. Пан улмипе помидор ҫинчен пӗрремӗш тата виҫҫӗмӗш сӑпатран каласа параҫҫӗ.

**3. Текста вуласа ӑнланни.**

Текста вулаççĕ. Содержанине вырăсла каласа параççĕ. Текста ят параççĕ. Сĕннĕ темиçе ятран пĕрне суйласа илсе ĕç тетрадьне çырса хураççĕ. Калавра ваттисен сăмахне тупса ĕç тетрадьне çырса илеççĕ. Калава рольсемпе вулаççĕ.

**4. Текста пĕрремĕш сăпатран каласа пама улăштарни.**

Тăваттăмĕш ĕçе ушкăнсенче тăваççĕ. Ĕçе вĕçленĕ хыççăн пĕр ушкăнĕ хăйсен ĕçне хӳтĕлет. Ыттисем вĕсене тимлĕ итлеççĕ. Вĕсемпе е килĕшеççĕ, е вĕсене хирĕçлеççĕ. Йăнăшсене тӳрлетеççĕ.

**5. Тупмалли юмахсемпе ĕçлени.**

Тупмалли юмахсене вулаççĕ. Вырăсла куçараççĕ. Тупсăмĕсене тупаççĕ.

**6. Улттăмĕш ĕçре панă сăвăпа ĕçлени.**

Сăвăри сăмахсенче кăранташпа пусăм лартса тухаççĕ. Сăвва вулаççĕ. Йăнăшсем пур пулсан тӳрлетеççĕ.

— Макçăм ăçта çырла пуçтарнă?

— *Макçăм пахчара çырла пуçтарнă.*

— Вăл мĕнле çырласем татнă?

— *Макçăм симĕс çырласем татнă.*

— Амăшĕ ăна мĕн каланă? Сăвăра тупса вула.

— *Мĕншĕн халех пуçтаран?*
*Симĕс çырла тутлă мар,*
*Пиçсе çитме ирĕк пар!*

— Макçăм мĕн хуравланă?

Ачасем юлашки куплета вуласа параççĕ.

— Макçăм хуравне пăхмасăр вĕренĕр. Астуса юлнă тăрăх çырма хатĕрленĕр.

**7. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 1—3-мĕш ĕçсене тумалла.

## 26-мĕш урок

### Тема: Тискер чĕр чунсем. Пакша

***Урок тĕллевĕ:*** пакша çинчен каласа пама вĕрентесси; ачасен пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чĕр чунсен ячĕсене аса илесси; 2) илемлĕ литература чĕлхипе çырнă текста вуласа ăнланма, ăна ят пама вĕрентесси; 3) вуланă текстсемпе усă курса пĕчĕк калавсем тума вĕрентесси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Урок темине палăртни.**

Ачасем ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе тăваççĕ.

— Ребус тупсăмĕ — пакша.

— Паян эпир урокра ытларах пакша ҫинчен калаҫăпăр. Урок теми — «Тискер чĕр чунсем. Пакша».

**2. Сас паллисенчен пуҫтарнă сăмахсемпе усă курса предложенисем туни.**

Ачасем ĕҫ тетрадĕнчи 2-мĕш ĕҫе тăваҫҫĕ. Пĕрле шутласа ĕҫлеҫҫĕ. Калаҫса татăлнă хыҫҫăн сăмахсене тата предложенисене тетрадьсене ҫырса хураҫҫĕ. Унтан доска ҫине ҫырса тĕрĕслеҫҫĕ.

— *Йĕкел, вăрман, хӳре, йăва. Пакша вăрманта пурăнать. Унăн хӳри вăрăм. Пакша йĕкел юратать. Унăн йăвинче ҫурисем пур.*

**3. Вуланине итлесе ăнланни.**

Вĕрентӳҫĕ Стихван Шавли ҫырнă «Пакша» сăвва вулать. Ачасем итлеҫҫĕ.

— Пакша ҫинчен кам каласа парать?

— *Пакша илемлĕ. Йывăҫ тăрăх сиккелет. Йăвине кĕрет, каялла тухать. Мăйăр ҫиет.*

— *Пакша ҫăмламас, илемлĕ. Мăйăр шĕкĕлчет. Йывăҫсем тăрăх сикет.*

**4. Ҫĕнĕ сăмахсемпе ĕҫлени.**

Словарь ĕҫне тĕрлĕ майпа йĕркелеме пулать. Ҫак урокра панă сăмахсем — ачасен активлă словарьне кĕмелли сăмахсем, ҫавăнпа вĕсене пур ача та астуса юлтăр тесе тăрăшмалла. Электронлă презентаци туса хатĕрлесен аван. Сăмахсен пĕлтерĕшне уҫса паракан ӳкерчĕксем кăтартса ачасен кăсăкланăвне вăратсан аван пулмалла.

**5. Текстпа ĕҫлени.**

Виҫҫĕмĕш ĕҫре панă текста вĕрентӳҫĕ вулать. Ачасем ăнланма тăрăшаҫҫĕ. Текста лайăхрах ăнланма пулăшас тĕллевпе ҫакăн пек ĕҫлеме юрать:

— Эпĕ вырăсла шухăшсем калăп. Эсир вĕсен куҫарăвĕсене чăвашла текстра тупса вуласа парăр.

— Мы с Мишей принесли из леса запасенные белкой орехи.

— *Эпир вăрмантан Мишăпа пакша мăйăрĕ илсе килтĕмĕр.*

— Сейчас же отнеси обратно.

— *Халех каялла кайса хур.*

— С каким старанием, оказывается, готовятся белки к зиме!

— *Хĕле мĕнле тăрăшса хатĕрленеҫҫĕ иккен пакшасем!*

— ...

Ҫакăн пек ĕҫлесе содержанине лайăх ăнланнă хыҫҫăн ачасем калава ят параҫҫĕ. Тепĕр хут вулаҫҫĕ.

**6. Пакша ҫинчен калав туни.**

Ушкăнсенче ĕҫлесе 4-мĕш ĕҫе пурнăҫлаҫҫĕ. Кашни ушкăнăн калавне итлесе хаклаҫҫĕ.

— Пакша пӗчӗк, ҫӑмламас, илемлӗ чӗр чун. Унӑн хӳри вӑрӑм, ҫемҫе. Вӑл вӑрманта пурӑнать. Йывӑҫ тӑрӑх сиккелет. Йывӑҫ хӑвӑлӗнче йӑва тӑвать. Хӑвӑла хӗлле валли мӑйӑр, кӑмпа, ҫырла пуҫтарать. Пакша мӑйӑрӗ сарӑ, питӗ тутлӑ, анчах ӑна илме юрамасть.

**7. Ытти чӗр чунсем ҫинчен калаҫни.**

Ӗҫ тетрадӗнчи 1-мӗшпе 5-мӗш ӗҫе тӑваҫҫӗ.

**8. Урока пӗтӗмлетни.**

Пӗлӗве хакламалли таблицӑна икӗ критери ҫырса хӑйсен пӗлӗвне хакласҫӗ.

— Пакша ҫинчен каласа пама пӗлетӗп.

*— Чӗр чунсен ячӗсене пӗлетӗп. Вӗсем ҫинчен предложенисем тума пултаратӑп.*

**9. Киле ӗҫ пани.**

Ӗҫ тетрадӗнчи 4-мӗш ӗҫе тумалла.

# 27-мӗш урок

## Тема: Тискер чӗр чунсем. Чӗрӗп

***Урок тӗллевӗ:*** чӗрӗп ҫинчен каласа пама вӗрентесси; ачасен пуплевне пур енлӗ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чӗр чунсен ячӗсене аса илесси; 2) илемлӗ литература чӗлхипе ҫырнӑ текста вуласа ӑнланма, ӑна ят пама вӗрентесси; 3) вуланӑ текстсемпе усӑ курса пӗчӗк калавсем тума вӗрентесси.

***Урок юхӑмӗ***

**1. Урок темине палӑртни.**

Ӗҫ тетрадӗнчи 6-мӗш ӗҫе тӑваҫҫӗ. Тупмалли юмаха вулаҫҫӗ, тупсӑмне тупаҫҫӗ.

— *Чӗрӗп.*

— Урок теми — «Тискер чӗр чунсем. Чӗрӗп».

**2. Текстпа ӗҫлени.**

Пиллӗкмӗш ӗҫре панӑ текста вӗрентӳҫӗ вулать. Ачасем ӑнланма тӑрӑшаҫҫӗ. Иртнӗ урокри пекех, текста лайӑхрах ӑнланма пулӑшас тӗллевпе вӗрентӳҫӗ вырӑсла предложенисем калать, ачасем ҫав предложенисен куҫарӑвӗсене чӑвашла текстра тупса вуласа параҫҫӗ. Ун хыҫҫӑн панӑ ыйтусене хуравлаҫҫӗ. Калав геройӗ Павел Петрович чӗрӗп ҫинчен мӗн каланине тупаҫҫӗ. Ҫырса илеҫҫӗ.

— Чӗрӗп хӑйне валли йӑва хатӗрлет. Чӗрӗпсем ҫанталӑк сивӗтме пуҫласанах, упа евӗр, ҫывӑрма выртаҫҫӗ. Хӗлӗпех ҫывӑраҫҫӗ, нимӗн те ҫимеҫҫӗ. Ҫулла хӑйсен ӑшне хывнӑ ҫупа тӑранса хӗл каҫаҫҫӗ.

**3. Ытти чĕр чунсем çинчен калаçни.**

Шарадăн тупсăмĕсене тупаççĕ.

— *Шăши, пăши.*

— Шăши мĕнле чĕр чун?

— *Шăши айван чĕр чун. Вăл питĕ хăравçă. Шăши шăтăкра пурăнать. Вăл кушакран сыхланать.*

— Пăши мĕнле чĕр чун?

— *Пăши пысăк, вăйлă чĕр чун. Вăл «вăрман патши».*

7-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ. Чĕр чун ячĕсене вĕсене сăнласа панипе çыхăнтарса предложенисем тăваççĕ.

**4. Кашни ачан урокри ĕçне хаклани.**

Таблицăна тепĕр критери çырса хураççĕ. Ун тăрăх хăйсен пĕлĕвне хаклаççĕ.

— *Чĕр чунсем çинчен кĕскен каласа пама пĕлетĕп.*

**5. Киле ĕç пани.**

8-мĕш ĕçе тумалла.

## 28-мĕш урок

### Тема: Кĕрхи вăрманта

***Урок тĕллевĕ:*** кĕрхи вăрман çинчен каласа пама вĕрентесси; ачасен пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) кĕркунне çинчен калаçма кирлĕ сăмахсене аса илсе çирĕплетесси; 2) илемлĕ литература чĕлхипе çырнă текста вуласа ăнланма хăнăхтарасси; 3) вуланă текстсемпе усă курса пĕчĕк калавсем тума вĕрентесси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Урок темине палăртни.**

1) Тупмалли юмахпа ĕçлени.

Вĕрентӳçĕ кĕнекесене 46-мĕш страницăна уçма ыйтать.

— Ӳкерчĕкре мĕн куратăр?

— *Ӳкерчĕкре кайăк.*

— Кайăк çинчен мĕн калама пулать? Вăл мĕнле?

— *Кайăк сăрă чăпар тĕслĕ. Вăл пысăк. Хӳри вăрăм. Кайăк юрлать.*

— Кĕнекере панă сăвă мĕн çинчен-ши?

— *Ман шутпа, сăвă ӳкерчĕк çинчи кайăк çинчен.*

Ачасем сăвăпа кашни хăй тĕллĕн вуласа паллашаççĕ. Унтан пĕр ача ăна сасăпа вуласа парать.

— Ку сăвă çинчен мĕн калама пулать?

— *Ку тупмалли юмах. «Кайăк. Вăрманта пурăнать. Сассипе савăнтарать. Унăн ячĕ мал енчен те, хыçалтан та пĕр пек».*

— Мĕн-ши вăл?

Ачасем кайăксен ячĕсене калаççĕ. Çырса пăхса тĕрĕслеççĕ. Тупмалли юмахăн тупсăмĕ кукук пулнипе килĕшеççĕ.

2) Куккук çинчен калав туни.

Ачасем ушкăнсенче пĕчĕк калавсем тăваççĕ.

— Куккук чылай пысăк кайăк. Унăн хӳри вăрăм, хăй сăрă-чăпар тĕслĕ. Вăрманта пурăнать. Çу уйăхĕнче вăрманта куккук сассине илтме пулать. Вăл ку-ку, ку-ку тесе юрлать.

Вĕрентӳçĕ куккук çинчен, автан çинчен каланă пекех, юрлать тесе мар, авăтать тесе каланине пĕлтерет.

— Апла пулсан, куккук авăтать. Вăл ку-ку, ку-ку тесе авăтать.

3) Вĕçен кайăксен ячĕсене аса илни.

— Тата мĕнле вĕçен кайăксене пĕлетĕр, аса илер-ха.

Ачасем вĕçен кайăксен ячĕсене аса илсе ĕç тетрадьне çырса хураççĕ.

— Эсир асăннă кайăксенчен хăшĕсем кĕркунне пирĕн патран вĕçсе каяççĕ?

— *Чĕкеçсем, шăнкăрчсем, тăрисем, тăрнасем, хур кайăксем, куккуксем.*

— Паян эпир урокра кайăксен кĕркуннехи пурнăçĕ çинчен, кĕрхи вăрман илемĕ çинчен, унти улшăнусем çинчен калаçăпăр.

**2. Г. Харлампьевăн «Тăрнасем» калавĕпе ĕçлени.**

Ачасем вĕрентӳçĕ вуланине итлеççĕ. Мĕн çинчен вуланине кĕскен каласа параççĕ.

— Ку калава кам çырнă?

— *Калава Геннадий Харлампьев çырнă.*

— Геннадий Харлампьев калавра мĕн çинчен каласа парать?

— *Вăл кĕрхи вăрманта сасартăк тăрнасен сассисене илтнĕ. Вĕсем кăнтăралла вĕçсе кайма хатĕрленнĕ. Геннадий Харлампьев тăрнасене алă сулса ăсатса янă.*

— Çак вырăна текстра тупса вуласа парăр, тархасшăн.

Ачасем текстăн иккĕмĕшпе виççĕмĕш абзацĕсене вуласа параççĕ.

— Тăрнасем ăçта çӳренĕ?

— *Тăрнасем вăрманти кӳлĕ хĕрринчи шурлăхра çӳренĕ.*

— Автор тăрнасемпе мĕнле сăмахсемпе сывпуллашать?

— *Тепĕр кĕркунне татах килĕр пирĕн пата! — тесе алă сула-сула сывпуллашать.*

— Герасим Харлампьев кĕрхи куна, вăрмана мĕнла сăнласа панă?

— *Кĕрхи ăшă, ырă кун. Тӳпе уяр, таврара лăпкă, сывлăш таса. Кунĕпех тулта çӳрес килет. Уйрăмах вăрманта питĕ илемлĕ.*

*Ҫӳллӗрех ҫӗрте авалхи хырсем кашлаҫҫӗ, айлӑмра пысӑк мар кӳлӗ пур, ун тавра хӑмӑш ӳсет.*

**3. М. Трубина кӗркуннене сӑнласа ҫырнипе паллашни.**

— Кӗрхи вӑрмана сӑнласа ҫырнӑ тепӗр текст вулар. Ӑна ҫыраканӗ чӑвашсен паллӑ писателӗ Марфа Трубина.

Ачасем текста пӗр хут хӑйсем тӗллӗн вуланӑ хыҫҫӑн пӗр ача сасӑпа вуласа парать.

— Йывӑҫсене автор мӗнле сӑнласа панӑ?

*— Йывӑҫсен ҫулҫисем тӗрлӗ тӗспе куҫа илӗртеҫҫӗ. Ав унта вӗрене сап-сарӑ ларать, ӑвӑс вара хӗрелнӗ, шӗшкӗ хӑмӑрланнӑ. Паланпа улмуҫҫи ҫулҫисем те саралма-хӗрелме тытӑннӑ.*

— Тӳлек ҫанталӑкра йывӑҫ ҫулҫисем мӗнле тӑкӑнаҫҫӗ?

*— Сарӑ, хӗрлӗ, хӑмӑр ҫулҫӑсем тӳлек ҫанталӑкра вӗлтӗртетсе вӗҫсе анаҫҫӗ.*

— Ҫиллӗ ҫанталӑкра йывӑҫ ҫулҫисем мӗнле тӑкӑнаҫҫӗ?

*— Ҫиллӗ ҫанталӑкра темрен хӑранӑ кайӑксем пек пӑлханаҫҫӗ, унталла-кунталла сапаланаҫҫӗ.*

**4. Вуланӑ текстсемпе усӑ курса пуплеме хӑнӑхни.**

1) Диалог туса калаҫни.

Ачасем диалогри (7-мӗш ӗҫ) кашни репликӑна вулаҫҫӗ. Вӗсене хирӗҫ мӗн калама пулни ҫинчен шухӑшлаҫҫӗ. Ун хыҫҫӑн икшерӗн-икшерӗн калаҫаҫҫӗ.

*— Эпӗ кӗрхи вӑрманта ҫӳреме юрататӑп.*

*— Эпӗ те кӗрхи вӑрмана юрататӑп. Сывлӑш таса. Тӗрлӗ тӗслӗ ҫулҫӑсем кавир пек выртаҫҫӗ.*

*— Уйрӑмах тӳлек ҫанталӑкра аван вӑрманта.*

*— Ҫапла, сарӑ, хӗрлӗ, хӑмӑр ҫулҫӑсем туратсем ҫинчен вӗлтӗртетсе вӗҫсе анаҫҫӗ. Пысӑк лӗпӗшсем вӗҫнӗн туйӑнать.*

*— Эпӗ тӗрлӗ йывӑҫ ҫулҫисем пуҫтаратӑп, шӑплӑхпа киленетӗп, ҫут ҫанталӑк илемне сӑнатӑп.*

*— Эпӗ вара кӑмпа татма юрататӑп. Кӗркунне ватӑ йывӑҫсем, тункатасем ҫинче уплюнкка ӳсет, ҫулҫӑсем айӗнче кӑрӑҫсем пытанса лараҫҫӗ.*

2) Панӑ сӑмахсемпе усӑ курса текст туни.

Ачасем 9-мӗш ӗҫре панӑ сӑмахсемпе усӑ курса кӗрхи вӑрман ҫинчен текст тӑваҫҫӗ. Килте класра тунӑ текста ӗҫ тетрачӗсене ҫыраҫҫӗ.

8-мӗшпе 10-мӗш ӗҫсем — хушу ӗҫӗсем. Вӗсене урокра вӑхӑт юлсан класра тума пулать, е кӑмӑл пулсан ачасем килте пурнӑҫлама пултараҫҫӗ.

**5. Киле ӗҫ пани.**

9-мӗш ӗҫе ҫырса пурнӑҫламалла. Кӑткӑсланакан ачасене 6-мӗш ӗҫе пама юрать.

## 29-мĕш урок

### Тема: Урокра

***Урок тĕллевĕ:*** шкул пурнăçĕ çинчен каласа пама вĕрентесси; ачасен пуплевне пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) панă пуçламăшĕпе вĕçĕ тăрăх калав тума вĕрентесси; 2) текста вуласа ăнланма хăнăхтарасси; 3) сăмахсен пулăвĕпе кăткăсланма вĕрентесси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Урок темине палăртни.**

— Паянхи урока валли панă сăвă мĕн ятлă?

— *«Урокра» ятлă.*

— Ӳкерчĕкре мĕн куратăр?

— *Ачасем кĕнеке вулаççĕ. Ман шутпа, вĕсем урок тăваççĕ.*

— Мĕнле шутлатăр, паян урокра эпир мĕн çинчен калаçăпăр-ши?

— *Ман шутпа, вĕренӳ çинчен. Тен, урокри ĕççем çинчен, ачасем килти ĕçсене мĕнле пурнăçлани çинчен. Пĕтĕмлетсе каласан, ачасем мĕнле вĕренни çинчен калаçăпăр.*

— Çапла, паянхи урок теми — «Урокра».

Вĕрентӳçĕ урок темине доска çине çырса хурать.

**2. Сăвă пуçламăшĕпе вĕçĕ тăрăх мĕн пулса иртни çинчен шухăшлани.**

Вĕренекенсем пĕрремĕш ĕçре панă сăввăн пĕрремĕш ярăмне вулаççĕ.

— Ваçça урокра мĕншĕн пуçне чиксе ларнă?

— *Вăл урок вĕренмен, çавăнпа пуçне чиксе ларнă, хăйĕнчен ыйтасран хăранă.*

— Юлашки ярăма вулăр. Унта мĕн çинчен каланă?

Ачасем сăввăн юлашки ярăмне вулаççĕ.

— Сăвă йĕркисене мĕншĕн кавычкăра çырнă-ши?

— *Мĕншĕн тесен вĕсем Ваççан шухăшĕсем.*

— Ваçça мĕн çинчен шутлать?

— *Ваçça вĕренес, уроксене лайăх хатĕрленес тесе шутлать.*

— Ача мĕншĕн килти ĕçсене тума шутланă-ши?

— *Ăна намăс пулнă.*

— Икĕ ярăм хушшинче, сирĕн шутпа, мĕншĕн виçĕ точка ларать?

— *Пĕрремĕш ярăм хыççăн урокра мĕн пулса иртни çинчен каласа панă пулмалла.*

— Эсир мĕнле шухăшлатăр, мĕн пулнă-ши урокра?

*— Тен, вĕрентӳҫĕ Ваҫҫаран киле панă ĕҫе ыйтнă, анчах вăл каласа парайман. Мĕншĕн тесен вăл килте урок вĕренмен.*

— Чăнах та, ҫавăн пек пулнă пулĕ, Ваҫҫана питĕ намăс пулнă, ҫавăнпа вăл уроксене вĕренме шутланă.

**3. «Вăрманта «хуран» ӳсет» текстпа ĕҫлени.**

— Халĕ эпĕ сире тепĕр текст вуласа парăп. Тимлĕ итлĕр. Ăнланма тăрăшăр. Мĕн ăнланнине кĕскен вырăсла каласа парăр. Вĕрентӳҫĕ текста вуласа парать, ачасем содержанине вырăсла каласа параҫҫĕ.

— Коля ҫырнă текстра япала ячĕсене тупса вырăсла куҫарар-ха.

*— Кураксем — грачи, хуран — котел, пăта — гвоздь. Получается, грачи зеленеют; котлы растут; мама варит гвозди.*

— Кольăн йăнăшĕсене тӳрлетер-ха.

*— Кур<u>а</u>ксем — кур<u>ă</u>ксем, хур<u>а</u>н — хур<u>ă</u>н, пăт<u>а</u> — пăт<u>ă</u>.*

Ачасем ҫак сăмахсен пĕлтерĕшне 4-мĕш ĕҫе пурнăҫласа ҫирĕплетеҫҫĕ.

*Ку курăк. Курăк симĕс. Курăк ӳсет.*

*Ку пăтă. Пăтă пиҫет. Пăтă тутлă.*

*Ку пăта. Пăтана тимĕртен тунă. Пăтапа хăма ҫапаҫҫĕ.*

*Ку хурăн. Хурăн симĕс. Хурăн ӳсет.*

*Ку хуран. Хурана шыв яраҫҫĕ. Хуранпа яшка пĕҫереҫҫĕ.*

Ҫакăн пек ĕҫленĕ хыҫҫăн ачасем текста тепĕр хут вулаҫҫĕ. Вĕрентӳҫĕн ыйтăвĕсене хуравлаҫҫĕ.

— Коля малтан мĕнле предметпа урок тунă?

— Унтан мĕнле предметпа урок тума пуҫланă?

— Мĕншĕн Коля чăваш чĕлхипе панă ĕҫе васкаса тунă тесе шутлатăр?

— Кольăна ашшĕ урамран мĕнле сăмахсемпе кĕтсе илнĕ?

— «Уроксене ячĕшĕн пурнăҫлани» тенине вырăсла мĕнле калама пулать?

**4. Антонимсемпе ĕҫлени.**

3-мĕш ĕҫе малтан пурте пĕрле тăваҫҫĕ. Доска ҫине мăшăрласа ҫыраҫҫĕ. Предложенисем тăваҫҫĕ. Чи лайăх предложенисене ĕҫ тетрадьне ҫырса хураҫҫĕ.

Т ĕ с л ĕ х с е м.

Кахал нумай ҫывăрать, ĕҫчен ирех тăрать.

Айван яланах пулăшу кĕтет, маттур пур ĕҫе те хăй тĕллĕн тума тăрăшать.

Тимлĕ пул, тимсĕр ҫырсан йăнăшсем тăвăн. Тирпейлĕ ачан япалисем яланах пĕр вырăнта, тирпейсĕррин вара сапаланса выртаҫҫĕ.

**5. Киле ĕҫ пани.**

5-мĕш ĕҫе пурнăҫламалла.

# 30-мĕш урок

## Тема: Юлташсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пурнăçĕ çинчен каласа пама вĕрентесси; пуплеве пур енлĕ аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ўкерчĕк тăрăх калав тума вĕрентесси; 2) текста вуласа ăнланма хăнăхтарасси; 3) сăмахсен пулăвĕпе кăткăсланма вĕрентесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем ўкерчĕк тăрăх ыйтусене хуравлаççĕ.

— *Ку Миша. Мишăна пăчă, мĕншĕн тесен урамра шăрăх.*

— *Ку Коля. Кольăна сивĕ, мĕншĕн тесен çумăр çăвать.*

— *Ку Толя. Тольăна намăс, мĕншĕн тесен вăл урока ĕлкĕреймен.*

**2. Урок темине палăртни.**

— Канмалли кун ачасем мĕн тăваççĕ?

— *Канмалли кун ачасем кинона, театра каяççĕ, футболла выляççĕ, уçăлса çўреççĕ, вăрмана каяççĕ, тĕрлĕ майлă канаççĕ.*

— Ĕç кунĕсенче мĕн тăваççĕ?

— *Ĕç кунĕсенче ачасем шкулта вĕренеççĕ, киле панă ĕçсене тăваççĕ, кĕнекесем вулаççĕ, кружоксене çўреççĕ.*

— Паянхи урок теми — «Юлташсем». Эпир сирĕнпе ĕç кунĕсенче тата канмалли кунсенче ачасем мĕн туни çинчен каласăпăр.

Вĕрентўçĕ урок темине доска çине çырса хурать.

**3. Ўкерчĕксем тăрăх калав туни.**

8-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ. Ўкерчĕксен айĕнче панă калава вулаççĕ. Калава сăнлакан ўкерчĕке тупаççĕ. Ўкерчĕк тăрăх мĕн вуланине каласа параççĕ. Ытти ўкерчĕксем патне калавсем тăваççĕ.

— Шăмат кунпа вырсарни кун Мишăн уроксем çук. Унăн ашшĕпе амăшĕ те канаççĕ, çавăнпа вĕсем вăрмана кăмпа татма кайма шутларĕç. Вăрманта сывлăш уçă. Юмах тĕнчинчи пек илемлĕ. Йывăççем тĕрлĕ тĕслĕ. Вĕренесем сарă хĕрлĕ тумпа илĕртеççĕ. Юмансен çулçисем симĕс. Вĕсен айĕнче çамрăк ăвăссем кăвар пек курăнса лараççĕ. Кăмпа вара питĕ нумай. Çулçăсем айĕнче кăрăççем пытанса лараççĕ. Тункатасем çинче уплюнккасем ўсеççĕ. Хурăнлăхра хурăн кăмпи, ăвăслăхра ăвăс кăмпи темĕн чухлĕ. Пурте карçинккисене питĕ хăвăрт тултарчĕç, анчах киле кайма васкамарĕç. Вăрман илемĕпе чылайччен киленчĕç.

— Вырсарни кун Сашăпа Антон кинона кайма шутларĕç. Кинотеатрта мультфильм кăтартаççĕ. Ачасем кассăра билет илчĕç те зала кĕчĕç. Кино кăтартакан зал пысăк, креслосем çемçе. Часах

кино пуҫланчӗ. Вӑл Машӑпа Упа ҫинчен. Шухӑ Машӑпа пурӑнма Упана ҫӑмӑл мар, анчах вӑл Машӑна юрататъ. Кино хыҫҫӑн ачасем хулара уҫӑлса ҫӳрерӗҫ, лайӑх кӑмӑлпа киле таврӑнчӗҫ.

**4. Антонимсемпе ӗҫлени.**

Ачасем 6-мӗш ӗҫе пурнӑҫлаҫҫӗ.

*Пӗчӗк — пысӑк. Шӑши пӗчӗк, пӑши пысӑк.*

*Шурӑ — хура. Юр шурӑ, ҫӗр хура.*

*Тӗттӗм — ҫутӑ. Каҫхине тӗттӗм, кӑнтӑрла ҫутӑ.*

*Шӑрӑх — сивӗ. Ҫулла шӑрӑх, хӗлле сивӗ.*

*Хытӑ — ҫемҫе. Пӑр хытӑ, юр ҫемҫе.*

**5. Текстпа ӗҫлени.**

9-мӗш ӗҫре панӑ текста абзацӑн-абзацӑн вуласа куҫараҫҫӗ. Миша йӑнӑш ҫырнӑ сӑмахсене доска ҫине ҫыраҫҫӗ, вӗсемпе юнашар вырӑсла куҫарӑвне ҫырса хураҫҫӗ.

*Анна — Анна, ана — надел (поле); сиввӗн — холодно (со злобой), сивӗн — остывать; юрри — чья-то песня, юри — специально; ӑшшӑн — тепло (с любовью), ӑшӑн — согреться; тӗттӗм — темно, тӗтӗм — дым; ҫула — в дорогу, ҫулла — летом; хутаҫӗ — чей-то мешок, хутаҫҫӗ — топят.*

— Миша мӗншӗн «иккӗ» илнӗ?

— *Миша икӗ пӗр пек хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене йӑнӑш ҫырнӑ.*

— Вуланӑ текста мӗнле ят пама пулать-ши?

— *Пулӑшнӑ. Юлташсем. Каллех «иккӗ».*

— Ҫакӑн пек сӑмахсене тӗрӗс ҫырас тесен мӗн пӗлмелле?

— Сӑмахсен пӗлтерӗшне ӑнланмалла. Тимлӗ итлемелле: икӗ пӗр пек хупӑ сас палли ҫырмалли сӑмахсенче хупӑ сасса пусса калатпӑр, вӑл янӑрамасӑр илтӗнет.

— Эсир ҫакӑн пек сӑмахсене ҫырма пӗлетӗр-и? 10-мӗш ӗҫе пурнӑҫласа тӗрӗслер.

10-мӗш ӗҫе каласа пурнӑҫлаҫҫӗ.

**6. Киле ӗҫ пани.**

10-мӗш ӗҫе ҫырса пурнӑҫламалла.

## 31-мӗш урок

### Тема: Чӑваш Республики

***Урок тӗллевӗ:*** Чӑваш Республики ҫинчен каласа пама вӗрентесси; ачасен пуплевне пур енлӗн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Чӑваш Республикинчи хуласен, юхан шывсен ячӗсене аса илесси; 2) текста вуласа ӑнланма хӑнӑхтарасси; 3) текстпа усӑ курса ыйтусене хуравлама, мӗн вуланине каласа пама вӗрентесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Урок темине палăртни.**

Вĕрентӳçĕ пĕрремĕш ĕçре панă сăвва вулать. Ачасемпе сăвă мĕн çинчен пулнине сӳтсе явать.

— Мĕншĕн сăвăра хăш-пĕр сăмахсене пысăк сас паллинчен çырнă?

— *Вĕсем пайăр ятсем, çавăнпа вĕсене пысăк сас паллинчен çырнă.*

— Пĕрремĕш куплетри сăмахсем мĕн ячĕсем?

— *Атăл, Сăр, Çавал, Пăла — юхан шыв ячĕсем.*

— Вăрманкас, Хырпуç, Турхан мĕн ячĕсем?

— *Вĕсем ял ячĕсем.*

— Шупашкар, Çĕрпӳ, Канаш мĕн ячĕсем?

— *Хула ячĕсем.*

— Сăвă ятне тепĕр хут вулăр-ха. Вăл вырăсла мĕнле куçать-ши?

— *Чăваш Ен — Чувашия, Чувашский край.*

— Паянхи урок теми — «Чăваш Республики». Эпир паян Чăваш Республикин карттипе паллашăпăр. Республикăри хуласен, районсен, юхан шывсен ячĕсене астуса юлăпăр.

**2. Текстпа ĕçлени.**

1) Ачасем текста пĕрремĕш хут харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ. Ун хыççăн вĕрентӳçĕ текстăн пĕрремĕш абзацне вулать. Вуланă май мĕн каланине карттă çинче кăтартса пырать.

2) Иккĕмĕш абзаца пĕр-пĕр ача вулать, ыттисем мĕн вуланине вырăсла каласа карттă çинче кăтартаççĕ.

3) Вĕрентӳçĕ виççĕмĕш абзаца карттă çинче кăтартса вулать. Ачасем хула ячĕсене вырăсла куçарса карттă çинче кăтартаççĕ.

4) Вĕрентӳçĕ ачасене Атăл çинчен калакан абзаца тупса вулама ыйтать, вырăсла каласа пама хушать.

5) Текст патне панă 1—3-мĕш ыйтусене карттă çинче кăтартса хуравлаççĕ.

**3. Хула, административлă район, юхан шывсен ячĕсене астуса юлассипе ĕçлени.**

1) Ушкăнсенче ĕçлени.

Кашни ушкăнăн виçĕ хут листи. Вĕсем çинче 5-мĕш ĕçре панă сăмахсем. Ачасем сăмахсене вырăсла куçараççĕ. Кашни юпана кирлĕ сăмахсем хушса çыраççĕ. Тĕрĕсленĕ чух кашни ушкăн пĕр листа çинче çырса хатĕрленĕ сăмахсене вуласа карттă çинче кăтартать. Ытти ушкăнсем вĕсемпе е килĕшеççĕ, е мĕн калани çумне хăйсен сăмахĕсене хушаççĕ.

2) Ĕç тетрадĕнчи 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

— Район центрĕсен ячĕсене карттă çине чăвашла куçарса çыраççĕ.

— Административлă районсен ячĕсене çырса тухаççĕ.

— Аслашшĕпе асламăшĕ, кукашшĕпе кукамăшĕ ăçта пурăнни çинчен çырса хуравлаççĕ.

**4. Диалогпа ĕçлени.**

Ачасем диалога рольсемпе вулаççĕ.

— Диалога вуласа мĕн пĕлтĕр?

*— Улатăр хули çинчен пĕлтĕмĕр. Вăл илемлĕ хула. Унта авалхи çуртсем нумай.*

*— Сĕнтĕрвăрри çинчен пĕлтĕмĕр. Вăл Атăл çинче вырнаçнă. Çыран хĕрринчен Атăл питĕ мăнаçлăн курăнать. Хулара музейсем пур.*

— Чăваш Республикинче Атăлсăр пуçне пĕчĕк юхан шывсем пур. Вĕсенчен пысăкраххи Сăр шывĕ. Ун тăрăх кимĕпе ишме пулать. Сăр Атăла юхса кĕрет. Çавал, Пăла, Кĕтне, Энĕш шывĕсем шăрăх çанталăкра пĕчĕкленсех лараççĕ.

**5. Урока пĕтĕмлетни.**

— Çапла вара, эпир паян Чăваш Ен çинчен калаçрăмăр. Мĕн вĕреннине пĕтĕмлетсе çирĕплетме 6-мĕш ĕçе пурнăçлар.

Ачасем карттăпа усă курса сиктерсе хăварнă вырăнсене тултарса калав тăваççĕ.

**6. Киле ĕç пани.**

1) 3-мĕшпе 7-мĕш ĕçсенче панă текстсене вуламалла. Чăваш Республики çинчен кĕскен каласа пама пĕлмелле.

2) 4-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

## 32-мĕш урок

### Тема: Чăваш Ен

***Урок тĕллевĕ:*** чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пурнăçĕпе паллаштарасси; ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пурнăçĕпе паллаштарасси; 2) текста вуласа ăнланма хăнăхтарасси; 3) текстпа усă курса ыйтусене хуравлама, мĕн вуланине каласа пама вĕрентесси; 4) *-лă(-лĕ)* аффикс хушăнса пулнă сăмахсен пĕлтерĕшĕпе паллаштарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Урок темине палăртни.**

Вĕрентӳçĕ киле панă ĕçе тĕрĕслет.

— Пирĕн вăрмансенче мĕнле йывăçсем ӳсеççĕ?

*— Пирĕн вăрмансенче хурăн, юман, вĕрене, ăвăс, хыр, чăрăш ӳсеççĕ.*

— Мĕнле чĕр чунсем пурăнаççĕ?

*— Вăрмансенче мулкачсем, тилĕсем, пăшисем, упасем, кашкăрсем, пакшасем, арлансем пурăнаççĕ.*

— Паян эпир Чăваш çĕршывĕ çинчен малалла калаçăпăр. Чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçĕпе паллашăпăр.

Вĕрентÿçĕ доска çине урок темине çырса хурать.

**2. Вуласа панине итлени, ăнланни.**

Вĕрентÿçĕ 1-мĕш ĕçре панă сăвва вулать. Ачасем итлеççĕ, мĕн ăнланнине вырăсла каласа параççĕ.

— Чăваш çынни хăйĕн халăхне салам калать. Чăваш çыннине мухтать, халăха çутта кăларнă Иван Яковлева аса илет.

— Сăвва лайăххрах ăнланма словарьте панă мĕнле сăмахсем пулăшаççĕ?

*— Сăпка, ентеш, сиктерет, халăх, айван, харсăр, ăс-тăн.*

— Чăваш халăхне поэт мĕнле сăмахсемпе саламлать?

*— Ман сăпкана сиктернĕ халăх, ывăлунтан пин хут салам! (Народ, качавший мою колыбель, тысячу раз тебе привет от сына!)*

— Как хвалит поэт свой народ?

*— Пулман чăваш çыннийĕ халсăр, ăс-тăн енчен пулман айван. (Не был чувашский народ слабым, и не был он наивным.)*

Ачасем сăвва тĕрĕс интонаципе вĕрентÿçĕпе пĕрле хорпа вулаççĕ.

**3. Чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен калаçни.**

Ачасем 3-мĕш ĕçре панă текста вулаççĕ. Текст содержанийĕ тăрăх калаçаççĕ.

— Текста вуласа мĕн пĕлтĕр?

*— Чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен пĕлтĕмĕр. Вĕсен пурнăçĕ йывăр пулнă.*

— Каççерен хресченсем пÿлĕмре мĕнле çутă çутнă?

*— Хресченсем юман вуттинчен чĕлнĕ хăйă çутнă. Хăйă çуннипе пÿрте тĕтĕм тухса тулнă.*

— Тăваттăмĕш ĕçре ÿкерсе панă хатĕрсенчен хăшĕн çинчен текстра çырса кăтартнă?

*— Хăй чикки (светец) çинчен.*

— Хăй чиккин тимĕртен тунă çÿлти пайне çунакан хăййа тытса тăма усă курнă. Унăн валашкине вĕри шыв янă. Валашкари шыв пĕрре хăйă çинчен ÿкекен кăмрăксене сÿнтерме май панă, тепре хăйăран ÿкекен çутта тĕкĕр пек каялла парса пÿлĕме лайăххрах çутатма пулăшнă.

Ачасем ÿкерсе кăтартнă ытти хатĕрсене сăнаççĕ. Вĕсен ячĕсене чăвашла тата вырăсла вулаççĕ. Çак япаласене музейсенче е ялта хăйсен аслашшĕ-асламăшĕ патĕнче курни çинчен каласа параççĕ.

— Сăпкапа мĕнле усă курнă-ши чăвашсем?

— *Сăпкара пĕчĕк ачасене сиктернĕ. Вăл ачан çывăрмалли вырăнĕ пулнă.*

— Çапла, сăпка пĕчĕк ачан вырăнĕ пулнă. Ăна çăка хуппинчен тунă. Маччаран çакнă. Пĕчĕк пепке сăпкара хăйне питĕ лайăх туйнă.

— Кĕнчелепе, калăппа мĕнле усă курнă-ши?

— Кĕнчелепе усă курса сурăх е качака çăмĕнчен çип арланă. Çав çипрен чăлха, тĕрлĕрен тумтир çыхнă. Çăма кĕнчелен çӳлти пайĕнчен çыхса хунă. Кĕнчелене сак е пукан çине лартнă. Арлаканĕ кĕнчелен аялти пайĕ çине ларнă та çăма пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн туртса кăларса йĕкепе çавăрса пĕтĕрнĕ. Сирĕн шутпа, кĕнчелепе хĕрарăмсем е арçынсем ĕçленĕ?

— *Хĕрарăмсем кĕнчеле арланă. Арçынсем вара çăпата тунă.*

— Çăпата тунă чух мĕнле хатĕрсемпе усă курнă?

— *Калăппа усă курнă. Калăп çăпатана тĕрĕс калăплама май панă.*

— Çăпатана мĕнрен тунă-ши?

— *Çăка хуппинчен.*

— Çак хатĕрсемпе чăвашсем çеç усă курнă-ши, е ытти халăхсем те çак хатĕрсемпех усă курнă?

— *Пур халăхсем те ялсенче çакăн пекех пурăннă пулĕ. Мĕншĕн тесен электричество çути пулман, коляскăсем сутман; тумтире те, атă-пушмака та хресченсем килте çĕленĕ.*

— Паллах, хресченсен пурнăçĕ çăмăл пулман. Пурнăçра мĕн кирлĕ — пур хатĕре те вĕсем хăйсен аллисемпе тунă. Вĕсен ĕçсĕр ларма вăхăт пулман. Тепĕр енчен, вĕсем çут çанталăкăн экологи енчен таса хатĕрĕсемпе çеç усă курнă.

— Хĕллехи вăрăм каçсенче хĕрарăмсем мĕн тунă? Текстра ун çинчен мĕн каланă? Тупса вулăр.

— Арçынсем мĕн тунă?

— *Арçынсем çăпата тунă е хуçалăхра кирлĕ тĕрлĕ япала ăсталанă.*

— Ĕç тетрадьне 32-мĕш страницăна уçар-ха. Кунта чăвашсем тăхăннă тумтире ӳкерсе кăтартнă. Ăна хĕрарăмсем хăйсен аллипе тунă. Кашни хĕрарăмăн çакăн пек пуян, илемлĕ тум пулнă. Хĕр ачасене 6—7 çула çитсенех тĕрлеме, çĕлеме вĕрентнĕ. Хĕр пулса çитĕннĕ çĕре вĕсен хăйсем валли те, пулас упăшкисем валли те çакăн пек илемлĕ тумтир туса хатĕрлемелле пулнă.

Ачасем ĕç тетрадĕнчи 3-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлаççĕ.

— Эсĕ тĕрлеме, çыхма пĕлетĕн-и?

Ачасем хуравлаççĕ.

**4. Паллă ячĕн пулăвне, унăн тĕрлĕ формисене аса илни.**

1) 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.

Ачасем диалога вулаççĕ.

— Диалогра мĕнле паллă ячĕсем тĕл пулчĕç?
— *Хитре — хитререх, чи хитре.*
— Вĕсене вырăсла куçарăр.
— *Красивый, красивее, самый красивый.*
— Танлаштару степенĕ мĕнле пулать?
— ***-рах (-рех)*** *аффикс хушăннипе.*
— Вăйлă степень мĕнле пулать?
— ***Чи*** *сăмах хушнипе.*
Ытти диалогсене тĕслĕхре пана пек хушса вулаççĕ.
— Ку манăн ӳкерчĕк.
— Мĕнле илемлĕ ӳкерчĕк.
— Санăн ӳкерчĕкӳ илемлĕрех.
— Костьăн чи илемлĕ ӳкерчĕк.

— Акă манăн велосипед.
— Мĕнле лайăх велосипед.
— Санăн велосипеду лайăхрах.
— Мишăн чи лайăх велосипед.
2) Япала паллине палăртма усă куракан сăмахсене сăнани.
3) Ачасем ушкăнсенче ĕçлеççĕ. Ыйтусене хуравласа япала паллине палăртма усă куракан сăмахсем мĕнле майпа пулни çинчен пĕтĕмлетӳ тăваççĕ. Хăйсем тунă пĕтĕмлетĕве кĕнекери правилăпа тĕрĕслеççĕ.
**5. Киле ĕç пани.**
1) 3-мĕш ĕçре панă текста вуламалла.
2) Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе çырса пурнăçламалла.

## 33-мĕш урок

### Тема: Чăваш Ен

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш Республикинчи шыв-шур, ял-хула ячĕсемпе усă курса ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Чăваш Республикинчи шывсен ячĕсене çирĕплетесси; 2) хуласен ячĕсене астуса юлса карттă çинче кăтартма вĕрентесси; 3) текста вуласа ăнланма хăнăхтарасси; мĕн вуланине каласа пама вĕрентесси; 4) çырса илме, диктант çырма вĕрентесси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Урок темине палăртни.**
59-мĕш страницăра панă сăввăн пĕрремĕш куплетне тепĕр хут вулаççĕ. Ăна пăхмасăр вĕренеççĕ.
— Паян эпир Чăваш çĕршывĕ çинчен малалла калаçăпăр.

**2. Текста вуласа каласа пани.**

1) Ачасем 10-мĕш ĕçре панă текста вулаççĕ. Вĕрентӳçĕ вырăсла калакан шухăшсене текстра тупса вуласа параççĕ.

— Чебоксары сегодня — это большой, красивый, чистый город.

— Дети летом в реках купаются, ловят рыбу.

— Она богата лугами и лесами.

— Растет, цветет любимый чувашский край!

— Что только не производят здесь: ткани, обувь, одежду, мебель, большие тракторы.

2) Текста каласа пама хатĕрленни.

— Пĕрремĕш абзац мĕн çинчен?

— *Чăваш Республикинчи çут çанталăк çинчен.*

Пĕрремĕш абзаца вулаççĕ. Каласа параççĕ.

— Иккĕмĕш абзац мĕн çинчен?

— *Чăваш Республикинчи юхан шывсем çинчен.*

Иккĕмĕш абзаца вулаççĕ. Юхан шывсен ячĕсене вырăсла куçараççĕ. Карттă çинче тупаççĕ. Ячĕсене астуса юлаççĕ. Абзацăн содержанине каласа параççĕ.

— Виççĕмĕш абзац мĕн çинчен?

— *Республикăн тĕп хули — Шупашкар çинчен.*

Виççĕмĕш абзаца вулаççĕ. Каласа параççĕ.

— Тăваттăмĕш абзацра мĕн çинчен каланă?

— *Кунта республикăри хуласене асăнса тухнă.*

Тăваттăмĕш абзаца вулаççĕ. Хуласен ячĕсене вырăсла куçараççĕ. Карттă çинче тупаççĕ. Ячĕсене астуса юлаççĕ. Абзацăн содержанине каласа параççĕ.

3) Текста каласа пани.

Текста тепĕр хут вулаççĕ, каласа параççĕ.

**3. Диктант çырни.**

Иккĕмĕш абзаца тепĕр хут вулаççĕ. Йăнăш тума пултаракан вырăнсене палăртаççĕ. Вĕрентӳçĕ вуланă тăрăх диктант çыраççĕ. Тетрадьсемпе улшăнса кĕнекесене уçса пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслеççĕ.

**4. Киле ĕç пани.**

1) Текстран юлашки виçĕ абзаца çырса илмелле.

2) Сăввăн пĕрремĕш куплетне пăхмасăр çырма вĕренмелле.

## 34-мĕш урок

### Тема: Тăван çĕршыв

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш Республики çинчен вуланă материалпа усă курса ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Чăваш Республикин символĕсем çинчен

аса илсе калаҫасси; 2) чăваш нацин хăш-пĕр уйрăмлăхĕсемпе паллаштарасси; 3) чăваш вăрманĕ ҫинчен калаҫтарасси; 4) текста вуласа ăнланма хăнăхтарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Урок темине палăртни.**

1) Аудировани.

Вĕрентӳҫĕ сăвă вулать. Ачасем вăл мĕн ҫинчен пулнине вырăсла каласа параҫҫĕ.

2) Сăвă содержанийĕ тăрăх калаҫни.

— Сăввăн хăш йĕркисем ӳкерчĕкпе ҫыхăннă?

*Сăрт хыҫĕнчен хĕвел тухать,*
*Шăнкăртатса ҫырма юхать.*
*Ирех юрлаҫ сар кайăксем.*
*Илемлĕ ҫĕршыв.*

— Паян урок теми мĕнле-ши?

Ачасем хăйсен шухăшĕсене калаҫҫĕ.

— *Урок теми — «Тăван ҫĕршыв».*

**2. Республикăн символĕсене аса илни.**

2-мĕш ĕҫе пурнăҫлаҫҫĕ. Ака уйăхĕн 29-мĕшĕ Чăваш патшалăх символĕсен кунĕ пулни ҫинчен каласа хăвараҫҫĕ. Ялавпа герб авторĕсене аса илеҫҫĕ.

**3. «Пирĕн тăван ҫĕршыв» текстпа ĕҫлени.**

1) Текстпа паллашни.

Пĕрремĕш хут текста вĕрентӳҫĕ е лайăх вулакан ача вулать.

— Ку текст мĕн ҫинчен?

Ачасем мĕн ăнланнине вырăсла каласа параҫҫĕ. Ун хыҫҫăн вĕрентӳҫĕ вырăсла калакан шухăшсене текстра тупса вуласа параҫҫĕ.

— Русский народ Волгу ласково называет матушкой, а чувашский народ — батюшкой.

— Чувашский народ дуб называет дубом-батюшкой, потому что дуб — могучее крепкое дерево.

— Липу же из-за мягкой древесины называет липой-матушкой.

— Белую березу за ее красоту называет невестой.

— Чуваши живут между Сурой и Свиягой, там, где Волга берет направление (заворачивает) на юг.

2) Текстăн содержанине каласа пама хатĕрленни.

Кашни абзаца вулаҫҫĕ. Вуланă абзац текст хыҫҫăн панă ыйтусенчен хăшне хуравлама пулăшнине тупса палăртаҫҫĕ. Текст содержанийĕ тăрăх кĕнекере панă ыйтусемсĕр пуҫне тата мĕнле ыйтусем лартма пулни ҫинчен калаҫаҫҫĕ. Унтан абзац содержа-

нине каласа параççĕ. Сăмахран, пĕрремĕш абзацпа çакăн пек ĕçлеме пулать:

— Катя, пĕрремĕш абзаца вуласа пар.

— Çак абзацра текст хыççăн панă хăш ыйтăвăн хуравĕ пур?

*— Пĕрремĕш ыйтăвăн. Чăвашсем Атăл кăнтăралла пăрăннă çĕрте, Сăрпа Сĕве шывĕсем хушшинче, пурăнаççĕ.*

— Тата мĕнле ыйтусем пама пулать-ши çак абзацăн содержанийĕ тăрăх?

*— Вырăссем Атăла мĕнле чĕнеççĕ?*

*— Вырăссем Атăла анне тесе чĕнеççĕ.*

*— Чăвашсем вара ку юхан шыва мĕнле чĕнеççĕ?*

*— Чăвашсем ку юхан шыва мĕншĕн атте теççĕ?*

— Абзацри юлашки предложенире чăвашсем çинчен мĕн каланă?

*— Чăвашсем тăван çĕрне, юхан шывĕсене, уй-хирне, ту-сăртне юратаççĕ.*

— Кам çак абзацăн содержанине каласа парасшăн?

Пĕр-икĕ ача абзац содержанине каласа парать.

**4. Йывăççен ячĕсене аса илни.**

— Пирĕн таврара вăрмансем нумай. Вăрмансенче тĕрлĕ йывăç ӳсет. Вĕсен ячĕсене аса илер-ха.

Ачасем 4-мĕш ĕçе ĕç тетрадĕнче пурнăçлаççĕ.

— Шупашкар урамĕсенче çак йывăççенчен хăшĕсем ытларах тĕл пулаççĕ?

*— Çăка, чăрăш, хурăн, пилеш йывăççисем.*

— Çапла, Шупашкарта çул хĕррисемпе çăкасем ӳсеççĕ. Парксенче, администраци çурчĕсен умĕнче чăрăшсем лараççĕ. Çынсем пурăнакан çуртсем умĕнче, картишсенче пилешсем, хурăнсем, вĕренесем, çĕмĕрт йывăççисем лартма юратаççĕ пирĕн хулара. Кам сăнанă, чăваш ялĕсенче ытларах мĕнле йывăççем тĕл пулаççĕ?

Ачасем хуравлаççĕ. Вĕрентӳçĕ пĕтĕмлетет.

— Чăваш ялĕсенче урамсене йăмра лартма юратаççĕ. Йăмра — чăваш ялĕн хăйне майлă символĕ.

**5. «Чăваш вăрманĕ» текстпа ĕçлени.**

1) Текста вулаççĕ, содержанине вырăсла каласа параççĕ. Ку ĕçĕн тĕллевĕ — ачасене тăван тавралăхпа, унăн историйĕпе паллаштарасси.

2) 6-мĕш ĕçе мĕнле пурнăçламаллине каласа параççĕ, килте çырса пурнăçлаççĕ.

— Ку калавра ***-лă (-лĕ)*** аффикспа пулнă сăмахсем иккĕ: *хаклă, çулçăллă*. Вĕсем япала ячĕсенчен пулнă: *хак (цена) — хаклă (ценный); çулçă (лист) — çулçăллă (лиственный)*. Килте икĕ предложени çырса илетпĕр.

3) 7-мĕш ĕçе мĕнле пурнăçламаллине каласа параççĕ, килте çырса пурнăçлаççĕ.

— Тĕслĕхре панă предложенисĕр пуçне калавра тата икĕ предложенире хисеп ячĕсем пур. Çав предложенисене тупса вулăр.

*— Вăл час çĕрмест, (мĕн вăхăт хушши) темиçе çĕр çул хушши çирĕппĕн ларать.*

*— Чăваш вăрманĕн пысăк пахалăхне (миçемĕш?) Пĕрремĕш Петĕр вăхăтĕнче асăрханă.*

**6. Хисеп ячĕсен чăваш чĕлхинчи уйрăмлăхĕсене аса илни.**

1) Ушкăнсенче 2—3 минут хушшинче хисеп ячĕсене уйрăм тата ытти сăмахсемпе мĕнле усă курмаллине аса илеççĕ. Схема туса ăнлантараççĕ.

2) 9-мĕш ĕçе пĕрле калаçса тăваççĕ. Пĕр ача ăнлантарса доска умĕнче ĕçлет, ыттисем ĕç тетрачĕсене çыраççĕ.

**7. Киле ĕç пани.**

1) 6-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене çырса пурнăçламалла.

2) «Пирĕн тăван çĕршыв» текста каласа пама пĕлмелле.

## 35-мĕш урок

### Тема: Чăвашсен тĕп хули

***Урок тĕллевĕ:*** «Чăвашсен тĕп хули» темăпа ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Шупашкарăн историйĕпе кĕскен паллаштарасси; 2) Шупашкартан тухнă, хулара пулса курнă хăш-пĕр паллă çынсем çинчен каласа пама вĕрентесси; 3) текста вуласа ăнланма хăнăхтарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Сăвва илемлĕ вулама хатĕрленни.**

Ачасем сăвă содержанийĕпе хăйсем тĕллĕн вуласа паллашаççĕ. Вĕрентӳçĕ ыйтать:

— Амăшне ача мĕнле ыйту парать?

*— Чи тутли мĕскер?*

— Амăшĕ мĕнле хуравлать?

*— Чи тутли чăваш çăкăрĕ.*

— Чечекпе шăнкăрчран мĕн ыйтать?

*— Чи хитри мĕскер?*

— Вĕсемшĕн чи хитри мĕскер?

*— Чечекшĕн — чăваш тĕрри, шăнкăрчшăн — чăваш юрри.*

— Мĕн каласшăн пулнă автор çак сăвăпа?

Ачасем вырăсла хăйсен шухăшне калаççĕ. Вĕрентӳçĕ пĕтĕмлетет.

— Тăван çĕршыв, çуралса ӳснĕ вырăн çыншăн çĕр çинчи чи хаклă кĕтес. Тăван çĕрĕн çăкăрĕ те тутлăрах, сывлăшĕ те сиплĕрех, шывĕ те сĕткен пек, юрри-ташши те, йăли-йĕрки те паха, çывăх.

Ачасем вĕрентӳçĕпе пĕрле сăвва мĕнле интонаципе вуламаллине, хăш сăмахсене уйăрса, пусарах каламаллине, сасса мĕнле улăштармаллине сӳтсе явaççĕ. Калаçса татăлнă пек темиçе хут вулаççĕ. Кашнин вулавне хаклаççĕ.

**2. Урок темине палăртни.**

Вĕрентӳçĕ 35-мĕш, 36-мĕш уроксен страницисене уçса пăхма сĕнет. Урок валли панă фотоӳкерчĕксем, текст тăрăх ачасене урок темине лартма ыйтать. Ачасем мĕн каланине пĕтĕмлетсе урок темине доска çине çырса хурать.

— Çапла вара, урок теми — «Чăвашсен тĕп хули».

Геннадий Никандрович Волков чăвашсен тĕп хули çинчен мĕн çырса панă-ха? Эпĕ вулатăп, эсир тимлĕ итлесе ăнланма тăрăшăр.

**3. Текстпа ĕçлени.**

1) Ăнланнине вырăсла каласа пани.

Текста вĕрентӳçĕ вуланине итленĕ хыççăн ачасем мĕн ăнланнине вырăсла каласа параççĕ. Ачасем вуланине йăлтах ăнланмасан та пултараççĕ, ун пек чухне, текста тĕплĕнрех ăнланма пулăшас тĕллевпе, çакăн пек ĕçлеме пулать. Вĕрентӳçĕ текстри кашни микротемăн тĕп шухăшне вырăсла калать. Çав шухăша ачасене текстра тупса чăвашла вуласа пама ыйтать.

2) Текста абзацăн-абзацăн вулани.

Кашни абзаца вуласа сӳтсе яваççĕ. Вĕрентӳçĕ кашни абзацăн содержанине урăх фактсем хушса пуянлатма пултарать. Сăмахран, Шупашкар çуралнă çула 1469 çул тесе йышăннă. Çак çулта вырăссен летописçĕнче Шупашкар çинчен пĕрремĕш хут çырса хунă. Çапах та Шупашкар хули унччен нумай малтан пулса кайнă. Кунта вырăссем килсе куриччен ĕмĕрсем хушши чăвашсем пурăннă. Е тата: «Шупашкарта пысăк заводсем нумай», — тесе вулатпăр. Кун хыççăн хулара мĕнле заводсем пурри çинчен, вĕсем мĕн кăларни çинчен калаçни вырăнлă. Çакăн пек кашни абзацпах ĕçлеме пулать.

3) Текст содержанийĕ тăрăх ыйтусене хуравлани.

Кĕнекере панă 3-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ.

**4. Словарь ĕçĕ.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе кашни ача хăй тĕллĕн пурнăçлать. Доска çинче панă ĕлке тăрăх тетрадьсене пĕр-пĕрин хушшинче улăштарса хăйсен ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ.

**5. Киле ĕç пани.**

1) Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

2) 5-мĕш ĕçре панă ваттисен сăмахĕсене вĕренмелле.

Асăрхаттарни. Ваттисен сăмахĕсене класра вуламалла. Вĕсен пĕлтерĕшне тишкермелле. Хулара мĕнле палăксем пурри ҫинчен, ун ҫинчен мĕнле ҫырса хумалли ҫинчен сӳтсе явмалла. Ун хыҫҫăн ҫеҫ киле ĕҫ памалла.

## 36-мĕш урок

### Тема: Чăвашсен тĕп хули

***Урок тĕллевĕ:*** Шупашкар ҫинчен ҫырнине вуласа ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Шупашкарăн историйĕпе кĕскен паллаштарасси; 2) Шупашкарти палăксемпе, паллă ҫынсемпе паллаштарасси; вĕсем ҫинчен каласа пама хăнăхтарасси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕҫе тĕрĕслени.**

Ĕҫ тетрадĕнче килте пăхмасăр вĕреннĕ ваттисен сăмахĕсене ҫыраҫҫĕ, пĕр-пĕринпе тетрадьсене улăштарса кĕнеке тăрăх хăйсен ĕҫĕсене тĕрĕслеҫҫĕ.

Иккĕмĕш ĕҫе ачасем вуласа параҫҫĕ.

**2. Урок темине палăртни.**

— Ваттисен сăмахĕсене вĕреннисĕр пуҫне килте сирĕн Шупашкарта мĕнле палăксем пурри ҫинчен ҫырмалла пулнă.

— *Шупашкарта Мухтав монуменчĕ, Хӳтĕлевҫĕ анне, А.Г. Николаев, Ю.А. Гагарин, В.И. Чапаев, И.Я. Яковлев, К.В. Иванов, Г.Н. Волков, Святитель Гурий, Н.Я. Бичурин, А.М. Горький палăкĕсем, Ҫеҫпĕл Мишшин, Петĕр Хусанкайăн, П.П. Егоровăн, А.Н. Крыловăн, С.П. Королевăн, С.Н. Федоровăн бюсчĕсем пур.*

— Ҫапла, пирĕн тĕп хулара палăксем, тĕрлĕ паллă ҫынсем нумай. Паян эпир урокра ҫакăн ҫинчен тĕплĕнрех калаҫăпăр. Урок теми — «Чăвашсен тĕп хули».

**3. Вĕрентӳҫĕ сăмахĕ.**

— Шупашкар историйĕ Атăл хĕрринче вырнаҫнă Владимир тăвĕнчен пуҫланать. Кунта 16-мĕш ĕмĕр варринче Хаяр Иван патша хушнипе Гурий архиепископ хула вырăнне тур шывĕ сапса тасатнă. Ҫак вырăнта чиркӳсем, мăнастирсем тума тытăннă, кремль туса лартнă. Хулари чи кивĕ урам — Константин Иванов урамĕ. Ĕлĕк ку урама Собор тăвĕ тенĕ. Ку урамра Иккĕмĕш Екатерина патша, А.С. Пушкин, Г.Р. Державин тата ытти паллă ҫынсем пулса курнă. Ҫак урампах тĕрлĕ вăхăтсенче Ҫĕпĕре ссылкăна янă ҫынсен — каторжниксен, декабристсен, революционерсен ҫулĕ иртсе кайнă.

Вĕрентӳçĕ ĕлĕкхи çуртсен фотоӳкерчĕкĕсене кăтартса вĕсем çинчен каласа пама пултарать.

**4. Кĕнекере панă фотоӳкерчĕксемпе ĕçлени.**

— Шупашкарта тĕрлĕрен музейсем пур. Эсир вĕсенчен хăшĕсене пĕлетĕр?

— *Чăваш наци музейĕ, Чапаев музейĕ, Çар Мухтавĕн музейĕ, Çеçпĕл Мишши музейĕ, К.В. Иванов ячĕллĕ литература музейĕ, Чăваш тĕррин музейĕ, Ӳнер музейĕ, Пушар музейĕ, Трактор историйĕн музейĕ, Ӳнер галерейи.*

— Вĕсенчен чи пысăкки — Чăваш наци музейĕ. Кĕнекери фотоӳкерчĕксем хушшинче çак музей вырнаçнă çурта тупăр.

Ачасем ӳкерчĕке тупса кăтартаççĕ. Ку музей çинчен мĕн пĕлнине каласа параççĕ. Вырăсла каланă шухăшсене пĕрле чăвашла куçарса калаççĕ.

— Пирĕн тĕп хулара мĕнле театрсем пур?

— *Оперăпа балет театрĕ, Чăваш патшалăх академи драма театрĕ, Вырăс патшалăх драма театрĕ, Камерлă театр, Чăваш патшалăх пукане театрĕ, Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ.*

Кĕнекере театрсен ӳкерчĕкĕсене тупаççĕ. Вĕсем хулара хăш урамра вырнаçни, унта мĕнле спектакльсем курма пулни çинчен калаçаççĕ. Ытти театрсенче пулса курни çинчен каласа параççĕ.

Çавăн пекех библиотекăсем çинчен, хулари палăксем çинчен калаçаççĕ.

**5. Панă диалога репликăсем хушса калаçни.**

Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ. Диалогра панă хуравсем патне ыйтусем çыраççĕ. Кашни ыйту валли ыйту-сăмахсем суйлаççĕ. Глаголсене мĕнле местоименисемпе çыхăнтармаллине тишкереççĕ.

— Эсĕ ăçта пурăнатăн? Шупашкар мĕнле хула? Хулара мĕнсем пур? Эсĕ музейсене, театрсене çӳретĕн-и?

**6. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

## 37-мĕш урок

### Тема: Авалхи хуласем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; Чăваш çĕршывĕн авалхи хулисемпе паллаштарасси.

***Урок задачисем:*** 1) ăшра вулама, вуланине ăнланма хăнăхтарасси; 2) Чăваш çĕршывĕнчи авалхи хуласем çинчен каласа пама вĕрентесси; 3) Чăваш çĕршывĕнчи хуласем çинчен проект çырма хатĕрлесси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсен ӳкерчĕкĕсене кăтартаççĕ, мĕн ӳкернине каласа параççĕ.

**2. Маларах вĕреннине аса илни, урок темине палăртни.**

Ыйтусемпе ĕçлени:

— Эпир мĕнле хулара (поселокра, ялта) пурăнатпăр?

— Эсир Чăваш Республикинчи мĕнле хуласене пĕлетĕр? Карттă çинче кăтартăр.

— Ку хуласенчен хăшĕсем авалхи хуласем-ши?

Ачасем маларах вĕреннине аса илсе ыйтусене хуравлаççĕ. Вĕрентӳçĕ вĕсен хуравĕсене пĕтĕмлетет, урок темине пĕлтерет.

**3. Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Панă сăмахсене вулаççĕ, куçарăвĕсене тупаççĕ. Сăмахсемпе предложенисем тăваççĕ.

**4. Кĕнекере панă текстпа ĕçлени.**

Ачасем текста харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ, словарьпе усă курса куçараççĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн 2-мĕш ĕçри ыйтусене хуравлаççĕ, унтан авалхи хуласем çинчен каласа параççĕ.

**5. Проект çырма хатĕрленни.**

Вĕрентӳçĕ ачасене Чăваш Енри авалхи уроксем çинчен проект çырма сĕнет. Класри ачасем ушкăнсене пайланаççĕ. Кашни ушкăн проект çырма сĕннĕ хуласенчен пĕрне суйласа илет. Унтан ачасем проект ĕçне хатĕрлеме тата хӳтĕлеме мĕн-мĕн тумаллипе кĕнекере панă материала вуласа паллашаççĕ. Пĕрле сӳтсе явса ĕç планне тата ĕçе хакламалли критерисене палăртаççĕ, ĕç тетрадьне çырса хураççĕ. Унтан ушкăнсенче кашни ĕçшĕн яваплисене палăртаççĕ.

**6. Киле ĕç пани.**

Килте кашни ача хăйне уйăрса панă ĕçе пурнăçлать. Çырмаллине ачасем ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕç валли панă йĕркесене çырма пултараççĕ.

## 38-мĕш урок

### Тема: Авалхи хуласем

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш çĕршывĕн авалхи хулисем çинчен проект хатĕрлесси.

***Урок задачисем:*** 1) пухнă материалпа усă курса проект йĕркелесси; 2) проекта хӳтĕлессин формине палăртасси; 3) проект çинчен чăвашла каласа пама хатĕрленесси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, проектпа ĕçлени.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Ушкăнри кашни ача хăй килте мĕн тунипе паллаштарать. Ачасем пĕрле канашласа презентаци материалне йĕркелеççĕ. Унтан кашни слайд патне чăвашла текстсем хатĕрлеççĕ, çырса хураççĕ. Вĕрентӳçĕ ачасене редактор пек пулăшать.

**2. Киле ĕç пани.**

Проекта вĕçне çити якатса çитермелле.

## 39-мĕш урок

### Тема: Авалхи хуласем

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш çĕршывĕн авалхи хулисем çинчен проект хӳтĕлесси.

***Урок задачисем:*** 1) хатĕрленĕ проекта хӳтĕлесси; 2) ачасене ушкăнпа пурнăçланă ĕçе палăртнă виçесемпе усă курса хаклама вĕрентесси; 3) компьютер техникипе усă курма хăнăхтарасси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Килте ĕçленипе усă курса проекта тепĕр хут пăхса тухни, çĕнĕлĕхсем хушни.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Ушкăнри кашни ача хăй килте мĕн тунипе паллаштарать. Ачасем пĕрле канашласа презентаци материалне кăштах çĕнетме пултараççĕ.

**2. Проектсене хӳтĕлени.**

Ачасем проектсене хӳтĕлеççĕ, унтан пурте пĕрле вĕсене хаклаççĕ.

## 40-мĕш урок

### Тема: Сĕнтĕрвăрри

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чăвашла текстсене ăшра вуласа ăнланма хăнăхтарасси; 2) Сĕнтĕрвăрри хулипе паллаштарасси, ун çинчен каласа пама вĕрентесси; 3) астуса юлнине харпăр хăй тĕллĕн çырма вĕрентесси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Сăвăпа ĕçлени, маларах вĕреннине аса илни, урок темине палăртни.**

Сăвва вуласа е каласа париччен вĕрентӳçĕ ачасене итлеме хатĕрлет: сăвва итленĕ хыççăн ку сăвă мĕн çинчен пулнине ыйтса

пĕлетĕп тет. Унтан сăвва вуласа е каласа парать, ачасем итлеççĕ, сăвă мĕн çинчен пулнине калаççĕ. Калаймаççĕ пулсан вĕрентӳçĕ словарь ĕçĕ ирттерет, сăввăн тĕп шухăшне ăнланма пулăшакан уйрăм сăмахсемпе ĕçлет. Çапла ĕçленĕ хыççăн ачасем сăввăн содержанине калаççĕ.

Ыйтусем:

— Ача ăçта тухнă?

— Пирĕн хирсенче мĕнле-мĕнле тĕш тырă ӳсет?

— Вăрмансенче мĕнле йывăççсем ӳсеççĕ?

— Пирĕн республика тата мĕнсемпе пуян?

— Пирĕн республикăра миçе хула? Ячĕсене каласа тухăр.

— Атăл хĕрринче мĕнле хуласем вырнаçнă?

— Паян эпир çак хуласенчен пĕрин çинчен калаçăпăр. Унăн ячĕ çак тăваткалсене вырнаçать.

| | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|

Ачасем Атăл хĕрринче вырнаçнă хула ячĕсене тăваткалсене лартса пăхаççĕ, *Сĕнтĕрвăрри* сăмаха тупаççĕ.

— Апла пулсан, паянхи урок теми — «Сĕнтĕрвăрри».

**2. Кĕнекере панă текстпа ĕçлени.**

Малтан çĕнĕ сăмахсемпе ĕçлеççĕ, унтан ачасем текста харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ, словарьпе усă курса куçараççĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн 4-мĕш ĕçри ыйтусене хуравлаççĕ, унтан Сĕнтĕрвăрри çинчен каласа showараççĕ.

**3. Кĕнекере панă диалогпа ĕçлени.**

Ачасем диалога рольсемпе вулаççĕ, куçараççĕ. Унтан Сĕнтĕрвăрри çинчен тата мĕн çĕнни пĕлнине калаççĕ.

**4. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.**

1-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**5. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

## 41-мĕш урок

### Тема: Чăваш Республикин хулисем

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш Республикин ытти хулисемпе паллаштарнă май ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чăвашла текстсене ăшра вуласа ăнланма хăнăхтарасси; 2) Чăваш Енĕн Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Канаш, Куславкка хулисемпе паллаштарасси, вĕсем çинчен каласа пама вĕрентесси.

*Урок юхӑмӗ*

**1. Сӑвӑпа ӗҫлени, маларах вӗреннине аса илни.**

Сӑвва ачасем харпӑр хӑй тӗллӗн вулаҫҫӗ, содержанине вырӑсла калаҫҫӗ. Унтан сӑвва пӑхмасӑр вӗренеҫҫӗ, иккӗмӗш ярӑмне пӑхмасӑр ҫыраҫҫӗ.

**2. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.**

Ачасем килте ҫырнӑ текста вуласа параҫҫӗ. Шупашкар ҫинчен пӗтӗмлетсе каласа параҫҫӗ.

**3. Урок темине палӑртни.**

Вӗрентӳҫӗ ачасене кӗнекери фотоӳкерчӗксене сӑнама хушать, ӳкерчӗксем ҫинче мӗн курнине, вӗсем ӑҫта вырнаҫнине ыйтать. Ачасен хуравӗсене пӗтӗмлетет, урок темине палӑртать.

**4. Словарь ӗҫӗ.**

Малтан ӗҫ тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫлаҫҫӗ, кайран кӗнекере урок валли панӑ сӑмахсемпе ӗҫлеҫҫӗ.

**5. Кӗнекере панӑ текстпа ӗҫлени.**

Ачасем хуласем ҫинчен текстсене харпӑр хӑй тӗллӗн вулаҫҫӗ, словарьпе усӑ курса куҫараҫҫӗ. Ҫапла ӗҫленӗ хыҫҫӑн 5-мӗш ӗҫри ыйтусене хуравлаҫҫӗ, унтан хуласем ҫинчен каласа параҫҫӗ.

**6. Киле ӗҫ пани.**

1) Ӗҫ тетрадӗнчи 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

2) Сӑвва пӑхмасӑр каласа пама хатӗрленмелле.

## 42-мӗш урок

### Тема: Чӑваш Республикин хулисем

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси, Чӑваш Республикин хулисем ҫинчен вӗреннине пӗтӗмлетесси.

***Урок задачисем:*** 1) Чӑваш Республикинчи хуласем ҫинчен каласа пама хӑнӑхтарасси; 2) илемлӗ вулав хӑнӑхӑвӗсене аталантарасси.

*Урок юхӑмӗ*

**1. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.**

Ачасем сӑвва пӑхмасӑр каласа параҫҫӗ. Ку ӗҫе илемлӗ вулавҫӑсен конкурсӗ пек те ирттерме юрать.

**2. Вӗреннине аса илни, урок тӗллевне палӑртни.**

Ыйтусемпе ӗҫсем:

— Ачасем, эсир хамӑрӑн сумлӑ, паттӑр ентешӗмӗрсенчен камсене пӗлетӗр? Вӗсем ҫинчен кӗскен каласа парӑр.

— Ҫапла, ачасем, чӑваш халӑхне тӗнче шайӗнче чапа кӑларнӑ

ентешĕмĕрсен ячĕсене пĕлмелле пирĕн, манса каймалла мар. Кашни хулара, ялта тенĕ пекех вĕсемпе çыхăннă паллă вырăнсем пур. Вĕсене те пĕлмелле пирĕн. Пĕлмелле кăна мар, ыттисене те каласа пама пултармалла. Паян эпир урокра шăпах çак ĕçе пурнăçлама вĕренĕпĕр, маларах вĕреннĕ материалпа усă курса Чăваш Республикинчи паллă вырăнсем çинчен калаçăпăр.

Вĕрентӳçĕ ачасене 40-мĕш урокри 4-мĕш ĕçри диалога тепĕр хут вулаттарать, унпа тата кĕнекере панă диалог пуçламăшĕпе усă курса ачасем калаçаççĕ. Калаçнă чух хăйсем хатĕрленĕ проектсемпе усă курма пултараççĕ.

**3. Киле ĕç пани.**

«Тăван çĕршыв» темăпа вĕреннĕ сăмахсене тепĕр хут пăхса тухмалла, словарь диктанчĕ çырма хатĕрленмелле.

## 43-мĕш урок

### Тема: Мĕн-ши вăл — Тăван çĕршыв?

***Урок тĕллевĕ:*** Чăваш Республики çинчен вĕренни çине таянса ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) чăвашла ыйтусем тĕрĕс йĕркелеме, ыйтусене хуравлама хăнăхтарасси; 2) вĕреннĕ сăмахсене аса илесси, çирĕплетесси; 3) Тăван çĕршыв çинчен калаçтарасси, Тăван çĕршыва юратма вĕрентесси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Вĕрентӳçĕ словарь диктанчĕ ирттерет. Сăмахĕсене хăй палăртать. Ачасем пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслеççĕ. Кайран сăмахсемпе предложенисем тăваççĕ.

**2. Сăвăпа ĕçлени, урок темине палăртни.**

Сăвва вуласа е пăхмасăр каласа панине итлеççĕ, содержанине вырăсла калаççĕ, унтан вулаççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ. Вĕрентӳçĕ «Тăван çĕршыв» тенине ачасем мĕнле ăнланнине тĕрĕслет.

Ыйтусем:

— Мĕн вăл — Тăван çĕршыв?

— Эпир мĕнле çĕршывра пурăнатпăр?

— Пирĕн çĕршыв мĕнле?

— Кампа е мĕнпе танлаштарма пулать-ши Тăван çĕршыва? Паян урокра эпир çак ыйтусем тавра калаçăпăр.

**3. Словарь ĕçĕ.**

Кĕнекери 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

3-мĕш ĕçе пурнăçланă чух *сăхать* сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнлантармалла, çакăн пек сăмахсем чăваш чĕлхинче чылай пулнине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе памалла. Тĕслĕхрен: *Йытă вĕрет. Яшка вĕрет. Çил вĕрет.* Словарьте кун пек сăмахсен темиçе пĕлтерĕшне панине, куçарнă чух сăмахăн пĕлтерĕшне контекстра ытти сăмахсемпе çыхăнуллăн суйласа илмеллине асăрхаттармалла.

**4. Кĕнекере панă текстпа ĕçлени.**

Ачасем текста вулаççĕ, куçараççĕ, текст хыççăн панă ыйтусене хуравлаççĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн 5-мĕш ĕçри ыйтусене хуравлаççĕ, унтан хуласем çинчен каласа параççĕ.

**5. «Тăван çĕршыв» темăпа ыйтусем хатĕрлени, вĕсене пĕр-пĕрне парса калаçни.**

Ачасем кĕнекери материалпа (31—43-мĕш уроксем) усă курса ыйтусем хатĕрлеççĕ. Малтан пĕр парта хушшинче ларакансем пĕр-пĕрне ыйтусем парса калаçаççĕ, кайран темиçе ача доска умне тухса класри ачасене хатĕрленĕ ыйтăвĕсене параççĕ, ачасем хуравлаççĕ. Вĕрентӳçĕ тепĕр хут ачасене «Мĕн вăл — Тăван çĕршыв?» ыйтăва парса ачасен ĕçне пĕтĕмлетет.

**6. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.**

Ĕç тетрадĕнчи 1, 2, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**7. Киле ĕç пани.**

Сăвва пăхмасăр каласа пама хатĕрленмелле, 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

## 44-мĕш урок

### Тема: Хĕл çитрĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *ăçта? (куда?)* ыйтăва хуравлама хăнăхтарасси; 2) вуланине ăнланма, словарьпе ĕçлеме хăнăхтарасси; 3) илемлĕ вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем сăвва пăхмасăр каласа параççĕ. Вĕрентӳçĕ ачасен ĕçне пĕтĕмлетет, Тăван çĕршыв кашни çыншăн çав тери хаклă пулни, ăна кашнин юратмалли çинчен аса илтерет.

**2. Урок темине палăртни.**

Вĕрентӳçĕ хушнипе ачасем кĕнекене 84-мĕш страницăна уçаççĕ, ӳкерчĕке сăнаççĕ. Вĕрентӳçĕ калаçу йĕркелет:

— Ӳкерчĕкре çулталăкăн хăш вăхăтне сăнланă?
— Таврара мĕнле?
— Ача ăçта кайма тухнă?
— Ачасем, эпир паян урокра мĕн çинчен калаçăпăр-ши?
Ачасем хуравлаççĕ, вĕрентӳçĕ вĕсен хуравĕсене пĕтĕмлетсе урок темине палăртать:
— Паянхи урокăн теми — «Хĕл çитрĕ».

**3. Сăвăпа ĕçлени.**

Ачасем сăвăпа малтан кашни хăй тĕллĕн вуласа паллашаççĕ, 2-мĕш ĕçре панă словарьпе усă курса куçараççĕ. Ун хыççăн ăна лайăх вулама пултаракан ача сасăпа вуласа парать, ачасем сăвăра мĕншĕн кăшкăру паллиллĕ предложенисем нумай пулни çинчен хăйсен шухăшĕсене калаççĕ. (Зима пришла! Дети рады зиме.)

Ачасем сăвва пурте пĕрле тепĕр хут вулаççĕ.

**4. 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ĕçе сăвăпа тата 2-мĕш ĕçре панă сăмахсемпе усă курса пурнăçлаççĕ. Малтан сăмахпа каласа синонимсене тупаççĕ, кайран ĕç тетрадĕнче çырса хураççĕ.

**5. 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ку ĕçе ушкăнпа пурнăçлаççĕ. Ушкăнсенче малтан мĕн тума хушнине вулаççĕ, унтан хушнă ĕçсене йĕркипе пурнăçлаççĕ. Малтан палăртнă ярала ячĕсене глаголсемпе пĕрле сăвăран çырса илеççĕ, сăмах майлашăвĕсене вырăсла куçараççĕ, палăртнă сăмахсем патне ыйту лартаççĕ:

*Выходите куда? — на улицу; бегите куда? — на горку.*

Пĕтĕмлетӳ тăваççĕ:

*Куда? — ăçта? Имена существительные* ***урама, тăвайккине*** *обозначают места, куда направляются дети и отвечают на вопрос* ***ăçта?*** *Начальные формы этих слов —* ***урам, тăвайкки.*** *При ответе на вопрос* ***ăçта?*** *имена существительные изменяются, к ним прибавляются аффиксы* ***-а, -не: урам-а, тăвайкки-не.***

Çапла ĕçленĕ хыççăн вĕренекенсем хăнăхтарура панă сăмахсене *ăçта?* ыйтура лартса улăштараççĕ, аффикссене уйăраççĕ, схема ӳкерсе пĕтĕмлетеççĕ. Кайран хăйсен схемисене кĕнекери 5-мĕш ĕçри схемăпа танлаштараççĕ, çитменнине хушаççĕ. Юлашкинчен 6-мĕш ĕçри пĕтĕмлетĕве вуласа шыраса тупнине çирĕплетеççĕ.

**6. 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем *ăçта?* ыйтăва хуравлама хăнăхаççĕ. Малтан ĕçе сăмахпа каласа пурнăçлаççĕ: скобкăри сăмахсене тĕрĕс формăра лартса предложенисене вулаççĕ, куçараççĕ, унтан ĕç тетрадьне çырса хураççĕ, çырнине вуласа тĕрĕслеççĕ.

**7. Урок темине пĕтĕмлетни.**

Ыйтусем:

— Паян эпир урокра мĕн çинчен калаçрăмăр?

— Хĕлле ачасем мĕн тăваççĕ?

— Ачасем çунашкапа ярăнма ăçта каяççĕ?

— Ярăнса ывăнсан ăçта таврăнаççĕ?

— Сире хĕл килĕшет-и?

**8. Харпăр хăй ĕçне хаклани.**

Вĕрентÿçĕ пулăшнипе ачасем хаклав критерисене палăртаççĕ. Тĕслĕхрен:

*1. Умею отвечать на вопрос ăçта?* (куда?)

*2. Могу делать выводы в виде схем.*

*3. Запомнил(а) новые слова.*

*4. Могу выразительно читать стихотворение «Хĕл çитрĕ».*

...

**9. Киле ĕç пани.**

Килте ачасен сăвва илемлĕ вулама вĕренсе килмелле.

## 45-мĕш урок

### Тема: Хĕл çитрĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; хĕллехи çанталăк тата харпăр хăйĕн хĕллехи ăйăйисем çинчен çыхăнуллăн каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) *ăçта? (куда?)* ыйтăва хуравлама хăнăхтарасси; 2) предложенири сăмахсем патне ыйтусем лартма вĕрентесси; 3) вуланă текстпа тата ÿкерчĕксемпе усă курса харпăр хăй тĕллĕн хĕлле çинчен текст тума вĕрентесси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, урок темине палăртни.**

Ачасем сăвва илемлĕ вулаççĕ. Вĕрентÿçĕ ку урокра та хĕл çинчен калаçассине пĕлтерет.

**2. 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан текста вулаççĕ, куçараççĕ. Унтан схемăлла ÿкерчĕксене сăнаççĕ. Кайран кашни ÿкерчĕк патне текстран предложенисем тупса вулаççĕ. Юлашкинчен ÿкерчĕксем тăрăх хăйсем каласа параççĕ. Ÿкерчĕкĕсене экран çине кăларса пырсан аван.

**3. 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан ĕçе ачасем (пĕр парта хушшинче ларакансем) пĕрпĕринпе калаçса пурнăçлаççĕ. Кайран вĕрентÿçĕ темиçе ачана доска умне кăларса калаттарать.

**4. 9-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем кашни тупмалли юмахпа уйрӑммӑн ӗҫлеҫҫӗ: малтан тупмалли юмаха вулаҫҫӗ, куҫараҫҫӗ, тупсӑмне тупаҫҫӗ. Кайран палӑртнӑ сӑмахсем патне ыйтусем лартаҫҫӗ.

Хӗл Мучи ҫинчен тупмалли юмаха пӑхмасӑр вӗренеҫҫӗ, астуса юлнӑ тӑрӑх ҫыраҫҫӗ, кайран кӗнекепе усӑ курса тӗрӗслеҫҫӗ.

**5. Киле ӗҫ пани.**

Ӗҫ тетрадӗнчи 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

**6. Урок темине пӗтӗмлетни.**

Ыйтусем:

— Халӗ ҫулталӑкӑн хӑш вӑхӑчӗ?

— Хӗлле ҫанталӑк мӗнле?

— Эсӗ юрпа выляма ӑҫта тухатӑн?

— Ҫунашкапа ярӑнма ӑҫта каятӑн?

— Конькипе ярӑнма ӑҫта каятӑн?

— Сана хӗл килӗшет-и?

**7. Харпӑр хӑй ӗҫне хаклани.**

Ачасем хаклав критерисене палӑртаҫҫӗ. Тӗслӗхрен:

*1. Умею соотносить рисунки с текстом.*

*2. Могу рассказать о погоде.*

*3. Запомнил(а) загадку.*

## 46-мӗш урок

### Тема: Хӗлле. Ҫӗнӗ ҫул умӗн

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси; хӗллехи ҫанталӑк тата Ҫӗнӗ ҫула хатӗрленни ҫинчен ҫыхӑнуллӑн каласа пама вӗрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) сӑнлав текстсем тума вӗрентесси; 2) ыйтусене хуравласа ӳкерчӗк тӑрӑх каласа пама хӑнӑхтарасси; 3) Ҫӗнӗ ҫул уявне хатӗрленесси.

***Урок юхӑмӗ***

**1. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени, урок темине палӑртни.**

Ачасем хӑйсен ӳкерчӗкӗсене кӑтартаҫҫӗ, Хӗл Мучие сӑнласа параҫҫӗ.

**2. Урок темине палӑртни.**

Ачасем 87-мӗш страницӑра панӑ ӳкерчӗке сӑнаҫҫӗ, унта мӗн курнине калаҫҫӗ. Унтан вӗрентӳҫӗ ачасене кӗнекери сӑвва вуласа парать, ачасем итлеҫҫӗ, сӑвва вӗҫлеҫҫӗ. (Хӗл Мучи.) Вӗрентӳҫӗ паянхи урокра та, иртнӗ уроксенчи пекех, хӗлле ҫинчен калаҫасси ҫинчен пӗлтерет.

**3. Сăвăпа ĕçлени.**

Ачасем малтан 2-мĕш ĕçре панă çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, унтан сăвва вуласа куçараççĕ. Кайран сăвва темиçе хут тĕрлĕ режимра вулаççĕ (пурте пĕрле, ретĕн-ретĕн, пĕчченшерĕн). Сăвва выляса вулани вырăнлă: вуланă май Хĕл Мучин ĕçĕсене кăтартса пымалла.

**4. 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан мĕн ĕç хушнине вулаççĕ, кайран сăмахсене вулаççĕ, пĕлменнисене кăранташпа паллă тăваççĕ, пĕр-пĕринчен е вĕрентӳçĕрен ыйтса пĕлеççĕ. Унтан паянхи çанталăка сăнласа пама кирлисене уйăрса илеççĕ те вĕсемпе предложенисем туса пĕр-пĕрне паянхи çанталăк çинчен каласа параççĕ. Юлашкинчен пĕр-икĕ ача доска умне тухса çанталăка сăнласа парать.

**5. 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан ачасем ӳкерчĕке сăнаççĕ, унтан черетпе пĕрер ыйту вуласа хуравлаççĕ.

**6. 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ыйтусене хуравласа текст тăваççĕ.

**7. Киле ĕç пани.**

1) 6-мĕш ĕçе çырса пурнăçламалла (ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕç).

2) Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**8. Харпăр хăй ĕçне хаклани.**

## 47-мĕш урок

### Тема: Хĕлле. Çĕнĕ çул çывхарать

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси, хĕллехи çанталăк тата Çĕнĕ çула хатĕрленни çинчен çыхăнуллăн каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) калав текстсем тума вĕрентесси; 2) Çĕнĕ çул уявне хатĕрленесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, урок темине палăртни.**

Ачасем хăйсем çырса килнине вуласа параççĕ. Ӳкерчĕкĕсене кăтартаççĕ, Çĕнĕ çул чăрăшне мĕнпе илемлетнине калаççĕ. Вĕрентӳçĕ урок темине палăртать: паян урокра Çĕнĕ çула хатĕрленесси, çак уяв çинчен сăвăсем вуласси, юрăсем юрласси, вылясси çинчен калать.

**2. Сăвăпа ĕçлени.**

Ачасем сăвва харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ. Вĕрентӳçĕ сăвă мĕн çинчен пулнине ыйтать, унтан ачасем 2-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ.

Тӗрӗс мар куçарнӑ пек туйӑнакан йӗркесене тупаймасан вӗрентӳçӗ ачасене пулӑшать. Тӗслӗхрен:

| | |
|---|---|
| Кайрӗ алӑк уçӑлса,<br>Хӗл Мучи кӗрет кулса. | Распахнулись двери в зал,<br>Дед Мороз пришел на бал. |
| Вӑл пире ташша чӗнет,<br>Ташласан парне сӗнет. | Дед пустился с нами в пляс,<br>Потом подарки нам раздаст. |

Йӗркесене тӗп-тӗрӗс куçарайманни сӑвӑ çырас уйрӑмлӑхсемпе çыхӑннӑ. Рифма ан çухалтӑр тесен шӑпах вырӑнлӑ сӑмахсем, рифма тӑвакан сӑмахсем, кирлӗ, çавӑнпа сӑвӑсене куçарнӑ чух кӑштах тӗрӗс мар куçарнисем тӗл пулаççӗ.

**3. 3-мӗш ӗçе пурнӑçлани.**

Ачасем малтан ӗçе çырмасӑр пурнӑçлаççӗ, хӑйсем елкӑра мӗнле юрӑсем юрлама, мӗнле сӑвӑсем калама шухӑшланине пӗлтереççӗ (юррисене юрлаççӗ, сӑввисене калаççӗ), кайран ӗç тетрадӗнче уйӑрса панӑ вырӑна предложенисене çырса хураççӗ, çырнине тӗрӗслеççӗ.

**4. 4-мӗш ӗçе пурнӑçлани.**

Ачасем малтан мӗн ӗç хушнине вулаççӗ, кайран текста вулаççӗ, куçараççӗ, мӗнле вылямаллине ӑнланаççӗ. Кун хыççӑн вӑйӑ юррине юрлама вӗренеççӗ: малтан вӗрентӳçӗ юрра пӗтӗмӗшле юрласа парать, унтан ачасем вӗрентӳçӗпе пӗрле юрра ярӑмӑн-ярӑмӑн юрлама вӗренеççӗ, кайран юрра пӗтӗмӗшле темиçе хут юрлаççӗ. Çапла ӗçленӗ хыççӑн ачасем доска умне тухаççӗ, карталанса тӑрса вӑййа выляççӗ.

**5. Киле ӗç пани.**

«Çӗнӗ çул» сӑвва пӑхмасӑр калама вӗренмелле.

**6. Харпӑр хӑй ӗçне хаклани.**

Хакламалли ӗçсен тӗсӗсем:

Понимаю содержание прочитанного стихотворения.

Могу рассказать о том, как я готовлюсь к Новому году.

Знаю песню для игры «Ларать, ларать Миша ларать...».

Могу играть в игру «Ларать, ларать Миша ларать...».

## 48-мӗш урок

### Тема: Хӗлле. Çӗнӗ çул çывхарать

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) вӗреннине аса илсе çирӗплетесси; 2) диалог формипе калаçма пӗлнине аталантарасси; 3) Çӗнӗ çул уявне хатӗрленесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, урок темине палăртни.**

Ачасем малтан килте вĕреннĕ сăвва пăхмасăр каласа параççĕ, кайран маларах вĕреннĕ сăвăсене те аса илме юрать. Ĕçе илемлĕ вулавçăсен конкурсĕ евĕр йĕркелеме юрать. Çапла ĕçленĕ хыççăн вĕрентÿçĕ урок темине палăртать, паян урокра маларах вĕреннине аса илсе çирĕплетĕпĕр, Çĕнĕ çул уявне хатĕрленĕпĕр, хĕл çинчен çырнă текстсем вулăпăр, хĕл çинчен калаçăпăр тет.

**2. 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вĕрентÿçĕ текста палăртуллă вуласа парать. Ачасем итлеççĕ, унтан мĕн ăнланнине вырăсла каласа параççĕ.

**3. 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан мĕн тумаллине вулаççĕ, унтан вырăсла текста вулаççĕ, чăвашла текстра ун куçарăвне тупаççĕ, вулаççĕ, кайран çырса илеççĕ. Ĕç тетрадĕнче çырса илме вырăн уйăрса панă. Çырса илнĕ хыççăн вуласа тĕрĕслеççĕ.

**4. 7-мĕш ĕçе пурнăçлани. Сăвăпа ĕçлени.**

Ачасем сăвва харпăр хăй тĕллĕн вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ. Кайран сăвва лайăх вулакан ача вулать, унтан ачасем черетпе вулаççĕ. Юлашкинчен вĕрентÿçĕ юр çиме юраманни çинчен ачасемпе калаçу ирттерет, кашнин хăйĕн сывлăхне упрама тăрăшмалли çинчен асăрхаттарать.

**5. 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем панă диалог пуçламăшĕпе усă курса диалога малалла тăсаççĕ. Малтан пĕр парта хушшинче ларакансем пĕр-пĕринпе калаçаççĕ, кайран 1—2 мăшăр доска умне тухса калаçать. Вĕрентÿçĕ ачасен калаçăвĕсене пĕтĕмлетет, харпăр хăй сывлăхне упрамалли çинчен татах аса илтерет.

**6. 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан мĕн тумаллине вулаççĕ, унтан хăнăхтарăвăн тексчĕпе паллашаççĕ. Вĕрентÿçĕ ачасемпе калаçу ирттерет:

— Ачасем, текстра пулса иртнĕ ĕçсем çинчен каланă-ши? Е хальхи вăхăтри ĕçсем çинчен каланă-ши? Тен, пулас ĕçсем çинчен каланă?

— Пулас ĕçсем çинчен эпир хăш вăхăтри глаголсемпе усă курса калатпăр?

— Пулас вăхăтри глаголсем мĕнле аффикссем хушăнса пулаççĕ? Атьăр *çит* глагола сăпатласа пăхатпăр.

Доска умне пĕр ача тухать, *çит* глагола сăпатлать. Ăна ытти ачасем пулăшаççĕ. Ĕçре справочникпа (Чăвашла калаçма вĕренетпĕр / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2016) усă курма пулать. Çапла

ĕçленĕ хыççăн хăнăхтарăва ачасем малтан сăмахпа каласа пурнăçлаççĕ, кайран — çырса. Юлашкинчен çырнине тĕрĕслеççĕ.

**7. Харпăр хăй ĕçне хаклани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание прослушанного текста.

Могу находить в тексте нужные места.

Могу самостоятельно читать и понимать содержание прочитанного текста.

Могу строить диалог.

Помню изученное о глаголах.

## 49-мĕш урок

### Тема: Çĕнĕ çул. Хĕллехи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; хĕллехи çанталăк тата уявсене мĕнле ирттерни çинчен çыхăнуллăн каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) Çĕнĕ çул уявне мĕнле ирттернине аса илесси, калаçасси; 2) хĕллехи каникулта мĕнле канни çинчен калаçасси, çырасси; 3) проект ĕçĕ мĕнле пулмалли çинчен калаçса татăласси; 4) проекта хакламалли виçесене палăртасси; 5) ушкăнсене пайланса кашни ачан мĕн тумалли çинчен калаçса татăласси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. «Çĕнĕ çул» сăвăпа ĕçлени.**

«Çĕнĕ çул» сăвва ачасем хăйсем тĕллĕн çурма сасăпа вулаççĕ, панă словарьпе усă курса содержание ăнланма тăрăшаççĕ. Вĕрентӳçĕ ачасем ăнланнине ыйтусем парса тĕрĕслет:

— Чăрăш сулла ăçта ӳснĕ?

— Чăрăша сăвăра мĕнле сăмахсемпе сăнласа панă? Тупса вулăр.

— Хĕлле çут çанталăкра мĕнле улшăнусем пулса иртнĕ?

— Чăрăша ăçта илсе килнĕ? Мĕншĕн?

Çапла ĕçленĕ хыççăн вĕрентӳçĕ сăвва илемлĕ вуласа е каласа парать, унтан ачасем илемлĕ вулама вĕренеççĕ.

**2. Хĕллехи каникулта мĕн туни тата ăçта пулни çинчен калаçу йĕркелени.**

Вĕренекенсем икшерĕн пĕр-пĕринпе хĕллехи каникула мĕнле ирттерни çинчен калаçаççĕ, унтан пĕтĕм класс пĕр-икĕ ачана итлет.

— Эсĕ хĕллехи каникулта ăçта пултăн?

— Унта эсĕ мĕн турăн?

**3. Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани, кашни ача хăй мĕнле канни çинчен çырни.**

**4. Çырнине тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсен ĕçĕсемпе ыттисене çырнине вуласа парса паллаштараççĕ.

**5. Проект çырма хатĕрленни.**

Вĕрентӳçĕ ачасене хĕллехи каникула мĕнле ирттерни çинчен проект çырма сĕнет. Ачасем хăйсем ăçта каннине кура (ялта, лагерьте, ăшă енре, хуларах...) ушкăнсене пайланаççĕ. Унтан 22, 23, 24, 37, 38, 39-мĕш уроксенче проект мĕнле çырмалли çинчен панă материала аса илеççĕ.

**6. Проектсене хакламалли виçесем хатĕрлени. Вĕсене ĕç тетрадьне (2-мĕш ĕç) çырса хуни.**

Критерисене хатĕрленĕ чух шута илмелли шухăшсем: ушкăнри кашни ача мĕнле каннине шута илни, чи паллă пулăмсене курăмлă уçса пани, ăнланмалла çырни, предложенисем пĕрпĕринпе çыхăнуллă пулни, вĕсене тĕрĕс йĕркелени, проекта хӳтĕлени.

**7. Ушкăнсенче кашни ачан мĕн тумалли çинчен калаçса татăлни.**

**8. Киле ĕç пани.**

Килте ачасем хăйсене уйăрса панă ĕçсене пурнăçлаççĕ.

## 50-мĕш урок

### Тема: Хĕллехи каникулта

***Урок тĕллевĕ:*** хĕллехи каникулта мĕнле канни çинчен проект хатĕрлесси.

***Урок задачисем:*** 1) пухнă материалпа усă курса проект йĕркелесси; 2) проекта хӳтĕлессин формине палăртасси; 3) проект çинчен чăвашла каласа пама хатĕрленесси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, проектпа ĕçлени.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Ушкăнри кашни ача хăй килте мĕн тунипе паллаштарать. Ачасем пĕрле канашласа презентаци материалне йĕркелеççĕ. Унтан кашни слайд патне чăвашла текстсем хатĕрлеççĕ, çырса хураççĕ. Вĕрентӳçĕ ачасене редактор пек пулăшать.

**2. Киле ĕç пани.**

Проекта вĕçне çити якатса çитермелле.

# 51-мӗш урок

## Тема: Хӗллехи каникулта

***Урок тӗллевӗ:*** хӗллехи каникулта мӗнле канни ҫинчен проект хӳтӗлесси.

***Урок задачисем:*** 1) хатӗрленӗ проекта хӳтӗлесси; 2) ачасене ушкӑнпа пурнӑҫланӑ ӗҫе палӑртнӑ виҫесемпе усӑ курса хаклама вӗрентесси; 3) компьютер техникипе усӑ курма хӑнӑхтарасси.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Килте ӗҫленипе усӑ курса проекта тепӗр хут пӑхса тухни, ҫӗнӗлӗхсем хушни.**

Ачасем ушкӑнпа ӗҫлеҫҫӗ. Ушкӑнри кашни ача хӑй килте мӗн тунипе паллаштарать. Ачасем пӗрле канашласа презентаци материалне кӑштах ҫӗнетме пултараҫҫӗ.

**2. Проектсене хӳтӗлени.**

Ачасем проектсене хӳтӗлеҫҫӗ, унтан пурте пӗрле вӗсене хаклаҫҫӗ.

# 52-мӗш урок

## Тема: Хӗлле. Кайӑксем

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси; кайӑксен хӗллехи пурнӑҫӗ ҫинчен каласа пама вӗрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) пусӑм лартмалли правилӑсене аса илесси, сӑмахсенче пусӑм лартма хӑнӑхасси; 2) хӗл каҫакан кайӑксен чӑвашла ячӗсене аса илесси; 3) текстӑн тӗп шухӑшне палӑртма, ӑна ят пама вӗрентесси; 4) хӗл каҫакан кайӑксем ҫинчен кӗнеке материалӗпе усӑ курса каласа пама хӑнӑхтарасси.

### *Урок юхӑмӗ*

**1. Вӗреннине аса илни.**

Вӗрентӳҫӗ ертсе пынипе ачасем чӑваш сӑмахӗсенче пусӑм лартмалли правилӑсене аса илеҫҫӗ. Ку ӗҫре В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева хатӗрленӗ «Чӑвашла калаҫма вӗренетпӗр» справочникпа усӑ курни вырӑнлӑ.

**2. «Павӑлпа кӑвакарчӑн» сӑвӑпа ӗҫлени.**

Малтан словарь ӗҫне тӑваҫҫӗ, унтан ачасем сӑвва харпӑр хӑй тӗллӗн вуласа сӑмахсенче пусӑм лартаҫҫӗ, кайран сӑвва сасӑпа вулаҫҫӗ, пусӑм йӑнӑш лартсан правилине аса илсе тӳрлетеҫҫӗ.

Çапла ĕçленĕ хыççăн вĕрентӳçĕ ыйтусем парса ачасем сăвă содержанине мĕнле ăнланнине тĕрĕслет.

**3. Кĕнекери 3-мĕш тата ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**4. Хĕллехи кайăксен ячĕсене аса илни, кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**5. Хĕллехи кайăксем çинчен вулани, каласа пани.**

5-мĕш ĕçе пурнăçлани. Кашни тексчĕпе уйрăм ĕçлеççĕ. Вуланă хыççăн текст мĕн çинчен пулнине калаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, унтан текста ят параççĕ. Ыйтусем:

— Кăсăя мĕнле кайăк? Тупса вула.

— Вăл мĕн çиет?

— Мĕншĕн кăсăя ула такка хыççăн вĕçсе çӳрет? Тупса вула.

Çакăн пекех иккĕмĕш текстпа ĕçлемелле.

**6. Киле ĕç пани.**

Çыру тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

## 53-мĕш урок

### Тема: Хĕлле. Кайăксем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; кайăксен, чĕр чунсен хĕллехи пурнăçĕ çинчен каласа пама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) текстăн тĕп шухăшне палăртма, ăна ят пама вĕрентесси; 2) панă текста сăпатне улăштарса вулама вĕрентесси; 3) хĕл каçакан кайăксем, чĕр чунсем çинчен кĕнеке материалĕпе усă курса каласа пама хăнăхтарасси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

**2. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Текста ачасем малтан абзацăн-абзацăн вулаççĕ, куçараççĕ, унтан вĕрентӳçĕн ыйтăвĕсене хуравлаççĕ (текстăн тĕп шухăшне уçса пама пулăшакан 5—6 ыйту памалла), кайран текста ят параççĕ.

**3. Кĕнекери 7-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Текстри ĕç-пуç çинчен пĕрремĕш сăпатран, нумайлă хисепрен (ĕç-пуç ачасемпе хăйсемпе пулнă пек) мĕнле каласа памалли çинчен калаçаççĕ, унтан сăмахсене улăштарса вулаççĕ. Справочникпа усă курма юрать.

**4. Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Кашни ӳкерчĕк сăнлакан вырăнсене текстра тупса вулаççĕ, ӳкерчĕксем тăрăх текстăн содержанине калаççĕ.

**5. Кĕнекери 9-мĕш ĕçпе усă курса кайăксем çинчен диалог йĕркелени.**

**6. Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Лармалли сăмах — кăсăя.

**7. Киле ĕç пани.**

Килте ачасен 10-мĕш ĕçри сăвва пăхмасăр вĕренсе килмелле.

**8. Ачасем хăйсен ĕçĕсене хаклани. Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

## 54-мĕш урок

### Тема: Хĕлле. *Мĕнре? камра? ăçта?* ыйтусенчи сăмахсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *мĕнре? камра? ăçта?* ыйтусенчи сăмахсемпе усă курма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) сăмахсем патне ыйтусем лартма вĕрентесси; 2) *камра? мĕнре? ăçта?* ыйтусенчи сăмахсем мĕнле пулнине схема туса кăтартма вĕрентесси; 3) асăннă ыйтусене пĕр-пĕрне пама тата вĕсене хуравласа калаçма вĕрентесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

**2. Кĕнекери 1, 2, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

«Урине» сăвва вĕрентекен вулать, словарьпе ĕçлесе содержанине ăнланаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ. Хуравне сăвăра туптарса вулаттарма та юрать. Ушкăнпа ĕçлесе сăвăри палăртнă сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ, схемăсем тăваççĕ. Схемăсене тĕрĕс е тĕрĕс мар тунине панă предложенисене тишкерсе тĕрĕслеççĕ, хушмаллине хушаççĕ.

**3. Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем хăйсен пĕтĕмлетĕвне Анюкпа Ванюкăннипе танлаштараççĕ, Сергей Сергеевич панă правилăна хăйсен схемисемпе усă курса ăнлантараççĕ, схемăсенче мĕн те пулин çитмест пулсан хушаççĕ, ытлашшине кăлараççĕ.

**4. Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш, çыру тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**5. Урока пĕтĕмлетни, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçласа ачасем хăйсен ĕçĕсене хаклани.**

**6. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

# 55-мĕш урок

## Тема: Хĕлле. Вăрманта. *Ăçта?* ыйтури япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *ăçта?* ыйтури сăмахсемпе усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) япала ячĕсене ытти пуплев пайĕсенчен уйăрса илме хăнăхтарасси; 2) хĕлле çинчен калама кирлĕ сăмахсене палăртасси; 3) *ăçта? (где, куда)* ыйтури сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнланасси; 4) тискер чĕр чунсен хĕллехи пурнăçĕ çинчен калаçасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăвва вĕрентӳçĕ вулать, 2-мĕш ĕçпе усă курса словарь ĕçне ирттерет. Ачасем ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ, унтан сăвăра япала ячĕсене тупса вĕсен ыйтăвĕсене палăртаççĕ.

**2. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсене вулаççĕ, куçараççĕ, кирлĕ сăмахсемпе усă курса хĕлле çинчен каласа параççĕ.

**3. Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем текста вулаççĕ, куçараççĕ, унтан схемăлла ӳкерчĕксемпе усă курса текстăн содержанине текстпа усă курса пĕрпĕрне каласа параççĕ, кайран содержанине текстпа усă курмасăр 1-2 ача каласа парать.

Ачасем *ăçта?* ыйтури сăмахсен тĕрлĕ пĕлтерĕшĕсене ăнлантараççĕ. Ку ыйтури сăмахсен тĕрлĕ пĕлтерĕшне ăнлантараймасан справочникпа усă курма пулать.

**4. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**5. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани. Ачасем хăйсен ĕçне хаклани.**

Ачасем пĕрле сӳтсе явса хакламалли виçесене тăваççĕ. Вĕсене ĕç тетрадьне çыраççĕ, унтан хăйсен ĕçĕсене хаклаççĕ.

Хакламалли виçесен тĕсĕсем:

Могу найти в тексте имена существительные.

Правильно ставлю вопросы к именам существительным.

Используя данные слова, могу рассказать о зиме.

Используя схематические рисунки, могу пересказать содержание текста «Йĕрсем».

**6. Киле ĕç пани.**

9-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

## 56-мӗш урок

### Тема: Хӗлле. Вăрманта. *Ăҫта?* ыйтури япала ячӗсем

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси; *ăҫта?* ыйтури сăмахсемпе усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *ăҫта? (где, куда)* ыйтăва лартма, ку ыйтури сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) тискер чӗр чунсен хӗллехи пурнăҫӗ ҫинчен калаҫасси.

#### *Урок юхăмӗ*

**1. Киле панă ӗҫе тӗрӗслени.**

**2. Кӗнекери 7-мӗш ӗҫе пурнăҫлани.**

**3. Кӗнекери 8-мӗш, ӗҫ тетрадӗнчи 3-мӗш ӗҫсене пурнăҫлани.**

Ӗҫе пурнăҫлама ачасене пирӗн тăрăхри вăрмансенче пурăнакан чӗр чунсем ҫинчен справочник евӗр материал валеҫсе памалла. Кашни ача пӗр-пӗр чӗр чун суйласа илет те тетрадьри 3-мӗш ӗҫе пурнăҫласа ун ҫинчен каласа пама хатӗрленет.

**4. Ачасен калавӗсене итлени, хаклани.**

Хакламалли ӗҫсен тӗсӗ:

Могу рассказать о жизни зимой какого-нибудь лесного зверя.

## 57-мӗш урок

### Тема: Хӗллехи вăрман. *Ăҫта?* ыйтури сăмахсем

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси; *ăҫта?* ыйтури сăмахсемпе усă курса хӗллехи вăрман ҫинчен калаҫасси.

***Урок задачисем:*** 1) сăмахсенче пусăм тӗрӗс лартма хăнăхтарасси; 2) «Хӗллехи вăрман» текстăн содержанине ăнланасси, каласа парасси; 3) тискер чӗр чунсемпе вӗҫен кайăксем ҫинчен каласа пама вӗрентесси; 4) *ăҫта?* ыйтăва тӗрӗс хуравлама хăнăхтарасси.

#### *Урок юхăмӗ*

**1. Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнăҫлани.**

Сăвва вӗрентекен вулать, ачасем йӗрлеҫҫӗ, пусăм мӗнле лартса пынине тимлеҫҫӗ. Унтан пӗр ача вулать, сăмахсенче пусăм тӗрӗс лартмасан йăнăша ыттисем тӳрлетеҫҫӗ, ăнлантараҫҫӗ. Ӳкерчӗке сăнлакан вырăна тупса вулаҫҫӗ, Витали мӗн тăхăннине калаҫҫӗ.

**2. Кӗнекери 2-мӗш, ӗҫ тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫсене пурнăҫлани.**

Малтан текста вулаҫҫӗ, хушнă ӗҫсене пурнăҫлаҫҫӗ. Кайран тетрадьри 1-мӗш ӗҫе пурнăҫлаҫҫӗ. Текстри 6 предложение вӗрентӳҫӗ

каланӑ хыҫҫӑн ҫыриччен сӑмахсенче йӑнӑш тума пултаракан вырӑнсене тишкермелле: *вӑрманта, йывӑҫсем, выртать, курӑнаҫҫӗ...* Ҫырнӑ хыҫҫӑн малтан ача хӑйӗн ӗҫне кӗнеке тӑрӑх тӗрӗслет, унтан унӑн ӗҫне кӳрши тӗрӗслет. Пӑхса ҫырса илнине вара пӗр-пӗринпе тетрадьсемпе улшӑнса тӗрӗслеҫҫӗ.

**3. Кӗнекери 3-мӗшпе 4-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

*Ӑҫта ӗҫлет? Ӑҫта кӗрет?* ыйтусене хуравланӑ чух мӗншӗн тӗрлӗ аффикс хушӑннине ӑнлантараҫҫӗ (пӗлтерӗшӗсем тӗрлӗрен).

**4. Кӗнекери 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

**5. Кӗнекери 7-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Сӑвва вулаҫҫӗ, тупсӑмне тупаҫҫӗ. Вӑхӑт юлсан тетрадьри 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫлаҫҫӗ.

**6. Ӗҫ тетрадӗнчи 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ачасем хӑйсем урокра мӗнле ӗҫленине ӗҫ тӗсӗсене палӑртса хаклаҫҫӗ.

Хакламали ӗҫсен тӗсӗсем:

Правильно расставил(а) ударения в словах стихотворения.

Понимаю и могу пересказать содержание текста «Хӗллехи вӑрман».

Могу рассказать о зверях и птицах.

Умею отвечать на вопрос *ӑҫта?*

Правильно ставлю вопросы к именам существительным.

Получился рассказ о моих зимних развлечениях.

Знаю отгадку загадки.

Правильно пишу по памяти.

**7. Киле ӗҫ пани.**

Кӗнекери 6-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

## 58-мӗш урок

### Тема: Хӗлле. Нарӑс уйӑхӗ. Предложенин тӗп членӗсем

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен пуплевне пур енлӗн аталантарасси; предложенин тӗп членӗсене палӑртма вӗрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) нарӑс уйӑхӗ ҫинчен каласа пама вӗрентесси; 2) предложенири тӗп членсене палӑртма вӗрентесси; 3) текстӑн тӗп шухӑшне уҫса пама, ӑна ят пама хӑнӑхтарасси.

#### *Урок юхӑмӗ*

**1. Кӗнекери 1-мӗшпе 2-мӗш, ӗҫ тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Кӗнекери 1-мӗш ӗҫе пурнӑҫланӑ чух ачасем ыйтӑва тӳрех хуравлаймасан кӗнекери 2-мӗш, ҫыру тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫе пур-

нăçламалла. Сăвва тепĕр хут вуласа ыйтăва хуравламалла, нарăс уйăхĕн уйрăмлăхĕсем çинчен калаçмалла.

**2. Кĕнекери 3-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ĕçе пурнăçланă чух ачасен вырăс чĕлхи пĕлĕвĕ çине таянма юрать. Подлежащипе сказуемăй çинчен ачасем пĕлеççĕ, вĕсене предложенисенче тупса палăртма та пултараççĕ.

**3. Йывăççен ячĕсене ӳкерчĕкĕсемпе усă курса аса илни, йывăçсем çинчен калаçни.**

Вĕрентӳçĕ экран çине тĕрлĕ йывăç ӳкерчĕкĕсене кăларать, ачасем вĕсен ячĕсене калаççĕ. Кайран кашни йывăçĕ çинчен предложенисем туса каласа параççĕ.

**4. Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе ăсра пурнăçлани.**

**5. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе çырса пурнăçламалла.

**6. Ĕçе хаклани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Расскажу об особенностях погоды в феврале.

Выделяю главные члены предложения.

Правильно ставлю вопросы к главным членам предложения.

Знаю названия деревьев.

## 59-мĕш урок

### Тема: Хĕлле. Нарăс уйăхĕ. Предложенин тĕп членĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; предложенин тĕп членĕсене палăртма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) предложенири тĕп членсене палăртма вĕрентесси; 2) текстăн тĕп шухăшне уçса пама, ăна ят пама хăнăхтарасси; 3) илемлĕ вулав хăнăхăвне аталантарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем çырнине вуласа параççĕ.

**2. Пĕр-пĕр йывăç çинчен каласа пани.**

Ачасем хăйсене килĕшекен йывăççем çинчен каласа параççĕ.

**3. Кĕнекери 5, 6, 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

7-мĕш ĕçе пурнăçланă чух 4-мĕш ĕçре панă правилăпа усă курмалла.

**4. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, сăмахсемпе предложенисем туни.**

**5. Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Калава малтан 1-2 хут рольсемпе вулаççĕ, кайран ăна Миша ятĕнчен вулаççĕ. Калав пуçламăшĕ:

*Эпĕ пĕчĕк чухне манăн атте ман ятпа вĕрене лартнă. Манпа пĕрле...*

Ачасене ĕçе пурнăçлама йывăр пулсан вĕрентӳçĕ вĕсене пулăшать, калавăн пуçламăшне хăй улăштарса вуласа парать.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе малалла пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Умею работать со словарем.

Отвечу на вопросы и озаглавлю текст.

Научился(ась) читать выразительно.

Переделал(а) текст от имени Миши.

## 60-мĕш урок

### Тема: Геннадий Никандрович Волков — чăваш халăхĕн паллă ывăлĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; япалана мĕнрен (мĕнле материалтан) тунине чăвашла калама вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) япалан паллине тепĕр япала ячĕпе палăртма вĕрентесси; 2) Г.Н. Волковпа паллаштарасси; 3) словарьпе ĕçлеме хăнăхтарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăвва вуласа тухса çĕнĕ сăмахсемпе ĕçлеççĕ. *Çурт, пӳрт, кермен* сăмахсен пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ.

**2. Кĕнекери 3, 4, 5-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**3. Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан чăвашла тата вырăсла сăмах майлашăвĕсене вулаççĕ, уйрăм сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнланнипе сăмах майлашăвĕсен куçарăвĕсене словарьпе усă курса е усă курмасăрах тупма пултараççĕ.

**4. Г.Н. Волковпа кĕскен паллаштарни.**

Вĕрентӳçĕ ачасене Г.Н. Волков портретне кăтартать, ун çинчен кĕскен каласа парать. Кайран Г.Н. Волков çырнă калава вулассине пĕлтерет.

**5. Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**6. Киле ĕç пани.**

Тепĕр урока Г.Н. Волков çинчен материал тата унăн калавĕсене библиотекăсенче тупса илсе килмелле.

**7. Ĕç тетраĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани, ачасем хăйсем урокра мĕнле ĕçленине хаклани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание стихотворения «Парне».

Понимаю словосочетания, состоящие из двух имен существительных, связанных при помощи порядка слов.

Могу перевести эти словосочетания на чувашский язык.

Понимаю текст Г.Н. Волкова и могу озаглавить.

Правильно выписал пословицы из текста.

## 61-мĕш урок

### Тема: Геннадий Никандрович Волков — Чăваш çĕрĕн паллă ывăлĕ

***Урок тĕллевĕ:*** Г.Н. Волков пурнăçĕ тата ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлесси; проект çырас хăнăхăва аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Г.Н. Волков пурнăçĕ çинчен çĕннине пĕлесси; 2) Г.Н. Волков калавĕсене вуласа тишкересси; 3) проект çырма хатĕрленесси.

***Урок юхăмĕ***

Малтан ачасем хăйсем килте пуçтарнă материалпа, Г.Н. Волковăн хайлавĕсемпе пĕр-пĕрне паллаштараççĕ. Вĕрентӳçĕ ĕçе йĕркелесе пырать, Г.Н. Волковăн тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕпе ачасене туллинрех паллаштарать.

Кайран кĕнекере сĕнӳ евĕр панă материалпа паллашаççĕ. Ку материалсăр пуçне 22, 23, 24, 37, 38, 39, 49, 50, 51-мĕш урoксенче проект мĕнле çырмалли пирки панă материалсемпе те усă курмалла.

Унтан ачасем ушкăнсене пайланаççĕ. Ушкăнри кашни ача мĕн-мĕн тăвасси çинчен калаçса татăлаççĕ.

Килте ачасем хăйсене хушнă ĕçсене пурнăçлаççĕ, чи кирлĕ материала ĕç тетрадьне (1-мĕш ĕç) çырса хураççĕ.

## 62-мĕш урок

### Тема: Геннадий Никандрович Волков — Чăваш çĕрĕн паллă ывăлĕ

***Урок тĕллевĕ:*** Г.Н. Волков пурнăçĕ тата ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлесси; проект çырас хăнăхăва аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) Г.Н. Волков пурнăçĕ çинчен çĕннине пĕлесси; 2) проект хатĕрлесси.

### *Урок юхăмĕ*

Ку урокра ачасем ушкăнсенче пухнă материала пăхса тухаççĕ, проект валли кирлисене суйласа илеççĕ. Проекта мĕнле йĕркелемеллине сӳтсе яваççĕ. Проекта хатĕрлеççĕ. Класпа пĕрле ушкăнпа хатĕрленĕ проекта хакламалли виçесене палăртаççĕ.

Хакламалли критерисем:

Конкретно и полно раскрыта жизнедеятельность Г.Н. Волкова.

Аккуратно оформлен проект.

Рассказ был понятным и полным.

Обосновали выбор материала.

Критерисем урăхларах та пулма пултараççĕ. Ачасем мĕнле каласса татăлаççĕ, çавăн пек хакламалла.

Килте проекта туса çитермелле.

## 63-мĕш урок

### Т е м а: Геннадий Никандрович Волков — Чăваш çĕрĕн паллă ывăлĕ

***Урок тĕллевĕ:*** Г.Н. Волков пурнăçĕ тата ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлесси; проект çырас хăнăхăва аталантарасси.

***Урок задачи:*** Г.Н. Волков пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен хатĕрленĕ проектсене хӳтĕлесси.

### *Урок юхăмĕ*

**«Геннадий Никандрович Волков — Чăваш çĕрĕн паллă ывăлĕ» темăпа хатĕрленĕ проектсене хӳтĕлени.**

Кашни ушкăн хăйĕн проектне хӳтĕлет. Класри ытти ачасем палăртнă критерисене тĕпе хурса ĕçе хаклаççĕ.

## 64-мĕш урок

### Т е м а: Петĕр Ялкир — чăваш çыравçи

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; Петĕр Ялкир пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе туллинрех паллаштарасси.

***Урок задачисем:*** 1) икĕ япала ятĕнчен пулнă сăмах майлашăвĕсене тишкересси, вĕсене вырăсла куçарма вĕренесси; 2) Петĕр Ялкир çинчен вуласа пĕлесси; 3) «Профессор пулатăп» сăвва илемлĕ вулама вĕрентесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăвва вулаççĕ, куçараççĕ, ӳкерчĕке сăнаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ.

**2. Кĕнекери 3, 4, 5-мĕш ĕççене, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**3. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Словарь ĕçне урок темине палăртнă хыççăн ирттермелле.

**4. Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем сăвва пĕр хут çурма сасăпа вуласа тухаççĕ. Вĕрентӳçĕ сăвă кам çинчен пулнине ыйтать. Унтан икшерĕн ĕçлесе пусăм лартаççĕ. Кайран сăвва сасăпа вулаççĕ, рольпе вулама хатĕрленеççĕ: рольсене палăртаççĕ, кашни сăнар сăмахĕсене мĕнле вуламалли çинчен калаçаççĕ, вĕрентӳçĕн тĕслĕхлĕ вулавне итлеççĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн ачасем сăвва рольсемпе вулаççĕ.

**5. Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

1—5 ыйтусене хуравланă хыççăн Петĕр Ялкир çинчен 7-мĕш ĕçре панă материала вуламалла, ун çинчен калаçтармалла. Вырăсла калаçма та юрать. Çапла ĕçленĕ хыççăн 9-мĕш ĕçри юлашки ыйтăва хуравламалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕççене пурнăçлани.**

**7. Сăвва тепĕр хут илемлĕ вулани.**

**8. Киле ĕç пани.**

«Профессор пулатăп» сăвва илемлĕ вулама вĕренмелле те килти çынсене вуласа памалла.

**9. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçри 1—3-мĕш критерисемпе ĕçлемелле.

## 65-мĕш урок

### Тема: Лидия Сарине — чăваш çыравçи

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; Л. Сарине пултарулăхĕпе паллаштарасси.

***Урок задачисем:*** 1) икĕ япала ятĕнчен пулнă сăмах майлашăвĕсене вырăсла куçарма вĕренесси; 2) Л. Сарине çинчен вуласа пĕлесси; 3) вуланă текстăн содержанине кĕскен каласа пама хăнăхтарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Иртнĕ урокра вĕреннине аса илни, киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

1. Ачасем сăвва вулаççĕ. Ĕçе «Илемлĕ вулав конкурсĕ» евĕр

ирттерме юрать. Кайран вĕрентӳçĕ ачасенчен ку сăвва кам çырни, ачасем ун çинчен мĕн пĕлни çинчен ыйтса пĕлет.

2. Вĕрентӳçĕ ачасене чăвашла сăмах майлашăвĕсем калать, ачасем вĕсене вырăсла куçараççĕ: *сăвă авторĕ*, *Канаш районĕ, сăвă кĕнеки, поэт сăвви, кукамай чăххи.*

**2. Урок темине палăртни.**

Вĕрентӳçĕ паян урокра тепĕр чăваш çыравçипе паллашассине пĕлтерет, кĕнекесене уçса 10-мĕш ĕçре панă текстăн авторне тупма ыйтать. Ачасем тупса вулаççĕ те паян урокра Л. Саринепе паллашасси çинчен калаççĕ.

**3. Л. Сарине çинчен 7-мĕш ĕçре панă материала вулани.**

Ачасем материала вулаççĕ, Л. Сарине çинчен калаçаççĕ. Вырăсла калаçма юрать.

**4. 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**5. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**6. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 11-мĕш ĕçе пурнăçламалла. Ачасем çыравçăсене суйласа илме пултараççĕ. Ĕçе слайдсем евĕр хатĕрлесен аван.

**7. Ĕçе хаклани.**

Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçри 3-мĕшпе 4-мĕш критерисемпе ĕçлемелле.

## 66-мĕш урок

### Тема: Пирĕн çемье. Предложенин тĕп членĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; предложенин тĕп членĕсене палăртма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) япала ячĕсене ыйтусем тăрăх улăштарма вĕрентесси; 2) *чи* татăкпа пулнă вăйлă формăри паллă ячĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) *кам? мĕн? камсем? мĕнсем?* ыйтусенчи япала ячĕсем предложенире сказуемăй пулма пултарнине пĕлесси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсен ĕçĕсемпе ыттисене паллаштараççĕ.

**2. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Малтан словарьпе ĕçлемелле, ӳкерчĕкпе усă курса словарьти сăмахсемпе предложенисем тумалла. Сăвăпа, усă курмалли сăмахсемпе ачасене паллашма хушмалла, унтан ыйтусем вырăнне кирлĕ сăмахсене лартса сăвва сасăпа вуламалла. Сăвă содержанине лайăх

ӑнланма сӑвӑра ӳкерчӗке сӑнлакан вырӑнсене кӑтартмалла. Ушкӑнпа сӳтсе явса сӑвва ят памалла. Тӗслӗхрен: *Мӑрӑлкка. Пирӗн кушак.*

**3. Кӗнекери 3-мӗшпе 4-мӗш, ӗҫ тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

*Чи* сӑмах хушсан паллӑ ячӗсем мӗнле улшӑннине аса илеҫҫӗ. Манса кайнӑ пулсан справочника пӑхса аса илеҫҫӗ. Паллӑ ячӗсене *чи* сӑмахпа ҫыхӑнтарса доска ҫине тата ӗҫ тетрачӗсене ҫыраҫҫӗ. Вӗсемпе усӑ курса ачасем хӑйсен кушакӗсем ҫинчен предложенисем тӑваҫҫӗ, унтан каласа параҫҫӗ.

**4. Кӗнекери 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ӗҫе пурнӑҫланӑ чух йывӑрлӑхсем сиксе тухсан 64-мӗшпе 65-мӗш уроксенче (115-мӗш с.) панӑ правилӑна аса илмелле.

**5. Кӗнекери 9-мӗш, ӗҫ тетрадӗнчи 2-мӗшпе 3-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

**6. Кӗнекери 6-мӗшпе 7-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Кашни предложенире ачасем тӗп членсене тупаҫҫӗ, подлежащи тата сказуемӑй мӗнле пуплев пайӗнчен пулнине калаҫҫӗ. Унтан сказуемӑйсене тишкереҫҫӗ, вӗсен ыйтӑвӗсене калаҫҫӗ, пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ, Сергей Сергеевич профессор ӑнлантарнипе танлаштараҫҫӗ.

**7. Кӗнекери 10-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Ыйтусене хуравлаҫҫӗ, хуравсенче сказуемӑйсене палӑртаҫҫӗ, вӗсем мӗнле пуплев пайӗнчен пулнине тата ыйтӑвӗсене калаҫҫӗ, пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ, правилӑна аса илеҫҫӗ.

**8. Кӗнекери 8-мӗш ӗҫе икшерӗн ӗҫлесе пурнӑҫлани.**

Тӗслӗхрен: *Ача чупать. Анне — тухтӑр. Аппа тутӑрӗ. Йӑмӑк витри. Чул ҫурт.*

**9. Киле ӗҫ пани.**

Ӗҫ тетрадӗнчи 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

**10. Урока пӗтӗмлетни, ачасен урокри ӗҫне хак пани, ӗҫ тетрадӗнчи 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Хакламалли ӗҫсен тӗсӗсем:

Правильно подобрал(а) к вопросам подходящие слова.

Правильно озаглавил(а) стохотворение.

Могу применять имена прилагательные в превосходной степени.

Могу рассказать о кошке.

Узнал(а), что сказуемыми могут быть и имена существительные.

Знаю названия профессий на чувашском языке.

Ачасем пӗрле сӳтсе явса хакламалли ӗҫсене палӑртаҫҫӗ, ӗҫ тетрадьне ҫыраҫҫӗ, унтан хаклаҫҫӗ.

## 67-мĕш урок

### Тема: «Пахчаçăпа ывăлĕсем». *Камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусем лартма, ку ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) япала ячĕсем патне ыйтусем лартма хăнăхтарасси; 2) *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи сăмахсем мĕнле пулнине тата вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарасси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1, 2, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Вĕрентекен сăвва вулать, ачасемпе çĕнĕ тата ăнланман сăмахсемпе ĕçлет. Ачасем тепĕр хут вулаççĕ, сăвă содержанине вырăсла калаççĕ, сăвăра палăртнă сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ, сăмах майлашăвĕсене *(ачан куçĕ, пепкен тути, сăпкан ăшши, аннен юрри)* доска çине çыраççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ.

**2. Кĕнекери 4, 5, 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлесе схемăсене ăнланаççĕ, сăмах майлашăвĕсене чăвашла куçараççĕ, вĕсемпе усă курса *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* сăмахсемпе ыйтуллă предложенисем тăваççĕ.

Тĕслĕхрен: *Камăн пахчи ялта? Камсен ачисем туслă? Камсен чăххи кашни кун çăмарта тăвать?* Унтан ачасем пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: *Камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи сăмахсен пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ, мĕнле аффикссем хушăнса пулнине схемăсенче кăтартаççĕ, Сергей Сергеевич тунă пĕтĕмлетӳпе танлаштараççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ.

**3. Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**4. Киле ĕç пани.**

Килте кĕнекери 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

## 68-мĕш урок

### Тема: «Пахчаçăпа ывăлĕсем». *Камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусем лартма, ку ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) япала ячĕсем патне ыйтусем лартма хăнăхтарасси; 2) текстпа ĕçлес хăнăхусене аталантарасси; 3) амăшĕсем çинчен пĕр-пĕринпе калаçтарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем вуланă май мĕншĕн вăл е ку ыйтăва çырнине ăнлантараççĕ.

**2. Кĕнекери 8-мĕшпе 11-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Вĕрентекен ачасенчен юмахпа ваттисен сăмахĕсем мĕнле çыхăнни çинчен ыйтать. Ачасене ваттисен сăмахĕсене пăхмасăр вĕренме йывăр пулсан вĕсене кĕнекерен çырса çеç илме юрать.

**3. Кĕнекери 9-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**4. Кĕнекери 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ыйтаканни, юлташĕ амăшĕ ăçта ĕçлени çинчен хуравланă хыççăн, тӳрех унăн амăшĕ çинчен калать.

— *Саша, санăн аннӳ ăçта ĕçлет?*

— *Манăн анне шкулта ĕçлет.*

— *Сашăн амăшĕ шкулта ĕçлет.*

**5. Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю значение слов на вопросы *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?*

Умею находить слова на вопросы *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?*

Правильно ставлю вопросы к словам, обозначающим принадлежность предмета другому предмету.

Знаю варианты аффиксов слов, отвечающих на вопросы *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?*

Хакламалли ĕçсене ачасем хăйсем палăртаççĕ, пĕрле сӳтсе явса суйласа илеççĕ те ĕç тетрадьне çыраççĕ, кайран хăйсен ĕçĕсене хаклаççĕ.

## 69-мĕш урок

### Тема: *Камăн? мĕнĕн?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *камăн? мĕнĕн?* ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) сăмахсенче пусăм тĕрĕс лартма хăнăхтарасси; 2) илемлĕ вулама вĕрентесси; 3) куçару хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1, 2, 3, 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем пусăм правилисене аса илеççĕ, «Марук чăххи» сăвва пусăм тĕрĕс лартса вулаççĕ, ăна ăнланма словарьпе, ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, сăввăн хăш йĕркисене мĕнле (хаваслă, хурлăхлă, майĕпен, хăвăрт, хăш сăмахне палăртарах каласа, сасса улăштарса...) вуламаллине палăртаççĕ, унтан илемлĕ вулаççĕ. Ваттисен сăмахĕсене вуласа пĕлтерĕшĕсене ăнлантараççĕ, сăвă содержанипе çывăххисене суйласа калаççĕ, шухăшĕпе пĕр пекрех вырăсла ваттисен сăмахĕсене тупса калаççĕ.

**2. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем *камăн? мĕнĕн?* ыйтусенчи сăмахсем мĕнле аффикс хушăнса пулнине аса илеççĕ, кашни сăмаха *камăн? мĕнĕн?* ыйтусене лартнă чух мĕншĕн ку е вăл аффикса суйласа илнине ăнлантараççĕ.

**3. Кĕнекери 5-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**4. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Правильно ставлю ударение в словах.

Стихотворение «Марук чăххи» читаю выразительно.

Могу ответить на вопросы *камăн? мĕнĕн?*

Правильно перевожу слова, словосочетания.

Могу подобрать к чувашским пословицам похожие по смыслу пословицы на русском языке.

## 70-мĕш урок

### Тема: Пулăшар-ха аннене. *Кама? мĕне? камсене? мĕнсене?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *кама? мĕне? камсене? мĕнсене?* ыйтусенчи сăмахсене пуплеве кĕртесси.

***Урок задачисем:*** 1) текстăн тĕп шухăшне палăртса ят пама вĕрентесси; 2) *кама? мĕне? камсене? мĕнсене?* ыйтусем лартма, вĕсене хуравлама вĕрентесси; 3) сăмахсенче пусăм тĕрĕс лартма хăнăхтарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсем килте çырса килнине вуласа параççĕ.

**2. Кĕнекери 1, 2, 3-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăвва малтан вĕрентӳçĕ вуласа парать, ачасем итлеççĕ. Вĕрентӳçĕ ачасем ăнланнине 1-2 ыйту парса тĕрĕслет. Кайран ачасем ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçласа сăвăри сăмахсенче пусăм лартаççĕ, вулаççĕ, ăнланман сăмахсемпе ĕçлеççĕ. Унтан сăвва тепĕр хут вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ, ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлаççĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн сăвва ят параççĕ.

3-мĕш ĕçе икшерĕн ĕçлесе пурнăçлаççĕ. Пĕрле сӳтсе явнă хыççăн доска çине çырмалла:

Пăшăлтатрăм атте-не *(кама?)*

Çитерем-ха анне-не *(кама?)*

Çимест яшка-на *(мĕне?)*

**3. Кĕнекери 4-мĕшпе 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем ушкăнпа ĕçлесе схемăсем ӳкереççĕ, хăйсен схемисене Сергей Сергеевичăннисемпе танлаштараççĕ. Танлаштарнă чух схемăсем мĕншĕн тĕрлĕрен пулнине ăнлантармалла.

**4. Кĕнекери 6-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем ыйтусем лартса сăмахсене уйăштараççĕ, пĕрерĕн доска умне тухса çыраççĕ. Тĕслĕхрен:

*Кама? — ачасене; кама? — асаттене...*

Кайран сăмахсемпе предложенисем тупаççĕ.

**5. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу озаглавить стихотворение.

Могу изменить слова по вопросам *кама? мĕне? камсене? мĕнсене?*

Могу придумать предложения со словами на вопросы *кама? мĕне? камсене? мĕнсене?*

## 71-мĕш урок

### Тема: Пулăшар-ха аннене. *Кама? мĕне? камсене? мĕнсене?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *кама? мĕне? камсене? мĕнсене?* ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) *кама? мĕне? камсене? мĕнсене?* ыйтусем лартма, вĕсене хуравлама вĕрентесси; 2) харпăр хăй тĕллĕн вуласа содержание ăнланма, ӳкерчĕкпе усă курса вуланин содержанине каласа пама вĕрентесси; 3) ваттисен сăмахĕсене астуса юласси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

**2. Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Текста ачасем хăйсем тĕллĕн вулаççĕ. Вулама пуçличчен вĕрентӳçĕ ачасене пĕлмен сăмахсене асăрхаса-палăртса пыма сĕнет. Текста вуланă хыççăн çав сăмахсемпе ĕçлеççĕ. Кайран ӳкерчĕке сăнаççĕ, ӳкерчĕке сăнлакан вырăнсене калавра тупса вулаççĕ, вĕсемпе каласа панă чух усă кураççĕ.

**3. Кĕнекери 9-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ваттисен сăмахĕсене вуланă хыççăн йăнăш тума пултаракан вырăнсене тишкермелле, кайран пăхмасăр çырмалла. Çырнине кĕнекепе усă курса тĕрĕслемелле.

**4. Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу перевести предложения со словами на вопросы *кама? мĕне? камсене? мĕнсене?* на русский язык и наоборот.

Используя содержание текста, могу составить рассказ по рисунку.

Запомнил(а) пословицы.

Написал(а) пословицы по памяти.

## 72-мĕш урок

### Тема: Çемье. *Камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курасси.

***Урок задачисем:*** 1) сăмахсенче пусăм тĕрĕс лартма хăнăхтарасси; 2) *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи сăмахсем ытларах мĕнле сăмахсемпе çыхăннине пĕлесси; 3) ӳкерчĕксемпе усă курса текст тума хăнăхтарасси; 4) панă тĕслĕхпе усă курса пулас професси çинчен калаçу йĕркелесси; 5) чăвашла ваттисен сăмахĕсем патне çывăх пĕлтерĕшлĕ вырăсла ваттисен сăмахĕсене тупасси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Ĕç тетрадĕнчи тата кĕнекери 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем малтан ĕç тетрадĕнче панă сăвва вуласа сăмахсенче пусăм лартаççĕ, кайран кĕнекесене уçса сăвва сасăпа вулаççĕ, ӳкерчĕке сăнаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.

**2. Кĕнекери 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем предложенисене чăвашла куçарнă хыççăн схемăсене ăнлантараççĕ, Сергей Сергеевич сăмахĕсене вулаççĕ, танлаштараççĕ.

**3. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе çырмасăр пурнăçлани.**

**4. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем малтан ĕç хушнине вулаççĕ, унтан ӳкерчĕксене сăнаççĕ, унта мĕн курнине калаççĕ. Кайран сăмахсене вулаççĕ. Кĕнекере панă калав пуçламăшĕпе усă курса калава малалла тăсаççĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн 1-2 ача каласа парать. Юлашкинчен ачасем тĕслĕхпе усă курса хăйсен çемйисем çинчен каласа пама пултараççĕ.

**5. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**6. Кĕнекери 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**7. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**8. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Правильно ставлю ударение в словах стихотворения «Ĕçчен Наçтук».

Умею обобщать по схемам.

Знаю, с какими словами сочетаются существительные, отвечающие на вопросы *камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?*

Могу ставить к словам вопросы *камăн? мĕнĕн?*

Могу составить рассказ по картинкам.

Могу поговорить с другом о будущей профессии.

Понимаю смысл пословиц и могу подобрать к ним близкие по значению русские пословицы.

## 73-мĕш урок

### Тема: Туссем. Япала ячĕсен улшăнăвĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; япала ячĕсен вĕреннĕ падеж формисемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) япала ячĕсен вĕреннĕ падеж формисене пуплевре çирĕплетесси; 2) *туслăх* сăмах мĕнле пулнине, унăн пĕлтерĕшне ăнланасси; 3) чăвашла текстсене харпăр хăй тĕллĕн вулама хăнăхтарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Кĕнекери 1, 2, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Пĕрремĕш хăнăхтарура панă сăвва вĕçлеме мĕнле сăмах кирлине ачасем тӳрех тавçăраймасан вĕрентекенĕн калама васка-

малла мар, ӳкерчĕке сăнаттармалла, вара ачасем хăйсемех тавçăрса илеççĕ.

Çĕнĕ сăмахсемпе ĕçленĕ чух ачасене каскана ӳкерчĕкре туптармалла.

**2. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вĕренекенсем схемăсем патне çакăн йышши тĕслĕхсем тупма пултараççĕ: *аннен тутăрĕ, ĕнен хӳри, вăрмана каять, шывра ишет...*

**3. Кĕнекери 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан ачасем *тус* сăмах çумне *-лă* аффикс хушăнса пулнă сăмахпа ĕçлеççĕ, унăн пĕлтерĕшне вырăсла калаççĕ. Унтан *туслăх* сăмах мĕнле пулнине тишкереççĕ, предложенисем тупаççĕ.

**4. Кĕнекери 6-мĕшпе 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем текста хăйсем тĕллĕн вуласа тухаççĕ те мĕн ăнланнине пĕр-пĕрне каласа параççĕ (икшерĕн ĕçлеççĕ). Кайран вĕрентӳçĕ ыйтусем парса ăнланнине тĕрĕслет.

Кĕнекери 7-мĕшпе ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пĕрле тумалла.

**5. 10-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, вĕсене çывăх вырăсла ваттисен сăмахĕсем тупса калаççĕ. Ваттисен сăмахĕсем мĕне вĕрентни çинчен калаçаççĕ.

**6. Киле ĕç пани.**

Ваттисен сăмахĕсене астуса юлма тăрăшмалла.

**7. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю стихотворение и правильно подобрал подходящее слово.

Умею находить имена существительные и ставить к ним вопросы.

Понимаю схемы и могу подобрать к схемам словосочетания.

Читаю самостоятельно и понимаю содержание прочитанного текста.

## 74-мĕш урок

### Тема: Туссем. Япала ячĕсен улшăнăвĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; япала ячĕсен вĕреннĕ падеж формисемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) япала ячĕсен вĕреннĕ падеж формисене пуплевре çирĕплетесси; 2) текстăн ячĕ унăн тĕп шухăшĕнчен тухнине ăнкарасси; 3) ӳкерчĕксем тăрăх текст содержанине каласа пама хăнăхтарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени, икĕ ваттисен сăмахне пăхмасăр çырни.**

Ачасем малтан хăйсем вĕренсе килнĕ ваттисен сăмахĕсене каласа параççĕ, кайран икĕ ваттисен сăмахне çырса хураççĕ. Хăйсем çырнине кĕнекепе усă курса хăйсемех тĕрĕслеççĕ.

**2. Урок темине палăртни.**

Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçласа урок темине палăртаççĕ. Паянхи урок теми — «Туссем».

**3. Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**4. Кĕнекери 9-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Малтан ĕçе сăмахпа каласа тăваççĕ, кайран ĕç тетрадĕнче çырса пурнăçлаççĕ. Ачасен ĕçĕсене вĕрентӳçĕ тĕрĕслет.

**5. Киле ĕç пани.**

Харпăр хăйĕн тусĕ çинчен каласа пама хатĕрленмелле.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Пользуясь рисунками, могу рассказать содержание текста «Туслăх».

Пользуясь рисунками, могу написать содержание текста «Туслăх».

Правильно пишу пословицы по памяти.

## 75-мĕш урок

### Тема: Туслăха упрар. Япала ячĕсен улшăнăвĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) япала ячĕсен вĕреннĕ формисене пуплевре çирĕплетесси; 2) ыйтусене хуравласа тус çинчен каласа пама хăнăхтарасси; 3) вуланă текстăн содержанине ӳкерчĕксем тăрăх каласа пама хăнăхтарасси; 4) туслăх çинчен калакан ваттисен сăмахĕсене астуса юласси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Кĕнекери 4-мĕш ĕçри ыйтусемпе усă курса ачасем хăйсен тусĕсем çинчен каласа параççĕ.

**2. Кĕнекри 1, 2, 3-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Малтан сăвва вĕрентӳçĕ вуласа парать, ачасем итлеççĕ. Унтан вĕрентӳçĕ ачасем илтнине еплерех ăнланнине 2—3 ыйту парса

тĕрĕслет. Кайран кĕнекери 2-мĕшпе 3-мĕш ĕҫсене пурнăҫлаҫҫĕ, сăвва тепĕр хут вулаҫҫĕ.

Сăвă содержанине кĕнекери 2—3-мĕш, ĕҫ тетрадĕнчи 1-мĕш ĕҫсене пурнăҫланă хыҫҫăн калаттармалла. Малтан ачасене сăвă содержанине калама хатĕрлемелле.

**3. Кĕнекери 5, 6, 7, 8-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.**

**4. Кĕнекери 9-мĕш, ĕҫ тетрадĕнчи 3-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.**

Малтан сăмахпа каласа пурнăҫлаҫҫĕ, кайран ҫырса хураҫҫĕ.

**5. Кĕнекери 10-мĕш, ĕҫ тетрадĕнчи 4-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.**

Ваттисен сăмахĕсене пăхса ҫырса илмелле.

**6. Киле ĕҫ пани.**

Ĕҫ тетрадĕнчи 2-мĕш ĕҫе пурнăҫламалла. Тус ҫинчен калав ҫырнă чухне ачасене ыйтусене тимлĕ пăхмалли ҫинчен асăрхаттармалла. Хураври сăмахсен йĕрки ыйтури пекех пулмаллине, ыйту сăмахĕ вырăнне кирлĕ сăмах ҫеҫ лартмаллине тата хăшпĕр сăмах форми улшăнма пултарнине аса илмелле.

**7. Ĕҫ тетрадĕнчи 5-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.**

Хакламалли ĕҫсен тĕсĕсем:

Могу пересказать содержание стихотворения «Туслăх».

Могу рассказать о своем друге.

Используя рисунки, могу рассказать содержание текста.

Знаю пословицы о дружбе на чувашском языке.

## 76-мĕш урок

### Тема: Туслăх — пысăк пуянлăх. *Камран? камсенчен?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *камран? камсенчен?* ыйтусенчи япала ячĕсене пуплеве кĕртесси.

***Урок задачисем:*** 1) вуласа панине итлесе ăнланма хăнăхтарасси; 2) *камран? камсенчен?* ыйтусен пĕлтерĕшĕсене, ку ыйтусенчи сăмахсем мĕнле пулнине пĕлесси; 3) *камран? камсенчен?* ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕҫе пурнăҫлани.**

Вĕрентӳҫĕ сăввăн кашни ярăмне уйрăммăн вуласа парать, ачасем итлеҫҫĕ, унтан вĕрентӳҫĕ ачасем ăнланнине ыйтусем парса тĕрĕслет, кайран ачасем вулаҫҫĕ те куҫараҫҫĕ. Кашни куплетпа ҫапла ĕҫлемелле. Юлашкинчен ĕҫре панă ыйтăва хуравлаҫҫĕ.

**2. Кĕнекери 2, 3, 4, 5-мĕш, ĕҫ тетрадĕнчи 1-мĕш ĕҫсене пурнăҫлани.**

Кĕнекери 2-мĕш ĕçри ыйтусене тӳрех хурав параймасан сăвă патне панă ӳкерчĕке пăхма хушмалла.

Кĕнекери 3-мĕш ĕçпе ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пĕрле тумалла.

Кĕнекери 5-мĕш ĕçе доска çинче пурнăçламалла.

**3. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла. Класра ĕç тетрадĕнче панă тĕслĕхе туса пăхмалла.

**4. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание прослушанного текста.

Могу ответить на вопросы по содержанию стихотворения «Мĕн пуян?».

Понимаю значение слов на вопросы *камран? камсенчен?*

Различаю слова на вопросы *камран? камсенчен?*

Могу придумать предложения со словами, отвечающими на вопросы *камран? камсенчен?*

## 77-мĕш урок

### Тема: Туслăх — пысăк пуянлăх. *Камран? камсенчен?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *камран? камсенчен?* ыйтусенчи япала ячĕсене пуплеве кĕртесси.

***Урок задачисем:*** 1) *камран? камсенчен?* ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) ӳкерчĕксемпе усă курса вуланă текстăн содержанине каласа пама хăнăхтарасси; 3) юлташ çинчен каланă ваттисен сăмахĕсене астуса юласси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсем хатĕрлесе килнĕ ребуссене шутлаççĕ.

**2. Кĕнекери 6, 7, 8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**3. Кĕнекери 9-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Текст содержанине уçса паракан ваттисен сăмахĕ — «Юлташ лайăххи инкекре курăнать», çавăнпа ăна çырма суйласа илмеллине каламалла.

**4. Киле ĕç пани.**

Вĕреннĕ ваттисен сăмахĕсене килтисене каласа пама сĕнмелле.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Используя рисунки, могу пересказать содержание текста «Чăн юлташ». Знаю пословицы о друге.

## 78-мĕш урок

### Тема: Анне. *Мĕнрен? мĕнсенчен?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *мĕнрен? мĕнсенчен?* ыйтусенчи сăмахсене пуплеве кĕртесси.

***Урок задачисем:*** 1) словарьпе ĕçлеме хăнăхтарасси; 2) *мĕнрен? мĕнсенчен?* ыйтусенчи сăмахсем мĕнле пулнине, вĕсен пĕлтерĕшне ăнланасси, пуплевре усă курасси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăвва вĕрентӳçĕ вуласа парать, ачасем итлеççĕ. Кайран ыйтусем парса содержание ăнланнине тĕрĕслет.

Ачасем сăвва вулаççĕ, кĕнеке страницинче тата хыçалта панă словарьпе усă курса куçараççĕ. Словарьте сăмаха шыранă чух ăна пуçламăш формăна лартмалли, унтан сăмах çумне хушăнакан аффикс пĕлтерĕшне пĕлмелли çинчен аса илтермелле. Словарьпе куçарайман сăмахсем пулсан вĕрентӳçĕрен е пĕр-пĕринчен ыйтса вĕсен пĕлтерĕшне пĕлеççĕ.

**2. Кĕнекери 3, 4, 5-мĕш ĕçсене, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**3. Кĕнекери 6-мĕшпе 8-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**4. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Тупсăмĕсене класра тупаççĕ. Тупсăмĕсем: *самолет, çĕлен, пăр.*

**5. Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Умею работать со словарем.

Знаю значение слов на вопросы *мĕнрен? мĕнсенчен?*

Различаю слова на вопросы *мĕнрен? мĕнсенчен?* от других слов.

Могу придумать предложения со словами на вопросы *мĕнрен? мĕнсенчен?*

## 79-мĕш урок

### Тема: Анне. *Мĕнрен? мĕнсенчен?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *мĕнрен? мĕнсенчен?* ыйтусенчи сăмахсене пуплеве кĕртесси.

***Урок задачисем:*** 1) *мĕнрен? мĕнсенчен?* ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курасси; 2) пуплеври уйрăм сăмахсем патне ыйтусем лартма хăнăхтарасси; 3) вуланă текстпа усă курса ӳкерчĕке сăнласа пама хăнăхтарасси; 4) ыйтусемпе усă курса амăшĕсем çинчен пĕр-пĕринпе калаçасси; 5) панă тĕслĕхпе усă курса амăшĕсем çинчен каласа парасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Аялтан туртса паллă тунă сăмахсене тишкермелле, иртнĕ урокри схемăсене аса илсе çирĕплетмелле. Тĕслĕхсем туптарма юрать.

**2. Кĕнекери 9-мĕшпе 10-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Паллă тунă сăмахсене доска çине çырса тишкерме юрать.

10-мĕш ĕçе пурнăçланă чух суйлавлă вулавпа усă курма юрать. Ачасем ӳкерчĕке сăнлакан вырăна текстра тупса вулаççĕ.

**3. Кĕнекери 11-мĕшпе 12-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**4. Киле ĕç пани.**

Килте ачасен 12-мĕш ĕçре панă текстпа усă курса хăйсен амăшĕсем çинчен каласа пама хатĕрленсе килмелле.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Умею ставить вопросы к выделенным словам.

Используя текст «Чăрсăр тăмана чĕппи», могу составить рассказ по рисунку.

Используя вопросы, могу поговорить с другом о своей маме.

Используя текст, могу рассказать о своей маме.

## 80-мĕш урок

### Тема: Суяпа инçе каяймăн. *Ăçтан?* ыйтури япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *ăçтан?* ыйтури сăмахсемпе пуплевре усă курасси.

***Урок задачисем:*** 1) чăвашла вуласа панине итлесе ăнланма хăнăхтарасси; 2) *ăçтан?* ыйтури сăмахсен пулăвне, пĕлтерĕшне ăнланасси; 3) вуланă текст тăрăх ыйтусемпе ĕçлеме хăнăхтарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1, 2, 3-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**2. Кĕнекери 4, 5, 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

5-мĕш ĕçе пурнăçланă хыççăн ачасем *ăçтан?* ыйтури сăмахсен пĕлтерĕшĕ çинчен пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, хăйсен пĕтĕмлетĕвне Сергей Сергеевич пĕтĕмлетĕвĕпе танлаштараççĕ.

**3. Кĕнекери 7-мĕшпе 8-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем «Суяпа инçе каяймăн» ваттисен сăмахне астуса юлнипе çыраççĕ, мĕншĕн тесен вăл юмахăн тĕп шухăшне уçса парать.

**4. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăмахсем: тилĕ, пăши, çӳлевĕç, пурăш, арăслан, чĕрĕп, упа, пакша — тискер чĕр чунсем.

**5. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание прослушанного текста.

Могу найти ответ на вопрос в стихотворении «Пушă пурак».

Знаю, как образуются слова на вопрос *ăçтан?*

Используя схему, могу подобрать нужные аффиксы к словам.

Понимаю значение слов на вопрос *ăçтан?*

Могу выполнить задания к сказке «Тилĕ çури — шкул ачи».

## 81-мĕш урок

### Тема: Кушак тус. *Ăçта?* ыйтури япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *ăçта?* ыйтури сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) вĕрентӳçĕ вуланине итлесе ăнланма хăнăхтарасси; 2) *ăçта?* ыйтури сăмахсем мĕнле пулнине, вĕсен пĕлтерĕшне ăнланасси, пуплевре усă курасси; 3) харпăр хăй тĕллĕн вулас, вуланине ăнланас хăнăхусене аталантарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1, 3, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

«Ӳлĕмрен» сăвăри палăртнă сăмахлă предложенисене доска çине çырса тишкереççĕ.

**2. Кĕнекери 5-мĕшпе 6-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем 5-мĕш ĕçе пурнăçласа *ăçта?* ыйтури сăмахсен пĕлтерĕшĕсем пирки пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, Сергей Сергеевич ăнлантарнипе танлаштараççĕ.

**3. Кĕнекери 2, 7, 8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Текстпа ĕçличчен çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене астуса юлма тăрăшаççĕ.

**4. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 12-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли виçесен тĕсĕ:

В рассказе более трех предложений.

Все предложения взаимосвязаны.

Правильный порядок слов в предложении.

Правильно говорит слова.

Использованы материалы стихотворения «Йăпанмăш» и текста «Мĕнрен тĕлĕннĕ мăр-мăр кушак».

**6. Кĕнекери 13-мĕшпе 14-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**7. Кĕнекери 15-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Кам миçе ваттисен сăмахне астуса юлать, çавăн чухлĕ çырать. Ачасем хăйсем суйласа илсе çыраççĕ.

**8. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**9. Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание стихотворения «Ӳлĕмрен».

Могу выделять слова на вопрос *ăçта?* по аффиксу и по смыслу.

Могу рассказать содержание текста «Мĕнрен тĕлĕннĕ мăр-мăр кушак» на русском языке.

## 82-мĕш урок

### Тема: Кушак тус. *Ăçта?* ыйтури япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *ăçта?* ыйтури сăмахсемпе пуплевре усă курасси.

***Урок задачисем:*** 1) *ăçта?* ыйтури сăмахсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 2) вуланă текстпа тата ӳкерчĕкпе усă курса кушак çинчен каласа пама вĕрентесси; 3) ваттисен сăмахĕсене астуса юласси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Килте тунă ĕçе тĕрĕсленĕ май ачасем иртнĕ урокра вĕреннĕ материала аса илеççĕ, правило-ориентира калаççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ.

**2. Кĕнекери 9, 10, 11-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

11-мĕш ĕçе тăвиччен кушак çинчен каланине хакламалли критерисене (план евĕрлĕ) палăртмалла. Тĕслĕхрен:

Кушак ячĕ.

Унăн тĕсĕ.

Вăл мĕнле, мĕн тума юрататать.

Кушак — манăн тус.

**3. Кĕнекери 13-мĕшпе 14-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**4. Кĕнекери 15-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**5. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçламалла. Ӳкерчĕке сăнласа пама пĕлмелле.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу рассказать о кошке.

Могу составить предложения со словами на вопрос *ăçта?* и перевести их на русский язык.

Понимаю смысл пословиц.

## 83-мĕш урок

### Тема: Çĕр çинче этем туман ĕç çук. *Ăçта?* ыйтури япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *ăçта?* ыйтури сăмахсемпе пуплевре усă курасси.

***Урок задачисем:*** 1) словарьпе ĕçлеме хăнăхтарасси; 2) музыка инструменчĕсен ячĕсене аса илесси, вĕсемпе пуплевре усă курасси; 3) Василий Сухомлинский юмахĕсене аса илесси, пĕр юмахне суйласа илсе содержанине каласси; 4) ваттисен сăмахĕсен пĕлтерĕшне ăнланасси, астуса юласси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем тупнă сăмаха калаççĕ, ӳкерчĕкĕсене пĕр-пĕрне кăтартаççĕ, мĕн ӳкернине каласа параççĕ.

**2. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăвă çăмăл мар, ăна ăнланма ӳкерчĕк пулăшать. Ӳкерчĕкпе сăвва вĕрентекен вуласа панă хыççăн ĕçлемелле.

Ӳкерчĕкпе ĕçлемелли ыйтусемпе ĕçсем:

— Ку кам?

— Унăн аллинче мĕн пур?

— Таня мĕн тăвать? Çав вырăна вуласа парăр.

— Таня сĕрме купăспа каланине мĕн итлет? Çав вырăна тупса вула.

**3. Кĕнекери 2-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Вĕрентекен ачасене музыка инструменчĕсене кăтартать, ачасем вĕсен ячĕсене кĕнекере чăвашла тупса вулаççĕ. Ачасем хăшпĕрисен ячĕсене маннă пулсан вĕсене словарьте шыраса тупма хушмалла. Кайран ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе туса сăмахсене çирĕплетеççĕ, вĕсемпе предложенисем тупаççĕ.

**4. Кĕнекери 3, 4, 5-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**5. Кĕнекери 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем астуса юлнă ваттисен сăмахĕсене çыраççĕ, кĕнекепе усă курса тĕрĕслеççĕ.

**6. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçламалла. Ачасем Василий Сухомлинский юмахĕсене маннă пулсан кĕнеке страницисене каялла уçса пăхма сĕнмелле. Кĕнекери юмахсем: *Мĕнрен тĕлĕннĕ мăрмăр кушак. Тилĕ çури — шкул ачи. Чăрсăр тăмана чĕппи.*

Ачасем хăйсене килĕшнĕ пĕр юмаха суйласа илеççĕ, аса илме вулаççĕ, каласа пама хатĕрленеççĕ.

**7. Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Незнакомые слова могу перевести с помощью словаря.

Знаю названия музыкальных инструментов на чувашском языке.

Могу рассказать содержание сказки «Сĕрме купăспа уйăх» на русском языке.

Знаю сказки Василия Сухомлинского.

Понимаю смысл пословиц и могу писать их по памяти.

## 84-мĕш урок

### Тема: «Икĕ çăл» юмах. *Кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* ыйтусенчи сăмахсене пуплеве кĕртесси.

***Урок задачисем:*** 1) *кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* ыйтусенчи сăмахсем мĕнле пулнине, вĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнланасси; 2) *кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 3) текстпа ĕçлеме пĕлнине çирĕплетесси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсем суйласа илнĕ юмаха каласа параççĕ. Вĕрентӳçĕ паян урокра тата тепĕр юмах вулассине çинчен пĕлтерет, вăл мĕн çинчен пулнине сăвă итленĕ хыççăн палăртма пулнине калать.

**2. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăвва вĕрентӳçĕ вуласа парать, ачасем итлеççĕ. Кайран сăвă мĕн çинчен пулнине калаççĕ, урокра мĕн çинчен юмах вулассине палăртаççĕ.

**3. Кĕнекери 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**4. Кĕнекери 3, 4, 5, 6-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ĕçсене пурнăçласа пĕтерсен ачасем пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: *кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* ыйтусенчи сăмахсем мĕнле аффикссем хушăнса пулнине тата мĕне пĕлтернине калаççĕ.

**5. Кĕнекери 7-мĕшпе 8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем хăйсен пĕтĕмлетĕвне Анюкпа Ванюкăн тата Сергей Сергеевичăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе танлаштараççĕ.

**6. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**7. Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу рассказать сказку.

Понимаю содержание прослушанного текста.

Могу выполнить задания к сказке «Икĕ çăл».

Знаю, как образуются слова на вопросы *кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* и их значение.

Могу поговорить с другом о роднике.

Могу придумать предложения со словами на вопросы *кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?*

## 85-мĕш урок

### Тема: «Икĕ çăл» юмах. *Кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* ыйтусенчи сăмахсене пуплеве кĕртесси.

***Урок задачисем:*** 1) *кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси; 2) хальхи вăхăтри глаголсен нумайлă хисеп, виççĕмĕш сăпат формисене тĕрĕс çырма вĕрентесси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 9, 10, 11, 12, 13-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**2. Кĕнекери 15-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Вырăсла тупмалли юмах тĕслĕхĕ:

*В нем — прозрачная вода,*
*Напоит тебя всегда.*
*Из глубин земли возник,*
*Ручейком потек ... (родник).*

**3. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 14-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**4. Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Знаю, как пишутся глаголы третьего лица множественного числа настоящего времени.

Могу изменить слово *çăл* по вопросам.

Знаю отгадку загадки и похожую на русском языке загадку.

## 86-мĕш урок

### Тема: Тус-юлташлă пулмалла. *Камсăр? мĕнсĕр? камсемсĕр? мĕнсемсĕр?* ыйтусенчи япала ячĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; *камсăр? мĕнсĕр? камсемсĕр? мĕнсемсĕр?* ыйтусенчи сăмахсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) *камсăр? мĕнсĕр? камсемсĕр? мĕнсемсĕр?* ыйтусенчи сăмахсем мĕнле пулнине тата мĕне пĕлтернине пĕлесси; 2) текстăн тĕп шухăшне вуласа ăнланма вĕрентесси; 3) панă тĕслĕхпе усă курса килти чĕр чунсем çинчен тупмалли юмахсем йĕркелесси; 4) юлташ çинчен каласа пама вĕрентесси.

*Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăвва килте вĕренме сĕнмелле.

**2. Кĕнекери 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан ӳкерчĕксемпе усă курса килти чĕр чунсен ячĕсене аса илеççĕ, вĕсене сăнлаççĕ, унтан панă тĕслĕхе вулаççĕ, унпа усă курса тупмалли юмахсем тăваççĕ.

**3. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ушкăнсене хут листисем салатса памалла. Ачасем пĕрле ĕçлесе палăртнă сăмахсене юпана çырса илеççĕ, аффикссене палăртаççĕ,

кашни сăмахпа юнашар ыйтăвне çыраççĕ. Юлашкинчен пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: мĕншĕн вăл е ку ыйтăва лартнине калаççĕ, хăçан мĕнле аффикс хушăннине схемăпа кăтартаççĕ, сăмахсем мĕне пĕлтернине калаççĕ.

**4. Кĕнекери 5-мĕшпе 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем хăйсен пĕтĕмлетĕвĕсене Анюкпа Ванюкăн тата Сергей Сергеевичăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе танлаштараççĕ.

**5. Кĕнекери 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ачасем сăмахсем çумне аффикссем хушнă чух ыйтăвĕсене калаççĕ.

**6. Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ача юлташĕ çинчен мĕн чухлĕ нумайрах хушса калать, çавăн чухлĕ лайăхрах.

**7. Кĕнекери 9-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**8. Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Сăмахсенче аффикссем хушнă чух ыйтăвĕсене каламалла.

**9. Киле ĕç пани.**

«Икĕ автан» сăвва пăхмасăр вĕренмелле.

**10. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю смысл содержания стихотворения «Икĕ автан».

Могу придумать загадки о домашних животных.

Знаю, как образуются слова на вопросы *камсăр? мĕнсĕр? камсемсĕр? мĕнсемсĕр?* и их значения.

Могу поставить слова в предложениях в нужной форме.

Могу рассказать о своем друге.

## 87-мĕш урок

### Тема: 3. Нестеровăн калавĕсем

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси, тавракурăмне анлăлатасси.

***Урок задачисем:*** 1) З.А. Нестерова çыравçăн пултарулăхĕпе паллаштарасси; 2) илемлĕ вулав хăнăхăвне аталантарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Сăвва пăхмасăр калама вĕреннине илемлĕ вулавçăсен конкурсĕ евĕр тĕрĕслеме пулать. Ачасем пĕр-пĕрне итлеççĕ, хаклаççĕ.

**2. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Вĕрентӳçĕн сăвва васкамасăр, илемлĕ вуласа памалла, унтан

ӳкерчӗкпе ӗҫлеттермелле, ӗҫ хӑҫан, мӗнле уйӑхра пулнине ыйтмалла. Ҫӗнӗ сӑмахсемпе ӗҫленӗ хыҫҫӑн ачасем сӑвва вулаҫҫӗ, куҫараҫҫӗ.

**3. Кӗнекери 3-мӗшпе 4-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Юмаха кашни ушкӑнах вулаттарма тӑрӑшмалла. Унтан ачасен вулавне тишкермелле: лайӑх енӗсене те, ҫитменлӗхӗсене те палӑртмалла, пӗрле сӳтсе явмалла. Ҫапла ӗҫлени ытти ушкӑнсене лайӑхрах вулама пулӑшать.

**4. Кӗнекери 9-мӗшпе 10-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

**5. Киле ӗҫ пани.**

З.А. Нестерова ҫинчен анлӑрах каласа пама хатӗрленсе килмелле.

**6. Ӗҫ тетрадӗнчи 4-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Хакламалли ӗҫсен тӗсӗсем:

Понимаю содержание прослушанного текста.

Могу кратко пересказать содержание сказки «Кил хуралҫи» на русском языке.

Могу читать выразительно.

Знаю о Зое Нестеровой.

Могу поговорить с другом о Зое Нестеровой.

## 88-мӗш урок

### Тема: З. Нестеровӑн калавӗсем. *Камшӑн? мӗншӗн? камсемшӗн? мӗнсемшӗн?* ыйтусенчи япала ячӗсем

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси; *камшӑн? мӗншӗн? камсемшӗн? мӗнсемшӗн?* ыйтусенчи сӑмахсене пуплеве кӗртесси.

***Урок задачисем:*** 1) *камшӑн? мӗншӗн? камсемшӗн? мӗнсемшӗн?* ыйтусенчи сӑмахсен пулӑвне, пӗлтерӗшӗсене ӑнланасси; 2) япала ячӗсене ыйтусене кура улӑштарма хӑнӑхтарасси; 3) илемлӗ вулав хӑнӑхӑвне аталантарасси.

#### *Урок юхӑмӗ*

**1. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.**

Ачасем З.А. Нестерова ҫинчен каласа параҫҫӗ, вӗрентӳҫӗ паянхи урокра ҫыравҫӑн тата тепӗр юмахӗпе паллашасси ҫинчен пӗлтерет, кӗнекесене 170-мӗш страницӑна уҫма хушать.

**2. Кӗнекери 11-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Вӑхӑт пулсан «Кишӗр» юмаха рольпе вуламалла.

**3. Кӗнекери 5, 6, 7-мӗш, ӗҫ тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Кĕнекери 5-мĕш ĕçе ĕç тетраденчи 1-мĕш ĕçпе пĕрле пурнăçласа пĕтĕмлетӳсем тăваççĕ, кĕнекерисемпе танлаштараççĕ, уйрăмлăхĕсене ăнлантараççĕ. Кайран Сергей Сергеевич ăнлантарнине вулаççĕ.

**4. Кĕнекери 8-мĕш, ĕç тетраденчи 2-мĕш ĕççене пурнăçлани.**

Ĕçлесе пĕтернĕ хыççăн тумалли пĕтĕмлетӳ: ыйтусенчи аффикссемпе сăмахсенчи аффикссем пĕр пек.

**5. Кĕнекери 12-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, куçараççĕ, шухăшĕсене ăнланаççĕ.

**6. Киле ĕç пани.**

Ваттисен сăмахĕсене вĕренсе килмелле.

**7. Ĕç тетраденчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание сказки «Кишĕр».

Понимаю смысл пословиц.

Знаю, как образуются слова на вопросы *камшăн? мĕншĕн? камсемшĕн? мĕнсемшĕн?*

Понимаю значение слов на вопросы *камшăн? мĕншĕн? камсемшĕн? мĕнсемшĕн?*

## 89-мĕш урок

### Тема: Юмахсем. Япала ячĕсен улшăнăвĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) япала ячĕсене ыйтăвĕсене кура улăштарма хăнăхтарасси; 2) вулавăн ăнланулăхне, палăртулăхне аталантарасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсем вĕренсе килнĕ ваттисен сăмахне (сăмахĕсене) пăхмасăр çыраççĕ, кайран кĕнекепе усă курса тĕрĕслеççĕ, йăнăшсемпе ĕçлеççĕ.

**2. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕççене пурнăçлани.**

Малтан ӳкерчĕке сăнамалла. Унта мĕн курнине ачасем вырăслах калама пултараççĕ.

Кайран сăвва вуламалла, ӳкерчĕке сăнлакан йĕркесене палăртмалла.

**3. Кĕнекери 3, 4, 5-мĕш ĕççене пурнăçлани.**

Кĕнекери В. Сухомлинский çырнă «Тилĕ çури — шкул ачи» юмаха аса илеççĕ. Ачасем тилĕ çинчен хăйсем тĕллĕн вуланă е курнă ытти юмахсене те аса илеççĕ. Вĕсенче тилĕ мĕнле пулнине калаççĕ, тилле сăнласа параççĕ.

**4. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем предложенисене доска çине çыраççĕ, «йытă» сăмахăн тĕрлĕ формисене тишкереççĕ.

**5. Кĕнекери 7-мĕшпе 8-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Хуравланă чух сăмах çумне мĕнле аффикс хушăнасси ыйту сăмахĕнчи аффиксран килнине аса илтермелле. Ачасем 7-мĕш ĕçе килте çырса пурнăçлаççĕ.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Диктант çыриччен юмахăн 1-мĕш абзацне тимлĕ вуламалла. Çак сăмахсенче йăнăш тăвасран асăрхаттармалла: *пĕррехинче, йытăпа, автан, вăхăт, хăпарса.*

*Ă, ĕ, ӳ, ç* сас паллисем мĕнле сăмахсенче пуррине пăхмалла.

Ачасем пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслеççĕ, йăнăш çырнă сăмахсене доска çине тĕрĕс çыраççĕ, йăнăш тунă вырăна аялтан туртса палăртаççĕ. Пурте пĕрле йăнăшсене ушкăнлаççĕ.

**7. Киле ĕç пани.**

Ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**8. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу найти описание рисунка в стихотворении Лидии Сарине.

Могу пересказать содержание сказки «Йытă, автан тата тилĕ» на русском языке.

Умею читать выразительно.

Помню прочитанные сказки о лисе.

Могу описать лису.

Могу ставить имена существительные в зависимости от вопроса в разные формы.

Правильно пишу под диктовку.

Могу сгруппировать свои ошибки.

## 90-мĕш урок

### Тема: Вашават ачасем. Япала ячĕсен улшăнăвĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; япала ячĕсен тĕрлĕ падеж формипе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) предложенисенчи тĕрлĕ формăри япала ячĕсем патне ыйту лартма, вĕсен аффиксĕсене палăртма хăнăхтарасси; 2) япала ячĕсене пĕлтерĕшĕсене кура тĕрлĕ формăра лартма вĕрентесси; 3) текстпа ĕçлеме хăнăхтарасси; 4) диктант çырасси, йăнăшсемпе ĕçлесси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕшпе 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăвва вуличчен çĕнĕ сăмахсемпе паллашмалла, ӳкерчĕкпе ĕçлемелле. Ыйтусене хуравламалла:

— Ӳкерчĕкре камсене куратăр?

— Мучин аллисенче мĕн-мĕн пур?

— Сумкăра мĕн пур?

— Сумки мĕнле?

— Ванюк мучие мĕн калать-ши? Сăвва вуласа пĕлер-ха.

Ачасем сăвва сасăпа вуласа тухаççĕ, унтан Ванюк сăмахĕсене тупаççĕ, тепĕр хут вулаççĕ. Малалла вĕрентӳçĕ ĕçсем хушать, ачасем пурнăçлаççĕ.

— Ватă çын савăннине кăтартакан йĕркесене вуласа парăр.

— Ватă çын Ванюк пирки мĕн калать? Тупса вулăр.

— Ванюк мĕнле ача?

**2. Кĕнекери 3-мĕшпе 4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**3. Кĕнекери 5-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Вуланă хыççăн йăнăш тăвасран асăрхаттарма çак сăмахсемпе ĕçлемелле: *çанталăк, выртать, икĕ, лараççĕ, вĕсем, апат, асăрхарĕ, шеллерĕ, вĕсене, çăкăр, тĕпренчĕкĕ, кĕрпи, пачĕ.* Йăнăш тума пултаракан вырăнсене палăртмалла. Çыриччен ачасене текста хăйсем тĕллĕн тимлĕн пăхса вулама хушмалла. Çырнă хыççăн класри пур ача та тунă йăнăшсене ушкăнласа доска çине çырмалла, мĕншĕн, мĕн пĕлмен пирки йăнăш тунине калаттармалла. Ĕç тетрадĕнче кашни ача хăйĕн йăнăшĕсене тӳрлетсе сăмахсене ушкăнласа тĕрĕс çырать.

**4. Киле ĕç пани.**

Ачасене килте хăйсем тунă ырă ĕçсем çинчен каласа пама хатĕрленсе килме сĕнмелле. Урокра вуланă текстсемпе усă курма юранине каламалла.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание стихотворения «Мучи тав тăвать».

Могу продолжить диалог между Димой и бабушкой в рассказе «Туссем».

Могу писать без ошибок текст «Илемпи пулăшрĕ» под диктовку учителя.

Могу находить и группировать ошибки в диктанте и объяснить причину.

## 91-мĕш урок

### Тема: Вашават ачасем. Япала ячĕсен улшăнăвĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; япала ячĕсен тĕрлĕ падеж формипе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

***Урок задачисем:*** 1) предложенисенчи тĕрлĕ формăри япала ячĕсем патне ыйту лартма, вĕсен аффиксĕсене палăртма хăнăхтарасси; 2) япала ячĕсене пĕлтерĕшĕсене кура тĕрлĕ формăра лартма вĕрентесси; 3) текстпа ĕçлеме хăнăхтарасси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсем тунă ырă ĕçсем çинчен каласа параççĕ.

**2. Кĕнекери 6-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Текста пĕр хут пĕтĕмĕшле вуламалла. Унтан кашни ӳкерчĕке вырăсла сăнламалла та чăвашла текстра туптарса вулаттармалла. Ытлашши предложени вуламалла маррине асăрхаттармалла, вуланă хыççăн тĕрĕс тупса вуланине пĕрле сӳтсе явмалла.

**3. Кĕнекери 7-мĕшпе 8-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

7-мĕш ĕçе çырмасăр пурнăçлама юрать.

**4. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 9-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

Урокра ĕçе çырмасăр тумалла. Сăмахăн мĕнле формине лартмаллине ыйту парса пĕлеççĕ. Ыйту параççĕ, ыйту сăмахĕнчи аффикса уйăраççĕ, сăмах çумне çав аффикса хушса калаççĕ, çыраççĕ.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу найти описание каждого рисунка в тексте «Пулăш».

Могу поставить к выделенным словам в предложении вопросы и подчеркнуть аффиксы.

Используя текст, могу рассказать о своей деревне (городе).

Могу списать предложения, вставляя слово «шкул» в нужной форме.

## 92-мĕш урок

### Тема: Пире вăрçă кирлĕ мар

***Урок тĕллевĕ:*** Çĕнтерӳ кунĕ çинчен калаçасси.

***Урок задачисем:*** 1) «Куртăм вăрçă кинора» сăввăн содержанине ăнланасси; 2) «Аслашшĕн вуннăмĕш пӳрни» калава мĕн-

шĕн çавăн пек ят панине ăнлантарасси; 3) Çĕнтерӳ кунĕ çинчен калаçасси; 4) ветеранпа тĕл пулни çинчен ӳкерчĕк тăрăх каласа парасси.

***Урок юхăмĕ***

**1. Кĕнекери 1, 2, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**2. Кĕнекери 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Ачасем калава мĕншĕн «Аслашшĕн вуннăмĕш пӳрни» ят панине тавçăраймасан кашни пайне вуласа вырăсла содержанине каламалла, ыйтăва хуравлама пулăшакан вырăна тепĕр хут вуламалла.

**3. Кĕнекери 5, 6, 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Малтан 6-мĕш ĕçе пурнăçласан аван. Текстăн 1-мĕшпе 3-мĕш абзацĕсене пăхса çырса илнĕ хыççăн пĕр-пĕрин ĕçĕсене тĕрĕслемелле, хакламалла. Хакламалли виçесем çинчен тĕрĕсличчен класпа калаçса татăлмалла («5» паллă — йăнăшсăр, «4» — 1—2 йăнăш, «3» — 3—5 йăнăш, «2» — 6 е ытларах йăнăш). 5-мĕшпе 7-мĕш ĕçсене пурнăçланă чух 6-мĕш ĕçри материалпа усă курмалла.

**4. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçламалла. Урокра ачасем ушкăнсене уйăлаççĕ, проект темине суйласа илеççĕ, ушкăнри кашни ачан мĕн тумаллине, хăçан пĕрле пуçтарăнса проекта хатĕрлесе çитерессине палăртаççĕ. Проектсене Çĕнтерӳ кунне халалласа ирттерекен класс тулашĕнчи ĕçсем вăхăтĕнче хӳтĕлемелле.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание стихотворения «Куртăм вăрçă кинора».

Могу объяснить, почему рассказ назван «Аслашшĕн вуннăмĕш пӳрни».

Могу пересказать содержание текста «Тав сире, çĕнтерӳ салтакĕсем».

Могу рассказать по рисунку о встрече с ветераном войны.

## 93-мĕш урок

### Тема: Омонимсем.
### Вĕреннине аса илни, çирĕплетни

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; омонимсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси.

***Урок задачисем:*** 1) глаголсен вĕреннĕ формисене аса илсе çирĕплетесси; 2) омонимсемпе паллаштарасси, вĕсемпе пуплевре усă курасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1, 2, 3-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăç-лани.**

3-мĕш ĕçе пурнăçланă чух кашни ушкăна хут листи памалла. Пур ĕçе те унта тăваççĕ. Ушкăнсем тунă схемăсенчен тĕрĕссисене суйласа илнĕ хыççăн кашни ача çав схемăна хăйĕн тетрадьне ÿкерсе хурать.

**2. Кĕнекери 4, 5, 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**3. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 10-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**4. Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание стихотворения «Митрахван» и могу найти описание каждого рисунка.

Могу дать характеристику Митрофану.

Могу выделить среди других глаголов глаголы в настоящем времени в отрицательной форме.

Могу составить схемы, рассказывающие о способе образования этой формы глаголов.

Могу объяснить, что такое омоним, и придумать примеры.

Могу перевести предложения со словами-омонимами на русский язык.

## 94-мĕш урок

### Тема: Вĕреннине аса илни, çирĕплетни

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси.

***Урок задачисем:*** 1) глаголсен вĕреннĕ формисене аса илсе çирĕплетесси; 2) тĕрлĕ формăри ялала ячĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси; 3) омонимсемпе пуплевре усă курасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсем çырса килнĕ предложенисене вуласа параççĕ, омонимсем çинчен пĕтĕмлетсе калаççĕ.

**2. Кĕнекери 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Сăмахсене доска çине çырса тишкерсен аван. Нумайлă хисеп аффиксне те, падеж аффиксне те уйăрса кăтартмалла, вĕсем ыйтусенчи евĕрлех пулнине каласа хăвармалла.

**3. 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**4. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 8-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу объяснить, что такое омоним, и придумать примеры.

Могу выделить в разных формах имен существительных аффиксы и поставить к ним вопросы.

## 95-мĕш урок

### Тема: Лайăх пулма мĕн чарать?

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне, пултарулăхне пур енлĕн аталантарасси; «Тĕрлĕ мăнуксем» пьесăна лартма хатĕрленесси.

***Урок задачисем:*** 1) текста вуласа ăнланас хăнăхăва аталантарасси; 2) илемлĕ вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси; 3) сценкăри çынсен ролĕсене выляса пăхасси; 4) вылянине мĕнле хакламалли çинчен калаçса татăласси, виçисене палăртасси; 5) кашни роле лайăх вылякансене суйласа илесси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

«Пурпĕр мар-и!» сăввăн содержанине ăнланма ӳкерчĕкпе ĕçлемелле. Çак ыйтусене хуравламалла:

— Ӳкерчĕкре кама куратăр?

— Урайĕнче мĕн тăрать?

— Атăсем мĕнле?

— Вĕсем мĕншĕн пылчăклă?

**2. Кĕнекери 2-мĕшпе 3-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Хакламалли виçисем кашни сăнарпа уйрăм тата пĕтĕмĕшле пулмалла: ватă карчăк, хĕр ача, арçын ача хăйсене мĕнле тытни, сассисем сăнарсене тивĕçтерни, сасса кирлĕ пек улăштарни, пурнăçа çывăх выляни.

**3. Кĕнекери 4-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

**4. Киле ĕç пани.**

Сценкăна лартма кирлĕ япаласене, ĕçсене пĕр-пĕрин хушшинче пайласа туса килмелле. Сценкăна ачасем уроксем хыççăн хатĕрленсе ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕнче кăтартма пултараççĕ.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Понимаю содержание стихотворения «Пурпĕр мар-и!».

Могу ответить на вопросы к стихотворению.

Понимаю содержание сценки.

Знаю, как читать любую роль сценки.
Могу объяснить смысл прочитанных пословиц.
Правильно написал(а) по памяти пословицы.

## 96-мĕш урок

### Тема: Лайăх пулма мĕн чарать?

***Урок тĕллевĕ:*** вĕреннине аса илсе çирĕплетесси.

***Урок задачисем:*** 1) текстпа ĕçлес хăнăхăва аталантарасси; 2) чăвашларан вырăсла куçарас хăнăхăва аталантарасси; 3) ӳкерчĕксемпе усă курса вуланă текстсен содержанисене каласси; 4) диктант çырма хăнăхтарасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Кĕнекери 1-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Малтан ӳкерчĕке сăнаççĕ, кайран сăвва вулаççĕ, ӳкерчĕке сăнлакан вырăна (куплета) тупса палăртаççĕ. Ыйтусене хуравлаççĕ.

**2. Кĕнекери 2, 3, 4, 5, 6, 7-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Диктант çырнă хыççăн пĕр-пĕрин ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ, йăнăшсем тунă сăмахсене доска çине çыраççĕ, тишкереççĕ, мĕншĕн вăл е ку йăнăша тунине палăртаççĕ, йăнăшсене ушкăнлаççĕ.

**3. Киле ĕç пани.**

Кĕнекери 8-мĕш ĕçе пурнăçламалла.

**4. Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу выполнить задания к стихотворению «Уйрăлми туссем».

Могу пересказать содержание текста «Чăн-чăн шкул ачи» на русском языке.

Могу перевести текст «Сăпайлă хĕр ача» на русский язык.

Могу пересказать содержание текстов «Сăпайлă хĕр ача» и «Хурсем» по рисункам.

## 97-мĕш урок

### Тема: Лайăх пулма мĕн чарать?

***Урок тĕллевĕ:*** вĕреннине аса илсе çирĕплетесси.

***Урок задачисем:*** 1) текстпа ĕçлес хăнăхăва аталантарасси; 2) чăвашларан вырăсла куçарас хăнăхăва аталантарасси; 3) çемье çинчен япала ячĕсемпе глаголсен вĕреннĕ формисемпе усă курса каласа парасси; 4) тăванлăха пĕлтерекен сăмахсен камăнлăх категорийĕн формисемпе пуплевре усă курасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем иртнĕ урокра вуланă хайлавсенчи сăнарсене сăнласа параççĕ, пĕр-пĕрин ĕçне хаклаççĕ.

**2. Кĕнекери 9-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

**3. Кĕнекери 10, 11, 12-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Çемье çинчен диалога доска умне тухса выляса параççĕ.

Т ĕ с л ĕ х:

— *Саша, санăн çемйӳ мĕнле, пысăк-и е пĕчĕк-и?*

— *Манăн çемье пысăк. Коля, санăн çемйӳ мĕнле?*

— *Манăн çемье те пысăк. Санăн çемйӳре миçе çын?*

— ...

Ачасен ыйтăвĕсемпе хуравĕсем тулли пулмалла.

**4. Киле ĕç пани.**

Хăйсен çемйинчи аслисем çинчен виçĕ предложени çырса килмелле. 10-мĕш ĕçĕн материалĕпе усă курма юрани çинчен каламалла.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу дать характеристику Коле, Кате, Роману.

Могу выполнить задания к тексту «Чие йывăççи».

Могу перевести текст о семье на русский язык.

Могу участвовать в диалоге про семью.

## 98-мĕш урок

### Т е м а: Çăкăртан аслă ан пул. Япала ячĕсен камăнлăх форми

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; камăнлăх форминчи япала ячĕсен пулăвне аса илесси.

***Урок задачисем:*** 1) харпăр хăй тĕллĕн вулама, вуланине ăнланма, словарьпе ĕçлеме хăнăхтарасси; 2) камăнлăх форминчи япала ячĕсемпе пуплевре усă курасси.

### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем килте çырса килнĕ предложенисене вуласа параççĕ.

**2. Кĕнекери 1, 2, 3, 6-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Тупмалли юмахра тата «Тĕпренчĕк» текстра тĕл пулакан ăнланман сăмахсене пурте пĕрле словарьте тупаççĕ, куçараççĕ. 2-мĕшпе

6-мӗш ӗҫсене урокра ҫырмасӑр тӑваҫҫӗ, килте ӗҫ тетрадӗнчи 2-мӗш ӗҫре панӑ вырӑна ҫыраҫҫӗ.

**3. Кӗнекери 4-мӗшпе 5-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Ачасем малтан 4-мӗш ӗҫре мӗн тумаллине вулаҫҫӗ те 5-мӗш ӗҫе пурнӑҫлаҫҫӗ, унтан каллех 4-мӗш ӗҫ патне таврӑнаҫҫӗ. Схемӑсемпе усӑ курса сӑмах майлашӑвӗсем тӑваҫҫӗ.

**4. Киле ӗҫ пани.**

Ӗҫ тетрадӗнчи 2-мӗш ӗҫе пурнӑҫламалла.

**5. Ӗҫ тетрадӗнчи 3-мӗш ӗҫе пурнӑҫлани.**

Хакламалли ӗҫсен тӗсӗсем:

Отгадал(а) загадку о хлебе.

Выполнил(а) задания и ответил(а) на вопросы к тексту «Тӗпренчӗк».

Понял(а) смысл пословиц о хлебе и подобрал(а) близкие по значению пословицы на русском языке.

Могу объяснить схемы.

Могу составить словосочетания и предложения с именами существительными в категории принадлежности.

## 99-мӗш урок

### Тема: Ҫирӗплетӳ-пӗтӗмлетӳ урокӗ

***Урок тӗллевӗ:*** ачасен пуплевне пур енлӗн аталантарасси; хӑнӑху-ӑслайсене ҫирӗплетесси.

***Урок задачисем:*** 1) вуланӑ текста ят пама, план тума, ӳкерчӗклӗ план тӑрӑх содержание каласа пама, ыйтусене хуравлама пӗлнине ҫирӗплетесси; 2) пусӑм правилисене аса илсе ҫирӗплетесси.

#### *Урок юхӑмӗ*

**1. Кӗнекери 1-мӗшпе 2-мӗш, ӗҫ тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Малтан кӗнекери 2-мӗш, ӗҫ тетрадӗнчи 1-мӗш ӗҫсене пурнӑҫламалла, мӗншӗн тесен вӗсем сӑвва ӑнланма пулӑшаҫҫӗ. Унтан сӑвӑ патне панӑ ӳкерчӗкпе ӗҫлемелле. Вӑл сӑвва лайӑхрах ӑнланма тата ӑна ят пама пулӑшать. Ачасем сӑвва тӗрлӗрен ят пама пултараҫҫӗ, анчах пӗрле сӳтсе явса пӗрне суйласа илмелле. Сӑввӑн ӳкерчӗклӗ планне килте тума сӗнмелле.

**2. Кӗнекери 3-мӗш, ӗҫ тетрадӗнчи 2-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

Чӑвашла лайӑхах пӗлмен ачасене кӗнекери юман ҫинчен панӑ тӗслӗхе ҫырса илме сӗнме те юрать.

**3. Кӗнекери 4, 5, 6-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.**

**4. Киле ĕç пани.**

Килте ачасен кушак çинчен çырнă сăввăн ӳкерчĕклĕ планне тумалла, ун тăрăх каласа пама хатĕрленмелле.

**5. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Правильно расставил(а) ударение в словах стихотворения.

Составил(а) рассказ по каждому рисунку сказки.

Могу рассказать содержание сказки по рисункам.

Озаглавил(а) сказку.

Могу поговорить по содержанию сказки по готовым вопросам.

## 100-мĕш урок

### Тема: Çирĕплетӳ-пĕтĕмлетӳ урокĕ

***Урок тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси; хăнăху-ăслайсене çирĕплетесси.

***Урок задачисем:*** 1) ӳкерчĕклĕ план тăрăх содержание каласа пама пĕлнине çирĕплетесси; 2) текстри тĕп сăнара сăнласа пама пĕлнине çирĕплетесси; 3) диалог тăвас хăнăхăва çирĕплетесси; 4) ваттисен сăмахĕсене астуса юласси.

#### *Урок юхăмĕ*

**1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасем хăйсен ӳкерчĕкĕсене пĕр-пĕрне кăтартаççĕ, мĕн ӳкернине каласа параççĕ.

**2. Кĕнекери 7, 8, 9,10-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

9-мĕш ĕçе 8-мĕш умĕн пурнăçламалла, мĕншĕн тесен 9-мĕш ĕç юмаха туллинрех ăнланма пулăшать. Юмах содержанине лайăхрах ăнланнă хыççăн кушак çурине сăнлама çăмăлрах.

**3. Кĕнекери 11-мĕшпе 12-мĕш ĕçсене пурнăçлани.**

Ушкăнсене текст содержанийĕ тăрăх хатĕрленĕ ыйтусене çырма хут листисем памалла. Ушкăнпа хатĕрленĕ ыйтусемпе усă курса текст содержанийĕ тăрăх калаçнă хыççăн çеç текста ят памалла.

**4. Кĕнекери 13-мĕш, ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани**.

Кашни урокра вуланă хайлавăн тĕп шухăшне уçса паракан ваттисен сăмахĕсене суйласа палăртаççĕ.

**5. Киле ĕç пани.**

Ачасен килте вĕренӳ кĕнекине тепĕр хут тимлĕ пăхса тухмалла, 4-мĕш класра хăш темăпа калаçма, мĕн тума килĕшнине палăртмалла. Çакă çитес урокра проект ĕçĕ çырма пуçламашкăн кирлĕ.

**6. Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.**

Хакламалли ĕçсен тĕсĕсем:

Могу дать характеристику котенку.

Могу разыграть диалог о сказках по образцу.

Могу составить вопросы по содержанию текста.

Могу подобрать перекликающиеся с идеями прочитанных на уроках текстов пословицы.

## 101—102-мĕш уроксем

### Тема: Çирĕплетÿ-пĕтĕмлетÿ урокĕсем

***Уроксен тĕллевĕ:*** çулталăк хушшинче мĕн вĕренсе пĕлнине кăтартасси.

***Уроксен задачисем:*** 1) ушкăнсене пайланасси, проект темине — кăçал вĕреннĕ пĕр-пĕр темăна суйласа илесси; 2) проект планне тăвасси; 3) проект содержанине сÿтсе явасси; 4) ушкăнри кашни ача мĕн тăвасси пирки калаçса татăласси; 5) класпа проектсене хакламалли виçесене палăртасси; 6) проект хатĕрлесси, хÿтĕлесси, кашни ушкăнăн проектне хак парасси.

#### *Урок юхăмĕ*

Çулталăк хушшинче чăваш чĕлхипе мĕнле проектсем çырнине аса илмелле. Кĕнекере проект çырма вĕренме панă материала тепĕр хут пăхса тухмалла (22, 23, 24, 37, 38, 39, 49, 50, 51-мĕш уроксем). Ачасене тема суйлама хăйсене ирĕк памалла, анчах ушкăнсен пĕр пек тема пулмалла мар. Вĕсем таса лексика та, грамматика теми те илме пултараççĕ, е хутăш тема та пулма пултарать. Хакламалли виçесене пĕрле сÿтсе явса палăртнă хыççăн ĕç тетрадьне çыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем ушкăнсен ĕçĕсене хаклама тата кашни ачана хăйĕн ĕçне пурнăçланă чух мĕн шута илмеллине астуса тăма кирлĕ. Кашни ача хăйĕн ĕçне ĕç тетрадĕнче тăвать. Унтан ушкăнри пур ачан ĕçне пĕрлештерсе проект хатĕрлеççĕ.

Проектсен темисем, тĕслĕхрен, çапла пулма пултараççĕ: чăвашсен паллă çыравçисем, чăваш халăх поэчĕсем, чăвашсен паллă художникĕсем, пирĕн Тăван çĕршыв, Чăваш çĕршывĕн тĕп хули, Чăваш Республикин хулисем, япала ячĕсен улшăнăвĕ, камăнлăх форминчи сăмахсем, омонимсемпе усă курни, глаголсен вăхăчĕсем, çĕнĕ сăмах тăвакан аффикссем т. ыт. те.

# ТЕМАТИКА ПЛАНĔ

## 4 класс

| Урок номе-рĕсем | Урок теми, тĕллевĕсем | Ачасен ĕç-хĕлĕ |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| 1 | Шкула. | — чăваш чĕлхине пĕлнин, чĕлхепе усă курас хăнăхусен шайне палăртаççĕ;<br>— кĕнекепе, çыру тетрачĕпе паллашаççĕ; çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли тĕллевсем палăртаççĕ;<br>— пĕлӳ кунĕ, çуллахи кану çинчен калаçаççĕ;<br>— диалог йĕркелеççĕ;<br>— сăнласа панине вуласа япалине тупаççĕ;<br>— пусăм правилисене аса илеççĕ, сăмахсенче пусăм лартма хăнăхаççĕ;<br>— астуса юлнă хыççăн пăхмасăр çыраççĕ;<br>— кашни хăйĕн ĕçне хак парать; |
| 2, 3 / 2 | Шкулта. Пирĕн вĕрентӳçĕ. | — чăваш алфавитне аса илеççĕ, сăмахсене алфавит йĕркипе çыраççĕ;<br>— сăмахсене мĕнле пуплев пайĕ пулнине кура ушкăнлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ;<br>— чăваш чĕлхипе килти ĕçе мĕнле туни çинчен икшерĕн калаçаççĕ;<br>— панă сăмахсенчен предложени, предложенисенчен текст тăваççĕ;<br>— ӳкерчĕк тăрăх пĕр-пĕрне ыйтусем параççĕ;<br>— вĕрентӳçĕ çинчен каласа пама вĕренеççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ;<br>— ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ;<br>— хăйсен ĕçне хаклаççĕ; |
| 4, 5, 6 / 3, 4 | Çуллахи каникулта. | — çуллахи каникулта мĕнле канни çинчен калаçаççĕ;<br>— ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текст тăрăх ыйтусем хатĕрлеççĕ, пĕр-пĕрне параççĕ;<br>— текстсемпе усă курса ачасем мĕнле канни çинчен каласа параççĕ;<br>— диалог тăваççĕ;<br>— словарь диктанчĕ çыраççĕ;<br>— текстсем патне панă фотоӳкерчĕксемпе ĕçлеççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — харпăр хăй çулла ăçта каннине каласа параççĕ;<br>— çуллахи кану çинчен çырса каласа параççĕ;<br>— хăйсен ĕçне хаклаççĕ; |
| $\frac{7, 8, 9}{5, 6}$ | Каникулта. Проект пурнăçлани. | — проект темине суйласа илеççĕ;<br>— проект валли материал пухаççĕ;<br>— проекта йышăннă йĕркепе пурнăçлаççĕ;<br>— проектсене хӳтĕлеççĕ;<br>— проектпа мĕнле ĕçленине хаклаççĕ; |
| $\frac{10, 11, 12}{7, 8}$ | Çуллахи каникулта. | — сăвă вулаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе ĕçлеççĕ;<br>— «Хĕвел ури пусрĕ» текста вулаççĕ, содержанине вырăсла калаççĕ;<br>— ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— глаголсене тĕрлĕ формăсене лартаççĕ, пĕтĕмлетӳсем тăваççĕ;<br>— ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— çулла мĕн туни, ăçта тата мĕнле канни çинчен каласа параççĕ;<br>— панă диалога тăсаççĕ;<br>— çуллахи каникул çинчен калав хатĕрлеççĕ, каласа параççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ;<br>— хăйсен урокри ĕçне хаклаççĕ; |
| $\frac{13}{9}$ | Уроксем хыççăн. | — сăвва вулаççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— сăмахсене алфавит йĕркипе çырса илеççĕ;<br>— сăмахсенче пусăм лартаççĕ, вĕсенчи уçă сасăсене палăртаççĕ;<br>— уроксем хыççăн мĕн туни çинчен каласа параççĕ;<br>— кун йĕрки çинчен калаçу йĕркелеççĕ;<br>— словарьпе ĕçлеççĕ;<br>— кирлĕ словарь ячĕсене лартса текста çырса илеççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене астуса юлаççĕ, пăхмасăр çыраççĕ; |
| $\frac{14, 15}{10}$ | Аптраман таврашсем. Глаголăн пуçламăш форми. | — сăвва вулаççĕ, куçараççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— словарьпе ĕçлеççĕ;<br>— сăмахсен синонимĕсене тупаççĕ;<br>— сăвăран глаголсене уйăрса илсе ушкăнлаççĕ;<br>— тĕрлĕ вăхăтри глаголсене сăпат тата хисеп тăрăх улăштараççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — тӗрлӗ формăри глаголсемпе предложенисем тăваççӗ, çыраççӗ;<br>— глаголăн пуçламăш формине тупма вӗренеççӗ;<br>— глаголсене сăпатлаççӗ;<br>— тӗрлӗ формăри глаголсемпе предложенисем тăваççӗ;<br>— ваттисен сăмахне астуса юлаççӗ, пăхмасăр çыраççӗ; |
| 16, 17, 18 / 11, 12 | Чăваш вăрманӗ. Илпек Микулайӗ, Г.Д. Харлампьев — чăвашсен паллă çыравçисем. | — сăвва итлеççӗ, сăвăра ӳкерчӗке сăнлакан йӗркесене тупса вулаççӗ;<br>— çӗнӗ сăмахсемпе ӗçлеççӗ;<br>— тупмалли юмахăн тупсăмне пӗлеççӗ;<br>— ӳкерчӗк тăрăх панă ыйтусене хуравлаççӗ;<br>— текста вулаççӗ, вырăсла куçараççӗ;<br>— текстран глаголсене суйласа илеççӗ, вӗсен формисене палăртаççӗ;<br>— инфинитив формипе усă курма вӗренеççӗ;<br>— вырăсла сăмах майлашăвӗсене инфинитив формипе усă курса чăвашла куçараççӗ;<br>— кирлӗ глаголсене лартса предложенисене çыраççӗ;<br>— панă тӗслӗхпе усă курса предложенисене вӗçлеççӗ;<br>— тупмалли юмахсен тупсăмӗсене пӗлеççӗ, хăйсем тупмалли юмахсем тăваççӗ;<br>— кăмпана кайни çинчен текст тăваççӗ;<br>— текста вырăсла куçараççӗ;<br>— текста вуласа чăвашсен паллă çыравçисемпе паллашаççӗ, ыйтусене хуравлаççӗ;<br>— ваттисен сăмахне астуса юлаççӗ, пăхмасăр çыраççӗ; |
| 19, 20 / 13 | Яковлев мăнукӗсем. Николай Иванович Шелепи, Петр Петрович Хусанкай — чăвашсен паллă поэчӗсем. | — сăвва вулаççӗ, пӗлмен сăмахсен пӗлтерӗшӗсене словарьте тупаççӗ;<br>— сăвă содержанине вырăсла каласа параççӗ;<br>— малтан вӗреннине аса илсе ыйтусене хуравлаççӗ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — текст вулаҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ, словарьпе ӗҫлеҫҫӗ;<br>— мӗн вуласа пӗлнине каласа параҫҫӗ;<br>— текстран кирлӗ вырӑнсене тупса ҫырса илеҫҫӗ;<br>— сӑвӑра хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене шыраса тупаҫҫӗ;<br>— И.Я. Яковлевӑн «Халалӗпе» ӗҫлеҫҫӗ, пӑхмасӑр вӗренсе ҫыраҫҫӗ; |
| 21/14 | Пирӗн ачалӑх. | — пӳрне вӑййин сӑввипе паллашаҫҫӗ;<br>— сӑвӑран пӳрне ячӗсене ҫырса илеҫҫӗ, вӗсене вырӑсла куҫараҫҫӗ;<br>— сӑвва вуласа ыйтӑва хуравлаҫҫӗ;<br>— хисеп ячӗсене аса илсе ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗксем вырӑнне сӑмахӗсене каласа текста вулаҫҫӗ;<br>— ваттисен сӑмахӗсене астуса юлаҫҫӗ, ҫыраҫҫӗ. |
| 22, 23, 24/15, 16 | Чӑвашсен паллӑ художникӗсем. «Чӑвашсен паллӑ художникӗсем» проект хатӗрлени, хӳтӗлени. | — сӑвва вулаҫҫӗ, словарьпе усӑ курса ӑнланаҫҫӗ, ыйтӑва хуравлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсемпе паллашаҫҫӗ;<br>— ыйтусене анлӑн хуравлаҫҫӗ;<br>— чӑваш художникӗсем ҫинчен мӗн пӗлнине каласа параҫҫӗ;<br>— паллӑ художниксем ҫинчен вуласа пӗлеҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— сӗнсе каланине тӗпе хурса пӗр художник ҫинчен проект хатӗрлеҫҫӗ;<br>— проекта хӳтӗлеҫҫӗ, хак параҫҫӗ; |
| 25/17 | Сад пахчинчи ҫимӗҫсем. | — сӑвӑ содержанийӗпе ҫыхӑннӑ ӳкерчӗке тупаҫҫӗ;<br>— пӗр пахча ҫимӗҫ ҫинчен пӗчӗк текст тӑваҫҫӗ;<br>— текста вулаҫҫӗ, вырӑсла содержанине калаҫҫӗ, ят параҫҫӗ;<br>— текстран ваттисен сӑмахне ҫырса илеҫҫӗ;<br>— текста пӗрремӗш сӑпатран вулаҫҫӗ;<br>— тупмалли юмахсен тупсӑмӗсене тупаҫҫӗ;<br>— пусӑм правилисене аса илеҫҫӗ;<br>— сӑвӑри сӑмахсенче пусӑм лартаҫҫӗ;<br>— сӑвӑри ача ҫинчен хӑйсен сӑмахӗсемпе каласа параҫҫӗ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — сăвăра ачан хуравне тупаççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ, çыраççĕ; |
| 26, 27 / 18 | Тискер чĕр чунсем. Пакша. Чĕрĕп. | — вĕрентекене итленĕ хыççăн пакша çинчен каласа параççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ;<br>— текста вуласа ят параççĕ;<br>— сăвăпа тата текстпа усă курса пакша çинчен калав тăваççĕ;<br>— текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, ĕçе пурнăçлаççĕ;<br>— шарадăсен тупсăмĕсене тупаççĕ;<br>— пăтраштарса панă пайсенчен предложенисем йĕркелеççĕ;<br>— пĕр тискер чĕр чун çинчен калав çыраççĕ; |
| 28 / 19 | Кĕрхи вăрманта. | — сăвва вулаççĕ, ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— сăвăпа тата ӳкерчĕкпе усă курса ушкăнпа куккук çинчен калав тăваççĕ;<br>— кайăксен ячĕсене аса илеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ;<br>— «Тăрнасем» калава вуласа панине итлеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текста вуласа ят параççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текстсенчи сăмахсемпе усă курса вăрманта пулни, унта мĕн курни, мĕн туни çинчен каласа параççĕ;<br>— кĕрхи вăрман çинчен икшерĕн калаçаççĕ;<br>— панă сăмахсемпе тата сăмах майлашăвĕсемпе усă курса «Кĕрхи вăрманта» текст çыраççĕ;<br>— «Хурпа Миша» калава вуласа арçын ачасем çинчен каласа параççĕ, пĕрер предложени çыраççĕ; |
| 29, 30 / 20 | Урокра. Юлташсем. | — сăвва вулаççĕ, ун содержанийĕпе панă ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текста вулаççĕ, Кольăн йăнăшĕсене тупаççĕ;<br>— хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупаççĕ, вĕсемпе предложенисем туса çыраççĕ;<br>— ӳкерчĕксене пăхса ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— канмалли куна мĕнле ирттерни çинчен иккĕн калаçаççĕ;<br>— ӳкерчĕксем тăрăх ачасем канмалли кунсене мĕнле ирттерни çинчен каласа параççĕ;<br>— текста вуласа ят параççĕ;<br>— кирлĕ сăмахсене лартса предложенисене çырса илеççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 31/21 | Чăваш Республики. | — сăвва малтан итлеççĕ, кайран вуласа пысăк сас паллипе пуçласа çырнă сăмахсене тупаççĕ, вырăсла куçараççĕ;<br>— «Чăваш Республики» текста вуласа ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— панă текста кирлĕ сăмахсем хушса анлăлатаççĕ;<br>— Чăваш Республикин карттипе усă курса пĕчĕк словарь тăваççĕ;<br>— Чăваш Республики çинчен каласа пама вĕренеççĕ;<br>— диалога вуласа Чăваш Республики çинчен мĕн çĕнни пĕлни çинчен каласа параççĕ; |
| 32, 33/22 | Чăваш Ен. | — сăвва итлеççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ;<br>— чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен вуласа пĕлеççĕ;<br>— ӳкерчĕкри япаласем çинчен çырнă вырăнсене текстра тупаççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса диалог тăваççĕ;<br>— *-лă (-лĕ)* аффикспа усă курма вĕренеççĕ;<br>— вуланă текст содержанине каласа параççĕ;<br>— чăвашла текста çырса илеççĕ;<br>— вуланă текста вĕрентекен каланă хыççăн çыраççĕ; |
| 34/23 | Тăван çĕршыв. | — «Илемлĕ çĕршыв» сăвва вуласа панине итлеççĕ, унăн содержанине вырăсла калаççĕ;<br>— Чăваш Республикин патшалăх ялавĕпе гербĕ çинчен каласа параççĕ;<br>— «Пирĕн Тăван çĕршыв» текста вуласа ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— йывăçсен чăвашла тата вырăсла ячĕсене шайлаштараççĕ;<br>— «Чăваш вăрманĕ» текстран *-лă(-лĕ)* аффикс хушăнса пулнă сăмахсене çырса илеççĕ, вĕсен пулăвне ăнлантараççĕ;<br>— текстран хисеп ячĕсемлĕ предложенисене çырса илеççĕ, хисеп ячĕсемпе пуплевре усă курмалли правилăсене аса илеççĕ, схема евĕр палăртаççĕ; |
| 35, 36/24 | Чăвашсен тĕп хули. | — сăвва вулаççĕ, килĕшнĕ вырăна пăхмасăр вĕренеççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — «Чăвашсен тĕп хули» текста вуласа панине итлеççĕ, содержанине вырăсла калаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— ушкăнпа ĕçлесе Шупашкарăн паллă вырăнĕсем çинчен ӳкерчĕксемпе усă курса калав хатĕрлеççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене пăхмасăр вĕренеççĕ, вĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантараççĕ, пăхмасăр çыраççĕ; |
| 37, 38, 39 / 25, 26 | Авалхи хуласем. Чăвашсен авалхи хулисем. Проект. «Чăвашсен авалхи хулисем» проекта хӳтĕлени | — «Авалхи хуласем» текста вулаççĕ, мĕн пĕлнине каласа параççĕ, ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— Чăваш Республикин пĕр-пĕр авалхи хули çинчен материал пухаççĕ, унпа усă курса проект хатĕрлеççĕ;<br>— кашни ушкăнăн проектне калаçса татăлнă виçесемпе хаклаççĕ;<br>— кашни ушкăнăн материалне пухса «Авалхи хуласем» альбом хатĕрлеççĕ; |
| 40 / 27 | Сĕнтĕрвăрри. | — сăвва итлеççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— «Сĕнтĕрвăрри» калава вулаççĕ, мĕн пĕлнине каласа параççĕ, ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— диалога рольсемпе вулаççĕ, мĕн çĕнни пĕлнине каласа параççĕ;<br>— текста тепĕр хут вуласа Сĕнтĕрвăрри çинчен калав хатĕрлеççĕ;<br>— «Савăк ир» сăввăн йĕркисене астуса юлнă хыççăн пăхмасăр çыраççĕ; |
| 41, 42 / 28 | Чăваш Республикин хулисем. | — «Ытарайми çĕршыв» сăвва пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— фотоӳкерчĕксем çинче мĕн курнине каласа параççĕ;<br>— текстсене вуласа мĕн пĕлнине калаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— кĕнекери материалпа усă курса хуласем çинчен диалог йĕркелеççĕ;<br>— «Ытарайми çĕршыв» сăвă йĕркисене астуса юлнă хыççăн пăхмасăр çыраççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 43 / 29 | Мĕн-ши вăл — Тăван çĕршыв? | — сăвва вуласа панине итлеççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— вырăсла тата чăвашла панă предложенисене шайлаштараççĕ;<br>— «Тăван çĕршыв» текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— «Чăваш çĕршывĕ» темăпа вуланă текстсем тăрăх  ыйтусем хатĕрлеççĕ, пĕр-пĕрне параççĕ;<br>— Р. Сарпи сăввине астуса юлнипе çыраççĕ, йăнăш тума пултарнă вырăнсене палăртаççĕ; |
| 44, 45 / 30 | Хĕл çитрĕ. *Ăçта?* ыйтури сăмахсем. | — сăвва вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— панă сăмахсен синонимĕсене сăвăра тупаççĕ;<br>— сăмахсене *ăçта?* ыйтура лартаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ, вырăс чĕлхипе танлаштараççĕ;<br>— *ăçта? (куда?)* ыйтупа усă курма вĕренеççĕ;<br>— текста ӳкерчĕксемпе шайлаштараççĕ;<br>— текстпа усă курса паянхи куна сăнласа параççĕ;<br>— ачасем хĕлле мĕн туни çинчен каласа параççĕ;<br>— тупмалли юмахсен тупсăмĕсене пĕлеççĕ, Хĕл Мучи çинчен астуса юлнине пăхмасăр çырса хураççĕ; |
| 46 / 31 | Хĕлле. Çĕнĕ çул умĕн. | — сăвва итлеççĕ, тупсăмне тупаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— паянхи çанталăка сăнлама кирлĕ сăмахсене суйласа илеççĕ;<br>— паянхи çанталăк çинчен каласа параççĕ;<br>— ӳкерчĕкпе усă курса ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— ӳкерчĕкпе тата ыйтусемпе усă курса хĕлле çинчен тата ачасен хĕллехи вăййисем çинчен текст çыраççĕ;<br>— ыйтусемпе усă курса Çĕнĕ çула мĕнле хатĕрленни çинчен каласа параççĕ; |
| 47, 48 / 32 | Хĕлле. Çĕнĕ çул çывхарать. | — сăвă вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— вырăсла предложенисен куçарăвĕсене сăвăра тупаççĕ, йăнăшсене тӳрлетеççĕ, сăвăри ытти йĕркесене мĕнле ăнланнине каласа параççĕ;<br>— Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илме хатĕрленни çинчен 2—3 предложенипе калаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — кӗнекере ҫырса кӑтартнине вуласа вӑйӑ йӗркипе паллашнӑ хыҫҫӑн карталанса тӑрса ҫав вӑййа выляҫҫӗ;<br>— «Хӗллехи каҫ» текста вуласа содержанине вырӑсла калаҫҫӗ;<br>— вырӑсла панӑ текстӑн содержанине чӑвашла текстра тупса ҫырса илеҫҫӗ;<br>— сӑвва вулаҫҫӗ, ыйтӑва хуравлаҫҫӗ;<br>— диалога малалла тӑсаҫҫӗ;<br>— глаголсене кирлӗ формӑра лартса предложенисене ҫырса илеҫҫӗ; |
| 49, 50, 51 / 33, 34 | Ҫӗнӗ ҫул. Хӗллехи каникулта. | — «Ҫӗнӗ ҫул» сӑвва пӑхмасӑр вӗренеҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсене астуса юлаҫҫӗ;<br>— проект мӗнле пулмаллине аса илеҫҫӗ, ӑна хакламалли виҫесене палӑртаҫҫӗ;<br>— ушкӑнпа кӗнекере панӑ ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— хӗллехи каникула мӗнле ирттерни ҫинчен калав тӑваҫҫӗ;<br>— «Эпир хӗллехи каникулта мӗнле кантӑмӑр» проект хатӗрлеҫҫӗ;<br>— проект хакламалли виҫесене тивӗҫтернипе тивӗҫтерменнине сӳтсе яваҫҫӗ;<br>— проекта хӳтӗлеҫҫӗ; |
| 52, 53 / 35 | Хӗлле. Кайӑксем. Кайӑксене пулӑшар! | — «Павӑлпа кӑвакарчӑн» сӑвва вуласа сӑмахсенче пусӑм лартаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсене астуса юлаҫҫӗ;<br>— панӑ сӑмахсен антонимӗсене сӑвӑра тупаҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗкпе усӑ курса пирӗн патра хӗл каҫакан кайӑксен ячӗсене аса илеҫҫӗ;<br>— текстсене вулаҫҫӗ, ят параҫҫӗ, вӗсемпе усӑ курса хӗллехи кайӑксем ҫинчен каласа параҫҫӗ;<br>— текста вулаҫҫӗ, ят параҫҫӗ, ӳкерчӗксемпе усӑ курса ун содержанине каласа параҫҫӗ;<br>— диалога малалла тӑсаҫҫӗ;<br>— пӑнчӑсем вырӑнне кирлӗ сӑмах лартса сӑвва ҫырса илеҫҫӗ; |
| 54 / 36 | Хӗлле. *Мӗнре? камра? ӑҫта*? ыйтусенчи сӑмахсем. | — «Урине» сӑвва итлеҫҫӗ, ыйтӑва хуравлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсене астуса юлаҫҫӗ;<br>— сӑвӑри палӑртнӑ сӑмахсем патне ыйтусем лартаҫҫӗ, вӗсене вырӑсла куҫараҫҫӗ, схемӑпа усӑ курса пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — предложенисене вырăсла куçараççĕ, юпари сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ, схемăна мĕн хушмаллине палăртаççĕ, хушаççĕ;<br>— Анюкпа Ванюк пĕтĕмлетĕвне хăйсеннипе танлаштараççĕ;<br>— «Юр пĕрчисем» калава вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— калаври палăртнă сăмахсем патне ыйту лартаççĕ, вĕсене çырса илеççĕ, панă сăмахсене çавăн пекех улăштараççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, вĕсем мĕне пĕлтернине калаççĕ, предложенисем тупаççĕ; |
| 55, 56<br>———<br>37 | Хĕлле. Вăрманта. *Ăçта?* ыйтури япала ячĕсем. | — сăвва вуласа япала ячĕсене тупаççĕ, вĕсем патне ыйтусем лартаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— панă сăмахсенчен хĕлле çинчен каласа пама кирлĕ сăмахсене суйласа илеççĕ;<br>— текста вулаççĕ, схемăлла ӳкерчĕксемпе усă курса содержанине калаççĕ;<br>— ыйтăва кура сăмахсене кирлĕ формăна лартаççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— «Тилĕ» текста вулаççĕ, тилĕ çинчен каласа параççĕ, палăртнă сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса пĕр-пĕр тискер чĕр чун çинчен калав тăваççĕ;<br>— сăмахсене кирлĕ формăра лартса предложенисене çырса илеççĕ; |
| 57<br>———<br>38 | Хĕллехи вăрман. *Ăçта?* ыйтури сăмахсем. | — сăвва вулаççĕ, сăмахсенче пусăм лартаççĕ, пăхмасăр вĕренеççĕ;<br>— «Хĕллехи вăрман» текстра кирлĕ вырăнсене тупса вулаççĕ, содержанине калаççĕ;<br>— ыйтусем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса чĕр чунсемпе кайăксем çинчен каласа параççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— япала ячĕсем вырăнне ыйтусем лартса калуллă предложенисенчен ыйтуллă предложенисем тăваççĕ;<br>— иккĕн ĕçлесе ачасен хĕллехи савăнăçĕсем çинчен калав тăваççĕ;<br>— тупмалли юмаха вулаççĕ, тупсăмне тупаççĕ, пăхса çырса илеççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 58, 59 / 39 | Хӗлле. Нарăс уйăхӗ. Предложенин тӗп членӗсем. | — сăвва вуласа панине итлеҫҫӗ, ыйтăва хуравлаҫҫӗ;<br>— вырăсла тата чăвашла сăмах майлашăвӗсене шайлаштараҫҫӗ, вӗсемпе усă курса нарăс уйăхӗ ҫинчен каласа параҫҫӗ;<br>— предложенин тӗп членӗсен уйрăмлăхӗсене палăртаҫҫӗ;<br>— Б. Корсунская калавне вуласа ыйтусене хуравлаҫҫӗ, ăна ят параҫҫӗ, рольпе вулаҫҫӗ; содержанине каласа параҫҫӗ; |
| 60 / 40 | Г.Н. Волков — чăваш халăхӗн паллă ывăлӗ. | — «Парне» сăвва вулаҫҫӗ, ыйтăва хуравлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сăмахсене астуса юлаҫҫӗ;<br>— япалана мӗнрен (мӗнле материалтан) тунине чăвашла калама вӗренеҫҫӗ;<br>— текста вуласа ят параҫҫӗ, ыйтусемпе ӗҫсене пурнăҫлаҫҫӗ;<br>— Г.Н. Волков ҫырнă ытти калавсемпе паллашаҫҫӗ; |
| 61, 62, 63 / 41, 42 | «Г.Н. Волков — Чăваш ҫӗрӗн паллă ывăлӗ» проекта пуҫăнни «Г.Н. Волков — Чăваш ҫӗрӗн паллă ывăлӗ» проектпа ӗҫлени «Г.Н. Волков — Чăваш ҫӗрӗн паллă ывăлӗ» проекта хӳтӗлени. | — Г.Н. Волков ҫинчен материал пухаҫҫӗ;<br>— Г.Н. Волковăн калавӗсене вулаҫҫӗ;<br>— проект ҫырма материал суйласа илеҫҫӗ, ăна йӗркелеҫҫӗ;<br>— проект хатӗрлеҫҫӗ, ăна хӳтӗлеҫҫӗ, хаклаҫҫӗ. |
| 64, 65 / 43 | П. Ялкир, Л. Сарине — чăваш ҫыравҫисем. Япала ячӗсен камăнлăх форми. | — сăвва вулаҫҫӗ, ыйтăва хуравлаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сăмахсене астуса юлаҫҫӗ;<br>— анне саппунӗ, вăрман ҫырли евӗрлӗ сăмах майлашăвӗсем ҫинчен пӗлӳ илеҫҫӗ, вӗсемпе ӗҫлеҫҫӗ;<br>— П. Ялкирпе Л. Сарине ҫинчен вуласа пӗлеҫҫӗ, мӗн пӗлнине каласа параҫҫӗ;<br>— «Профессор пулатăп» сăвва вулаҫҫӗ, сăмахсенче пусăм лартаҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— «Чей курки» текста вулаҫҫӗ, ыйтусе- |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | не хуравлаççĕ, содержанине кĕскен каласа параççĕ;<br>— П. Ялкирпе Л. Сарине çинчен каласа пама хатĕрленеççĕ. |
| 66/44 | Пирĕн çемье. Предложенин тĕп членĕсем. | — сăвва вулаççĕ, ят параççĕ, ыйтусем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— паллă ячĕсем умне *чи* сăмах хушса çыраççĕ;<br>— кушак çинчен калав тăваççĕ;<br>— сăмах майлашăвĕсене чăвашла куçараççĕ;<br>— вĕçленмен предложенисене вĕçлеççĕ, вĕсенчи тĕп членсене палăртаççĕ;<br>— схемăсем патне тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— професси ячĕсене аса илеççĕ;<br>— ыйтусене хуравлаççĕ. |
| 67, 68/45 | «Пахчаçăпа ывăлĕсем». *Камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи япала ячĕсем. | — çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— сăвва вулаççĕ, палăртнă сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— схемăсене тишкереççĕ, вĕсемпе усă курса сăмах майлашăвĕсене чăвашла куçараççĕ;<br>— схемăсене хăйсен схемисемпе танлаштараççĕ, вĕсем патне тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— предложенири япала ячĕсем патне ыйтусем лартаççĕ;<br>— «Пахчаçăпа ывăлĕсем» юмаха вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса амăшĕсем çинчен калаçаççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене пăхмасăр вĕренеççĕ, астуса юлнă хыççăн çыраççĕ; |
| 69/46 | *Камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи япала ячĕсем. | — «Марук чăххи» сăвва вуласа сăмахсенче пусăм лартаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, илемлĕ вулама вĕренеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— сăмахсене *камăн? мĕнĕн?* ыйтура лартаççĕ, вĕсемпе сăмах майлашăвĕсемпе предложенисем тăваççĕ, вырăсла куçараççĕ;<br>— вырăсла сăмах майлашăвĕсене чăвашла куçарса çыраççĕ;<br>— чăвашла ваттисен сăмахĕсем патне вырăслисене тупаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 70, 71 / 47 | Пулăшар-ха аннене.<br>*Кама? мĕне? камсене? мĕнсене?* ыйтусенчи япала ячĕсем. | — сăвва вулаççĕ, ят параççĕ, сăмахсенче пусăм лартаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— сăвăри палăртнă сăмахсене глаголсемпе пĕрле çырса илеççĕ, япала ячĕсен ыйтăвĕсене, мĕнле аффикс хушăнса пулнине калаççĕ;<br>— схемăсене тишкереççĕ, вĕсемпе усă курса сăмах майлашăвĕсене вырăсла куçараççĕ, предложенисем тупаççĕ;<br>— пĕтĕмлетӳ схеми тăваççĕ;<br>— Сергей Сергеевичăн схемисене тишкереççĕ, хăйсеннипе танлаштараççĕ;<br>— сăмахсене *кама? мĕне?* ыйтура лартаççĕ, вĕсемпе предложенисем тупаççĕ;<br>— предложенисене чăвашла куçараççĕ, вĕсенчен ыйтуллă предложенисем туса çыраççĕ;<br>— текста вуласа ӳкерчĕк тăрăх содержанине каласа параççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, ăнлантараççĕ, пăхмасăр вĕреннĕ хыççăн çыраççĕ; |
| 72 / 48 | Çемье.<br>*Камăн? мĕнĕн? камсен? мĕнсен?* ыйтусенчи япала ячĕсем. | — сăвва вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, сăмахсенче пусăм лартаççĕ;<br>— схемăсемпе усă курса предложенисене чăвашла куçараççĕ;<br>— япала ячĕсем патне ыйтусем лартса предложенисене çырса илеççĕ;<br>— ӳкерчĕксемпе усă курса Анна аппа ачисем çинчен калав тăваççĕ;<br>— диалога малалла тăсаççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, вырăсла вариантĕсене тупаççĕ;<br>— хакламалли виçесене палăртса харпăр хăйĕн ĕçĕсене хаклаççĕ; |
| 73, 74 / 49 | Туссем.<br>Япала ячĕсен улшăнăвĕ. | — сăвва вулаççĕ, вĕçлеççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— сăвăра япала ячĕсене тупса вĕсем патне ыйтусем лартаççĕ;<br>— схемăсем патне сăмах майлашăвĕсем тупаççĕ, вĕсенчен предложенисем тăваççĕ;<br>— сăмахсем мĕнле пулнине сăнаççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— текста вуласа ăна мĕншĕн «Туслăх» ят панине ăнлантараççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — ӳкерчӗксем тӑрӑх текст содержанине каласа параҫҫӗ;<br>— ваттисен сӑмахӗсене вулаҫҫӗ, ӑнлантараҫҫӗ, астуса юлнӑ хыҫҫӑн иккӗшне ҫыраҫҫӗ;<br>— харпӑр хӑйӗн ӗҫне хакламалли виҫесене палӑртаҫҫӗ, хаклаҫҫӗ; |
| 75/50 | Туслӑха упрар. Япала ячӗсен улшӑнӑвӗ. | — «Туслӑх» сӑвва вӗрентекен вуланине итлесе содержанине калаҫҫӗ;<br>— ҫӗнӗ сӑмахсене астуса юлаҫҫӗ;<br>— ыйтусене хуравлаҫҫӗ, хуравӗсене ҫыраҫҫӗ;<br>— ыйтусемпе усӑ курса юлташӗсем ҫинчен калав туса ҫыраҫҫӗ;<br>— «Петя тусӗ» текста вуласа ыйтусене хуравлаҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗксене сӑнлакан вырансене текстра тупса вулаҫҫӗ;<br>— ӳкерчӗксемпе усӑ курса текст содержанине калаҫҫӗ;<br>— текстран палӑртнӑ сӑмахлӑ предложенисене ҫырса илеҫҫӗ, ҫав сӑмахсем патне ыйтусем лартаҫҫӗ;<br>— ваттисен сӑмахӗсене вулаҫҫӗ, шухӑшӗпе пӗр пекрех вырӑсла ваттисен сӑмахӗсене тупаҫҫӗ, астуса юлнӑ хыҫҫӑн ҫыраҫҫӗ;<br>— хакламалли виҫесене палӑртса кашни хӑйӗн ӗҫне хаклать; |
| 76, 77/51 | Туслӑх — пысӑк пуянлӑх. *Камран? камсенчен?* ыйтусенчи япала ячӗсем. | — «Мӗн пуян?» сӑвва вӗрентекен вуланине итлеҫҫӗ, мӗн пуянлӑх пулнине калаҫҫӗ;<br>— ыйтусене хуравлаҫҫӗ, вӗсене вырӑсла куҫараҫҫӗ, *камран?* ыйту тӗрлӗрен куҫарӑннине палӑртаҫҫӗ;<br>— ыйтусене хуравлаҫҫӗ, *камран? камсенчен?* ыйтусенчи сӑмахсене ҫыраҫҫӗ, аффиксӗсене палӑртаҫҫӗ, вӗсем мӗншӗн тӗрлӗрен пулнине калаҫҫӗ;<br>— схема тӑваҫҫӗ, ӑна Сергей Сергеевич сӗнекен схемӑпа танлаштараҫҫӗ;<br>— *камран? камсенчен?* ыйтусенчи сӑмахсемпе предложенисем туса ҫыраҫҫӗ;<br>— «Чӑн юлташ» калава вуласа содержанине ӳкерчӗксемпе усӑ курса калаҫҫӗ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, пĕлтерĕшĕсене ăнлантараççĕ, килĕшнисене пăхмасăр вĕренсе çыраççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |
| $\frac{78,\ 79}{52}$ | Анне. *Мĕнрен? мĕнсенчен*? ыйтусенчи япала ячĕсем. | — «Мĕнрен тунă-ши сире» сăвва вĕрентекен вуланине итлеççĕ, палăртнă сăмахсене глаголсемпе пĕрле çырса илеççĕ, япала ячĕсен ыйтăвĕсене калаççĕ, аффиксĕсене уйăраççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— ыйтусене хуравласа япала ячĕсем çумне кирлĕ аффикссем хушса çыраççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, пĕтĕмлетӳ туса схема ӳкереççĕ, ăна Сергей Сергеевичăн схемипе танлаштараççĕ;<br>— схемăсемпе усă курса  япала ячĕсене ыйтусем тăрăх улăштараççĕ, предложенисем тăваççĕ;<br>— тупмалли юмахсен тупсăмĕсене пĕлеççĕ, *мĕнрен?* ыйтури сăмахсене çырса илеççĕ;<br>—  тĕслĕхпе усă курса предложенисем туса çыраççĕ;<br>— «Чăрсăр тăмана чĕппи» текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, унпа усă курса ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ;<br>— амăшĕсем çинчен икшерĕн калаçаççĕ, унтан каласа параççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |
| $\frac{80}{53}$ | Суяпа инçе каяймăн. *Ăçтан?* ыйтури япала ячĕсем. | — «Пушă пурак» сăвва вĕрентекен вуланине итлесе ыйтăва хуравлаççĕ, палăртнă сăмах пур предложенисене çырса илеççĕ, сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, мĕншĕн вĕсем тĕрлĕрен пулнине ăнлантараççĕ;<br>— Анюкпа Ванюк схемине ăнлантараççĕ, схемăпа усă курса сăмахсене кирлĕ аффикссем хушса предложенисене çырса илеççĕ;<br>— «Тилĕ çури — шкул ачи» юмаха вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, унăн тĕп шухăшне уçса паракан ваттисен сăмахне палăртаççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 81, 82 / 54 | Кушак тус.<br>*Ăçта?*<br>ыйтури<br>япала<br>ячĕсем. | — сăвва вĕрентекен вуланине итлеççĕ, палăртнă сăмах пур предложенисене çырса илеççĕ, палăртнă сăмахсен ыйтăвĕсене калаççĕ, вĕсене панă схемăсемпе шайлаштараççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— схемăсене ăнлантараççĕ, вĕсемпе усă курса сăмахсене кирлĕ аффикссем хушса предложенисене çырса илеççĕ;<br>— «Мĕнрен тĕлĕннĕ мăр-мăр кушак» юмаха вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, ӳкерчĕке сăнлакан вырăна тупаççĕ, содержанине вырăсла каласа параççĕ;<br>— сăвва вулаççĕ, ăна мĕншĕн «Йăпанмăш» ят панине ăнлантараççĕ, ӳкерчĕке сăнлакан вырăна тупса вулаççĕ;<br>— кашни хăйĕн кушакĕ çинчен каласа парать;<br>— панă тĕслĕхпе усă курса предложенисене вĕçлеççĕ, тĕслĕхсем тупса вырăсла куçараççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене ăнлантараççĕ, килĕшнине пăхмасăр вĕренеççĕ, çыраççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |
| 83 / 55 | Çĕр çинче<br>этем туман<br>ĕç çук.<br>*Ăçта?*<br>ыйтури япала<br>ячĕсем. | — сăвва вуласа панине ӳкерчĕке пăхса итлеççĕ, мĕн çинчен пулнине калаççĕ, кайран вулаççĕ, ăнланман сăмахсене словарьпе усă курса куçараççĕ;<br>— вырăсла тата чăвашла сăмахсене шайлаштараççĕ;<br>— «Сĕрме купăспа уйăх» юмаха вуласа содержанине вырăсла калаççĕ, инсценировка хатĕрлеççĕ, палăртнă сăмах пур предложенисене çырса илеççĕ, ыйтусем лартаççĕ, вырăсла куçараççĕ;<br>— В. Сухомлинский юмахĕсен ячĕсене аса илеççĕ, килĕшнĕ юмаха вуласа содержанине калаççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене ăнлантараççĕ, астуса юлнă хыççăн çыраççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
| --- | --- | --- |
| 84, 85 / 56 | «Икĕ çăл» юмах. *Кампа? мĕнпе? камсемпе? мĕнсемпе?* ыйтусенчи япала ячĕсем. | — сăвва вулаççĕ, мĕн çинчен пулнине калаççĕ, ăнланман сăмахсене словарьпе усă курса куçараççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— «Икĕ çăл» юмаха вулаççĕ, ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлаççĕ;<br>— ыйтусемпе усă курса диалог йĕркелеççĕ;<br>— «Икĕ çăл» текстран палăртнă предложение çырса илеççĕ, унтан ăна пĕрреллĕ хисепе лартса çыраççĕ, япала ячĕсен ыйтăвĕсене калаççĕ, вĕсен аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— Анюкпа Ванюкăн схемисене тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳсем тăваççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— Сергей Сергеевичăн пĕтĕмлетĕвне вулаççĕ, унпа усă курса хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ;<br>— панă сăмахсене ыйтусене хуравласа тĕрлĕ формăна лартаççĕ, предложенисем тăваççĕ;<br>— тупмалли юмаха вулаççĕ, тупсăмне пĕлеççĕ, çавăн майлă вырăсла тупмалли юмаха аса илеççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |
| 86 / 57 | Тус-юлташлă пулмалла. *Камсăр? мĕнсĕр? камсемсĕр? мĕнсемсĕр?* ыйтусенчи япала ячĕсем. | — «Икĕ автан» сăвва вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— сăнласа панине вуласа мĕн пулнине калаççĕ, ытти чĕр чун, кайăк-кĕшĕк çинчен тĕслĕхпе усă курса тупмалли юмахсем хатĕрлеççĕ, пĕр-пĕрне параççĕ;<br>— предложенисене вырăсла куçараççĕ, палăртнă сăмахсен ыйтăвĕсене калаççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, предложенисем тăваççĕ;<br>— схемăсене ăнлантараççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ, сăмахсене кирлĕ формăра лартса предложенисене çыраççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— пуçламăшне панă текста малалла тăсаççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене сиктерсе хăварнă сăмахсене лартса вулаççĕ, çырса илеççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
| --- | --- | --- |
| 87, 88 / 58 | З. Нестеровăн калавĕсем. *Камшăн? камсемшĕн? мĕншĕн? мĕнсемшĕн?* ыйтусенчи япала ячĕсем. | — сăвва вуласа панине итлеççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— «Кил хуралçи» юмаха хăйсем тĕллĕн вулаççĕ, содержанине вырăсла кĕскен каласçĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, рольпе вулама хатĕрленеççĕ;<br>— предложенисене вырăсла куçараççĕ, палăртнă сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— схемăсене ăнлантараççĕ, тĕслĕхсем тупаççĕ;<br>— сăмахсене кирлĕ формăна лартса çыраççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— З. Нестерова çинчен вуласа вырăсла каласа параççĕ, диалог йĕркелеççĕ;<br>— «Кишĕр» юмаха вуласа ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене ăнлантараççĕ, астуса юлнă хыççăн çыраççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |
| 89 / 59 | Юмахсем. «Йытă, автан тата тилĕ» юмах. Япала ячĕсен улшăнăвĕ. | — сăвва вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— «Йытă, автан тата тилĕ» юмаха вулаççĕ, содержанине вырăсла каласа параççĕ, рольпе вулама хатĕрленеççĕ;<br>— тилĕ çинчен вуланă юмахсене аса илеççĕ, тилле сăнлаççĕ;<br>— панă тĕслĕхпе диалог йĕркелеççĕ;<br>— юмахран йытă сăмах пур предложенисене çырса илеççĕ, сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— панă ыйтусене хуравлаççĕ, çыраççĕ, çавăн йышши ыйтусем хатĕрлесе выляççĕ;<br>— диктант çыраççĕ, йăнăшсемпе ĕçлеççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |
| 90, 91 / 60 | Ачасен пурнăçĕ. Япала ячĕсен улшăнăвĕ. | — «Мучи тав тăвать» сăвва вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— «Туссем» текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ, диалога малалла тăсаççĕ;<br>— «Илемпи пулăшрĕ» текста вулаççĕ, содержанине вырăсла калаççĕ, диктант евĕр |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | çыраççĕ, кĕнекепе тĕрĕслеççĕ, йăнăшсене ăнлантараççĕ;<br>— «Пулăшу» текста малтан пĕтĕмĕшле вулаççĕ, кайран ӳкерчĕксене сăнлакан вырăнсене тупса вулаççĕ, ыйтăва хуравлаççĕ;<br>— «Пирĕн ял» текста çырса илеççĕ, палăртнă сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ, аффиксĕсене палăртаççĕ, панă тĕслĕхпе усă курса хăйсен ялĕ (хули) çинчен каласа параççĕ;<br>— шкул сăмаха кирлĕ формăра лартса предложенисене çырса илеççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |
| 92/61 | Пире вăрçă кирлĕ мар. | — «Куртăм вăрçă кинора» сăвва вĕрентекен вуланине итлеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— «Аслашшĕн вуннăмĕш пӳрни» калава вулаççĕ, мĕншĕн ун пек ят панине калаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— «Тав сире, çĕнтерӳ салтакĕсем!» текста вуласа пĕрремĕшпе виççĕмĕш абзацĕсене çырса илеççĕ;<br>— ыйтусене хуравласа ӳкерчĕк тăрăх калав тăваççĕ;<br>— панă темăсенчен пĕрне суйласа илсе проект çыраççĕ; |
| 93, 94/62 | Омонимсем. Япала ячĕсен улшăнăвĕ. Вăреннине аса илни, çирĕплетни. | — сăвва малтан пĕтĕмĕшле вулаççĕ, кайран панă ӳкерчĕксене сăнлакан вырăнсене тупса вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, глаголсене ушкăнласа çырса илеççĕ, вăхăтне палăртаççĕ, аффиксĕсене уйăраççĕ;<br>— «Пĕлеймерĕ» текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— предложенисене вырăсла куçараççĕ, омонимсене çырса илеççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ;<br>— ыйтусене хуравласа çыраççĕ, япала ячĕсен аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— предложенисене вĕçлесе çыраççĕ, *шкул* сăмахăн тĕрлĕ аффиксĕсене палăртаççĕ;<br>— предложенисене вуласа япалана пĕлтерекен сăмахсем патне ыйтусем лартаççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| $\frac{95}{63}$ | Лайăх пулма мĕн чарать? | — сăвва вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— «Тĕрлĕ мăнуксем» сценкăна рольсемпе вулаççĕ, сценка евĕр кăтартма хатĕрленеççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене ăнлантараççĕ, астуса юлнă хыççăн çыраççĕ; |
| $\frac{96,\ 97}{64}$ | Лайăх пулма мĕн чарать? Япала ячĕсен камăнлăх форми. | — сăвва малтан пĕтĕмĕшле вулаççĕ, кайран ўкерчĕке сăнлакан вырăна тупса вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текстсене вулаççĕ, ĕççене пурнăçлаççĕ, ўкерчĕксене сăнлакан предложенисене тупса вулаççĕ, ўкерчĕксем тăрăх каласа параççĕ;<br>— «Хурсем» текстра йăнăш тума пултарнă вырăнсене палăртаççĕ, вĕрентекен каланă хыççăн çыраççĕ, тĕрĕслеççĕ;<br>— текстсенчи сăнарсене хаклаççĕ;<br>— «Чие йывăççи» текста вуласа ыйтусене хуравлаççĕ;<br>— текстпа усă курса пĕр-пĕринчен çемйисем çинчен ыйтса пĕлеççĕ, диалог йĕркелеççĕ;<br>— çемье çинчен калаçнă чух камăнлăх категорийĕнчи япала ячĕсемпе усă кураççĕ;<br>— хаклав виçисене палăртаççĕ, вĕсемпе усă курса ĕçе хаклаççĕ; |
| $\frac{98}{65}$ | Çăкăртан аслă ан пул. Япала ячĕсен камăнлăх форми. | — сăвва вуласа тупсăмне пĕлеççĕ;<br>— «Тĕпренчĕк» текста вулаççĕ, ĕççене пурнăçлаççĕ, палăртнă предложение çырса илсе пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ;<br>— схемăсене ăнлантараççĕ, вĕсемпе усă курса сăмахсене камăнлăх категорийĕн тĕрлĕ сăпат формине лартса çыраççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, ăнлантараççĕ, шухăшĕпе вĕсене çывăх вырăсла ваттисен сăмахĕсене тупаççĕ, çырса илеççĕ, астуса юлаççĕ. |
| $\frac{99,\ 100}{66}$ | Çирĕплетӳ-пĕтĕмлетӳ урокĕсем. | — сăвва вулаççĕ, сăмахсенче пусăм лартаççĕ, ят параççĕ, ўкерчĕклĕ план тăваççĕ;<br>— çĕнĕ сăмахсене астуса юлаççĕ;<br>— ребус шутлаççĕ, ўкерчĕксенчи япаласем çинчен тĕслĕхпе усă курса каласа параççĕ;<br>— юмаха вуласа содержанине ўкерчĕксем тăрăх калаççĕ, ваттисен сăмахне ăнлантараççĕ; |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| | | — «Чарусăр кушак çури» текста вулаççĕ, ваттисен сăмахне çырса илеççĕ, пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ, кушак çурине сăнлакан сăмахсене суйласа илеççĕ, содержанине ўкерчĕксемпе усă курса калаççĕ;<br>— вуланă юмахсем çинчен панă тĕслĕхпе усă курса калаçаççĕ;<br>— текста вулаççĕ, ят параççĕ, унăн содержанийĕ тăрăх ыйтусем хатĕрлеççĕ, пĕр-пĕрне парса калаçаççĕ;<br>— ваттисен сăмахĕсене ăнлантараççĕ, астуса юлнă хыççăн çыраççĕ; |
| 101, 102 / 67, 68 | Çирĕплетў-пĕтĕмлетў урокĕсем. Пĕлў-хăнăху шайне тĕрĕслени. | — тема суйласа илеççĕ;<br>— ĕçе мĕнле йĕркелесси çинчен калаçса татăлаççĕ, пĕр-пĕрин хушшинче пайлаççĕ, пурнăçлаççĕ;<br>— мĕн вĕреннине каласа кăтартаççĕ;<br>— йăнăшсене тўрлетсе ĕçлеççĕ. |

# ТУПМАЛЛИ

КӲРТӖМ . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
УРОКСЕМ . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
ТЕМАТИКА ПЛАНӖ . . . . . . . . . . . . 146

*Учебное издание*

**Игнатьева Валентина Ивановна**
**Чернова Нина Николаевна**
**Николаева Людмила Васильевна**

**Чӑваш чӗлхи вӗрентмелли**
**меслет кӑтартӑвӗсем**

**Методические указания**
**к учебному пособию «Чувашский язык»**

**4 класс**

*Пособие для учителя*

На чувашском языке

Редактор *А.Г. Владимирова*
Художник *Д.В. Литаврин*
Художественный редактор *А.В. Семенова*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректоры *Н.Г. Герасимова, Э.В. Шельтямова*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93 — 95 6600.
Подписано к печати 12.10.17. Формат 60×84 1/16. Бумага офсетная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 9,77. Уч.-изд. л. 9,7.
Тираж 600 экз. Заказ № К-2093. Изд. № 61.

АО «Чувашское книжное издательство»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail:chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в АО «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.

**Игнатьева В.И.**

И 26 Чăваш чĕлхи вĕрентмелли меслет кăтартăвĕсем: 4 класс / В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2017. — 167 с.

ISBN 978-5-7670-2652-4

Пособи В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсен 4-мĕш класĕсенче чăваш чĕлхи вĕрентме хатĕрленĕ комплект шутне кĕрет. Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕпе килĕшсе тăрать.

**УДК 37.091.3**

**ISBN 978-5-7670-2652-4** **ББК 74.268.19=635.1**